8434
62-74

# ТĂВАН АТĂЛ



2

1962

ОБЯЗАТ ЛЬНЫЙ ЭКЗЕ ПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палате
7 мая 1962 г.
№ 104



СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ, Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче ĕçлекен ткачихă
РИММА МИХАЙЛОВНА БЫКОВА

8434

# ТĂВАН АТĂЛ

Чăваш писателĕсен Союзĕ
икĕ уйăхра пĕрре
кăларакан альманах

2

1962
МАРТ — АПРЕЛЬ

Чăваш АССР
Государствă Издательстви
Шупашкар

## ТУПМАЛЛИ

Стр.

**Николай Евстафьев.** Вăл — халăх чĕринче. Сăвă . . . 3
**Аркадий Лукин.** Ленин ялта. Сăвă . . . 4
**Мĕтри Кибек.** Уйăх витĕр çул курăнать. Повеç . . . 5
**Георгий Ефимов.** Сывлăш... Сăвă . . . 50
**Алексей Сурков сăввисем**
Коммунистсен маршĕ . . . 51
Текех спортсменла . . . —
Иртет иккен кун-çул . . . —
Кăмакара хаваслăн вут çунать . . . 52
Çук ĕнтĕ шурă хурăн . . . —
**Г. Краснов-Кĕçĕнни.** Исевет. Роман сыпăкĕсем . . . 53
**Петĕр Вашават.** Арăма. Сăвă . . . 77

### ÇĔНĔ СĂВĂСЕМ

**Николай Сандров.** Тăваттăмĕш страницă . . . 78
Ят . . . —
**В. Давыдов-Анатри.** Пирĕн хĕрсем . . . —
**Мария Волкова.** Эс мана чечек çыххи паратăн . . . —

### ПИРĔН КАЛЕНДАРЬ

А. И. Герцен . . . 79

### ПУБЛИЦИСТИКĂ

**И. А. Маркелов.** Коммунизм культури . . . 80

### КРИТИКĂПА БИБЛИОГРАФИ

**Михаил Сироткин.** «Ĕмĕр сакки сарлака» роман пирки . . . 89
**Василий Долгов.** Дмитрий Исаев çырнисене вуласан . . . 97

### ИРТНĔ ПУРНĂÇРАН

**И. Д. Кузнецов.** Ленă шывĕ çинчи рабочисен пăлхавĕнче пулнă пирĕн янташсем . 100

---

**РОДНАЯ ВОЛГА**

*Альманах*

2(95) книга

*На чувашском языке*

**Редактор Л. Я. АГАКОВ.**

**Редколлегия: А. Е. Алга, М. Я. Сироткин, И. С. Максимов-Кошкинский, И. Н. Вашки (отв. секретарь), И. Н. Никифоров, К. С. Турхан, С. А. Шавлы.**

НТ 02400. Сдано в набор 12/III-1962 г. Подписано к печати 12/IV-1962 г.
Бумага 84×108 1/16. Объем 10,25 п. л., 11,20 уч.-изд. лис. Заказ № 582.
Тираж 5 350 экз. Цена 30 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР
гор. Чебоксары, Володарского, 5.

Николай ЕВСТАФЬЕВ

# ВĂЛ—ХАЛĂХ ЧĔРИНЧЕ

Хуллен шупкалчĕ те
Çухалчĕ шурăмпуç,
Хĕвел тухать — ĕмĕр сӳнми çуталмĕш.
Çав çут хĕвел пек вилĕмсĕр çулпуç
Нихçан та халăх чĕринчен çухалмĕ.

Ак çĕнтерӳллĕ те
Хăватлă çемĕпе
Юхать завод гудокĕ хула çийĕн.
Ĕçе утатпăр Ленин ячĕпе,—
Лăпкать питрен апрелĕн ăшă çилĕ.

Тăратпăр-и
Станок умне ирпе,
Шахтер пулса-и штрексенче ĕçлетпĕр,
Иртет-и трактор пăсланан хирпе,
Сăвă çырса-и çĕр каçа пуç çĕмĕретпĕр —

Мĕн ĕç тытсассăн та,
Ялан, ялан
Юнашарах Ăна эпир туятпăр,
Асран Вăл —
Ĕмĕр иксĕлми пуян,
Эпир пĕрмай Унпа канаш тытатпăр...

Хĕртет апрель.
Çулсем-йĕрсем хура.
Çур шывĕсем чупаççĕ шăнкăр-шăнкăр.
Мăнаçлă Атăл хуса ячĕ сив пăра.
Çунат çапсах юрлать хаваслă шăнкăрч.

Сенкер те çутă пурçăн карнă пек,
Тӳпемĕр тарăн та
Çăл куç пек тăрă...
Каллех супатăп эп сăввăмсемпе:
Аçтан тупам-ха
Ăна тивĕç сăрă?

Аçтан тупам Ун вилĕмсĕр ятне
Ун мухтавне-чапне тивĕç сăмах эп?..
Тухатăп анлă Атăл çыранне:
Бульвар та сквер...
Ак — юрату сăмсахĕ...

Вăл — пирĕн юрату!
Сӳнми кăвар!
Пур халăха памалăх
Ăшă пур Ун!..
Сасартăк вĕрсе иртрĕ çил вăр-вар —
Килейрĕ-кĕчĕ хăлхана пĕр юрă.
Эп те юрлатăп лăпкă саспала.
Ăна шкулта учитель вĕрентсеччĕ:
— Надежда Константиновнăпала
Ильич юрланă çак юрра,— тесеччĕ...

Аçта кайсассăн та,
Ялан, ялан
Манпа пĕрле Вăл —
Вилĕмсĕр çуталмĕш,
Ун ячĕ тухмĕ
Чĕререн,
Пуçран,
Вăл халăх чунĕнчен çухалмĕ!

# ЛЕНИН ЯЛТА

Ҫунат ҫапать те шӑнкӑрч, ҫуркунне
Йилем кӳрет кермен пек ҫурт умне.

Ҫӗр типшӗнет, куракӑ тухать шӑтса,
Тусан пӗрчисене хуллен йӑтса.

Хӗвел шевли кӗрет чӳречерен:
Кантӑк ҫинче чупса ҫӳре-ҫӳре

Вӑл ывӑнмасть, паян мӗн иртенпех —
Ҫиҫет, вылять ҫурхи кун чунӗ пек.

Урам тулли хавас ача-пӑча
Ынатланса ҫӳрет, канмасть пачах.

Каҫ пулттипе вара юри, ятне
Пӗр шур сухал тухать вӗсем патне.

Ача-пӑча шавланӑ вӑхӑтра
Туйи ҫине вӑл таянса тӑрать.

Пӗрмек питне витет йӑваш кулли...
Савнӑҫ урам тулли, чӗре тулли!

Ак асӑрхаҫҫӗ ачасем ӑна:
«Мучи, пулсамӑр пирӗн ыр хӑна!

Хапха умне, тенкел ҫине, ларсамӑр,
Халап-юмах пире ярса парсамӑр?»

Пӗрре куҫ хупса илнӗ самантра
Ача-пӑча тулать мучи тавра.

Леш шӑлчӗ меллӗн шурӑ сухалне,
Вара пуҫларӗ лӑпкӑ сӑмахне:

«Ку юмах мар, ачсемӗр, тупата,
Паян эп куртӑм Ленина ялта.

Пыратчӗ вӑл урампала утса,
Манпа калаҫрӗ ӑшшӑн ал тытса».

Пӗр ӗненмесӗр те пӗр ӗненсе,
Ача-пӑча ларать халь тӗлӗнсе:

«Ильич сире те тӑчӗ сӑнаса,
Ача пек ӑшшӑн, кӑмӑллӑн кулса.

Унтан васкарӗ анлӑ уй-хире,
Мотор кӗрлевӗ илтӗннӗ ҫӗре.

Тӗттӗмленсен яла вӑл таврӑнать...»
Ҫак самантра сасартӑк таврана

Ялкӑштарать мӗн ял вӗсне ҫити
Йӑл-йӑлтӑр электричествӑ ҫути.

Мучи кӑнтарчӗ аллине хуллен
Тӑван колхозӑн сачӗ еннелле.

Чӑнах та, ӑна хирӗҫ аслӑ Ленин
Утать. Хӑй сылтӑм аллине ҫӗкленӗ.

Шыв сыпнӑ пек тӑраҫҫӗ ачасем,
Вутпа ҫунаҫҫӗ чакӑр куҫӗсем.

Мучи вара пуплерӗ малалла:
«Паян вӑл чӑмӑртарӗ ман алла...

Сире те вӑл телей сунать ачашшӑн
Хӗпӗртесе кашни маттур ачашӑн.

Тӑван ҫӗршыв мӗн пур кӗтессинче,
Кашнин кил ҫуртӗнче те ӗҫӗнче

Эпир куратпӑр аслӑ Ленина,
Малтан мала чӗнет вӑл яланах.

Паян та, сар хӗвеллӗ ҫуркунне,
Ильич итлерӗ шӑнкӑрч юррине.

Тин шӑтнӑ симӗс куракӑ ҫиййӗпе
Вӑл иртрӗ ҫӑмӑллӑн утса ирпе...»

Итлеҫҫӗ ачасем, чунтан итлеҫҫӗ,
Мучин ыр кӑмӑлне туйса илеҫҫӗ.

Унтан чупаҫҫӗ савнӑ ял садне
Тӑван ҫул пуҫӑн палӑкӗ патне.

Мучи пит-куҫӗ ҫуталать телейлӗн,
Халь тепӗр хут вӑл ҫамрӑкланнӑ, тейӗн!

...Чӗрешӗн хаклӑ ытарми ҫынна
Умран ямастӑн нихӑҫан чӑнах.

**Мӗтри КИБЕК**




*Повеҫ*

АВТОРТАН

МАН СЕТЕЛ ҪИНЧЕ «Колхозник» хаҫатӑн 152-мӗшпе 165-мӗш номерӗсем выртаҫҫӗ. Тӳрех калатӑп, кив хаҫатсене пухса усрас йӑла нихҫан та пулман манӑн. Ҫак сарӑхса кайнӑ икӗ хаҫата урӑх сӑлтавпа усратӑп. Мӗншӗн, тетӗр-и? Пытарса тӑмастӑп, тӗпӗ-йӗрӗпех калама пултаратӑп. Маларах тухнӑ номерӗнче Хум Микулайӗ ҫырнӑ «Тӳрӗ кӑмӑлпа пурӑнмалла!» ятлӑ статья пичетленнӗ, тепринче ун пирки вырӑнти влаҫсем мӗн тунине пӗлтерекен заметкӑ пур. Ҫавсене пула ниепле те сывпуллашаймарӑм асӑннӑ хаҫатсемпе. Эсир тӗлӗнетӗр ӗнтӗ. Хаҫат тавраш ӗнче унашкал статьясем сахал-и?— тетӗр пулӗ. Тӗрӗс. Лайӑх материалсем кашни номертех тухса пыраҫҫӗ. Вӑл енчен илсен, «Колхозник» ытти хаҫатсенчен пӗртте кая мар. Хум Микулайӗ ҫырни мана урӑх сӑлтавпа хытӑ хумхантарнӑччӗ. Тӗрӗсрех калас-тӑк, эпӗ халӗ те лӑпланса ҫитмен-ха. Аҫтан лӑпланӑн? Эпӗ тахҫантанпа палланӑ ҫынсем ҫинчен ҫырнӑ-ҫке унта. Эпӗ вӗсенчен хӑш-пӗрисен ячӗсене кӑна асӑнам...

Хаҫат ҫине пӑхатӑп та, чи малтан ман ума Ятманов сӑнӗ тухса тӑрать. Унпа эпир вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче паллашнӑччӗ. Каярахпа пӗр хулара виҫӗ ҫул пурӑнтӑмӑр. Вӑл ун чух полковникчӗ. Аллӑ иккӗмӗш ҫулта, ҫарти штатсене пӗчӗклетнӗ май, ӑна запаса ячӗҫ. Хытӑ пӑшӑрханнӑччӗ вӑл. Ватӑлса ҫитичченех пенси илсе пурӑнасси кама савӑнтартӑр? Анчах Ятманов аллине усмарӗ, тӑван ялне таврӑнчӗ те колхозра правлени пуҫлӑхӗ пулса ӗҫлеме тытӑнчӗ.

Курак Иванӗпе вӑтӑр пӗрремӗш ҫултах паллашнӑччӗ. Ун чух эпир унпа ҫулталӑк ҫурӑ Чулхулари Автостройра пӗрле ӗҫлерӗмӗр. Кайран та, майлӑ вӑхӑт тупӑнсан, пӗр-пӗрин патне кӗрсе тухмасӑр иртсе кайман. Юлашки хут иксӗмӗр аллӑ тӑххӑрмӗш ҫулта тӗл пулнӑччӗ. Ун чух эпӗ тӑван республикӑ тӑрӑх курса ҫӳреме тухнӑччӗ. Кураков патӗнче эрнипех хӑналантӑм. Ҫавӑн чух ӗнтӗ унӑн аслӑ хӗрне, мӑкӑнь чечекӗ пек чипер Тамарӑна, пӗрремӗш хут курнӑччӗ. Вӑл вӗҫен кайӑк пек чӗвӗлтетни халӗ те хӑлхара янӑраса тӑрать.

Статья авторне те паллатӑп. Вӑл Мускаври литературӑ институтӗнчен вӗренсе тухнӑ чух мана унӑн оппоненчӗ пулма тӳр килчӗ. Астӑватӑп, дипломлӑ ӗҫӗ —«Сӑр хӗрринче» ятлӑ повеҫ кӑмӑла кайнӑччӗ. Чӑнах та произведени ячӗ оригиналлӑ маррине кӑтартма лекрӗ. Ан-

чах урӑх нимле ҫитменлӗх те тупаймарӑм, ҫавӑнпа та критиклес вырӑнне ырласси ҫеҫ юлнӑччӗ. Эпӗ ҫаплах турӑм та вара.

Кӗмӗл Петти пирки каламасан та юрать пулӗ. Редакци таврашӗнче вӑл тахҫантанпах ӗҫленӗ пирки писательсемпе журналистсем хушшинче ӑна палламан ҫын ҫук-тӑр. Йӗплӗ чӗлхесем каланине ӗненсен, вӑл пирӗн йышши ҫынсене пайтах тарӑхтарнӑ пулать. Ҫавӑнпа пӗлтӗр ӗҫрен тухса пенсие тухнине пӗлсен, нумайӑшӗ сиксех ташланӑ, теҫҫӗ.

Статьяра асӑннӑ ытти ҫынсене те курнӑ, хӑш-пӗрисемпе пӗр суланчӑран тӑвар пуҫса та пайтах ҫинӗ темелле.

Ак халӗ те пӑхатӑп ҫав кивӗ хаҫатсем ҫине, пӑхатӑп та хамран хам ыйтатӑп: мӗн тӑвас вӗсемпе? Яланах тусанланса-сарӑхса выртма тивӗҫлӗ-и вӗсем? Хӑйсене ырӑпа асӑнмалӑх пӗр-пӗр калав е повеҫ ҫырам мар-и? Ҫитменнине Хум Микулайӗн статйинче ҫырса кӑтартнӑ ӗҫсем ҫинчен пурте тахҫанах маннӑ пулӗ.

Ҫапла шухӑшларӑм та, ҫак калава тытса ҫыртӑм...

I

ХЁВЕЛ АННА ЧУХ ҫум ҫумлакан хӗрарӑмсем кукурузӑ ани пуҫне тухрӗҫ те уй тӑрӑх сапаланса юлнӑ япалисене пуҫтарма кайрӗҫ. Звеньевойра ӗҫлекен Тамара Куракова, вӑтам пӳллӗ, кӑн-кӑвак куҫлӑ илемлӗ хӗр, пӗшкӗнсе ӗҫленӗ чух чӑрмантарасран пуҫ тавра явса хунӑ ыраш улӑмӗ тӗслӗ пысӑк ҫивӗтӗсене салтрӗ те ҫӳлӗ кӑкӑрӗ ҫине усса ячӗ. Унтан вӑл, катмакласа кӑпкалатнӑ тӑпра айне пулнӑ кукурузӑ калчине тӳрлетсе, ӑшшӑн кулса илчӗ. Кулнӑ чух хӗрӗн пит ҫӑмартисем пӑт! путса кӗчӗҫ, тип-тикӗс те шапшурӑ шӑлӗсем илемлӗн курӑнчӗҫ. Ку ӑна питӗ килӗшрӗ, ахаль те хитре сӑнне тата ытларах илемлетрӗ.

— Ну, симӗс калчасем, тек анра ҫӑракпа пиҫен таврашне ан парӑнӑр, вӗсем тепре шӑтса тухсанах аяла туса пусса тӑкӑр! Ҫапла-и, тусӑмсем?— терӗ хӗр савнӑ ачипе калаҫакан амӑш сассипе.

— Эх, Тамара, хӑҫан эсӗ ҫитӗннӗ ҫын пек пулӑн? Аслӑ-тӑнлӑ хӗр, ҫапах пӗчӗк ача евӗр пирӗнпе те, вырьӑх-чӗрлӗхпе те, йывӑҫ-курӑкпа та пӗр чӗлхепе калаҫатӑн. Тӑнлан, хӗрӗм, калча мар, тепӗр чух ҫын та сӑмахпа каланине итлемест,— тулли кӑмӑлпа хӑтӑрса илчӗ ватӑрах хӗрарӑмсенчен пӗри.

— Чӑнах, симӗс калчапа калаҫса ҫӑвар тутине ярӑччен, эсӗ пире ыран мӗн тумаллине каласа кӑтарт,— хушса хучӗ тепри.

Хутаҫ-сумкӑ тытнӑ хӗрарӑмсем ял еннелле туртӑннине курсан, Тамара хыпаланса ӳкрӗ.

— Чимӗр-ха, ан саланӑр!— терӗ вӑл.— Ыран ҫумласа тухнӑ калчасене суперфосфат ярса ирӗлтернӗ тислӗк шывӗпе шӑварӑпӑр. Унтан татах ҫумламасӑр юлнӑ кукурузӑ анине кӑпкалатӑпӑр. Кӗтӳ хӑваланӑ хыҫҫӑн пурне те лаша вити патне пухӑнма ыйтатӑп.

— Юрӗ-ҫке, пырӑпӑр.

— Хӑваласса кӗттермӗпӗр, яланхи пекех калanӑ вӑхӑтра тухӑпӑр,— шавласа кайрӗҫ хӗрарӑмсем.

— Апла пулсан, ыранччен!— аллипе сулчӗ звеньевой.

Инкесем, татти-сыпписӗр какӑлтетсе, ял еннелле утрӗҫ. Ана пуҫне Тамарӑпа унӑн тусӗ Верук ҫеҫ тӑрса юлчӗҫ.

— Эсӗ кӗҫӗр кунтах ҫӗр каҫас теместӗн пулӗ-ҫке?— ыйтрӗ Верук.— Ма вырӑнтан та тапранмастӑн?

— Темшӗн, ҫак уя пӑрахса каяс килмест. Кам пӗлет, урӑх те курайӑп ӑна, те кураймӑп,— шӳт туса каларӗ Тамара.— Пӑх-ха, ҫанталӑкӗ мӗнешкел? Пур енчен те ырӑ шӑршӑ сарӑлать. Кӑштах усӑлса ҫӳрер мар-и?

— Ҫӳрӗпӗр ара. Пурпӗрех ялта пире кӗтекенсем ҫук,— вылянса пулин те хурланчӑклӑ каларӗ Верук.

Мӗн калас, хурланма сӑлтавӗ пурах ҫав унӑн. Сӑн-сӑпачӗпе те, пӗвӗпе те, Верук ытти хӗрсене ҫитеймен. Лутака та сарлака кӗлетке, пашалу евӗр ҫавракаа пит варринче яланах пӗлӗтелле каҫӑрӑлса тӑракан лаптак сӑмса, кӑмрӑк пек хура хӗсӗк куҫсем, хулӑн тутасем хушшипе курӑнакан сайра шӑлсем, кӗреҫе пек пысӑк алӑсемпе кукӑр туналлӑ урасем — мӗнле каччӑ кӑмӑлне кайӗҫ вӗсем? Йӗрки ҫапла мар-и, яш-кӗрӗм тени малтан тулашне пӑхать, каярахпа тин ӑшра мӗн пурри-ҫуккине асӑрхать. Ҫавӑнпа ӗнтӗ ырӑ кӑмӑллӑ Верука ҫак тарана ҫитсе те пӗр каччӑ юрататӑп тесе каламан-ха.

Тусӗпе танлаштарсан, Тамара урӑх тӗнчерен килнӗ ҫын пекех курӑннӑ. Ҫи-пуҫӗпе те, ӑс-тӑнӗпе те вӑл телейлӗ ҫынсен шутне кӗнӗ темелле. Кирек епле ӗҫе те пӗлсе туни, юлташӗсемпе кӑмӑллӑн калаҫни, никама та ӑмсанманни тата аслисене кӑна мар, хӑйпе тантӑш ҫамрӑксене те хисеплеме пӗлни — ӑна хӑйне те хисеплеттернӗ. «Ун пек хӗршӗн пур ҫӗрте те ҫул уҫӑ,— тенӗ ял ҫыннисем.— Вӑл ялта тӗмсӗлсе пурӑнас ҫук, хулана вӗренме кайӗ те ӗмӗрлӗхех унта юлӗ. Ырӑ ҫын телей тупатех ӗнтӗ».

Шкулта вӗреннӗ чух Тамара хӑй те ҫаплах шухӑшланӑ. Шупашкартан, Хусантан, Мускавран тата ытти пысӑк хуласенчен каникула килнӗ студентсем хулари пурнӑҫ пирки мӗн кӑна каласа кӑтартман пулӗ. Киносем, театрсем,

стадионсем, савăнăçлă халăхпа тулнă парксем — ăçта каяс килнĕ, унта кайса кур. Хула çыннисем тумланасса та капăр тумланаççĕ, тĕрлĕ-тĕрлĕ тутлă çимĕçсене те тăраничченех çиеççĕ, пурăнасса та аслă, çутă тата ăшă пÿртсенче ырă курса пурăнаççĕ. Ĕçлессе вара ялти пек иртен илсе каçчен мар, талăкра çичĕ сехет кăна ĕçлеççĕ. Уявсемпе канмалли кунсене пĕрпĕрин патне хăнана çÿреççĕ, лайăх çанталăкра вăхăта хула тулашĕнчи юхан шывсемпе вăрмансенче уçăлса çÿресе ирттереççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, çав студентсене ĕненсен, хулара нимĕнле йывăрлăхсем те çук, унти пурнăç юмахри пекех. Тамара хăй ĕмĕрĕнче Çĕмĕрлесĕр пуçне урăх пĕр хулана та çитсе курман. Çавăнпа студентсем каланине куçĕсене чарса пăрахсах итленĕ. Чăнах та, хула.çыннисем ялтан тухса кайнă чух чăматанĕсене аш-какай, çу, икерч-кукăль таврашсем чиксе тултарни е витри-витрипе йÿçĕтнĕ купăста, хăяр-помидор, тепĕр чух михĕ тулли çĕр улми илсе кайнине курса хытă тĕлĕннĕ. Аптранипе, вĕсем ашшĕамăшĕ парнелесе панă апат-çимĕçе илсе кайма килĕшмесĕр тăма хăяймаççĕ пулĕ тесе шутланă.

Аслă классене куçса пынă май Тамарăн шухăшĕсем улшăнма пуçларĕç. Мĕншĕн, тетĕр-и? Сăлтавĕ нумай пулнă ĕнтĕ. Эпир кунта вĕсенчен паллăраххисене кăна асăнăпăр. Чи малтанах, ялти пурнăç та пĕр вырăнта тăманнине кăтартмалла. Шкулпа юнашар çĕнĕ клуб туса лартрĕç. Çамрăксене савăнмалăх унта кашни эрнерех икшер хут кино кăтартаççĕ, хуларан килнĕ артистсем концертсем, спектакльсем лартса параççĕ. Колхозра электростанци тунăранпа кашни килте тенĕ пекех радиоприемниксем янăрама тытăнчĕç. Ку кăна-и? Пуринчен ытла пурнăç лайăхланса пыни паха. Колхозра ĕçленĕшĕн тырă та, укçа-тенкĕ те çулсеренытларах тивсе пычĕ. Вара колхозниксем çĕнĕ пÿрт-çурт лартма тытăнчĕç, çамрăксем «çурав урапасем», мотоциклсем туянакан пулчĕç. Çавна кура, яш-кĕрĕмсем ĕлĕкхи пек пурте хулана пурăнма куçасси çинчен ĕмĕтленми пулчĕç, хăшĕ-пĕрисем, виç-тăватă çул каярах колхозран тухса кайнисем те, тепĕр хут яла таврăнма тапратрĕç. Тамара астăвать, ĕлĕкрех салтака кайнă каччăсенчен яла каялла таврăнакансем сахалччĕ. Пĕлтĕр, ак, вунă çынран саккăрăшĕ колхоза таврăнчĕç. Киле килменнисем те хулара юлман-мĕн: пĕри Казахстана çерем уçнă çĕрте ĕçлеме тухса кайнă, тепри Сахалин утравĕ çинче вăрман ĕçлесе пурăнма юлнă.

Çаксем хĕр шухăшне улăштармасăр иртсе кайма пултарайман ĕнтĕ. Анчах Тамара шкултан вĕренсе тухсан колхозрах ĕçлеме юлнин тĕп сăлтавĕ урăх пулнă. Вăл саккăрмĕш класа куçнă çул шкул ачисене ял хуçалăх ĕçĕсене хăнăхтарас тĕлĕшпе хытăрах тăрăшма пуçларĕç. Уйпуç шкулĕ колхоз çĕрĕ çинче кукурузă акрĕ те ăна вĕренекен ачасем питĕ тимлĕн пăхса ÿстерчĕç. Тăрăшни сая каймарĕ: шкул ачисем акса хăварнă пилĕк гектар çинче кукурузă колхозниксем акнă уйринчен нумай вăйлăрах пулчĕ. Тамара çав çул чи ĕçчен те тимлĕ ачасен ретне кĕчĕ. Вăл уй ĕçне уйрăммăнах тăрăшса туса пынине асăрхаса, директор ăна тепĕр çулне кукурузă ÿстерекен ачасен звенине ертсе пыма хушрĕ. Вара пуçланса кайрĕ Тамарăшăн çĕнĕ пурнăç! Çамрăк хĕр ял хуçалăх журналĕсем, кĕнекесем вулама пикенчĕ, тĕрлĕ сăнавсем туса пăхрĕ. Пĕр ирхине вăл хăйĕн звенинчи ачасемпе колхоз ампарĕнчен ултă пăт «Воронежская-76» текен кукурузă вăрлăхĕ тиесе килчĕ те ăна шыв янă каткана тултарса шÿтерме пуçларĕ. Хĕрĕх сехет шÿтернĕ хыççăн ачасем ăна алапа сĕрчĕç те пÿрт урайне сарса хучĕç. Тепĕр кунне кăштах типнĕ кукурузăна кĕлет урайне кайса тăкрĕç. Хĕрĕ мĕн хăтланнине пĕтĕмпех курнă амăшĕ тÿссе тăраймарĕ:

— Хĕрĕм,— терĕ,— салат тăвас тесен, тырра ăшă пÿртре шăтармалла. Ма эсĕ шÿтернĕ кукурузăна сивĕ кĕлете сарса хутăн?

— Эпир салат мар, кукурузă вăрлăхне «калить» тăватпăр. Эсĕ Киркка пиччесен Хĕлипĕ шартлама сивĕре те çара пусăн çÿренине курнă ĕнтĕ? Мĕншĕн унăн хăлхине тăм илмест тесе шутлатăн? Сивве хăнăхнăран, тепĕр майлă каласан, сывлăхне «калить» тунăран. Эпир те акас умĕн кукурузă вăрлăхне сивве хăнăхтаратпăр. Хĕртнĕ кирпĕч чĕрринчен темиçе хут çирĕпрех. «Калить» тунă вăрлăх та тÿсĕмлĕрех пулма кирлĕ,— ăнлантарчĕ хĕрĕ.

— Кирпĕче авалтанпах калить тăваççĕ. Пуçа та, çынни вĕçкĕнрех пулсан, калить тума кирлĕ пулĕ. Анчах тыр-пула калить тунă тенине нихçан та илтмен. Пустуй аппаланни пулмĕ-ши?— иккĕленнĕ амăшĕ.

— Хаçат-журналсем вулас пулать, анне, унта тĕплĕн çырса кăтартнă...

Сив кĕлетре вăрлăха вун икĕ сехет тытнă хыççăн, каçа хирĕç, ачасем ăна татах ăшă пÿрте илсе кĕчĕç. Çапла виçĕ эрне «калить» тунă вăрлăха çуркунне уйрăм ана çине акрĕç те çу каçиччененех тăрăшса пăхса ÿстерчĕç. Кĕркунне шкулта кăна мар, колхозра та тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕç: кун пек тунă вăрлăх гектар пуçне сакăр çĕршер центнер силос хывмалли симĕс кукурузă пачĕ, юнашар ана çинче çав сортах— «калить» тумасăр акни — мĕн пурĕ те пилĕк çĕр центнер кăна пулчĕ.

Çак сăнава тунăшăн хĕрачана пурте ырларĕç. Комсомол райкомĕ ун ятне хисеп хăми çине çырса хучĕ. Çамрăк комсомолкă тунă

чаплă ĕç çинчен районри хаçат очерк çырса кăларчĕ. Çакăн хыççăн ĕнтĕ Тамара хулана пурăнма куçасси çинчен шухăшлама пĕтĕмпех пăрахрĕ, кукурузă ÿстерме вĕренсе тăван халăха усă парасси — уншăн пурнăç тĕллевĕ пулса тăчĕ. Çавăнпа шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Тамара ытти юлташĕсем пек институтa вĕренме кайма хатĕрленес темерĕ, тÿрех колхоза, кукурузă звенине, ĕçе кĕчĕ. Тепĕр çулне ăна правлени çав звенона ертсе пыма хушрĕ...

Анчах хĕрĕ малалла вĕренме кайманни ашшĕ-амăшне килĕшмерĕ.

— Тантăшусем институтa, техникумсене кайса кĕчĕç, эсĕ çеç колхозра юлтăн. Намăс кăтартрăн пире ватлăхра,— ÿпкелешрĕ амăшĕ.

— Ачасем телей курччăр тесе, вăрçăра пуçăма шеллемесĕр çапăçрăм, юн тăкрăм, инвалид пулса юлтăм. Вăрçă хыççăн ачасемшĕн тăрăшсах, ура ыратнине пăхмасăр, МТСра, унтан колхозра механик пулса ĕçлерĕм. Хĕрĕме агроном е инженер пулнине курас тенĕччĕ. Ĕмĕтленни харама кайрĕ. Сана пăхса, кĕçĕннисем те вĕренес темĕç. Эх, Тамара, мăшкăлларăн эсĕ пире,— хушса хучĕ ашшĕ.

— Ан ÿпкелешĕр. Ăс-тăн çителĕклĕ пулсан, ялта пурăнсах агроном пулма та, инженера тухма та пулать. Пĕр-ик çул çеç тăхтăр, эпĕ те вĕренме пуçлăп,— лăплантарма тăрăшрĕ Тамара вĕсене.

Унтанпа виçĕ çул иртрĕ. Тамара ертсе пыракан звено, лайăх кукурузă ÿстерсе, пĕтĕм районĕпе чапа тухрĕ. Хисеп хăми çине çырни, тĕрлĕ пухусемпе канашлусенче ырăпа асăнни, хаклă парнесем илме тивĕçлĕ пулни — пурне те курчĕ Тамара. Ашшĕ-амăшне панă сăмаха та тытрĕ-тытрех: пĕлтĕр вăл Шупашкарти ял хуçалăх институтĕнче заочно вĕренме пуçларĕ те кăçал чип-чиперех иккĕмĕш курса куçрĕ. Хуçалăхра хĕрĕ пулăшнипех ĕнтĕ Курак Иванĕ кăçал çĕнĕ пÿрт лартма пысăк пура туянчĕ...

Тамарăпа Верук çеремленнĕ уй çулĕпе васкамасăр утаççĕ. Тÿперен юлашки хĕрлĕ пĕлĕтсем çухалчĕç те шутсăр-йĕрсĕр çăлтăрсем тухса тулчĕç. Улăх енчен вĕрекен хавшак çил нÿрĕкпе пĕрле карăш авăтнă сасă илсе килет. Ыраш пуссинче путенесем: «Пĕт-пĕл-тĕк! Пĕтпĕл-тĕк!» тесе пĕр-пĕрне чĕнеççĕ. Йÿç çырма пуçĕнче кашласа ларакан йĕплĕ хулă чăтлăхĕнче касса кайса шăпчăк юрлать. Çĕмĕрт варти кĕтÿ шăварма тунă пĕвере шапасем чарăнма пĕлмесĕр квакалтаççĕ. Мĕн пĕчĕкрен илтме хăнăхнă сасăсем уй тăрăх утакан хĕрсене пĕрре çĕклентереççĕ, тепре пусăрăнтараççĕ.

— Кĕркунне çирĕм икĕ çул тултаратăп. Хĕр ĕмĕрĕ иртсе пырать, анчах пĕр каччă та евчĕ ямарĕ. Ват хĕр пулса юласси чуна шиклентерет,— хăй тĕллĕн калаçнă пек пăшăлтатрĕ Верук.

Тамара ăна пилĕкрен тытса ыталарĕ.

— Ан хурлан, тусăм! Кĕркунне Кĕçтук салтакран таврăнмалла. Вăл сана шкула çÿренĕ чухнех кăмăллатчĕ-иç?

— Ăна та шанас килми пулчĕ. Юлташĕсенчен виçĕ хут салам каласа ятăм, вăл пĕр çыру та ямарĕ. Кил-йышĕсем пире курайманçĕ, ывăлне те вĕсемех пăсаççĕ пулмалла.

— Э-э, ялта çерçи выçса вилмен, теççĕ. Пирĕн валли те каччă тупăнĕ-ха.

— Сана йăпатма çăмăл. Яш ачасем сан тавра кĕтÿпех кĕшĕлтетсе çÿреççĕ. Хăшĕ кăмăла ытларах каять, çавна суйласа ил. Çапах эсĕ хăçан арăм пуласси те паллă мар-ха. Кăма та пулин юрататăн-и?

— Качча тухма ĕлкĕрĕпĕр-ха, мăйĕ пур, хăмăчĕ хăех тупăнĕ. Хĕр ĕмĕрĕ ахаль те кĕске, пули-пулми çынпа пĕрлешсе, ăна хисепсĕр татас марччĕ...

Верук ним те чĕнмерĕ. Çеремлĕ çул хăйĕн машинăсем ĕрĕхтерсе такăрлатнă пысăк тăванĕпе пĕрлешрĕ. Таçта инçетре, мăн çул тĕттĕмре путнă çĕрте, тулли уйăх калама çук пысăк хунар пек çакăнса тăрать. Унăн шупкарах кăвак çути такăр çул çине тÿлеккĕн тăкăнать.

Тамара малалла пăхрĕ те кĕмĕл сасăпа хытă юрласа ячĕ:

> Уйăх витĕр çул курăнать,
> Эпĕ каяс çул мар-ши...

## II

ÇУТ ТĔНЧЕНЕ СĂНАСА пурăнакан çын çанталăк хăçан пăсăлассине малтанах пĕлсе тăрать. Пурнăçа лайăх чухлакансем те инкек-синкек килсе тухасса вăхăтра сисме пултараççĕ. Çамрăк Тамара ăна-кăна чухлайман ĕнтĕ, çавăнпа хăй тÿпинчи телей çăлтăрне хупăрласа сÿнтерме пултаракан хура пĕлĕтсем капланса килнине асăрхайман.

Иртнĕ хĕл варринче Уйпуç ялĕнчи «Хĕрлĕ шевле» ятлă пĕчĕк колхоза, çултан çул кая юлса пырать тесе, Вăрманкасри чапа тухнă «Çутă маяк» колхозпа пĕрлештерчĕç. Тĕрĕсрех калас-тăк, пысăк кÿрши ăна çăрттан пулă карасa çăтнă пек çăтса ячĕ: вăтăр çул пурăннă «Хĕрлĕ шевлерен» виççĕмĕш бригадă пулса тăчĕ. Ун пек чухне, паллах, пуçлăхсем те улшăнаççĕ. Уйпуç колхозне нумай çул пĕр улшăнмасăр ертсе пынă председатель, бригадирсем, фермă пуçлăхĕсем пурте тенĕ пекех вырăнтан тухса ÿкрĕç. Бухгалтерта ĕçлесе пурăннă Ермолай Ефимч Мышкин çеç пĕрлешнĕ колхозра та çав ĕçех кĕчĕ.

Юлашки вунă çул хушшинче «Çутă маяка» запаса тухнă Ятманов полковник ертсе пынă. Вăл председателе кĕнĕренпе колхозри ĕçсем

ăннаçемĕн ăнса пычĕç, тупăш та миллион урлă сиксе каçрĕ. Колхозниксем пуçĕсене çĕклерĕç, тутă пурнăç мĕн иккенне пĕлсе çитрĕç те Ятманова, юрлăхран хăтарнăшăн чунтанах тав туса, чунтан хисеплеме пуçларĕç. Ял çыннисем кăна мар, ăна районри аслă вырăнсенче ĕçлекен юлташсем те сума сăваççĕ, ун сăмахĕсене тинкерсех итлеççĕ, вĕсем сĕннипе ăна райком бюроне те, райсовет депутатне те суйларĕç.

Хăш-пĕр çынсене чапа тухни чылаях пăсать, халăхран татăлса, хăйĕнчен кĕçĕнреххисене итлемесĕр пурăнакан туса ярать. Çак ирсĕр япала Ятманова та пырса шăлăнчĕ пулмалла, пурăна киле вăл ĕçре ахаль колхозниксем кăна мар, правлени членĕсем каланине те сахал шута илекен пулчĕ. Ку пуринчен ытла ĕç дисциплинине çирĕплетес çĕрте палăрчĕ.

Ялтан пынă çамрăксене çирĕм пилĕк çул хушши дисциплинă тытма пĕлекен салтак туса пурăннă Ятманов колхоз председателĕнче ĕçлеме пуçласан та хăйне хăй çарти пекех тытнă. Çавăнпа ăна шӳтлесе «колхоз командирĕ» тесе чĕнме пуçларĕç. Ятманов уншăн никама та çиленмен. «Кашни пуçлăх — хăйне шанса панă ĕçĕн командирĕ, пăхăнса тăракан çынсемшĕн— начальник,— тенĕ вăл.— Ĕç дисциплини — çар дисциплини пек пултăр, йĕрке пăсакансем умăмран тасалччăр!» Çак шухăша хирĕç никамах та тăман. «Пире мĕн?— шухăшланă колхозниксем.— Пире ĕç кунĕсем туллирех пулни кирлĕ. Йĕркесĕр ăçтан пурăнан?»

Вăт мĕнле çынпа тытăçмалла пулса тухрĕ пирĕн çепĕç чунлă Тамарăн.

Кам пĕлет, яланах пуçлăхсене юрама тăрăшакан Мышкин пулман пулсан, çак хăйсене шанса панă ĕçе чунтан юратса тăвакан икĕ çын нихçан та пĕр-пĕринпе хирĕçес çукчĕ пулĕ. Бухгалтер элеклени вутта çу сапнă пекех пулчĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче Ермолай Ефимч та çарта пулнăччĕ. Ун чух вăл пĕр запаслă бригадăра казначей пулса ĕçленине халĕ те нумайăшĕ астăваççĕ пулĕ. Шут ĕçне вăл чухлакаланă, анчах пуринчен ытла аслисем умĕнче йăпăлтатма пĕлни ăна ытти çынсенчен уйăрса тăнă. Çапла вăл запаса тухас умĕн майор ятне илтнĕ. Усал урана лайăх пушмак та хĕсет тенĕ пек, Мышкина та пысăк чин тата ытларах пăснă. Хăйне вăл мăнаçлăн тытма пуçланă, майортан кĕçĕнреххисене вара çын вырăнне те хуман. Ку та юрĕччĕ. Унашкал каппайчăксем тупăнкалаççĕ. Анчах вăл хăйне çывăх çынсене пачах кун кăтартми пулни хуплать. Çартан таврăнсанах çак Ермолай Ефимч, ялти пек каласан — Шăши Ярмулайĕ, ачаллă арăмне кăларса ярса, тин çеç вăтам шкултан вĕренсе тухнă Укçине ятлă вĕскĕн хĕре качча илчĕ. Унтан тăван ашшĕне пӳрте кĕртмесĕр хура мунчара хĕл каçарчĕ. Темле йĕплĕ чĕлхеллĕ çын райхаçатра ун çинчен фельетон кăларман пулсан, кам пĕлет, тен, унăн ватă ашшĕ халĕ те çав мунчарах тертленсе пурăнмаллаччĕ пулĕ. Прокурор чĕнесрен хăранипе çеç пархатарсăр ывăлĕ ашшĕне тепĕр хут пӳрте кĕме ирĕк пачĕ.

Çар çыннисене кăмăллакан Ятманов, Мышкин запасри офицер иккенне пĕлсен, ăна тӳрех бухгалтера илчĕ.

Укçинепе Тамара пĕр класрах вĕреннĕ, шкултан та пĕр çултах вĕренсе тухнă. Çапах та вĕсем хушшинчи уйрăмлăх инçетренех куçа курăнса тăнă. Тамара ĕçе юратнă, вĕреннĕ чух та, колхозра ĕçлеме пуçланăранпа та яланах малта пыма тăрăшнă. Укçинен ĕмĕчĕсем яланах урăхла пулнă. Ун шучĕпе, пурнăç ăнса пыни вăя шеллемесĕр ĕçленинчен мар, чееленме пĕлнинчен килет. «Телей тупас тесен, улталама, ыттисем инкеке лекнипе усă курма пĕлмелле», тенĕ вăл хăй ăшĕнче. Çавăнпа качча та вăл хăйĕнчен икĕ хут аслăрах çынна тухнă. «Ватă упăшкан çамрăк арăмпа йăпанса пурăнас тесен, ăна юрама пĕлмелле,— шухăшланă вăл.— Ярмулайăн мана ал вĕççĕн çĕклесе çӳремелле. Йывăр ĕçпе тертленсе пурăнас-тăк, эпĕ хĕрĕх çулхи çынна мар, яш ачана упăшка тумаллаччĕ. Халĕ унăн мана килте усрасах тăрантарса, капăр тумлантарса пурăнмалла». Чăнах та, арăм пулнăранпа Укçине колхозра виçĕ кун та ĕçлемен пулĕ. Вăл малашне те çаплах пурăнасшăнччĕ, анчах Ятманов килте айкашса пурăнакан пикесене тӳсме пултарайманни хупларĕ. Пĕрре вăл правлени ларăвĕнче çапла каларĕ:

— Юлашки вăхăтра хаçатсенче колхозри пуçлăхсем хăйсен арăмĕсене эртел ĕçĕсене хутшăнтарманнине тиркесе çырнă статьясем нумай тухрĕç. Райком пленумĕнче те ун çинчен астутарчĕç. Эпĕ тĕрĕслесе пăхрăм та, пирĕн колхозра та ун пеккисем сахал марри курăнчĕ. Паян пӳрнепе тĕллесе кăтартмăп, анчах тепĕр ларуччен ĕççĕр аптраса пурăнакан пикесем пĕрре те ан пулччăр!

Ятманов пуш параппан çаптарма юратманнине пурте аван пĕлнĕ, вăл каланинчен иртме никам та хăяйман. Çавăнпа та часах çулĕ-çулĕпе уя тухса курман «пикесем» çум çумлана çĕрте, фермăсенче, колхоз пахчисенче курăнкалама пуçларĕç. Кĕçех правлени членĕсемпе бригадирсен тата фермă пуçлăхĕсен арăмĕсем ытти колхозницăсемпе танах ĕçлеме тытăнчĕç. Мышкин арăмĕ кăна ним пулман пекех килтен тухмарĕ. Ятманов ăна часах асăрхарĕ.

— Ермолай Ефимч,— терĕ вăл, пĕр ирхине кирлĕ хутсем çине алă пуснă май хăй умĕнче пĕкĕ пек кукăрălса тăракан бухгалтер çине пăхса,— эсĕ çарта пурăнса курнă çын, начальн-

ник хушнине тепре каламасăрах тума кирлине аван пĕлетĕн ĕнтĕ. Анчах иртнĕ ларура арăмсем пирки каланине манса кайрăн-им?

— Çук, Борис Петрович, манман, яланах астуса тăратăп. Укçине кăштах чирленĕччĕ, халĕ сывалса çитет ĕнтĕ. Çак кунсенчех ĕçе тухма пуçлать.

— Виççĕмĕш бригадăри ĕне фермине пысăклатма шухăшларăм. Унта кукурузă аван ӳсет, çилос кăçал та ытлашши юлчĕ, килес çул та çаплах пулĕ. Выльăх апатне ытти фермăсене турттарса чăрманиччен, выльăхне унта куçарас. Çак эрнере Уйпуçне Вăрманкасри фермăран вăтăр ĕне парас тетĕп. Вара унта сĕт сăвакансен шутне те йышлатмалла. Санăн арăму çамрăк, дояркă пулса ĕçлеме шăп та лăп юрăхлă. Каласса пăх та, çирĕплетсе хурăпăр,— приказ панă пекех каларĕ председатель.

«Асту, кĕтсех тăр!— пăшăлтатрĕ Мышкин, Ятманов кабинетĕнчен тухсан.— Укçине килти ĕнене те суса ĕлкĕреймест, колхозрисем патне çывăха та пырас çук. Анчах Ятманова тарăхтарма та юрамасть. Мĕн тăвас-ши?»

Каç, вырăн çине выртсан, вăл хăйне канăç паман шухăша арăмне пĕлтерчĕ.

— Борис Петрович хушнине тумасан, унпа пĕрле ĕçлесси пĕтрĕ манăн. Ним тума та çук, Укçине, вăхăтлăха та пулин фермăна кайма лекетех пулĕ.

— Эккей, çапла пулмасăр!— тарăхса кайрĕ çамрăк арăм.— Ятманов хăй арăмне ача сачĕн пуçлăхĕ туса хучĕ, анчах бухгалтер арăмне ĕне витине ярасшăн? Тислĕк шăрши шăршласа пурăнасшăн çунса качча тухман-ха эпĕ. Эсĕ мана ĕçлемесĕр ĕç кунĕ лартакан вырăн тупса пар.

— Колхозра ун пек вырăн çук.

— Ыттисемшĕн çук пулсан та — маншăн пулмалла. Шыра лайăххрах. Кукурузă звенине ертсе пыма хушăр. Шăпах мана ал майлă ĕç.

— Ан калаç!— тĕлĕнчĕ упăшки.— Эсĕ кукурузăна ăçта, хăçан, мĕнле акмаллине пачах пĕлместĕн вĕт, звеньевой ĕçне епле пултарăн?

— Ăна агроном пĕлет. Вăл актартăр. Вырас ĕçе те механизаторсем туса пырĕç. Звеньевойĕн кам ĕçе тухни-тухманнине кăна паллă тумалла. Хутла вĕреннĕ, наряд-сводкă таврашĕсене çырассинчен хăраса тăмăп.

— Вăл апли-апла та... звеньевой вырăнĕ пушă мар-çке. Тамара нимпе те тухас темĕ. Унран мĕнле хăтăлас?

— Правленире ларатăн, ху çавна та пĕлместĕн. Колхозра кам хуçа? Ятманов мар-и? Ăна епле те пулин Тамарăпа хирĕçтерсе яр. Лешĕ ун йышшисене юратмасть. Куç хупса иличченех вырăнтан кăларса çапĕ. Хамăра курайман бригадирпа кладовщикрен мĕнле хăтăлнине мантăн-им?

Мышкин ăна лайăх астăвать. Ятманова Тамарăпа хирĕçтерсе ярсан, кам çиеле тухасси пирки иккĕленмелли çук ĕнтĕ. Анчах мĕнле майпа вĕсене пĕр-пĕрне курайми тумалла-ши?

Пуçа ыраттарсах шухăшларĕ бухгалтер. Хирĕçӳ-çапăçу çын элекленипе ытларах пулса пынине шута илсе, çав мелпе усă курас тесе те пăхрĕ. Анчах председатель айван çын мар, пули-пулми сăмаха ĕненес çуккине туйни тытса тăчĕ. Мĕнех шухăшласа кăларăн хăй ĕçне лайăх пĕлсе, тимлĕ туса пыракан хĕр çинчен? Вĕчĕленме сăлтав тупмасăр элек витĕмлĕ пулас çук. Чăн-чăн сăлтав тупмалла!

Пĕрре, каçа хирĕç, правлени çурчĕ умĕнче мотоцикл пырса чарăнни илтĕнчĕ. Унтан пӳрте машин çăвĕпе вараланса пĕтнĕ, кĕвенте пек çинçешке те вăрăм пӳллĕ каччă кĕрсе тăчĕ.

— А-а, Тимахви-çке ку, кам пулемет пек шатăртаттарса халăха хăратса çӳрет-ши, тетĕп. Сывă-и? Ĕçӳсем епле? Пит-куçна çуса тасатмасăрах правление персе çитни темле васкавлă ĕç тупăннине пĕлтермест-и?— ыйтрĕ Мышкин.

— Пĕлес текене пĕлтерме те пултарать. Борис Петрович хăй пӳлĕмĕнче-и?

— Утара кайнăччĕ те, килеймерĕ-ха. Эпĕ те ăна кĕтнипе паян та киле вăхăтра таврăнаймарăм. Татах сивĕннĕ шӳрпе сыпма лекет пулмалла.

— Ан кулян, арăму çамрăк, ăшăтĕ.

— Кама, мана-и е шӳрпине-и?— кулса илчĕ Мышкин.

— Сана темле, шӳрпине ăшăтма кирлех.

— Апла пулсан, мана камăн ăшăтмалла-ха, арăмăн мар-и?

— Навус çĕрнине курнă-и? Вĕриленсе кайнипе тĕтĕм кăларсах çунать. Масар çинче çĕрнĕ чух вата упăшкасем те ăшăнаççех ĕнтĕ,— тĕксе илчĕ çамрăк çын.

— Эсĕ мана ваттипе ан йĕк-ха, тепĕр чух ватти яшран та ирттерекен,— шăртланса кайнине пытарасшăн кулкаласа каларĕ бухгалтер.— Мĕн ĕçпе килтĕн Ятманов патне? Секрет мар пулсан, пĕлтерсемччĕ!

— Секречĕ-качки. Комсомол райкомне чĕнчĕç. Тин çеç таврăнатăп. Хамăр ялта пăшал пемелли тир тунăранпа канăç пами пулчĕç. «Эсĕ,— теççĕ,— ĕçе пултаратăн. Сан организацире хастарлă комсомолецсем темĕн чухлех. Çавăнпа райком сана тепĕр пуçару туса яма хушать». «Мĕнле пуçару?» тесе ыйтатăп. «Коммунизмла ĕçлекен бригадăсем çинчен илтнĕ-и? Фабриксемпе заводсенче çав юхăм анлăран та анлă сарăлса кайрĕ. Бюрора сӳтсе яврăмăр та колхозсенче те ăна сарма тытăнас терĕмĕр. Малтанхи бригадă чи лайăх колхозра пулмалла ĕнтĕ. «Çутă маяк» пекки районра урăх çук. Комсомол организацийĕ те вăйлă сирĕн. Вăт,

тытăр та тăвăр çав пархатарлă ĕçе. Комсомолецсене пĕр бригадăна пухăр та коммунизмла ĕçлекен ударниксен ятне тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешӳ пуçарса ярăр», терĕ райкомол секретарĕ. Çавăн пирки калаçса пăхасшăнччĕ...

Çакна илтсен, Мышкин пуçне пĕр чее шухăш çиçĕм пек çиçсе кĕчĕ. Савăннипе вăл сĕтел хушшинчен тухрĕ те çамрăк çын аллине тытса чăмăртарĕ.

— Ухвандеев юлташ!— кăшкăрса ячĕ вăл.— Чун-чĕререн саламлатăп сана çĕнĕ ĕçпе. Ăна ăнăçлă тусан, пĕлетĕн-и, пĕтĕм республикипе мухтава тухма пулать. Анчах, ман шутпа, бригадă мар, комсомолла фермă тумалла. Правлени Уйпуç ялĕнчи ĕне фермине пысăклатасшăн. Унти комсомолецсене пухăр та çав фермăна хăвăр алла пама ыйтăр. Хĕрсене ĕне сăвакансем тума пулать, йĕкĕтсене вылькăх апачĕ турттарма, навус тăктарма пулать. Комсомолла фермăра коммунизмла ĕçлес йĕркешĕн кĕрешме çăмăлрах ĕнтĕ.

— Тĕрĕс. Питĕ лайăх шухăш! Ыранах бюро пухатăп.

— Ырана юлсан, ырри пулмасть, теççĕ. Паянах пух. Уйпуçĕнче миçе комсомолкă-ха?

— Вун иккĕ.

Мышкин хут çине тем çырса шутласа пăхрĕ.

— Фермăна пысăклатсан, унта вун виçĕ дояркă кирлĕ пулать. Теприне ăçтан тупас тетĕн?

— Çамрăк хĕрсем арăмсем пек йăрхаланса вăхăта сая ямĕç, ударлă ĕçлеме тытăнĕç. Çавăнпа вун икĕ комсомолкă вун виçĕ карчăк тумалли ĕçе çăмăллăнах туса пырĕç.

— Апла пулсан, вăхăта сая ярса ан тăр, бюро членĕсене пух та калаçса татăл. Ыран вунă сехетре правлени ларăвĕ пулмалла. Хăвăр йышăннă резолюцие ирхине ирех Ятманова килсе пар та — ĕç тухрĕ тесе шутла. Анчах фермăра ĕçлесси — ача вăййи мар, йывăрлăхсенчен шикленмĕç-ши çамрăксем?— юриех йĕкĕлтесе илчĕ бухгалтер.

— Э-э! Эсĕ пирĕн комсомолецсене пĕлместĕн-ха! Вĕсем хăравçă йышшисем мар, бюро ăçта кайма хушать, çавăнта каяççĕ.

— Апла пулсан, ăнăçлăх сунасси çеç юлчĕ.

— Тавтапуç, Ермолай Ефимч! Ыранччен...

«Ак телей,— хĕпĕртенипе аллисене сăтăрсах шухăшларĕ Мышкин.— Уйпуç ялĕнчи комсомолкăсене пурне те фермăна ямалла тусан, Тамарăн та кукурузă звенинчен куçма лекет. Ун вырăнне Укçинене кĕртесси ним те мар вара. Ăс-тăн çителĕклĕ пулсан, кирек епле ĕçе те ху майлă çавăрма пулать иккен. Хăвăртрах кайса савăнтарас арăма...»

Тепĕр кунне колхоз правленийĕ комсомолецсен пуçарăвне ырларĕ, виççĕмĕш бригадăри ĕне фермине «Комсомолла фермă» теме йышăнчĕ, ялти вун икĕ комсомолкăна, вăл шутра Тамарăпа Верука та, дояркă пулса ĕçлеме хушрĕ. Унтан Мышкинăн бригадирта ĕçлекен пуçанийĕ сĕннипе кукурузă звенине ертсе пыма Укçинене суйларĕç.

Лару хупăннă хыççăн правление Ятмановпа Мышкин иккĕшĕ çеç юлчĕç.

— Мĕнле шухăшлатăн, Ермолай Ефимч, пысăк фермăна çамрăксен аллине пама васкамарăмăр-ши?— ыйтрĕ председатель.

— Тем калас. Комсомолра хастарлă хĕрсемпе яшсем тăраççĕ ĕнтĕ. Нумайăшĕ правлени хушнине ăнăçлă туса пырассишĕн вăй шеллемесĕр ĕçлемелле. Çапах та найкăшакансем те тупăнĕç. Курак Йăванĕн хĕрнех илер ак. Вăл тахçанах ялтан тухса тарма сăлтав шырать, теççĕ. Халĕ фермăна куçма килĕшместĕп тесе кутăнлашма пуçлĕ те — хăйне ĕçрен кăларма ыйтĕ.

— Ан калаç!— ал сулчĕ Ятманов.— Эпĕ ăна чи лайăх хĕрсенчен пĕри пулĕ тесе шутланăччĕ. Ун ятне ик колхоза пĕрлештеричченех нумай илтнĕ. Пĕтĕм районĕпе мухтаччĕç. Ма тухса тарасшăн пултăр-ха вăл колхозран?

— «Ятманов пире ним вырăнне те хумасть. Кăшт хирĕçле кăна — сĕтеле чышсах хăтăрса тăкать. «Çутă маяка» пырса кĕнĕрене ыр сăмах илтмен», тенине хамах темиçе хут та илтсеччĕ. «Элек сарать», тесе шутласран хăранипе çеç шарламарăм ку таранччен.

— Тĕлĕнмелле. Ăшă сăмах, тен, чăнах та каламан пулĕ, çапах та ку таранччен ăна усал та туманччĕ-çке? Мĕншĕн сарăпланать-ха вăл?

— «Хĕрлĕ шевлере» пурăнма Тамарăна нумай аванрах пулнă çав, председательре ют çын мар, куккăшĕ ĕçлетчĕ. Кăшни çул виç çĕршер ĕç кунĕ лартса параттăмăр. Сан колхозна килсе кĕнĕренпе çур çул иртрĕ ĕнтĕ, анчах Тамара çĕр ĕç кунĕ те тăваймарĕ.

— А-а! Ав епле иккен. Куккăшĕ пулăшнипе чапа тухнине манмасть имĕш. Пĕлмен...

— Пурне те ăçтан пĕлен. Хам ун чух бухгалтерта ĕçлемен пулсан, эпĕ те пĕлес çукчĕ.

— Вăхăтра систернĕшĕн тавтапуç! Кутăнлашса пăхтăр кăна — ашшĕпе иккĕшне те кантра пек явса хурăп.

— Тен, санпа урлă пулма хăяймĕç,— йăпăлтатрĕ Мышкин.

## III

ÇИРĔМ ПИЛĔК ÇУЛ шинель тăхăнса пурăннă Ятманов çĕр çинче çар йĕркинчен пахи çук тесе шутланине маларах каланăччĕ эпир. Уставсемпе ăста çырнă приказсем ăна кирек ăçта та вырăнлă пулассăн туйăннă. «Дисциплинă, дисциплинă тата тепĕр хут дисциплинă—

акă ăçта пулас пурнăç никĕсĕ!» — çĕр хут та каланă пулĕ вăл. Паллах, тĕнчере тĕрлĕ дисциплинă пуррине те пĕлнĕ ĕнтĕ: ĕç дисциплини, парти дисциплини, çар дисциплини тата ытти те. Вĕсем пурте кирлĕ çĕрте кирлĕ йĕрке тăваççĕ. Ятмановшăн пулсан вара — çар дисциплинине ним те çитереймен. Уншăн çарти йĕрке пек йĕрке — халăха ертсе пыракан çынсен ĕмĕчĕ. Унашкал çынсене ĕлĕкрех «солдафон» тенĕ. Ятманов пирки аплах каламăпăр, çапах та ăна çын шăпине чĕри патне илекен этем теме те çук ĕнтĕ. Колхозниксен хăшин те пулин инкек-синкек сиксе тухсан, вăл ăна укçатенкĕ е тыр-пул парса пулăшассинчен пăрăнса тăман, анчах тепĕр чух ăшă сăмах каласа йăпатни хуйхă пуснă çыншăн пилĕк тенкĕ е пĕр пăт çăнăхран кирлĕрех пулассине вăл аса та илмен. «Йăпатасси — ман ĕç мар, пупсен ĕçĕ, — шӳтлем пекки туса каланă вăл хăйне ун çинчен астутарсан, — вĕсен арсеналĕнче леш тĕнче, рай пур. Ман арсеналта ампар тулли тырă, кассă тулли укçа пултăр. Вĕсемпе эпĕ кашни çынна телейлĕ тума пултаратăп».

Акă мĕнле çынпа тĕл пулмалла пулчĕ пирĕн Тамарăн.

Хăйне фермăна куçарнă тенине вăл малтанах ĕненмерĕ. Ир çинче çум çумлакан хĕрарăмсем патне те пырса пăхрĕ, анчах блокнот тытса тăракан Укçине ăна чи киревсĕр сăмахсемпе намăслантарса хуса ячĕ. Чунĕ кӳтсе çитнипе вăл кăшт кăна халăх куçĕ умĕнчех йĕрсе ямарĕ. «Такам курайманнипе турĕç ĕнтĕ кăна, — шухăшларĕ вăл, ял еннелле утса. — Ятманов суккăр мар, йĕркипе каласа паратăп та, вăл мана каллех хам вырăнтах хăварĕ. Кукурузă ӳстересси маншăн — чи юратнă ĕçске, мĕнле пăрахас ăна?»

«Колхоз председателĕ» тесе çырнă алăк патне çитсен, ирĕксĕрех çӳçенсе илчĕ хĕр. Нихçан та хире-хирĕç тăрса калаçманччĕ Ятмановпа. Анчах хăй ним айăпсăррине туйни ăна алăка шаккамаллăх хăюлăх пачĕ.

— Кĕрĕр! — илтĕнчĕ шалтан тимĕр пек хытă сасă.

— Ырă кун пултăр, Борис Петрович! — саламларĕ пӳлĕме кĕнĕ хĕр.

Сисĕнмеллех кăвакарнă çӳçлĕ, типшĕмрех питлĕ çын ун çине куç хӳрипе те пăхмарĕ, аллипе çеç сĕтеле хирĕç йĕркипе лартса тухнă хыçлă пукансем çине кăтартрĕ. Унтан темиçе минут хушши малтанах пуçланă хута çырчĕ. Хĕрсен ĕмĕртенпе пыракан йăлипе, Тамара именчĕ. Вара, яка пăр çине ăнсăртран тухса тăнă çын пек хăюсăррăн утса çывхарчĕ те, пукан çине темле сăлпăрккан ларчĕ. Юлашкинчен, Ятманов хута çырса пĕтерчĕ, авторучкине китель кĕсйине чикрĕ. Çавăн хыççăн тин хĕр çине ним чĕнмесĕр шăтарасла пăхрĕ.

— Эсĕ Куракова Тамара пулĕ-ха? Мĕн сăлтавпа-ши ĕç вăхăтĕнчех правление вĕçтерсе çитрĕн?

— Мана хамран ыйтмасăрах кукурузă звенинчен фермăна куçарнă. Мĕншĕн? Эпĕ хама шанса панă ĕçе йĕркеллех туса пынăччĕ-çке? — терĕ Тамара.

— Колхозра пин те тăват çĕр аллă член. Вĕсем пурте ăçта ĕçлемеллине кунта килсе ыйтма пуçласан, пĕлетĕн-и, мĕн пулса тухма пултарать? Эпĕ вара председатель мар, справкăсем паракан бюро пулса тăрăп. Малтан бригадирпа, фермă пуçлăхĕпе калаçмаллаччĕ. Йĕрке пăсасси вăл йывăр ĕç мар, ăна кирек кам та тума пултарать.

— Каçарăр, Борис Петрович! Эпĕ бригадирпа калаçса пăхрăм. «Правлени йышăннă, эп ним тума та пултараймастăп», терĕ. Сиртен пулăшу кĕтесси çеç юлчĕ. Тархасшăн, мана хам вырăнах хăварсамччĕ.

Пуçлăхăн тĕссĕр куçĕсем хĕсĕнчĕç. Вăл сылтăм аллине пӳрнисемпе сĕтеле параппан пек тăнкăртаттарса илчĕ.

— «Ятманов правлени йышăннине пăсма пулăшĕ», терĕн-и? Эсĕ мана кам вырăнне хуратăн?

— Çук, апла шухăшласси аса та килмен. Эпĕ сире хам ĕне ферминче ĕçлеме пултарас çукки çинчен кăна каласшăнччĕ. Пирĕн килте эп çуралнăранпа та ĕне пулман, ăна мĕнле пăхмаллине те, мĕнле сумаллине те пĕлместĕп. Мĕншĕн-ха мана пĕрре хăнăхса çитнĕ ĕçрен ĕмĕрте туса курман ĕçе куçаратăр?

— Эпĕ те колхоз председателĕ пулса курманччĕ. Халăх суйларĕ те чип-чиперех ĕçлеме вĕренсе çитрĕм. Кутăнлашса ан тăр, халех фермă пуçлăхĕ патне кай та хăш ĕнесене хăвна панине ыйтса пĕл. Нумай çулсем дояркăра ĕçленĕ хĕрсемпе калаçса пăх, зоотехникран пулăшу ыйт — вара ĕç ăнасси хăвăнтан килĕ.

— Борис Петрович, манран пурпĕрех тăрлавлă дояркă пулас çук! — çине тăчĕ Тамара.

— Мĕншĕн? — куç харшисене çамкине пĕркелентерсе çĕклерĕ те Ятманов сисĕнмеллех хĕрелсе кайрĕ.

— Мĕншĕн тесен вăл ĕçе пачах та юратмастăп.

— Ха! — аллипе сĕтеле çапса кăшкăрсах илчĕ пуçлăх. Хĕр шартах сикрĕ. — Ĕне пăхас ĕçе юратмастăн эппин? Çуне тиркесех тăмастăн пулĕ-ха? Правлени кашни çынна юратнă ĕç тупса парас тесен, пĕлетĕн-и, мĕн пулса тухĕ? Колхоз мар, пасар пулать вăл! Ал-ура сыввисене эпир ăçта ĕç пур, çавăнта яратпăр. Эс çамрăк хĕр, сывлăху çирĕп. Йывăр ĕçрен хăраса тăма намăса пĕлес пулать!

Кăмăла хытă хуçрĕç çак сăмахсем. Тем пек чунне хытарма тăрăшни те пулăшмарĕ. Тама-



ра куҫӗсенчен ирӗксӗрех куҫҫулӗ шăпăртатса анчӗ.

— Эпӗ йывăр ӗҫрен нихҫан та пăрăнса тăман. Кукурузă ӳстересси те ҫăмăл мар, ăна хăвăрах пӗлме кирлӗ. Анчах юратнă ӗҫе туни ал-урана ӗшентерет пулсан та, чуна кантарать. Уйри ӗҫе эпӗ ача чухнех юратнă. Колхозра ӗҫлеме пуҫланăранпа вара кукурузă ӳстерессине чунтан парăнса туса пытăм. Мана уншăн парнесем те панă, хисеп хăми ҫине те кашни ҫулах ҫырнă. Ăна хăвăрах пӗлме кирлӗ.

— Пӗлетпӗр. Пӗр колхозра кăҫал ҫеҫ ӗҫлеме пуҫланă пулин те, питӗ аван пӗлетпӗр. Председательте тăван кукку ларнă вăхăтра преми илесси вăл кăткăс ӗҫех мар. Эсӗ ман колхозра парне илме тивӗҫе кӗрсе пăх!..

«Пуҫăм пӗтрӗ!— хумханса ӳкрӗ Тамара.— Тахăшӗ килсе элекленӗ пулмалла. Халӗ ӗнтӗ хам айăпсăррине мӗнле ӗнентерес-ши?..»

— Борис Петрович, мана звеньевой пулни кирлӗ мар. Укҫине ытларах килӗшет пулсан, ăнах хăварăр. Анчах чунтан тархасласа тилмӗретӗп: фермăна ан куҫарăр. Эпӗ ял хуҫалăх институтӗнче агроном ӗҫне вӗренме тытăнтăм. Уй ӗҫ туса пурăнни мана вӗренӳре те кирлӗ. Тепӗр енчен, заочнă вӗренни кукурузă ӳстерме те куллен-кунах пулăшса пырӗ. Ӗҫе лайăх пӗлсе тăвакансем колхоза та кирлӗ вӗт?

— Агроном пирӗн пур, вăл ҫамрăк, пенсие часах тухас ҫук. Ҫавăнпа урăх агроном кирлӗ мар-ха пире. Вӗренесех килет пулсан, зоотехника вӗрен. Фермăра ӗҫлени вырăнлă пулӗ. Парти, правительствă хушсан — хăш ӗҫ кăмăла каять, хăшӗ каймасть, тесе тăмаҫҫӗ. Эпӗ те полковникчӗ, кунта сирӗн йышши кутăнсемпе калаҫма юратнăран килнӗ тетӗн-и? Ҫук, халăх хушнипе. Пире халӗ ытларах сӗт-ҫу, аш-какай туса илме хушаҫҫӗ. Вăт, ҫавăнпа сана фермăна ямалла турăмăр та эпир!

— Выльăх ӗрчетесси те кукурузăсăр, выльăх апачӗсӗр пулмасть. Унта ӗҫлекенсем те кирлӗ.

Ҫакна хирӗҫ ним те тупса калаймарӗ Ятманов. Вара, хăйне мăнаҫлă тытма юратакан ҫынсен йăлипе, вăл тарăхса кайрӗ.

— Усăсăр сăмах ваклама манăн вăхăт ҫук!— татса каларӗ вăл.— Ăҫта ӗҫлеме хушнă, ҫавăнта кай. Точкă!

Юлашкинчен, Тамара кунта никам та ун хутне кӗрес ҫуккине туйса илчӗ. Шанчăк ҫухатнă ҫын шыва сикме шутланă этемпе пӗрех: вăл ăс-тăн хушнине итлесе тăмасть, пурин ҫине те ал сулать те чӗлхе ҫине мӗн килнӗ, ҫавна персе ярать. Тамара та ҫаплах турӗ.

— Пурпӗрех фермăна куҫмастăп!— кăшкăрчӗ вăл.

— Эп хушсан та каймастăн-и?

— Эсир мар, шуйттан хушсан та каяссăм ҫук!

Председателе кӗнӗренпе пӗр колхозник та Ятмановпа ҫапла калаҫманччӗ. Хӗр чăрсăрланни ăна уртарсах ячӗ. Ҫарта чух хăйпе ҫапла калаҫакан салтак тупăннă пулсан, вăл ăна тӳрех гауптвахтăна хуптармаллаччӗ. Халӗ, ним тума пӗлмесӗр, пӗр кана аптраса тăчӗ. Унтан хӗр ҫине чунтан кураймасăр пăхрӗ те, сиксе тухас пек тапма пуҫланă чӗрине лăплантарасшăн, темле таблеткă хыпрӗ.

— Кай кунтан, шӗпӗн!— ҫӗтнӗ сасăпа мӗ-

кĕрсе ячĕ вăл.— Паянах фермăра ĕçлеме пуçлана пултăр! Илтрĕн-и? Халех!

Хĕр урăх ним те чĕнмерĕ, питне ывăç тупанĕсемпе хупăрларĕ те правлени çуртĕнчен чупса тухрĕ.

IV

ТАМАРА ФЕРМĂНА куçма килĕшменрен, Верук та унта каймарĕ. Чăнах та, колхоз ĕçĕнчен вуçех пăрăнас теменччĕ вăл. Тамарăпа иккĕшне Укçине уйран хуса янă хыççăн та вăл эртеллĕ ĕçрен тарса çӳрес шухăш тытманччĕ. Хĕрĕн чунĕ кӳреннĕччĕ ĕнтĕ, анчах татах уй ĕç тума чĕннĕ пулсан, вăл çав самантрах килтен тухса чупнă пулĕччĕ. Вăл кăна-и? Тусĕ фермăна каяс тесен, вăл та турткалашса тăрас çукчĕ. Лешĕ дояркă пуласси çинчен илтесшĕн те пулманни çеç ăна темиçе кун килте тытса усрарĕ.

Пĕчĕклех тăлăха юлнă Верук нимле ĕçе те тиркесе тăман. Улт-çичĕ çулта чухнех вăл тырă та вырнă, авăн çапнă çĕрте те хăй пĕлнĕ пек ĕçленĕ, улма та пуçтарнă... Пурне каласа та пĕтерес çук. Пушă вăхăт нихçан та пулман унăн. Халĕ, ĕçе тухма пăрахнăранпа, вăл ниçта кайса кĕми пулчĕ. Хытă аптраса çитсен, çыннăн кĕрешес килми те пулать. «Паракантан ил, çапакантан тар, теççĕ,— шухăшлать Верук.— Ятманова хирĕç тăни усăллă пулас çук. Ун енче вăй, вăл çĕнетех. Тем курса ларма пулĕ. Фермăна Тамарăсăрах кайсан мĕнле-ши?»

Çав самантрах вăл ашшĕ вилес умĕн каласа хăварнă сăмахсене аса илет. «Хĕрĕм,— тенĕччĕ вăл,— тĕнчере чи хакли — туслăх. Юлташа нимпе те пăрахса хăварма юрамасть. Эп йывăр амансан мана Курак Йăванĕ ал вĕççĕн çĕклесе тухман пулсан, эпĕ фашистсен аллинчех асапланса вилмеллеччĕ. Халĕ, тусăма пула, киле таврăнтăм, сире те аннӳпе иксĕре куртăм. Тем чул йывăр килсен те хăвăн ырлăхушăн тăрăшса юлташна пулăшма ан ман». Вун икĕ çул иртрĕ унтанпа. «Халĕ, хам аттене çăлнă çыннăн хĕрне кӳрентернĕ чух, манăн ăна пĕччен хăвармалла-и? Унтан киревсĕррине шухăшласа та кăлараяс çук. Тамара ăçта — эпĕ те çавăнта. Иккĕн иккĕнех, тем чул курайман çынсем те пире хыпса çăтаймĕç. Пирĕн пĕр чĕлхеллĕ пулмалла. Вара, тен, эпирех çĕнтерĕпĕр», пăшăлтатрĕ хĕр.

Кун хыççăн кун иртрĕ. Ĕççĕр лармалла пулнине урăх тӳсме пултараймарĕ Верук. Çитменне, ашшĕпе пĕр тăван пиччĕшĕ çăкăр сăмахлама пуçларĕ. Инкĕшĕ вара тӳрех çатлаттарса хучĕ: «Эсĕ, Верук, пирĕн ĕнсе çине утланса ларас теместĕн-и? Ĕç кунĕ илмесĕр хĕле кĕрсен, мĕн çисе пурăнас тетĕн?» Вара Верук Тамара патне тухса чупрĕ.

Кураковсен пӳрчĕ тахçанах çĕрсе пĕтнипе вĕчесĕр карчăк пек тайăлса кайнă. Ĕç ăнса пырсан, хĕле кĕриччен çĕнĕ пӳрт лартма хатĕрленеççĕ вĕсем. Пурине туяннă ĕнтĕ, кирлĕ чухлĕ укçа та пухнă. Платниксем тытасси çеç юлнă, темелле. Анчах хĕрĕ ĕçлеме пăрахни Курак Иванне те хуйăха янă. Тамара пулăшмасан, ăçтан пӳрт туса кĕме вăй çитерĕн? Хăй вăл уксахласа çӳренĕ пулин те механикре ĕçлет те, чирлĕ арăмĕпе виçĕ кĕçĕн хĕрне тăрантарса усрама та пайтах кирлĕ. Çавăнпа ашшĕ темиçе хут та хĕрне ӳкĕтлесе пăхнă.

— Тăхта, атте, тепĕр эрне те пулсан тăхта. Эпĕ фермăна кайма пултараймастăп, тен, Ятманов хăех ӳкĕте кĕрĕ,— хуравланă Тамара.

Верук пырса кĕнĕ чух пӳртре никам та пулмарĕ. Тамара çăва тухнăранпах кĕлетре çывăрса пурăннине пĕлсе, хĕр унта пырса тăчĕ. Алăкне питĕрмен, шалта тахăшĕ пур пулас, темскер ӳкнĕ пек начлатни илтĕнчĕ. Верук шăпланса тăчĕ те тинкерсе итлеме пуçларĕ. Кăшт тăрсан, кĕлетрен уçăмлăнах макăрнă сасă илтĕнчĕ. Хытă пăлханса кайнă хĕр алăка яри! уçрĕ те шала чупса кĕчĕ. Тамара вырăн çинче ӳпне выртать-мĕн. Унăн хулпуççийĕсем вĕттĕн чĕтреççĕ.

— Ара, мĕн пулнă?— хыпаланса ӳкрĕ Верук.

Тамара пуçне çĕклерĕ, куçĕсене тутăрпа шăлса типĕтрĕ, унтан тĕтре витĕр курăнакан хĕвел пек имшеррĕн кулчĕ.

— Ытлах ан хумхан, нимех те пулман-ха. Правление кайса килтĕм. Ятманов умне чунăма уçса хурас тенĕччĕ — итлесшĕн те пулмарĕ. Ытла та сарăплă çын иккен вăл. Манпа тарçăпа калаçакан хуçа евĕр тытрĕ хăйне хăй, хăратма пăхрĕ. Анчах эпир чурасем мар, комсомолецсем. Пирĕнпе йĕркеллĕ калаçмалла. Колхозниксене юнаса пурăнма Ятманова никам та ирĕк паман.

— Вăл çапли çапла та, эпир ытла та вăйсăр-çке. Мĕнех тăвăпăр ăна? Тен, унпа хирĕçиччен, фермăна каяр мар-и?

— Мĕн калаçатăн эсĕ?! Халĕ чакас-тăвас пулсан, пире никам та çын вырăнне хумĕ, эпĕ хам та мăшкăлтăк шывĕпе çăвăннă пек туякан пулăп. Пире хамăртан ыйтмасăр пĕр ĕçрен тепĕр ĕçе куçарма — эпир крепăсри хресченсем мар-çке?

— Темле çав, пирĕн йышшисене пайтах курнă пулĕ вăл.

— Курнă пулсан, çапла хăтланнă пулмĕччĕ. Полковник умĕнче чĕтресе тăракан салтаксене çеç курнă вăл. Ан шиклен, тепĕр ик кун кĕтсе пăхăпăр та, хамăра кукурузă звенине куçармасан, комсомолтан пулăшу ыйтăпăр.

— Юрĕ эппин,— килĕшрĕ Верук.— Комсомол — пысăк вăй ĕнтĕ, ăна хирĕç пырас темĕç...

## V

«САНА ПУЛМАСАН, çĕлен те сăхас çук», тенĕ ваттисем. Мышкин элеклемен пулсан, Ятманов та Тамарăпа Верука çав териех хĕсĕрлес çукчĕ пулĕ. Лешĕ вара канăçа пĕлмесĕр ĕшĕртрĕ, кашни майлă самантпа усă курса, вĕсене путарсах пычĕ.

— Куракова ĕçе тухать-и?— ыйтрĕ пĕр ирхине Ятманов.

— Кĕтсех тăр! Хăй те тухмасть, ыттисене те пăсать. Ăна пăхса, Тихăн Верукĕ те фермăна çӳреми пулчĕ,— йĕрĕннĕ пекрех пĕлтерчĕ бухгалтер.

— Апла эппин!— шăл витĕр каларĕ председатель.— Пирĕн сăмаха хăлхана та чикмест? Мĕн тăвас? Колхозра кахалсем, харам пырсем кирлĕ мар пире. Кăларса çапас мар-и ăна?

— Э-э, вăл çавна çеç кĕтет! Хамăр района Мускавран вербовщик килнĕ, шанчăклă комсомолецсене темле питĕ чаплă стройкăра ĕçлеме илсе каясшăн, тет. Хăш-пĕр ялтан çирĕмвăтăр çын суйласа илнĕ пулать. Кĕçех кунта та персе çитĕ. Вара Тамара йышшисем сан колхозу çине алă сулĕç те Мускавра ырă курса пурăнĕç.

Çакна хирĕç ним те тупса калаймарĕ Ятманов. Хытă тарăхнипе хăй пӳлĕмне кĕчĕ те алăка шалтлаттарса хупрĕ. Çур сехете яхăн вăл кĕтесрен кĕтесе утса çӳрерĕ. «Мăшкăл мар-и ку?— шухăшларĕ Борис Петрович.— Алăран вĕçертсен, пĕтĕм халăх умĕнче намăс кăтартать. Вара сывă пул ман авторитет! Мĕнле те пулин çăварлăхламаллах çав пуçтаха. Унсăрăн ыттисем те хисеплеми пулĕç. Мĕнле пăхăнтарас ăна?»

Ятманов шăртланнăçемĕн шăртланса пычĕ. Йывăррăн сывласа, вăл тата темиçе минут салтакла таплаттарса каллĕ-маллĕ утса çӳрерĕ. Унтан вербовкăпа активлă комсомолецсене кăна илсе каяççĕ тенине аса илчĕ те, савăннипе, сĕтеле алли ыраттичченех чышрĕ. «Тупрăм!— шухăшларĕ вăл.— Мĕнле йĕвенпе тытса чармаллине тупрăм. Комсомолтан кăларма пуçласан, хăех фермăна чупса пырĕ».

— Ермолай Ефимч, Ухвандеев курăнмарĕ-и паян?— алăк уçмасăрах кăшкăрчĕ вăл.— Кĕрха, сăмах пур.

Пуçлăх каллех парада тухнă салтак пек пуçне каçăртнине курсан, Мышкин хĕпĕртесе ӳкрĕ.

— Итлетĕп.

— Акă мĕн тăвăпăр. Чăрсăр хĕрсене комсомолтан кăларассипе хăратмалла. Ман хамăн райкома кайса килес пулать, эсĕ Ухвандеевпа курса калаç. Хĕрсене бюрона чĕнсе хăтăрса пăхтăр. Ăнлантăн-и?

— Питĕ лайăх ăнлантăм. Кунта килсенех эс каланине пĕлтерĕп.

Ятманов тухса кайсанах, Мышкин сторожа Ухвандеев патне ячĕ.

— Халех килтĕр. Ятманов чĕнет, те!— хушрĕ вăл.

«Питĕ аван шухăшланă эсĕ, Борис Петрович!— пăшăлтатрĕ Мышкин.— Анчах кăштах йăнăшрăн пулас. Хĕрсене хăратнипе çырлахмалла мар, вĕсене тӳрех комсомолтан кăларса пемелле. Леш ухмахне пăшал авăрланă пекех авăрлатăп та, ĕçĕ пулса та тăчĕ. Ятманов хушсан, Ухвандеев тем тума та хатĕр. Тамарăпа Верука та йăпăр-япăрах комсомолтан хуса кăларĕ».

Вулакана Ухвандеевпа паллаштарнăччĕ ĕнтĕ эпир, çавăнпа пĕр-ик сăмах кăна хушса хурăпăр. Те чăнахах ун чĕринче пултарулăх вутти ытла та çамрăклах хыпса тухнăран, те пĕвĕпе ытти юлташĕсенчен самаях пысăк пулнăран, ăна ача чухнех активистсен шутне кĕртсе хунă. Вара пуçланса кайнă унăн «карьери»— пионер вожатăйĕ, комсомол бюровĕн членĕ, секретарĕ. Юлташĕсем ăна вун икĕ çулта чухнех ятпа чĕнме пăрахнă, халĕ те «Ухвандеев юлташ» тесе çеç чĕнеççĕ.

Тӳрех каламалла, «ертсе пырас» ĕç Ухвандеева питĕ килĕшнĕ. Майĕпен вăл хăйне ытти çамрăксем пек мар, пĕтĕмпех урăхла туйма пуçларĕ, вĕсенчен татăлса пычĕ, аслăрах çынсем таврашĕнче ытларах шăлăнакан пулчĕ. Чапа тухнă колхозри комсомол организацине ертсе пыни ăна та мухтава тивĕçлĕ туса хучĕ. Тĕрлĕ пухусемпе конференцисенче ăна яланах президиума лартаççĕ, докладсенче унăн ятне ырăпа асăнмасăр хăвармаççĕ. «Малта пыракан колхоз комсомол организаци тăрăшнисĕр пулман ĕнтĕ. Çамрăксене Ухвандеев мобилизациленĕ», теççĕ райкомолта.

Чыса тивĕçлĕ пулнăшăн кама тав тумаллине туймалăх ăс-тăн çитернĕ Ухвандеев. Ун шучĕпе, хăйне ĕçчен çамрăксем тăрăшни мар, колхоз председателĕ пĕлĕте çитичченех çĕкленĕ. «Борис Петрович килмен пулсан, пирĕн колхоз халĕ те ĕлĕкхи пекех кая юлса пымаллаччĕ ĕнтĕ. Хыçалта çапкаланса пыракан колхозри комсомол организацине кам ырлатăр? Секретарьне вара кашни утăмрах ятлаççĕ. Ятманов колхоза мала кăларчĕ те, мухтавĕ мана та тиврĕ. Унпа яланах тачă çыхăнса ĕçлемелле», тесе пĕрре çеç мар шухăшланă вăл.

Паллах, комсомол организацин колхоз правленине ĕçре пулăшмалла ĕнтĕ. Анчах кирек епле ĕçе те куçа хупса мар, тĕплĕн шухăшласа, пур енчен те тĕрĕс пăхса тумалла. Председатель йăнăшать пулсан, вăл ял хуçалăх эртелĕн уставне пăхăнма пăрахсан, ăна вăхăтра тӳрлетме тăрăшмалла. Çакна Ухвандеев

чухлайман. Уншăн Ятманов тӳпери çăлтăрпа пĕрех пулнă, вăл мĕн хăтланнине тишкĕрӳçĕ куçĕпе пăхма вăй çитереймен. Ку çеç-и? Ятмановшăн вăл вутта кĕме те, шыва сикме те яланах хатĕр пулнă. Ахальтен мар ĕнтĕ, тумланасса та вăл ун евĕрлĕ тумланма тăрăшнă, утасса та ăна майлах салтак пек каçăрăлса, урисене çирĕппĕн пусса утнă.

— Ермолай Ефимч, мана Борис Петрович мĕн ĕçпе чĕннине пĕлместĕн-и?— ыйтрĕ вăл, правленине кĕрсен.

— Пĕлетĕп. Хăй вăл эсĕ килессе кĕтсе тăраймарĕ, ăна райкома чĕнчĕç. Санпа калаçса татăлма мана хушса хăварчĕ,— терĕ Мышкин.

— Эпĕ комсомолла фермăна кайнăччĕ, çавăнпа вăхăтра килеймерĕм. Мĕн çинчен калаçса татăлмалла?

— Çав фермă пиркиех чăрмантармалла пулчĕ. Ĕçсем унта мĕнле пыраççĕ?

— Чип-чиперех, темелле. Çамрăк паттăрсем ĕçе хастарлă тытăнчĕç. Ĕнер çĕнĕ обязательствăсем йышăнчĕç, паянтан пуçласа, çиçĕм-хаçат кăларма тытăнаççĕ. Столярсене хисеп хăми тума заказ патăм.

— Маттур, Ухвандеев юлташ, пултаратăн. Малашне те çаплах тăрăшсан, ĕнесем сĕт хăпартасси пирки иккĕленсе тăма сăлтав çук. Дояркăсем пурте ĕçе тухаççĕ-и?

— Иккĕшĕ фермăра ĕçлесшĕн мар, çавсем çеç тухмаççĕ. Ыттисем сехет механизмĕ пекех тĕрĕс ĕçлеççĕ.

— Камсем вĕсем, ĕçе тухманнисем?

— Тамарăпа Верук. Ĕлĕк кукурузă звенинче ĕçленĕскерсем. Халĕ те çавăнтах юласшăн.

— Ак тата! Хăвăр пухура Уйпуç ялĕнчи комсомолецсене пурне те комсомолла фермăра ĕçлеме мобилизациленнĕ тесе шутлас теменччĕ-и?

— Пухура йышăннă резолюцире çапла çырнăччĕ,— аса илчĕ Ухвандеев.

— Çав резолюципе килĕшсе çеç правлени Уйпуç ялĕнчи ĕне фермине комсомолла фермă туса хучĕ. Халĕ мĕн, сĕт сума комсомолкăсем вырăнне карчăксене ярас тетĕр-им? Ман шутпа, Тамарăпа Верука комсомол пухăвĕпе колхоз правлени йышăннине хисеплеме вĕрентмелле пек туйăнать. Ятманов ун çинчен пĕлсен, мĕнле çиленессине эп каламăсарах сисетĕн ĕнтĕ. Вăл йĕрке пăсакансене тӳсме пултараймасть.

— Тĕрĕс. Астутарнăшăн тавтапуç! Паянах вĕсене бюрона чĕнсе хытă çĕмĕрсе тăкатăп.

— Устава пăхăнман комсомолец Ленин сăнлĕ билета кĕсъере чиксе çӳреме тивĕççĕр, тет Ятманов юлташ. Ӳкĕте кĕмесен, иккĕшне те союзран кăларса çапăр.

— Тамарăпа Верук ĕçе тухма пăрахнине тĕрĕс хаклама пĕлеймен иккен эпĕ. Пуху йышăннине пăхăнман çын чăнах та комсомолра юлма тивĕççĕр ĕнтĕ. Турткалашса тăччăр кăна, эп вĕсене пĕрре куç хупса иличченех комсомолтан кăларса ывăтăп. Борис Петровича шантар: вăл каланă пекех тăвăп,— терĕ Ухвандеев.

## VI

КĂНТĂР АПАЧĔ ХЫÇÇĂН Тамарăпа Верука бюро ларăвне чĕнчĕç. Мĕн кăна каласа ятламарĕç пулĕ вĕсене, юлашкинчен ӳкĕтлесе те пăхрĕç. Çапах та хĕрсем фермăра ĕçлеме килĕшмерĕç. Вара тарăхса çитнĕ бюро членĕсем иккĕшне те, комсомол дисциплинине пăснăшăн тесе, союзран кăларма йышăнчĕç.

Тепĕр кунне комсомолецсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Çĕр çын ытла пычĕ Вăрманкас ялĕнчи пысăк клуба. Хĕрсем те, каччăсем те туллиех. Уйпуç хĕрĕсем кăна, фермăра сĕт сумалла пулнă пирки, пыраймарĕç. Кун йĕркинче — пĕр ыйту: ĕнер Тамарăпа Верук пирки бюро йышăннине çирĕплетесси. Малтан Ухвандеев çак «ĕçĕн» кĕске историне каласа пачĕ. Унтан, ораторсен йăлипе самантсерен хăпартланса пырса, сассине çĕклентерчĕ те хĕрсене питлеме тытăнчĕ.

— Юлташсем! — кăшкăрчĕ вăл.— Пĕтĕм çĕршыв Коммунистсен партин историлле съездне чаплă ĕçсем туса кĕтсе илме хатĕрленет. Эпир, колхозри çамрăксем, аякра тăрса юлма пултаратпăр-и çак мухтавлă ĕçрен? Çук, юлташсем, тăрса юлма пултараймастпăр. Çавăнпа пирĕн комсомолецсем колхозри чи пысăк фермăна шефа илчĕç те ăна комсомолла фермă туса хучĕç. Унта ĕçлекенсем коммунизмлă ĕç ударникĕсен ятне илтме тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешӳ пуçласа ячĕç. Правлени пирĕнпе килĕшрĕ, кунсерен пулăшса пырать. Хамăран иртнĕ пухура эпир Уйпуç ялĕнчи комсомолецсене пурне те комсомолла фермăра ĕçлеме мобилизацилене тесе шутлама йышăннăччĕ. Мĕнле пурнăçларĕç çав йышăнăва? Пĕтĕмĕшпе илсен, Уйпуç ялĕнчи комсомолецсем чунтанах хапăл турĕç çав ĕçе. Анчах таркăн йышшисем те тупăнчĕç. Куракова Тамарăпа Тихонова Вера пуху йышăнни çине сурчĕç те фермăна ĕçлеме куçмарĕç. Халĕ эрне ытла ĕнтĕ хăйсем те ĕçе тухмаççĕ, ытти хĕрсене те пăсасшăн...

Зал кĕрлесе кайрĕ. Ухвандеев кăшт кĕтсе тăчĕ те, хăй майлисем йышлăнраххине туйса, сассине тата çӳлерех çĕклентерчĕ.

— Мĕне пĕлтерет ку?— ыйтрĕ вăл, йĕркийĕркипе ларса тухнă хĕрсемпе каччăсем çине пăхса.— Пирĕн хушша çăмăл пурнăçшăн çунакансем, ытларах тӳлекен ĕçе çеç туса пурăнма ĕмĕтленекенсем, тĕрĕсрех каласан — шкурниксем пырса кĕнине пĕлтерет. Вĕсемшĕн пулсан, комсомолăн мухтавлă ячĕ виçĕ пус та

тăмасть. Анчах чăн-чăн комсомолец ун пек тумасть! Астăвăр-ха, граждан вăрçи вăхăтĕнче шуррисемпе çапăçакансен малти ретĕнче кам пулнă? Комсомолецсем! Этем ури пырса пусман тайгара, Амур шывĕ хĕрринчи Комсомольск хулине кам тунă? Комсомолецсем! Гитлер хурахĕсемпе çапăçнă чух кам вилĕмрен хăрамасăр хăй кăкăрĕпе тăшман ДОТне хупланă? Матросов йышши комсомолецсем! Юлашкинчен, Казахстанра, Çĕпĕрте, Алтайра тинĕс пек сарăлса выртакан çеçен хирти çереме камсем уçнă? Вĕсемех! Вăт мĕнле çынсем вĕсем, комсомолецсем! Пирĕн Тамарăпа Верук çавăн йышши çынсем-и? Çук! Вĕсем çамрăклах тар юхтарса ĕçлемесĕр, йывăрлăха тӳсмесĕр, никама усă памасăр ырă курса пурăнма ĕмĕтленнĕ. Мĕне кирлĕ унашкал çынсем ленинла комсомола? Ниме те кирлĕ мар! Çавна шута илсе, бюро Тамарăпа Верука комсомолтан кăлармалла турĕ. Сире эпĕ бюро йышăнни тĕрĕс иkенне пĕр çын пек кар! тăрса сасăланипе кăтартма чĕнетĕп!..

Ораторăн юлашки сăмахĕсем алă çупса кăларнă шав айне пулчĕç. Çамрăксем шăплансан тин председатель Тамарăна сăмах пачĕ.

— Пире Ухвандеев хăравçă, ачаш, шкурник тесе хăртма пăхрĕ. Тĕрĕс мар ку, юлташсем! Эпир Верукпа иксĕмĕр те йывăр ĕçрен нихçан та хăраса тăман...— чĕтрекен сасăпа пуçларĕ вăл.

— Апла пулсан, фермăна мĕншĕн каймастăр?— пӳлчĕ Тамарăна Ухвандеев.

— Уйра, кукурузă ӳстернĕ çĕрте ĕçлесси, фермăра сĕт суса пурăнассинчен çăмăлрах мар. Ăна хăвăрах пĕлме кирлĕ. Пирĕн Ятмановпа Ухвандеев юлташсене кашни çамрăк çыннăн колхозра та хулари пекех хăй юратнă ĕçе туса пурăнма права пуррине кăтартас килчĕ. Эпир кукурузă çитĕнтерес ĕçе сăмахпа мар, çултан çул тухăçлă тыр-пул тунипе кăтартнă. Ăна хăвăрах пĕлетĕр. Çав ĕçе тата лайăхрах пĕлекен пулас тесе, эпĕ институтра заочнă вĕренме пуçларăм. Мана лайăх хăнăхса çитнĕ ĕçрен нихçан туса курман ĕçе куçарни кама кирлĕ? Бухгалтер арăмне çеç мар-и?..

— Хисеплĕ çын ятне çĕртме кам сана ирĕк панă?— татах пӳлчĕ ăна Ухвандеев.

— Эсĕ ху çинчен кала-ха! Правлени хушнă ĕçе туса пыма килĕшетĕн-и? Комсомол организацийĕ йышăннине хăçан пурнăçлама шутлатăн?— хушса хучĕ пуху пуçлăхĕ.

Юлташĕсем хăйне ăнланманни Тамарăна хытă хумхантарчĕ. Чунĕ кӳтсе çитнипе вăл сăмахне каласа пĕтермесĕрех хăй вырăнне ларчĕ.

— Вăт, яланах çапла вăл!— терĕ Ухвандеев.

— Фермăна каятăн-и? Юлашки хут ыйтатăп?— кăшкăрчĕ председатель.

— Хуть те мĕн тăвăр, каймастăп!— пуçне çĕклемесĕр шăппăн каларĕ Тамара.

— Тихонова юлташ, эсĕ тата мĕн калас тетĕн?— Верука сăмах пачĕ пуху пуçлăхĕ.— Трибунă çине улăхма ыйтатăп.

— Мĕн калассине вырăнтанах калăп: Тамарă манăн чи çывăх тусăм. Туса пăрахакана сутăнчăк теççĕ. Эпĕ ун йышши мар. Тамара ăçта — эпĕ те çавăнта!— касса татрĕ хĕр.

— Сан пуçу хăвăн-и е эс ăна çынран кивçен илнĕ?— ыйтрĕ тахăшĕ.

Çамрăксем кулса ячĕç.

— Эпир авалхи улпут хресченĕсем мар, колхозниксем. Пире хамăртан ыйтмасăр вырăнтан вырăна куçарма никама та ирĕк паман. Ятманов пире кукурузă звенинче хăвартăр, вара ыранах ĕçе тухатпăр.

Залра ларакансем кĕрлеме тытăнчĕç.

— Тĕрĕс!

— Мĕн сухăр пек çыпçăннă çак хĕрсене!

— Кирек камăн та чун туртакан ĕçе тăвас килет ĕнтĕ. Уншăн айăпламалла-и?— янăраса кайрĕç сасăсем.

Ухвандеев Тамарăпа Верук майлисен йышĕ хушăнсах пынине туйрĕ.

— Анархистсене хӳтĕлеме ан пар, пухăва лайăххрах ертсе пыр,— хăлхаран пăшăлтатса каларĕ вăл председателе.

— Юлташсем, ан суйхашăр!— чарчĕ лешĕ.— Камăн сăмах илес килет, алă çĕклĕр!

Пур енчен те алă çĕклени курăнчĕ. Вĕсем хушшинче Уйпуç ачисем ытларахчĕ, анчах председатель ытти ялсенчен килнисене çеç сăмах парса пычĕ. Çапла тунипе бюро йышăннине çирĕплетес текенсен шучĕ йышлăрах пек курăнчĕ. Анчах тавлашакансем те чылай пулнă пирки, Ухвандеев сăмах илчĕ.

— Юлташсем, кĕсех çур çĕр çитет. Ыран нумайăшĕн утта каймалла. Ыттисене те канма кайма шăпах вăхăт ĕнтĕ. Çавна шута илсе, прение пĕтерме сĕнетĕп,— терĕ вăл.

— Чăнах, çитет!

— Мĕн тумалли паллă ĕнтĕ!

— Сасăлăр хăвăртрах!— кĕрлесе кайрĕç пур енчен те.

— Мана сăмах парăр-ха!

— Сăмах парăр!..

Председатель кăранташпа сĕтел çине нумай чен шаккасан, пуху кăштах лăпланчĕ.

— Юлташсем!— терĕ вăл.— Эпир ООН генеральнăй ассамблейĕнче мар, процедурă ыйтăвĕсем пирки харкашмасан та юрĕ. Сасăлатăп: кам прени пĕтерес тет, алăрсене çĕклĕр!

Шӳт туни çамрăксене кăмăла кайрĕ. Нумайăшĕ кула-кулах алă çĕклерĕç.

— Прени пĕтрĕ. Пирĕн умра пĕр сĕнӳ: Куракова Тамарăпа Тихонова Верăна комсомолтан кăларас тени. Кам Бюро йышăннине çирĕплетес тет, сасăлама ыйтатăп.

— Тĕрĕс мар!— кăшкăрса ячĕ Уйпуç ачисенчен пĕри.— Эпир кунта вăйă выляма пухăнман, икĕ комсомолкăн шăпине татса пама килнĕ. Мана сăмах парăр-ха!

— Прени пĕтнĕ. Эсĕ бюропа килĕшместĕн пулсан, хирĕç сасăлама пултаратăн,—ăнлантарчĕ Ухвандеев.

— Çитет! Капла çĕр каçиччен ларсан та пухăва пĕтерейместĕр!

— Сасăлăр хăвăртрах!— татах кĕрлесе кайрĕ зал.

Председатель тепре сасăлама ыйтрĕ. Пухăннă çамрăксенчен çурри яхăн аллисене çĕклерĕç.

— Абсолютное большинство, — пĕлтерчĕ председатель.— Кам хирĕç?.. Сасăламасăр кам юлчĕ?.. Меньшинство. Бюро йышăннине çирĕплетнĕ тесе шутлăпăр.

— Тамарăпа Верук! Сирĕн халех комсомол билечĕсене президиум сĕтелĕ çине кăларса хумалла!— пĕлтерчĕ Ухвандеев.

— Ăна санран илмен, сана парас та çук!— татăклă каларĕ Куракова.

— Халех килсе панă пултăр!— хăтăрма пăхрĕ секретарь.

— Аллусем кĕске! Ĕç çаплипе пĕтрĕ тетĕн пулĕ-ха. Кĕтсех тăр! Сана райкомра тăна кĕртĕç-ха, савăнма ан васка,— терĕ Верук.

## VII

НАТАША ШАРИКОВА, аякри япаласене начар курнăран мĕн пĕчĕкренех куçлăхпа çÿренĕ типшĕм питлĕ пĕчĕк хĕр, комсомол райкомĕн секретарĕнче пĕлтĕртенпе çеç ĕçлет пулин те, районти пысăк авторитетлă çынсенчен пĕри темелле. Чăнлăха юратнăшăн, яланах тĕрĕс тума тăрăшнăшăн, никама та сăлтавсăр кÿрентерменшĕн ăна пурте хисепленĕ. Пуринчен ытла çынсене вăл кирек кампа та кăмăллăн калаçни килĕшнĕ. Ĕçе чун-чĕререн парăнса туни ăна чăнах та хисепе тивĕçлĕ, мухтава юрăхлă тунă. Анчах кун-çулĕ унăн тип-тикĕс пулнă теме çук. Ку тĕлĕшпе чи малтан вăл тăлăххăн ÿснине кăтартмалла. Çичĕ çул вĕреннĕ хыççăн, вăл зооветеринарнăй техникума кайса кĕчĕ. Сывлăхĕ хавшак пулин те, веренÿре те юлташĕсенчен юлман, обществăллă ĕçсене те ятшăн мар, тулли кăмăлпа туса пынă. Вара ăна часах асăрханă: малтан комсомол организацин бюроне суйланă, кайран ăна ертсе пыма та хушнă. Питĕ йывăр килнĕ çав вăхăтра. Юлташĕсенчен вĕренÿре кая юлас мар тесе, унăн, тĕттĕм каçа кун туса, учебниксемпе лармалла пулнă. Çитменне, килтен пулăшакан çук пирки (тăван ялĕнче йÿтенĕ асламăшĕсĕр пуçне унăн никам та пулман) Наташа час-часах хура çăкăр та тăраниччен çиеймен. Ку ĕнтĕ тăлăх хĕрĕн ахаль те начар сывлăхне тата ытларах йăштарнă. Ана кăкăр чирĕ аптратма пуçланă. Çуркунне е кĕркунне çанталăк йĕпене кайсан, юнлă сура-сура ÿслĕкпе асапланнă. Диплом илнĕ çул ăна пĕр уйăхлăх туберкулезран сыватакан санаторине ячĕç. Ку самаях пулăшрĕ, анчах чирĕ пĕтĕмпех иртсе каймарĕ.

Техникумран тухсан, вăл тăван колхоза зоотехник пулса таврăнма ĕмĕтленнĕччĕ. Вырьăх-чĕрлĕх пăхас ĕçе ытла та юратнăччĕ Наташа. Анчах комсомолăн районри конференцинче ăна кĕтмен çĕртен райкомола ертсе пыма хушрĕç. Вăл, хăйĕн яланхи йăлипе, турткалашса тăмарĕ, çĕнĕ ĕçе пуçĕпех парăнчĕ. Сывлăхĕ кунсерен начарланса пыни мĕне пĕлтернине лайăх пĕлсе, вăл каçсерен хваттерĕнче пĕччен юлсан: «Телей тăвасси те пĕтрĕ пулĕ, мана, чирлĕ хĕре, кам качча илĕ? Апла пулсан, хама мар, ытти çынсене телейлĕ тума тăрăшмалла. Çавăншăн пурăнас пулать»,— тесе шухăшланă.

Çав тери кăмăллă çынна пĕр енчен мухтамалла, тепĕр тесен — хĕрхенес те килет. Эпир ăна ырлатпăр пулин те унăн çитменлĕхĕсем çинчен каламасăр та иртме пултараймастпăр. Хĕвелĕн те тĕксĕм паллăсем пур, теççĕ. Наташăн та пулнă вĕсем. Чи малтан вăл кирек мĕнле çынна та, пуринчен ытла аслăрах вырăнта ĕçлекеннине ытлашши шанса пурăннине кăтартма лекет пулĕ. Пуçлăхсене критиклеме юрамасть тенине чун-чĕреренех ĕненнĕ. «Аялта мĕн туни çÿлтен аванрах курăнать,— тенĕ вăл.— Района ертсе пыракансем те ахаль çынсен мĕн тумаллине, мĕнле пурăнмаллине лайăхрах пĕлеççĕ. Çавăнпа вĕсем хушнинчен иртме юрамасть». Таса чунлăскер, çутă ĕмĕтпе пурăннăскер, Наташа пуçлăхсем хушнипе вĕсем кăларнă инструкцисене пурне те закон вырăннех хума чĕннĕ.

Тамарăпа Верукăн жалобă пама çак тĕлĕнмелле хĕр патне пымалла пулчĕ. Инçетрен ывăнса килнĕ хĕрсене Шарикова тÿшек пек çемçе диван çине лартрĕ те вĕсене мĕн пăшăрхантарни çинчен тĕплĕн ыйтса пĕлчĕ. Калаçасса ытларах Тамара калаçрĕ, Верук хутранситрен çеç сăмах хушкаласа пычĕ. Хăйсене епле пĕр сăлтавсăр кÿрентерни çинчен калана чух Тамара йĕмесĕр чăтаймарĕ. Верук та, унччен кусçуль çăткаласа ларнăскер, халĕ саспах макăрса ячĕ. Вара Наташа та лăпкăн юлаймарĕ: шурă тутăрпа putса кĕнĕ пит çămартисем тăрăх чупма пуçланă тумламсене çепĕççĕн шăлса типĕтрĕ.

— Туятăп, тусăмсем, сире çăмăл мар,— терĕ вăл чĕре патне пырса тивекен çемçе сасăпа.— Комсомолтан кăларнинчен хăрушши вилĕм çеç. Ухвандеев пуху йышăнни çинчен калакан материалсене килсе паман-ха. Унччен акă мĕн тăвăпăр. Эсир килĕрсене таврăнăр та,

тĕплĕрех шухăшласа, райкомола заявлени çырса парăр. Унта хăвăр тунă йăнăшсене пĕтĕмпех йышăнăр, малашне йĕркеллĕ пулма сăмах парăр. Вара райкомол бюровĕнче эпĕ сирĕн майлă тухса калăп та иксĕре те комсомолтах хăварăпăр. Строгий выговор пама лекетех пулĕ, унсăр мар ĕнтĕ. Анчах хăвăра фермăра пур енчен те ырăпа кăтартсан, выговора пăрахăçлама пулĕ.

Çак сăмахсене илтсен, Тамарăпа Верук куçĕсене чарсах пăрахрĕç.

— Шарикова юлташ, мĕнле йăнăшсем çинчен калаçатăр эсир?— тĕлĕнсе ыйтрĕ Куракова.— Эпир хамăра хамăр айăплă пек туйнă пулсан, кунта килес те çукчĕ. Хамăр пачах айăпсăррине пĕлни çеç пире вăхăтлăха йăнăшакан юлташсене хирĕç тăма вăй-хăват пачĕ.

— Апла пулма та пултарать,— килĕшрĕ райкомол секретарĕ.— Çын тунă йăнăша курасси çăмăл мар, хамăр тунине сисесси тата йывăртарах. Тĕтĕм тухмасăр вут çунмасть, тенĕ ăслă çынсем. Сире те ытла сăлтавсăрах кăларман ĕнтĕ комсомолтан. Каярахпа хăвăр йăнăшнине чиперех пĕлекен пулăр-ха.

— Эсир пире тĕлĕнтеретĕр,— пĕтĕмпех улшăнса каларĕ Тамара.— Калăр-ха, комсомолец ĕмĕр тăршшипех юратнă ĕçе туса пурăнас тени йăнăш тунине пĕлтерет-и?

— Эх, тусăм! Ытла та çамрăк-ха эсĕ, пурнăç тути-масине тин çеç активсе курма тытăннă. Ĕç-хĕле тăвас тесен, юратни-юратманни çинчен мар, кирли-кирлĕ марри çинчен шухăшламалла. Вара кирлĕ ĕçе кăмăлламасан та тăвас пулать, кирлĕ маррине тем пек юратсан та тума юрамасть. Шухăшласа пăхăр-ха, сирĕн пек çамрăк Зоя Космодемьянская вăрçă ĕçне юратнă пулĕ тетĕр-и? Çук, унăн та, ытти хĕрсем пекех, пурăнас та, вĕренес те, юратас та килнĕ. Анчах комсомол хушсан, вăл хăш çулпа каймалли пирки иккĕленсе тăман, фронта пырса, тăван çĕршывшăн çамрăк пуçне хунă. Çапла-и?

— Çапли çапла та, вăл вăрçă вăхăтĕнче пулнă. Тăван çĕршыва тăшмансем тапăнсан, эпир те пĕр сăмахсăр фронта тухса каймалла. Анчах халĕ мирлĕ самана, çынна юратнă ĕçрен ирĕксĕрлесе уйăрнинче усă пулмĕ. Пире лайăх хăнăхса çитнĕ ĕçрен нихçан туса курман ĕçе куçарни те никама усă парас çук.

— Колхоз правленийĕ сăлтавсăрах çапла туман пулĕ. Комсомолла фермă тăвасси — пысăк чыс, ăна хаклама пĕлес пулать.

Çак сăмахсемпе Шарикова, диван çинчен тăрса, тепĕр хут сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ. Унăн пысăк куçĕнче ăшшăн йăлкăшса тăнă вут сÿнчĕ, сăнĕ те тĕксĕмленчĕ.

— Правленире те пирĕн евĕрлĕ çынсемех ĕçлеççĕ, вĕсем те йăнăшма пултараççĕ,— терĕ аптраса çитнĕ Тамара.

— Мĕн калаçатăн эсĕ? Правлени членĕсене ялти коммунистсем, председательне — парти райкомĕ сĕннипе суйланă. Вĕсем пули-пулми çынсене ответлă ĕçе кĕртес çук. Ятманова эпĕ лайăх пĕлетĕп. Вăл хăйшĕн мар, халăхшăн тăрăшни пурне те паллă. Апла пулсан, сиенлĕ ĕç тума пултарать-и вăл? Эсир ăна итлес мар терĕр пулсан, никама та ан айăплăр. Çапла, юлташăмсем, тĕплĕн шутламасăр тунă эсир çак ĕçе. Правленипе комсомол организацин бюроне хирĕç пыни чи малтан сире хăвăра пысăк сиен тума пултарать. Ăнлантăр-и?

Çухалса кайнă хĕрсем ним калама та пĕлмерĕç. Çак вăхăтра Наташа сехет çине пăхса илчĕ те хыпаланса ÿкрĕ.

— Чутах манман: паян заводри комсомолецсем пухăва чĕннĕччĕ. Тата çур сехетрен пуçланмалла. Тархасшăн каçарăр, калаçса ларма пĕр минут та юлмарĕ. Хам каланă пек тусан, комсомол билетне çухатмăр. Ăслă-тăнлă пулăр, заявленисем çырăр та почтăпа ярса парăр. Килĕшетĕр-и? Чĕнместĕр эппин. Чĕнменни килĕшнине пĕлтерекен. Юрĕ-çке, ан ятласа кайăр. Тепре куриччен сывă пулăр!

Шарикова хĕрсене урама тухиччченех ăсатса ячĕ.

— Ну, мĕнле?— ыйтрĕ Верук.— Секретарь кăмăла кайрĕ-и?

— Темле калас. Те ытла та ырă кăмăллă вăл, те пиртен мăшкăлларĕ çеç. Эс мĕнле шутлатăн?

— Мăшкăлласла мар пек туйăнать. Куçĕсенчен куççуль тумланине лайăхах куртăм. Пире хĕрхенчĕ, ун пирки иккĕленсе тăмастăп. Чăнах та, вăл каланă пек тăвар мар-и? Çырар та ярар вăл ыйтакан хута.

— Айăп çук çĕртен айăплă тесе çыриччен, аллăма пуртăпа касса татам! Паянччен кĕрешÿ райкомола килнĕ хыççăн пĕтет пулĕ тесе шутланăччĕ. Халĕ шухăшăм улшăнчĕ. Пирĕн кĕрешÿ пĕтме мар, тата хĕрсе каяссăн туйăнать. Кала, тусăм, уйрăлса каятăн-и манран е малашне те пĕрле утăпăр?

— Ура çинче тăмалăх вăй пур чухне яланах пĕрле пулăпăр. Хавшанипе çĕре ÿксен, эп тăрасса ан кĕт, малалла мансăрах ут.

Верукăн сасси чĕтрерĕ. Тамара ун çине пăхса илчĕ те урăх ним те каламарĕ.

## VIII

КОМСОМОЛТАН КĂЛАРНĂ хыççăн Тамара правление чупса пырса пуç таясса кĕтнĕччĕ Ятманов. Чăрсăр хĕр ÿкĕнме пуçласси палăрмарĕ те. Аптраса çитсен, председатель хĕрĕн ăшшĕне чĕнтерчĕ.

Ку таранччен Борис Петровичăн нумай юнтарса çӳрес йăла палăрманччĕ. Халĕ те çилли часах сĕвĕрĕлетчĕ-и тен, анчах кукурузă звенинче Укçине ĕçлеме пуçланăранпа йĕрке пăсăлни хупларĕ. Кашни кунах унта харкашу пулса иртет. Кам айăплине пĕлес ĕмĕтпе Ятманов звеньевойпе курса калаçрĕ. «Тамара пăсса пырать,— терĕ лешĕ.— Мана курайманнипе хĕрсене звенорaн тухса кайма ĕшĕртет. Хăшĕсем пахча çимĕç звенине куçма заявленисем çырчĕç, теприсем ĕçе тухмасăр турткалашса тăраççĕ. Çав йĕке хӳре чăрмантармасан, чиппиперех ĕçлемелле».

Комсомолла фермăра та ĕç ăнмарĕ. Ĕнисем кунсерен сĕт чакарса пыраççĕ. Тĕплĕн суса пĕтерменрен ĕнтĕ. Дояркăсем çитмеççĕ. Уйпуç ялĕнче комсомолкăсем урăх çук пирки Вăрманкас ялĕнчен виçĕ хĕре куçарма лекрĕ. Вĕсем ыттисемпе килĕштерсе пурăнасшăн пулмарĕç. Вара унта та час-часах урлă сăмахсем илтĕнме пуçларĕç.

«Тĕплĕн шухăшламасăр тунă ĕç ăçтан ăнтăр?— шухăшларĕ председатель.— Темле, кĕтмен çĕртен сиксе тухрĕç çак ыйтусем. Такам хыçран хăвалана пек васкаса туса хутăмăр. Халĕ ӳкĕнмелле ан пултăрччĕ. Районран та сулхăн çил вĕрни сисĕнекен пулчĕ. Никама кӳрентермен Шарикова та юнаса илчĕ. «Çамрăксене кӳрентерме тытăннă теççĕ сире,— терĕ вăл, ăнсăртран тĕл пулсан.— Майлă вăхăт тупса пырса курас пулать-ха, мĕн çĕмĕрттерсе пурăнатăр унта». Малтан райкомолтан, каярахпа парти райкомĕнчен те килес тейĕç. Тамара жалобă панипех ĕнтĕ. Çав тухса тăчĕ ман çул çине. Килсе каçару та пулин ыйтасчĕ, вăл пур, куçа та курăнмасть. Эпĕ усала нумай асăнса пурăнакан çын мар, хама тивĕçлипе хисеп тусан, каçармалла. Кайтăр кукурузă звенине. Хăех чĕрĕп пек йĕпленсе пурăнать».

Курак Иванĕпе калаçнă хыççăн ĕç майлашасса шаннăччĕ Ятманов. Вĕт тин кăна паллашнă çынсем мар, пĕр чĕлхеллĕ пулма пĕлмелле. Миçе çул иртрĕ вĕсем çывăх паллашнăранпа? Хĕрĕх тăваттăмĕш çулта госпитальте пĕрле выртнăччĕ пулас. Юнашар палатăра йывăр аманнă чăваш выртать тенине илтсен, Ятманов, суранĕ ыратнине пăхмасăрах, хул айĕ туйипе танкăшса пынăччĕ ун патне. Пĕр енче çуралса ӳснĕ, пĕр чĕлхепе калаçакан çынсен пĕрле пулас килнинчен тĕлĕнме çук ĕнтĕ. Вĕсем те койкисене юнашар ларттарчĕç те, чинĕсем тан пулман пулсан та, полковникпе старшина хăвăрт туслашрĕç. Госпитальтен те пĕрлех тухрĕç. Ятманов каллех фронта тухса кайрĕ, Куракова вара, урине сыватма çук пирки, пуçĕпех киле ячĕç. Тепре вĕсем вăрçă пĕтсен тĕл пулнăччĕ. Полковник ун чух яла отпуск иртерме килнĕччĕ, Кураков, тек этем пуласса ĕненме пăрахнăран, выртса-йăванса ĕççе çӳретчĕ. Ятманов ятарласах райвоенкомпа калаçса пăхрĕ. Вара лешĕ ĕçкĕпе аптраса ӳкнĕ инвалида госпитале вырнаçтарчĕ. Çур çултан Курак Иванĕ киле тавранчĕ те, пачах ĕçме пăрахса, МТСа механике кĕчĕ. Виççĕмĕш хут вĕсем колхозра тĕл пулчĕç. Кунта вĕсен ĕлĕк туслă пурăннине аса илмелле пулнă, анчах çарта чух хăйне пăхăнакан çынпа çывăх хутшăнма пуçланине «панибратство» тенине астуса, председатель колхозри механике çывăхартмарĕ.

— Сана председатель хăй чĕнтерчĕ,— терĕ тулти пӳлĕмри шут шăрçисене шаклаттарса ларакан Мышкин.— Ун патне кĕр.

Ĕç хатĕрĕсене çĕклесе килнĕ Кураков ун-кун пăхкаларĕ те алăка шаккамасăрах председатель патне кĕчĕ.

— А-а, Кураков юлташ! Мĕнле пурăнатăн?— хавассăн курăнма тăрăшса ыйтрĕ Ятманов.— Арăмун сывлăхĕ епле? Ачусем пирки ыйтмастăп та, эсĕ вĕсене ĕлĕкхи улпутсем пек ним ĕçлеттермесĕр пăхса усрасшăн, теççĕ.

— Камсем? Мышкинсем калаççĕ-и?

— Вăл та калать, ыттисем те пытарса тămаççĕ.

— Сӳпĕлтетеççĕ кирлĕ мара. Пире курайманнипе суеçтереççĕ. Ун пек-кун пек тăвасси аса та килмен.

— Апла пулсан, Тамара ма ĕçе тухмасть? Эсĕ яманран мар-и?

— Вăл пĕчĕк пепке мар, çитĕнсе çитнĕ çын. Ашшĕ-амăшĕ каланипе мар, хăй ăсĕпе пурăнать.

— Килте маччана пăхса ларсах тутă пулсан, камăн ĕçлес килĕ? Эсĕ ăна çăкăр памасăр усраса пăх, тен, ĕçе тухма кирлине аса илĕ,— ăс пачĕ Борис Петрович.

— Тăван ачапчашăн çăкăр-тăвар шеллес йăла çук пирĕн. Эсĕ мана ĕçпе чĕнтĕн-и е сăмах ваклама çеç-и? Ĕçпе пулсан, хуш. Машин юсамалла-тăк, эпĕ хатĕр,— алăри арчи ăшĕнчи тимĕрсене чанкăртаттарса каларĕ Кураков.

— Хĕрӳ пирки калаçса татăласшăн чĕнтертĕм,— терĕ те председатель, нумайранпа сухал хырман çын çине тинкерсе пăхрĕ.— Лар, тăнинче тăн çук теççĕ. Иван Васильч, эсĕ пĕлме кирлĕ: ку таранччен сана хăвна та, кил-йышусене те усал туман эпĕ. Кала-ха, мĕншĕн Тамара ман авторитета пĕтересшĕн çунать?

— Ăна-кăна асăрхаманччĕ. Ма апла шухăшлатăн?— тĕлĕнчĕ механик.

— Сăлтавсăр мар, сăлтав тупăннăран калатăп. Колхоз правленийĕ сан хĕрне фермăна куçармалла турĕ, эпĕ хам та ăна чĕнсе çавăнта ĕçлеме хушрăм. Вăл пирĕн сăмаха хăлхана та чикмерĕ. Мĕне пĕлтерет ку? Правленипе пред-

седатель авторитетне тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе лартас тенине мар-и?

Ятманов хирĕç ларакан çын çине тепре пăхса илчĕ. Лешĕ пĕрре хĕрелсе, тепре шуралса кайрĕ.

— Тупнă вĕчĕрхенмелли. Пире сан авторитету пĕтни те, тата çӳлерех çĕкленни те кирлĕ мар. Сăмах пуçланнăран, эпĕ те хам шухăша пытарса тăрам мар. Борис Петрович, эсĕ ху пире темшĕн-çке курайми пултăн. Мĕнле шăна ҫырса çыртрĕ сана? Эпĕ хам та, хĕрĕм те колхозра яланах тăрăшса ĕçленĕччĕ. Ăна хăвах пĕлме кирлĕ. Тамарăна илсен, вăл ĕçе ăста тунине колхозра кăна мар, пĕтĕм районĕпе пĕлеççĕ. Мĕншĕн ăна пĕр сăлтавсăрах вырăнтан кăлартăн?

Çак сăмахсенче чăнлăх пуррине лайăх туйрĕ Ятманов. Анчах унăн айăпа йышăнас килмерĕ. «Епле яка калаçать?— вырханса шухăшларĕ вăл,— судья пек ыйту хыççăн ыйту лартать. Тăхта-ха, ан васка! Ыйту пама эпир те пĕлекенччĕ».

— Эсĕ мана пăвăртас темерĕн пулĕ-çке?— сиввĕн ыйтрĕ вăл.— Мĕншĕн те мĕншĕн, тетĕн. Мĕншĕн тесен эсĕ ачуна тĕрĕс воспитани пама пĕлместĕн.

Курак Иванне ку питрен сурнă пекех туйăнчĕ. Вăл шартланса кайрĕ те вырăнтан сиксе тăчĕ.

— Сана калама çăмăл ĕнтĕ, эсĕ ху ача пăхса курман вĕт. Манăн вĕсем тăваттăн, пулăшаканĕ — асли çеç. Халĕ ăна та ĕçрен пистертĕн. Амăшĕ виçĕ çул чирпе асапланать. Кĕçĕн ачисем çиме ыйтма кăна пĕлеççĕ. Ман вырăна хăвна лартса пăхăттăм! Мĕнле юрă юрлăттăн-ши?

Хăй тĕрĕс туманнине пĕлни Ятманова ĕлĕкренпех хытă тарăхтаратчĕ, халĕ вара уртарсах ячĕ.

— Эсĕ мана ача пулманнипе йĕкес тетĕн-и? Чăн, ман арăм ача тумасăрах ватăлчĕ. Анчах уншăн пиртен кулас тени — курпун е уксах çынна мăшкăлланипе пĕрех. Санпа юлташла. фронтра пĕрле асап тӳснĕ çын пек, йĕркеллĕ калаçасшăнччĕ. Эсĕ мана юлташ вырăнне хумастăн иккен. Юрĕ эппин, урăхла калаçăпăр. Сывă ал-уралла çамрăк çын эртел ĕçне хутшăнмасан, халь мĕн тунине пĕлетĕн-и? Ун йышши çынна хăйне те, унăн çемйине те колхозран кăлараççĕ, анкарти вырăнне туртса илеççĕ. Сирĕн те, Тамарăпа иксĕрĕн, колхозран тухса ӳкес килчĕ-им? Ушкăнпа йĕркеллĕ пурăнас килмест пулсан, ытлашшиех уяса тăмăпăр, тытăпăр та кăларса ывăтăпăр. Пире колхозра кахалсем кирлĕ мар!

Çак вăхăтра вĕсем патне пĕр-пĕр ăслă çын пырса: «Эй, ырă çынсем, йĕркеллĕ пулăр-ха, ытлашши ан вĕчĕрхенĕр! Эсир хирĕçни хăвăра



та, ыттисене те усă парас çук. Тăна кĕрĕр! Лăпланăр та ал тытăр!» тенĕ пулсан, кам пĕлет, тен, вĕсем унченхи пекех килĕштерсе пурăннă пулĕччĕç. Анчах вĕсене никам та лăплантармарĕ.

— Кам кахал?— çухăрса ячĕ Курак Иванĕ.— Манăн йывăр чирпе асапланакан арăм-и е айăпсăр кӳрентернĕ хĕр-и? Тен, мана, фашистсемпе çапăçса аманнипе уксаха юлнине пăхмасăр кунĕн-çĕрĕн ĕçлекен инвалида, кахал тетĕн пулĕ? Çук, председатель юлташ, пирĕн таврашра юлхав çын пулман, пулас та çук.

Эпир нихçан та çын ĕнси çине ларса çӳремен, хамăр пĕлнĕ пек ал-ура вăйне шеллемесĕр ĕçлесе тăранса пурăннă. Сана илсен вара, апла калаймăн. Çарта чух та: «Направо! Налево! Шагом! Бегом!» тесе çеç пурăннă, запаса тухнăранпа та çурăм çине тăвар кăчăртатса тухиччен ĕçлесе курман-ха!

— Çитет! Тек пĕр сăмах та ан шарланă пултăр! Сана эпĕ тулккăллă çын пулĕ тенĕччĕ, анчах эсĕ чăртмах йышши иккен. Итле манăн юлашки сăмаха: хĕрӳ ыранах фермăра ĕçлеме пуçламасан, сире пĕтĕм кил-йышĕпех колхозран кăларса çапатпăр. Ĕç дисциплинине пăхăнманнисем тасалчăр пирĕн çул çинчен!..

Такам пуçран тукмакпа çапнă пекех туйăнчĕ Курак Иванне. Вăл темскер каласшăнччĕ, анчах сиксе чĕтреме пуçланăран чĕлхи пăхăнмарĕ. Вара пĕррех ал сулчĕ те правленирен анкăминкĕленсе тухса кайрĕ.

## IX

ЙУÇСЕ ТĂРАКАН лачакана пырса лексен, вăл шалаллах туртать. Хирĕçӳ те çавăн майлах — пĕр пуçлансан шалтан шала кĕрсе пырать. Харкашу чарăнтăр, пĕттĕр тесен, кутăнлашакансен хăшин те пулин парăнни кирлĕ. Ятмановпа Курак Иванĕ ăна аван пĕлнĕ, çапах та пĕри те парăнасси çинчен шухăшламан. Малтан чаксан, Ятманов авторитет пĕтессинчен хăранă, Кураков хăй айăпсăррине пĕлсе, чакасси çинчен аса та илмен. Ун пек чух, паллах, ыррине ан кĕт. Çитменне, Мышкинпа унăн тусĕсем Борис Петрович ăшĕнче сурса ыратакан сурана вăчăлтаттарсах тăчĕç. Вара хăйне хăй мăнна хума хăнăхнă çын анаталла аннă чух ĕрĕхме пуçланă лаша пекех нимпе те вăхăтра чарăнаймарĕ.

Вырсарникун каçалапа «Çутă маякра» пуху пулса иртрĕ. Хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче камăн пухура ларас килĕ? Халăх виçĕ хут хăваласа та клуба ик çĕр çирĕм çын çеç пухăнчĕ. Кĕтсе йăлăхнипе Ятманов пухăва уçас тесен, никам та «кворум çук» тесе тăмарĕ. Эпир çав ĕç тума юрăхсăр пуху мĕнле иртни çинчен каласа тăмăпăр. Хытă шавларĕç. Куракова колхозран кăларас текенсемпе кăларасшăн маррисем кăшт кăна çапăçу пуçласа ямарĕç. Виçĕ хутчен сасăлама лекрĕ. Юлашкинчен, президиум пуçлăхĕ: «Кăларас текенсем йышлăрах», терĕ те пухăва хупрĕ.

Çапла вара Ятмановпа Мышкин хăйсен тăшманне çĕнтерчĕç, темелле. Анчах çĕнтерӳ иккĕшне те питех савăнтармарĕ. Борис Петровича, таса çынна нихçан хур туса курманскере, хăй чунне ирсĕр ĕçпе вараланă пек туйăнчĕ. Хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче ăста механике çухатмалла пулни те пăшăрхантарчĕ. Бухгалтера урăх сăлтав хумхантарнă: «Курак Иванне пĕлетĕп,— тенĕ вăл ăшра.— Хĕрсе кайсан, хăй инвалид иккенне пăхса тăмĕ, тытĕ те тапратĕ кӳпкеме. Пĕтĕм халăх умĕнче намăс кăтартĕ».

Иван Васильч чăнах та çăмăллăн парăнасшăн пулмарĕ. Куçĕсем витĕрех мар пулсан та, вăл çĕрĕпех жалобă çырчĕ. Тепĕр кунне ирех районри прокурор патне пырса кĕчĕ. Ялтан килнĕ çынна прокурор тĕплĕ итлерĕ. Унтан шултра саспаллисемпе çырнă хут листисене вуласа тухрĕ.

— Сире колхозран кăларни тĕрĕс мар пек туйăнать. Анчах малтан райĕçтăвкома кайса каламалла. Унта колхозниксен пухăвĕнче йышăннине пăрахăçламасан тин пирĕн пата килме пултаратăр,— ăнлантарчĕ прокурор.

Курак Иванĕ райĕçтăвком председателĕ патне кĕчĕ. Тапчăм пит-куçлă япшар çын колхозник жалобине тимлесех итлесе ларчĕ.

— Тĕлĕнмелле ĕç,— ассăн сывласа каларĕ вăл, Кураков шăплансан.— Ятманова вунă çул ытла пĕлетĕп, кун пек хăтланнине курманччĕ. Мĕн пулнă-ха ăна? Киревсĕр ĕç тăвакан марччĕ-çке. Халăха ертсе пыма пĕлет, хăй ĕçне юратать. Унăнни пек колхоз районта урăх çук. Пĕлтĕр ак, тырă вырма тухсан, виçĕ кунтанах патшалăх умĕнчи парăма татрĕ. Ытти колхозсем ун чух пурĕ пĕрле те «Çутă маяк» чухлĕ тĕш тыр сутайманччĕ. Ытти ĕçсене те яланах çапла ăнăçлă туса пырать. Ун пек халăх ырлăхĕшĕн хытă тăрăшакан çынна тепре тупас тесен, нумай шырама лекĕ. Çук, тем каласан та, ахальтен кăларман пулĕ вăл сире колхозран...

— Халăхшăн мар, хăй ырра тухасшăн тăрăшать вăл,— терĕ колхозник.— Çын аллипе кăвар туртасси темех мар ĕнтĕ. Эсир калашле, васкама пĕлет вăл. Анчах ку халăха хакла ларать.

— Мĕнле апла?

— Акă мĕнле. Вăл хушнипе кашни çулах ыраша пулса çитиччененех вырма пуçлатпăр. Тĕшши туласси тулнă та типсе çитмен. Вара çапнă чух пучаха нумай юлать. Кӳршĕ колхозсем симĕсрех тырра лафетлă жаткăпа вырса тăкса ик-виçĕ кун уйрах типĕтеççĕ. Ун хыççăн тин авăн çапма тытăнаççĕ. Пирĕн Ятманов тӳрех комбайнпа пĕр çĕрлех выртарать те авăнне те çаптарать. Çавна пула гектартан ик-виçĕ центнер сахалтарах çапса илетпĕр. Кама кирлĕ вăл васкани? Патшалăх умĕнче парăм вăхăтчен татнипе мухтанма юратакансене мар-и? Халăха вăл усă мар, сиен тăвать.

«Э-э, ку — патшалăх умĕнчи парăма хăвăртрах татасшăн çунакан çын мар, хăйшĕн тăрăшакан этем иккен. Ун йышшисем жалобă пама яланах ăста пулакан. Халĕ те Ятманова элек парса путлантарма ĕмĕтленчĕ пулас. «Çутă

маяка» çитсе курмасăр ку ĕçе татма çук», шухăшларĕ председатель.

— Юрĕ, жалобине секретаре парса хăварăр. Ĕçтăвком ларăвĕнче пăхса тухăпăр. Унччен сире çакна астутарса хăварас килет: кашни çыннăн чи малтан патшалăх интересĕсемшĕн çунмалла,— Ятманов çавăн йышши çын. Эпир ăна хĕсĕрлеме никама та ирĕк памăпăр. Сывă пулăр, Кураков юлташ!..

Киле таврăннă чух çул тăршшипех çак сăмахсем мĕне пĕлтерни çинчен шухăшласа пычĕ Курак Иванĕ. Хăй айăпсăррине кăтартма çăмăл пулассăн туйăннăччĕ. Халĕ шанчăк çухалма пуçларĕ, ăш вăркакан пулчĕ, пуç усăнчĕ. Кунĕпе утса ĕшеннĕ пулин те, каçхине ыйхă вĕçни аптратрĕ. Пуçа тĕрлĕ шухăшсем пырса кĕреççĕ. Таçта сисмесĕр йăнăш çул çине тăмарĕ-ши вăл? Ятманова хирĕç тухма юратчĕ-ши? Районрисем те Ятманов майлах пулсан, мĕн тумалла?..

Каç йĕркеллĕ çывăрайман пирки тепĕр ирхине вăл, чирлĕ çын пек, вырăн çинчен аранаран тăчĕ. Колхозран кăларнă хыççăн ĕçе тухмасан та юранăччĕ ĕнтĕ, анчах, бригадăра васкаса юсамалли машинсем пуррине пĕлсе, пуçĕ тўсме çук ыратнине пăхмасăрах, вăл тимĕрçлаççи патне кайрĕ те кунĕпех унта чакаланчĕ. Хĕрў ĕç чуна лăплантарчĕ, кирлĕ-кирлĕ мар ыйтусем те аптратми пулчĕç. Вара вăл эрнипех ырми-канми ĕçлерĕ. Пĕрре, кăнтăр апачĕ хыççăн, ăна бригадир чĕнче.

— Çу савăтне сĕт турттаракан «Беларусь» трактор кĕпер патĕнче чарăннă. Тракторист çамрăк, моторĕ мĕншĕн ĕçлеменнине пĕлеймерĕ. Кайса пулăш-ха ăна!— терĕ бригадир.

Кураков ĕç хатĕрĕсем тултарнă арчине çĕклерĕ те Уйпуç çырми еннелле утрĕ. Мотора юсама тытăнсанах, унта çăмăл машинă пырса чарăнчĕ.

— Эй, Кураков! Эсĕ тата мĕн тăватăн кунта?— ыйтрĕ машинă ăшĕнчен тухса тăнă Ятманов.

— Курмастăн-им? Мотор юсатăп,— хуравларĕ Курак Иванĕ пуçне çĕклемесĕр.

— Колхоз машинĕсене эпир ют çынсене юсаттармастпăр, пирĕн хамăр механиксем пур. Эсĕ колхозник мар, пăрăн пирĕн çул çинчен! Хамăр ĕçсене сансăрах туса пырăпăр.

— Ытла ан васка! Эпĕ райĕçтăвкома жалобă панă. Ăна пăхса тухиччен мана никам та колхоз ĕçĕсне туса пыма чараймĕ. Саккунран эсĕ те иртеймĕн.

— Пăх-ха ăна, епле юрист тупăннă! Саккун çинчен еплерех калаçать!.. Пĕлесех тетĕн пулсан, итле эппин: райĕçтăвком сире çемйипех колхозран кăлармалла тунине ырланă. Акă, исполком йышăннă постановленин копийĕ. Ятарласах сан валли чиксе килтĕм.

Иван Васильч çавракa пичет пуснă хут листине чĕтрекен аллисемпе тытрĕ те вулама пуçларĕ. Кĕçех куç хуралса килчĕ, саспаллисем сиксе ташлама тытăнчĕç те пĕтĕмпех пăтрашса кайрĕç. Çĕре ўкесрен хăранипе механик трактор урапи çумне тайăнчĕ. Çамрăк тракторист ун çине хĕрхенсе пăхрĕ, Ятманов аяккалла çаврăнса тăчĕ.

— Анлантăн-и?— ыйтрĕ вăл пăртакран.

Курак Иванĕ, тин çеç тарăн ыйхăран вăраннă çын евĕр, вараланчăк аллисемпех куçĕсене сătăркаларĕ.

— Анлантăм,— терĕ Иван шăппăн.— Ку тракторне юсаса пĕтерес-и?

— Сансăрах юсăпăр. Эпĕ халех колхоз механикне илсе килĕп,— тесе, председатель машинĕ çине ларчĕ те Вăрманкас еннелле вĕçтерчĕ.

— Манăн района кайса килмелле. Эсĕ çула май çак ĕç хатĕрĕсене пырса пар. Сывă пул!— тракторист çине пăхса каларĕ Кураков. Унтан вăл ал туйине тытрĕ те тусанлă çулпа райцентр еннелле лăкăштаттарса утрĕ.

«Пулма пултараймасть,— пăшăлтатрĕ чунтан кўреннĕ çын.— Ĕçтăвком членĕсем хăлхасăр та, суккăр та мар, чăнлăх ăçтине курмаилтме кирлĕ. Çапла чунсăрла хăтланма вĕсене кам ирĕк панă? Колхозра ĕçлеме чарсан, ăçта кайса кĕрес? Çук, çук, мана, инвалида, тăватă ача ашшĕне тата вĕсен чирлĕ амăшне колхозран кăларнине ырлама ăсран кайман пулĕ-çке вĕсем? Ятманов, курайманнипе манран мăшкăллас тесе, суя хут тыттарчĕ пулĕ...»

Çав кун Курак Иванĕ киле тĕттĕм пулсан тин таврăнчĕ. Сĕтел хушшинче кĕнеке вуласа ларакан Тамара ун çине пăхмасăрах вăл ўсĕр иккенне туйрĕ. «Вун пилĕк çул ĕçменччĕ-çке, мĕн пулнă ăна?» сехĕрленсе ўкрĕ вăл.

— Кĕнеке вулатăн-и-ха?— хăрăлтатакан сасăпа сиввĕн ыйтрĕ ашшĕ.— Вулах, куç сиктермесĕрех вула! Ĕçлес килмерĕ пулсан, кĕнеке вуласси çеç юлчĕ ĕнтĕ. Анчах мĕн çисе пурăнас тетĕн? Аçу тăрантарса усрасса кĕтетĕн пулĕ-ха. Кăлăхах! Сана пула мана та колхозран кăларчĕç. Тек тыр-пул илесси те, укçа тупасси те путланчĕ манăн. У-у, эсремет хĕрĕ! Тухса кай ман килтен!..

— Атте, чипер калаç! Ăçта тухса каям-ха эпĕ тăван килтен?— пĕтĕм шăмшакĕпе чĕтресе ыйтрĕ Тамара.

— Мана мĕн ĕç, ăçта каяс килчĕ, çавăнта кай. Халех тасал куç умĕнчен!

Çак сăмахсемпе Курак Иванĕ туйине çĕклерĕ те пĕтĕм вăйран сĕтеле çапрĕ. Тĕпел сакки çинче юнашар выртса çывăрнă ачасем шарт! сиксе вăранчĕç. Чи кĕçĕнни хытă хăранипе ўлесе йĕрсе ячĕ. Ăна илтсен, амăшĕ кро-

вать çинчен тăчĕ, анчах хĕрне йăпатма пырай-марĕ, трук йынăшса ярса çĕре ӳкрĕ.

## X

КĔМĔЛ ПЕТТИ, тепĕр майлă каласан—Петр Трофимович Серебров, хăй емеренче професси тенине нумаи улăштарса курнă. Çамракла ирçесем патенче тир хыракан выранненче те ĕçлене, повара та веренне, кладовщик пулса та курна, магазинра тавар та сутна, пĕр вахат милици мундире тахăнса та çӳрене—пурне те ăçтан аставан. Пытарса тамапар, çав ĕçсенчен пери те ун камалне кайман. Вăл мĕн печекреннех саваç пулма еметленнĕ. Мĕн кăна туман пуле Кĕмĕл Петти çав ĕмĕте пурнăçласшан! Саввисене терлĕ хаçат редакцисене, радиокомитета, журналсемпе издательствăсене веçемсер ярса тана. Анчах вăл çырнисем çут тенче кураимареç. Тепри пулсан, тарăшни харама каинине курса, юнтармăш Муза çине ал сулмаллачче те, хăй валли вăй çемми ĕç тупса, емерлехех лапланмаллаччĕ. Серебров апла тумарĕ. Вăл хаçат-журнал кăларакан çереллех туртăнче. Юлашкинчен, вăрçă вăхăтенче, ана малтан темле курса, унтан типографине ĕçлеме илчеç, вара раихаçатра унăн статйисемпе печек очеркесем пичетленме пуçлареç. Пурăна киле Кĕмĕл Петти типографирен хаçат редакцине куçрĕ. Ку уншăн çӳлелле сикме пулашакан пружинăпа пĕрех пулчĕ. Редакцире еçлене маи, литинститутран заочнă вĕренсе тухре те кенеке издательствине куçрĕ. Хале енте вал пули-пулми çын мар, хăй редактор. Кенеке кăларас текенсем унăн куçĕнчен пăхаççе. Елĕк хăи сăввисене пичетлеменнине аса илет те тарăхнипе шăлĕсене шатăртаттарать. Çапах та арча тĕпĕнче вунă çул ытла кĕтсе выртнă сăввисене издательствана илсе пыма хăяимарĕ. «Ман сăвăсене вулас текенсем йышлах пулас çук, ятлас текенсем вара тĕксе те сирĕлмеç,— шухăшларĕ вăл.— Сăвă пичетличчен, пĕр-пĕр чапа тухнă вырăс писателĕн кенекине чăвашла куçарса кăларам та, пуйма та пулĕ, мухтама та манмĕç».

Чăнах та, тепĕр çултан Кĕмĕл Петти куçарнă «Мускав тавращĕнче» ятлă кĕнеке тухрĕ. Мĕн калас? Çак кирпĕч хулăнăш кĕнеке тăлмача пуйтарасси пуйтарчĕ, анчах чапа кăларас вырăнне редактортан кăларса ывăтрĕ: ытла та тăрлавсăр пулса тухнă иккен кĕнеки! Фельетон та çырчĕç ун пирки...

Çакăн хыççăн нумайăшĕ Серебровăн карьери пăчланче пулĕ, тесе шутланăччĕ. Анчах йăнăшрĕç весем. Вăл шыва пăрахнă пробкă пекех çиеле çĕкленсе тухрĕ. Тусĕсем пулăшнипе кĕçех ăна пĕр хаçат редакцийĕн ответлă сотрудникĕ туса хучĕç. Вара хăй ачисене кирлĕ таран ăс парайман кукша пуçлă çын хаçат вулакан çамрăксене вĕрентме тытăнчĕ: хаçатра вăл «Сăвă мĕнле çырмалла», «Ялкор пулас текенсен мĕн пĕлсе тăмалла» тата ытти çавнашкал консультацисемпе обзорсем пичетлеме пуçларĕ.

Елĕкрех вăл пуçтахланма юратнă пулсан, халĕ мĕлкерен те хăракан пулчĕ. «Утмăл çула кайрăм, кĕçех пенсие тухмалла пулать. Кунта шалу пысăк, пенси те пысăк пулма пултарать. Çавăнпа мĕнле те пулин çак вырăнта ытларах ларасчĕ», шутларĕ вăл. Вара питĕ асăрханса ĕçлекен пулчĕ, йăнăшсем тумарĕ. Хаçат редакторĕ кирек ăçта тухса каяс пулсан, заместитель чирлипе, хăй вырăнне вăхăтлăха Кĕмĕл Петтине хăваракан пулчĕ.

Çав çул редактор отпуск ирттерме пĕр уйăхлăха Ялтăна тухса кайнăччĕ. Кĕмĕл Петти редактор сĕтелĕ хушшине кĕрсе ларсанах, ун умне экспедицирен пĕр купа çыру илсе килсе хучĕç. Çавсем хушшинче ун аллине инçетри ялта пурăнакан хĕр янă çыру лекрĕ. «Куракова Тамара»,— вуларĕ вăл çыру айне алă пуснине.— Мĕн кирлĕ пулчĕ-ха сана, Тамара? Пиртен пулăшу кĕтетĕн-и эсĕ е урăх сăлтавпа чăрмантарас терĕн? Пĕлтер эппин».

Вăл тетрадь листине çавăркаласа пăхрĕ те вĕтĕ саспаллисемпе çырнине вулама тытăнчĕ.

«Хисеплĕ редактор!»— мăкăртатрĕ Кĕмĕл Петти.— Тĕрĕс! Çырăва нумайăшĕ çапла пуçлать... «Эпĕ—Уйпуç ялĕнче çуралса ӳснĕ хĕр. Тахçантанпах мана пĕр ыйту хытă кăсăклантарнăччĕ. Эпĕ ун çинчен нумай шухăшласа çӳрерĕм те тупсăмне тупнă пек туйăнчĕ. Мĕнле ыйту тетĕр-и? Акă мĕнле ыйту. Пирĕн ялти çамрăксем çитĕнсе çитсенех колхозран хулана тухса каяççĕ. Мĕншĕн вĕсем тăван ялта пурăнасшăн мар-ха? Пурнăç начартан теме çук. Лайăх ĕçлекене колхозра тăранса пурăнмалăх та, тумланмалăх та, çурт-йĕр çавăрмалăх та парсах тăраççĕ. Тĕлĕнмелле мар-и? Ялĕ пирĕн пысăк, илемлĕ. Пĕр енче ытарма çук хитре вăрман, тепĕр енче анкарти вĕçĕнчех тулăх тыр-пул çитĕнтерекен анлă уй. Çывăхрах Çавал шывĕ юхса выртать. Ĕçрен пушă вăхăтра савăнăçлă ирттерме кермен пек клуб пур. Çапах çамрăксем хулана тухса тараççĕ. Мĕн çитмен-ха вĕсене?»

— Интереслĕ,— сасăпах каларĕ Кĕмĕл Петти,— чăнахах мĕн çитмен-ха вĕсене? Кала, Тамара, кала. Тен, хаçатра статья кăларма мана çĕнĕ шухăш пĕлтерĕн. Вулар малалла...

«Акă мĕн çитмест. Хулара пурăнакан çамрăксем чун туртакан ĕçе çеç кĕреççĕ, вĕсене ирĕксĕрлесе юратман ĕçре тытса тăмаççĕ. Калăпăр, пĕр-пĕр хĕр пир-авăр тĕртме юратать пулсан, ăна çĕвĕ çĕлеттермеççĕ, çыру ĕçне кăмăллакансене урай шăлса пурăнма хушмаççĕ,

токарнăй станок патĕнче ĕçleme хăнăхнисене ирĕксĕр парикмахер туса хумаççĕ. Кам мĕнле ĕçе юратать, çавна туса пурăнать. Ялта вара пĕтĕмпех урăхла. Çамрăксене юратнă ĕçе тума чăрмантараççĕ, чараççĕ, ăçта килнĕ унта ĕçлеттереççĕ. Пуринчен ытла ку хĕрсене тивет. Пирĕн колхозра вĕсем темиçе çул ĕçлесен те нимĕнле специальнăç илеймеççĕ. Правлени пуçлăхĕ Ятманов юлташ вĕсене пĕр çул уй-хир бригадинче, тепĕр çул пахча-çимĕç звенинче, унтан выльăх-чĕрлĕх ферминче ĕçлеттерет. Хĕрсем тырă та выраççе, кантăр та татаççĕ, паранкă та кăлараççĕ, ĕне те сăваççĕ, тислĕк те тăкаççĕ, хĕле кĕрсен, вут турттарма та каяççĕ. Пуринчен ытла дояркăсене лекет, вĕсем кунĕн-çĕрĕн çулĕ-çулĕпе фермăран тухмасăр пурăнаççĕ, канмалли кун та çук вĕсен, каççерен клуба кайма та вăхăт тупаймаççĕ. Паллах, никамăн та пур ĕçе пĕр пек тăвас килмест. Кашнин чун туртакан юратнă ĕç пур. Эпĕ шкулта вĕреннĕ чухнех уй ĕçне кăмăлларăм. Икĕ çул шкулта, унтан виççĕмĕш çул колхозра кукурузă ÿстерекенсен звенине ертсе пытăм. Çак ĕçре эпир пысăк çитĕнÿсем турăмăр. Пире пурте ырларĕç, хаклă парнесем пачĕç, хисеп хăми çине пирĕн ятсене виçĕ çул çырса тăчĕç, пĕлтĕр районри ăмăртура пирĕн звено пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Ăна эсир те пĕлме кирлĕ: хăвăр хаçатра ман сăн ÿкерчĕкне те пичетлесе кăларнăччĕ. Эпир пуçарнипе кăçал кукурузă кăна мар, нимĕç пăрçи те акса хăварнăччĕ. Çав ĕçе тата лайăхрах туса пырас тесе эпĕ Шупашкарти ял хуçалăх институтне заочнă вĕренме кĕтĕм, тĕрлĕ сăнавсем тума пуçларăм. Пĕр сăмахпа каласан, пысăк ĕмĕтсемпе пурăнма пуçланăччĕ. Анчах çутă ĕмĕтĕме вăл пурнăçа кĕричченех татрĕç. Пирĕн бригадăра комсомолла фермă турĕç те, мана, комсомолкă тесе, фермăна ирĕксĕр ĕçleme ячĕç. Хам ĕмĕрте эпĕ нихçан та выльăх пăхса курман, вăл ĕçе пĕлместĕп, пачах юратмастăп. Çавăнпа фермăна куçма нимпе те килĕшмерĕм. Уншăн мана малтан комсомолтан кăларчĕç, кайран пĕтĕм çемйипех колхозран та кăларса ячĕç...

Тен, ялти çамрăксен мĕнле пурăнма кирли пирки эпĕ пурне те ăнлансах çитеймерĕм пулĕ. Тен, хамăн хулари çамрăксем пекех юратнă ĕçе çеç туса пурăнма права пур тесе шутлани йăнăш пулĕ. Уншăн мана çеç айăпламаллаччĕ. Колхоз правленийĕ атте-аннене те хурлăх курмалла турĕ. Мĕншĕн? Çитĕннĕ хĕршĕн ашшĕ яланах ответ тытма пултарать-и? Çитменне, ман атте йывăр аманнă инвалид, анне нумай вăхăт вырăн çинчен тăрайми чирпе асапланать, йăмăксем виççĕшĕ те пĕчĕк (чи асли кăçал вунă çул тултарчĕ). Ку та юрĕччĕ. Ĕçчен çын валли кирек ăçта та ĕç тупăнĕ, пире те чукун çул çине ĕçleme чĕнчĕç. Анчах эпĕ унта каяс çук. Манăн тăван колхозрах уй ĕç туса пурăнас килет. Кунта тата тепĕр инкек сиксе тухрĕ. Ман атте инвалид пулса юлнă хыççăн хытă кулянипе ĕçке ернĕччĕ те алкоголь чирĕпе аптраса ÿкнĕччĕ. Тавтапуç, ун чух тухтăрсем ăна сыватрĕç. Халĕ, колхозран кăларнăшăн кулянса, татах ĕçме тытăнчĕ. Ĕçлесе илнĕ тыр-пула та, хăйне пенси шучĕпе панă укçана та, килти япаласене те пĕтĕмпех эрехшĕн пĕтерчĕ, ÿсĕрпе мана та, йăмăксене те хĕнет, килтен хăвалать. Тепĕр чух кунĕпех пĕр тĕпренчĕк çăкăрсăр ларатпăр.

Эпир районти организацисенчен пулăшу ыйтрăмăр. Усси питех палăрмарĕ. Комсомол райкомĕ ман хута кĕмерĕ, райĕçтăвком та колхоз правленийĕ майлах пулчĕ. Районри военком çеç аттене, алкоголизмран сывалма тесе, госпитале вырнаçтарчĕ.

Хисеплĕ редактор! Тархасшăн пулăшăр пире! Пичет питĕ пысăк вăй, вăл закона пăсакансене тăрă шыв çине кăларма пултарать. Урăх ним çырма та пĕлместĕп. Ăс пăтранать, куçăма тĕтре карса илет, ручкă та аларан тухса ÿкет. Эсир те пулăшмасан, шыва сиксе си çеç юлать...»

«Ха, епле яка çырать ку!— пăшăлтатрĕ Кĕмĕл Петти.— Колхоз хĕрĕ мар, писатель тейĕн! Юратнă ĕçе ĕçлесе пурăнас килет эппин. Эпĕ те ĕлĕкрех çапла шутланăччĕ те, пурнăç урăхла туса хучĕ... Çамрăк чух çапла çав. Эсĕ ак хура-шур мĕн иккенне тин çеç чухлама тытăннă. Пурăна киле ăс кĕрсе пырĕ. Юрĕ, эпир сана ответ парăпăр. Хамăн пули-пулми ĕçпе аппаланса ларма вăхăт çук, литсотруднике çыртарас мар-ши? Вăл унашкаллине пултараканччĕ».

Çак шухăшпа Петр Трофимч пĕр литсотруднике хăй патне чĕнчĕ. Кĕçех пÿлĕме капăр тумланнă кĕрнеклĕ çамрăк çын кĕрсе тăчĕ.

— Микулай, çак çырăва вуласа тух та ответ çыр. Темле çамрăк хĕр пулăшу ыйтать. Эпир филантропсем мар, нуша куракансене пулăшма пирĕн вăй çитменнине кăтарт. Хăйне хăвăртрах мĕнле ĕçе те пулин кĕме сĕн, пурнăç çине романтикле пăхнипе хăй мĕнле йăнăшсем тунине астутар. Пĕр сăмахпа каласан, тăна кĕрт ăна, урăх ухмахланса ан çÿретĕр.

— Вуласа тухсан, хам шухăша пĕлтерĕп,— тесе çамрăк çын çырăва илчĕ те кабинетран тухрĕ.

Вăл Тамара çырăвĕпе паллашнă вăхăтра эпир вулакана унпа хăйпе паллаштарар. Хум Микулайĕ (амăшĕ ăна Коля тесе чĕнет) çак редакцинче иккĕмĕш çул кăна ĕçлет-ха, унччен Мускаври литературă институтĕнче вĕреннĕ. Юлашки вăхăтра ун ятне нумайăшĕ пĕлекен пулчĕç. Вăл çырнă калавсемпе повеç-

сем хаçатра та, журналсенче те тăтăшах тухса пычĕç. Вулакансем, пуринчен ытла хĕрсемпе каччăсем, вĕсене питĕ килĕштерчĕç. Çураласса вăл çак хуларах çуралса ӳснĕ. Ашшĕ унăн врач, поликлиникăра ĕçлет, амăшĕ вăтам шкулта вĕрентет. Микулай вĕсен пĕртен-пĕр ачи, ăна иккĕшĕ те чунтанах юратаççĕ, мĕн пĕчĕкренпех вăл ыйтнине тупса параççĕ. Институтран вĕренсе тухнă ячĕпе ашшĕ ăна мотороллер парнелерĕ. Тепри пулсан, çапла ачашланипе пăсăлса каймаллаччĕ, Микулай апла пулмарĕ. Литературăра ĕçлеме тăрăшни ăна тĕрлĕ астармăшсенчен хăтарса пычĕ. Пушă вăхăта вăл е çыру сĕтелĕ хушшинче, е театрсемпе киносенче ытларах ирттерет.

Тамара çырăвне вăл питĕ тимлĕ вуласа тухрĕ. «Чернилпа мар, юнлă куççульпе çырнă темелле,— шухăшларĕ Микулай.— Чунсăр çынсем халĕ те тупăнкалаççĕ çав. Халăха ытларах усă парасшăн çуннă ырă кăмăллă хĕре епле пусмăрланă вĕсем? Çук, Серебров юлташ, хуйхă çапса хуçнă хĕрĕн ăшне эсĕ каланă пек çыру çырса çунтарас мар, ăна тӳрре тухма пулăшас. Чăнлăх, тĕрĕслĕх çĕнтермеллех!»

Çак шухăшпа тепĕр хут таврăнчĕ вăл редактор кабинетне.

— Çырса пĕтертĕн те-и? Мĕнле пит хăвăрт?— тĕлĕнчĕ Кĕмĕл Петти.

— Ман шутпа, Уйпуç ялне редакци сотрудникне ямалла. Çак çырура çырнисене вырăнта тĕрĕслесен, питĕ лайăх материал хатĕрлеме пулать. Ярăр мана, виç-тăватă кунтан сирĕн сĕтелĕр çине пурне те кăсăклантарма пултаракан статья килсе хуратăп.

Серебров кăштах шухăшласа ларчĕ. Редактор отпускра чух хаçатра çивĕч материал тухсан, ăна хăйне ырласси паллах ĕнтĕ. Ку унăн авторитетне çӳлерех çĕклеме пултарĕччĕ. «Майлă вăхăт тупăнчĕ пулсан, мĕншĕн унпа усă курас мар? Эпĕ Урпашевсăрах хаçата интереслĕ тума пĕлнине курччăр пĕрех хут»,— вĕçсе иртрĕ ун пуçĕнче.

— Юрĕ, виç-тăватă кунлăха кайса кил эппин,— килĕшрĕ вăл.— Асту, материалĕ бритвăран та çивчĕрех пултăр вара!

— Ăна-кăна чухлатпăр, вăхăта ахаль сая ярас çук.

Çыру авторĕ хăйĕн сăнне пĕлтĕр хаçатра пичетленĕ тенĕрен, Микулай коридорти шкапра выртакан кив хаçатсене туртса кăларчĕ те ик сехете яхăн уçкаласа ларчĕ. Юлашкинчен унăн куçĕсем хаçатăн малтанхи страницинче пичетленĕ пысăк ӳкерчĕк çинче чарăнчĕç. Çӳлĕ кукурузă ăшĕнчен кăмăллă кулăпа йăлкăшакан илемлĕ сăн курăнса тăрать. Микулай аса илчĕ: иртнĕ кĕркунне сотрудниксем çав хĕре «Хитре Тамара» тесе ят панăччĕ. Чăн, ӳкерчĕк айне: «Тамара Куракова», тесе çырнă.

«Вĕçен кайăк пекех илемлĕ ку хĕр,— шухăшларĕ Микулай.— Епле хитре унăн куçĕсем, епле кăмăллă кулли! Телее тивĕçлĕ çын çеç çапла кулма пултарать. Анчах чурăс çынсем хĕрĕн телейне пĕтерме пуçланă. Çук, Тамара, сана мăшкăл тума памăпăр. Эсĕ халăхшăн тăрăшнă пулсан, халăх сана пăрахса хăвармĕ...»

## XI

Тамара кĕтсе ывăнчĕ. Хаçата çыру янăранпа кĕçех икĕ эрне çитет ĕнтĕ, ответ çук та çук. Почтальон çухатрĕ пулĕ тесе те шутларĕ, тахăшĕ юриех тытса тăрассинчен те шикленчĕ.

Вăл-ку юрĕччĕ, пурнăç ытла та хĕсĕнсе çитни пĕтерет. Ашшĕ пĕр уйăх хушши урăлма пĕлмесĕр ĕçрĕ. Ăна госпитале илсе кайман пулсан, тем курса лармаллаччĕ. Пысăк инкек сиксе тухни амăш сывлăхне пĕтĕмпех йăштарса çитерчĕ. Унчченем пӳртре те пулин кăштăрташтарса çӳретчĕ, халĕ вырăн çинчен пачах тăраймасть. Йăмăкĕсем типсе шурса кайрĕç; Тамара хăй те сисĕнмеллех туртăнчĕ. Ирнекаçне пĕлмесĕр ĕçленинчен те хытăрах аптратать-мĕн ĕççĕр ларни.

Шухăшсем... Шухăшсем... Мĕн чухлĕ вĕсем телейсĕр хĕр пуçĕнче! Уяр тӳпере каççерен çунакан çăлтăрсенчен те нумайрах пулĕ. Кăнтăрла та канăç памаççĕ, çывăрма выртсан та ыйăха хăвалаççĕ.

«Ятманов патне кайса пуçăма таям марши?— пĕрре çеç мар ыйтнă вăл хăйĕнчен хăй.— Тайма пуçа хĕç витмест, теççĕ. Танланса пурăнни çитет пулĕ ĕнтĕ, лăпланас мар-ши? Колхоз мана кирлĕ çеç мар, эпĕ хам та колхоза кирлĕ. Укçине ĕçе юрăхсăррине суккăр çын кăна курмасăр юлма пултарать. Кукурузă уйне мана ĕçрен кăларнăранпа та культиватор пырса кĕмен пирки çĕрĕ хытса кайнă, шăтса тухнă калча та çум куракĕ айне пулнă. Анра çаракпа пиçен çулса çилос тăваймăн. Пĕрле ĕçленĕ хĕрсем звеноран тарса пĕтрĕç, инкесем те хăмла татма, тырă вырма çӳреççĕ. «Укçине патĕнче ĕçлесен, хĕлле выçса вилес пулать. Уйăхра аран-аран вунă ĕç кунĕ лартса пачĕ», теççĕ. Ятманов колхоз тăшманĕ мар, хуçалăх сиен курнине пĕлме кирлĕ. Тепре кайса каласас мар-ши унпа? Пикенсе тăрăшсан, кукурузăна çăлма пулать. Хамăра колхоза тепĕр хут илтĕрччĕ кăна».

Ĕçрен кăларичченхи телейлĕ пурнăçа аса илсенех, Тамара чĕри йывăр чул айне пулнă пек ыратса каять. Епле лайăхчĕ ун чух! Çутă малашлăх патне каякан çул тап-такăрччĕ. Мĕнле таврăнас çав телейлĕ вăхăта? Пуçа тайса, чăнлăхран пытанса, кăмăла улăштарса, ырă туйăмсене ăшран кăларса ывăтас мар-ши?

— Çук!— сехĕрленсе ӳкет хĕр.— Хурлăх курмасăр ырлăх тупăнмасть, теççĕ. Асапран хăранипе хам ĕненнине, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсене хирĕç каймастăп. Кĕтсе пăхас, васкас мар. Хаçат пулăшмасан, обкомола, ЦКна çитме пулать. Чăнлăха тупăп-тупăпах».

Редакцирен ответ килменни вара мăка çĕçĕпе каснăпа пĕрех асаплантарать. Пĕтĕм шанчăк çавăнтаччĕ-çке. «Çырăвăма, тĕрĕслеме тесе, комсомол райкомне е райĕçтăвкома ямарĕç-ши? Тен, унта тытса тăраççĕ? Хамăн кайса пăхас мар-ши?»

Юлашкинчен чăтса тăраймарĕ, пĕр ирхине района тухса утрĕ. Çул çинче, пĕччен утма кичемрен, кула-кулах юмăç ярса пăхрĕ: «Çул майлă машинпа е лашапа ларса кайма телей тупăнсан, мана райцентрта лайăх хыпар кĕтет, çуранах каймалла пулсан, чăрманса çӳрени сая каять», терĕ вăл. Çавăн хыççăн çур çухрăм çеç утнăччĕ, хыçалта мотор кĕрлени илтĕнчĕ. Телее кура, хăвăрт çывхарса килекен грузовик кабини ăшĕнче шофер пĕчченех ларса пырать-мĕн. Тамара инçетренех «сасăлама» пуçларĕ. Палламан шофер пĕр сăмахсăрах ăна хăй çумне лартса кайрĕ.

«Çуран утассинчен хăтăлтăм, ĕçĕм ăнас пек туйăнать,— юмăç янине астуса шутларĕ хĕр.— Мĕнле пулĕ ĕнтĕ». Анчах кĕтни ахалех пулчĕ: районри организацисем хаçатран нимĕнле çыру та илмен-мĕн. Пуçа чиксе килнĕ çулпа каялла утасси кăна юлчĕ.

Çанталăк уяр, тăп-тăрă кăвак тӳперен хĕвел хĕрхенӳсĕр хĕртет. Ыраш пуссинчен кассăн-кассăн вĕрекен çил тĕрлĕрен тутлă шăршăсем илсе килсе питрен сапать. Таврара комбайн, трактор, автомобиль моторĕсем кĕрлеççĕ, лафетлă жаткăсем шатăртатаççĕ. Çӳлте сарă-рах-сăрă çунатлă хăлатсем янăраççĕ, инçетре хĕрхи пĕр вырăнта вĕçсе тăни курăнать. Çак мĕн ачаран курма хăнăхнă сăнарсем Тамарăна тата ытларах салхулатрĕç. Тарăн шухăша кайса утса пычĕ вăл çырма урлă кармакланса тăракан йывăç кĕпер патне. Ăш хыпнăран, вăл карлăк çине уртăнчĕ те аялалла пăхрĕ. Тӳлеккĕн юхакан тăрă шыв витĕр кăвакăн-симĕсĕн-хĕрлĕн йăлкăшакан кайăк куçĕ текен çӳхе чулсем курăнаççĕ. Таçтан анатран вĕтĕр-шакăр пулăсем шыва хирĕç пулкки-пулккипе ишсе килеççĕ, кĕпер патне çитсен пĕр самантлăха чарăнса тăраççĕ те пуклак куçĕсемпе çӳлте тăракан хĕр çине темскер кĕтнĕ пек пăхаççĕ, унтан, хăвăрт пĕтĕртетсе, кĕмĕл тенкĕ пек хупписене çиçтереççĕ те пĕрре куç хупса иличченех таçта кайса çухалаççĕ. Çыран хĕррипе саралса выртакан таса хăйăр çинче вăрăм туналлă шыв чăххи каллĕ-маллĕ чупса çӳрет, апат шырать пулмалла.

«Пурин валли те ĕç пур, пĕр эпĕ çеç уяври пек ирĕклĕн сулланса çӳретĕп,— шухăшлать Тамара.— Ним те тăвас килмест, çултан пăрăнаттăм та çӳлĕ ыраш ăшне кĕрсе выртаттăм. Ним курмасăр, ним шухăшламасăр, ним итлемесĕр, кун иртнине сисмесĕр, хуйхă-суйха мансса, выртаттăм. Анчах килте чирлĕ анне, йăмăксем кĕтеççĕ. Вĕсене пăрахса хăварма юрамасть. Мĕн тăвас-ши? Верук пиччĕшĕ патĕнче сăмахлă çăкăр çисе пурăнмалла пулнине тӳсеймерĕ, чукун çул çине ĕçлеме кайрĕ. Манăн та ун хыççăн каяс мар-ши?»

Çапла тĕмсĕлсе тăнă чух вăл уй урлă темле çын пуçĕ хытă тапса янă футбол пӳски пек хăвăрт куçса килнине асăрхарĕ. Ыраш ăшĕнчен курăнакан çын пуçĕ кĕлеткерен татăлса хăй тĕллĕн куçса пынă пек туйăнни ытла та кулăшла пулчĕ. «Мĕн хăямачĕ çине ларса пырать ку? Велосипед ун пек хăвăрт чупас çук, мотоцикл пулемет пек шатăртатакан. Ку пĕр сасă кăлармасăр ĕрĕхтерсе пырать»,— тĕлĕнчĕ хĕр.

Кĕçех çын çӳллĕш ӳснĕ ыраш ăшĕнчен мотороллер вĕçтерсе тухрĕ те тӳрех Тамара тăнă çĕре пырса чарăнчĕ.

— Каçарăр!— терĕ ун çине утланса килнĕ çамрăк çын.— Уйпуç ялне хăш çулпа каймаллине каласа кăтартмăр-ши мана?

Тамара палламан çын çине пăхрĕ те вăтаннипе куçĕсене çĕрелле усрĕ. Нихçан та курманччĕ вăл çав тери кĕрнеклĕ каччă. Унăн «Молния» текен çутă питĕркĕчлĕ кĕсъесемпе капăрлатнă тумтирĕ, чĕнтĕр евĕр эрешлесе тунă капрон шлепки, шĕвĕр сăмсаллă çăмăл пушмакĕсем, юлашкинчен, Тамара нихçан курман мотороллерĕ — çаксем пурте çамрăк çын инçетрен килнине пĕлтерчĕç. Сăнĕ тата... Епле хĕрĕн чĕрийĕ тĕпĕртетсех тапмĕ çавăн пек çутă сăнлă каччă хăй умне тухса тăрсан!

— Уйпуç ялне?.. Эсир унта мĕн ĕçпе каясшăн?

— Ак тата!— кăмăллăн кулчĕ палламан çын.— Этем мĕн сăлтавпа çӳренине пĕлмесĕр çул кăтартма юрамасть-шим?

«Чăнах аван мар пулса тухрĕ. Шухăшламасăр персе ятăм пулас çав сăмахсене»,— иртрĕ хĕр пуçĕнче.

— Юрамасть!— хумханнине пытарасшăн юриех алхасса каларĕ вăл.

Вĕсем пĕр-пĕрин çине хăвăрт пăхса илчĕç. Хĕрĕн пысăк кăвак куçĕсем, ытарма çук илемлĕ сăнĕ, кĕрнеклĕ пӳ-сийĕ тата кăмăллă кулли çамрăк çынна темскер аса илтерчĕç пулмалла, унăн пичĕсем савăнăçлă йăлкăшса илчĕç.

— Тăхта-ха, эпĕ сан ятна пĕлме кирлĕ. Тамара тесе чĕнетчĕç мар-и-ха сана?— ыйтрĕ вăл.

Хытă тĕлĕннипе хĕр куçĕсене чарсах пăрахрĕ.

— Ара, сана ман ята кам каларĕ? Иксĕмĕр пĕр-пĕринпе тĕл пулнине вĕлерсен те астăваймастăп. Мĕнле пĕлтĕн ман ята?

— Сăнран пăхса пĕлтĕм: çав тери хитре хĕр Тамара ятлă пулма çеç тивĕçлĕ ĕнтĕ,— шўт турĕ каччă.

— Кулах, кул! Эпĕ сана çакăн чухлĕ те ĕненместĕп,— терĕ хĕр, кача пўрнине кăтартса.— Чи малтан пуçа килсе кĕнĕ ята каларăн та ăнсăртран тĕлле лекрĕн.

— Ĕненместĕн эппин? Хушаматпа мĕнле чĕннине те тĕрĕс каласан, ĕненетĕн-и?

— Каласа пăх, вара курăнĕ.

— Куракова. Çапла вĕт?

Çакна илтсен, Тамара çухалсах кайрĕ. «Ăçтан пĕлет-ха вăл ман хушамата? Капăр тумланни, пирĕн патри пек мар, мал енсем майлă калаçни, хăйне килĕшўллĕ тытни — пурте вăл çывăхри çын марри çинчен калаççĕ. Эпĕ вара çўç-пуçăма та тураса якатман, тумланасса та катемпи пек тумланнă. Вăл чăнахах паллать пулсан, мĕн кăна шухăшламĕ-ши ман çинчен? Ах, пуçăм, намăс куртăм паян. Кăна пĕлнĕ пулсан, килтен те тухас çукчĕ»,— ўпкелешрĕ хĕр.

— Ĕмĕрте курман çын ятне пĕлекенскер, эсĕ Уйпуç ялне хăш çулпа каймаллине те пĕлетĕн пулĕ. Авă, куратăн-и, çав инçетри вăрман тĕлĕнче тайлăк сăрт пур. Унта йăмраллă ял курăнать. Тўрех çавăнта çул тыт!

— Кунтан миçе çухрăмра вăл?

— Вунă çухрăмра. Лаши санăн чаплă, туххăмрах илсе çитерĕ.

— Лаши чăнахах шанчăклă. Эсĕ ху киле таврăнас теместĕн-и? Лартса кайма пултаратăп.

— Машинпа çўреме билет туянма манна, çуранах кайма лекет пулĕ. Ырă сăмахшăн тавтапуç!— терĕ те Тамара татах шыв енне çаврăнса тăчĕ. «Эпĕ хăш ялтан килнине те пĕлет», шухăшларĕ вăл.

— Билетне кайран та илме пулать. Кайăпăр пĕрле. Лаши, хăвах куратăн, тĕреклĕ, йĕнерĕ вăрăм, иккĕн ларса çўреме ятарласа тунă. Кăмăл пулсан, утланса ларăпăр та вĕçтерĕпĕр.

— Ман пек тирпейсĕр тумланнă çынпа юнашар ларса пыма намăсран хăрамастăн-и?

— Тумтир вăл темех мар, ăна улăштарса тăхăнма та пулать. Ăшра таса чун пурри паха.

— Эсĕ çын ăшĕнче мĕнле чун пуррине ăçтан пĕлетĕн? Тен, вăл таса мар, хăрăм пекех хура пулĕ?

— Ятупа хушаматна каламасăрах пĕлтĕм, ыттисене те витĕр курса тăратăп. Турткалашса ан тăр, лар. Çул май пĕр-пĕр килĕшўллĕ вырăн тупса чарăнăпăр та сана юмах ярса кăтартăп.

— Апла пулсан, килĕшес пулĕ. Эпĕ юмах итлеме питĕ юрататăп.

Мотороллер кайăк пекех ыткăнать. Çул хĕррипе лартса тухнă йывăçсем, телефон юписем, вырман ыраш уйĕсем, хирĕç килекен лавсемпе автомобильсем, çуран утакан çынсем вĕлтлетсе кăна юлаççĕ. Ытла та канлĕ, ытла та ырă çак тĕлĕнмелле машинпа çиçкĕнсе пыма! Вăхăт иртни сисĕнмест. Тури ката текен вăрман витĕр тухсан тин Тамара кĕçех тăван ялĕ патне çитессине туйрĕ.

— Чар-ха лашуна!— терĕ хĕр.— Эпĕ анса юлам. Яла палламан çынпа пырса кĕни аван мар. Малалла эсĕ пĕччен кай. Хăвна хыçалтан тытса çул тăршшипе силлесе пынăшăн мана ятлатăн пулĕ ĕнтĕ. Тархасшăн каçар!

— Мĕн каçарасси пур унта? Санпа кунĕнсĕрĕн чунтан хавасланса вĕçтерсе çўремелле. Çулĕ кĕске пулни çеç кулянтарать.

Халĕ вĕсен ал тытмаллаччĕ те уйрăлмаллаччĕ. Анчах иккĕшĕ те вырăнтан тапранмарĕç. Тамарăн кăмăллă çынпа тата кăшт та пулин пĕрле пулас килчĕ.

— Эсĕ мана юмах ярса кăтартма пулнăччĕ... Тата хама çуран утассинчен хăтарнăшăн кама тав тумаллине те пĕлес килет,— терĕ вăл куçĕсене çĕклемесĕр.

— Апла пулсан, атя, çак симĕс çерем çине ларăпăр.

Каччă мотороллерне çул çинчен пăрса вăрман хĕррипе çĕр утăма яхăн кустарчĕ те лапсăркка çăка тĕмĕ сулхăнне пырса тăратрĕ. Унтан курткине хывса çерем çине сарса хучĕ.

— Лар çакăнта,— терĕ вăл, хĕр çине ăшшăн пăхса.— Лар та эпĕ мĕн каланине итле.

— Çара çĕр çине ларсан та нимех те пулас çук. Кăлăхах чăрмантартăм сана,— чĕркуççисене тирпейлĕ хуçлатса ларса каларĕ Тамара. Каччă унпа юнашар çемçе курăк çине ўпне выртрĕ.

«Мĕн пулчĕ мана? Пачах палламан çынна ытла та хăвăрт шанакан пултăм. Пĕлме çук, тем шухăш ун пуçĕнче. Çывăхра пĕр чун курăнмасть, хăлха çурăлас пек кăшкăрсан та никам илтес çук», пăлханса шухăшларĕ хĕр.

— Халĕ паллашăпăр. Мана юлташсем Хум Микулайĕ тесе чĕнеççĕ, аннешĕн ача чухнехи пекех Кольă пулса юлтăм,— терĕ каччă.

Çакна илтсен, Тамара ун енне ялт! çаврăнса ларчĕ.

— Эсĕ «Уйăх тухсан», «Савниçĕм, сывă пул!», «Эсех айăплă пултăн-ши?» тата ытти калавсен авторĕ мар-и?— хытă кăсăкланнине пытарса тăмасăр ыйтрĕ вăл.

— Çавă. Эсĕ вĕсене вуланă-и?

— Эпĕ çеç мар, пирĕн ялта вĕсене вуламан пĕр хĕр те юлман пулĕ. Ушкăнăн-ушкăнăн пухăнса вуланă. Халĕ ĕнтĕ иксĕмĕр паянччен

ниçта та тĕл пулманнине питĕ аван пĕлтĕм. Ҫала-ха, эп кам иккенне мĕнле пĕлтĕн? Тульккĕ выляса-кулса мар, чăннине кала.

Микулай сàран папкăран хаçат кăларчĕ те Тамара чĕрçийĕ çине хучĕ.

— Ҫак портрет айĕнче çырнинчен пĕлтĕм,— кукурузă ăшĕнчен савăнăçлă кулса пăхса тăракан хĕр ӳкерчĕкĕ çине кăтартса каларĕ каччă.

Тамара хăй портретне курсан йăл! кулчĕ. Анчах кулли унăн савăнăçлă пулмарĕ, темле хĕрхӳн тухрĕ.

— Тахçанах пичетленĕччĕ ăна, епле асту-рăн-ши?

— Редакцире ĕçлекенсем ун чух сана «Хитре Тамара» тесе ят панăччĕ. Ăна ăçтан манан?

— Пирĕн района ĕçпе килнĕччĕ-и е çул майлă çеç кĕрсе тухмалла пулчĕ?

— Эпĕ тахçанах колхозра ĕçлекен хĕр çинчен калав çырма ĕмĕтленнĕччĕ. Уйпуç ялĕнче кукурузă ăсти пурăннине пĕлсен, унта çитсе курма шухăшларăм. Мана калав çырма пулăшас кăмăл пулсан, хăвăн пурнăçупа паллаштар. Вара хама ĕмĕр-ĕмĕр сан умăнта парăмлă тесе шутлăп...

Тамара чăтса тăраймарĕ, чунĕ хытă хурланнипе хаш! хуйхăрса ячĕ. «Вăл мана героиньă тăвас ĕмĕтпе вăрăм çула тухнă. Халĕ ĕнтĕ хам комсомолкă та, колхозницă та маррине пĕлсен, чăрманса çӳренĕшĕн тем пекех ӳпкелĕшĕ. Ытла та телейсĕр-çке эпĕ. Никама та ырă тума ăрăскалăм çитмест»,— чунтан пăшăрханса шухăшларĕ вăл.

— Питĕ шел. Ман пурнăçа пĕлни сана калав çырма пулăшаймĕ. Кун-çулăм ытла та тĕксĕм, малта та çутă пурри курăнмасть. Унашкал хĕр çинчен çырни кама хумхантарĕ? Пирĕн колхозра лайăх хĕрсем нумай. Правленире вĕсене кăтартĕç. Хăшĕ кăмăллăрах, çавна суйласа ил те очерк çырма та пулать, калав çырсан та аптрамĕ.

— Ҫук, Тамара, эпĕ кунта саншăн çеç килтĕм. Пур калавра та савăнăçлă ĕçсене кăна çырмаççĕ, хуйхă-суйхăна асăнни те тепĕр чух вырăнлă пулакан. Пĕр иккĕленмесĕр каласа пар. Малтанах шантарам: эпĕ сана нихçан та хур тăвас çук. Ĕненетĕн-и?

— Ĕненме кирлĕ мар пулĕ те, мĕн тăвас, талайăм çапла: çынна çăмăллăн шанни — манăн чи пысăк çитменлĕх. Пурăна киле, йăнăшнине сиссе, час-часах ӳкĕнме лекет. Итле эппин, йĕркипех каласа парам. Ҫайран кăлăхах итлесе чăрмантăм тесе ан ӳпкелеш.

Тамара хăйĕн пурнăçĕ çинчен йĕркипе калаçа пачĕ. Уйрăммăнах юлашки уйăхра пулса иртнĕ ĕçсем çинче тĕплĕн чарăнса тăмалла пулчĕ. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕсем пĕрин хыççăн тепри татăлса пыни çинчен каланă чух куç тĕкĕсенчен сывлăм шывĕ пек таса тумламсем шăрçаланса çакăнчĕç. Хум Микулайĕ те пăлханма пуçларĕ, унăн чышкисем чăмăртанчĕç, куçĕсем хаяррăн йăлтăртатса илчĕç. Ăшĕнче мĕн пулса иртнине хĕре систерес мар тесе, пуçне çăра курăк ăшне чикрĕ те пĕр тапхăр хăвăрт сывласа выртрĕ.

— Ҫапла пулчĕ ăнман пурнăçăм. Куртăн ĕнтĕ, çынсене интереслентермелли унта ним те çук. Шкулта эпир кăштах литературă çинчен вĕреннĕ, писательсем произведенийĕсене çырас пулсан, пурнăçра нумай хутчен пулса пыракан ĕçсене çеç илнине пĕлетпĕр. Анчах ман пурнăç пекки урăх ниçта та пулас çук, çавăнпа та вăл калав çырма юрăхсăр ĕнтĕ.

— Апла мар! Ҫук!— килĕшмерĕ писатель.— Пурнăçна хут çине çырса хума вăй çитмесрен кăна шикленетĕп. Ҫапах та тăрăшса пăхăп. Халĕ ĕнтĕ хам кунта мĕн ĕçпе килнине пĕтĕмпех каласа парам... Мана кунта редакци эс çырнă çырăва тĕрĕслеме ячĕ. Пуçа усса çӳреме пăрах. Эсĕ айăплă марри пирки тек пĕртте иккĕленместĕп. Хаçат пулăшатех. Вара эсĕ ĕлĕкхи пекех телейлĕ пулăн.

Ăшă сăмахсем хĕрĕн хыпса çунакан ăшне типсе çуркаланнă тăпрана çумăр шывĕ шӳтернĕ пек лăплантарчĕç. Чунтан савăннипе, Тамара каччă çине тулли кăмăлпа, куç сиктермесĕр чылайччен пăхса ларчĕ.

— Темле тав тумалла ĕнтĕ сана çак сăмахсемшĕн. Хаçат пулăшасса шаннипе çеç асапа тӳсме вăй тупрăм пулĕ. Сана ĕмĕр-ĕмĕр ырăпа асăнăп. Анчах эсĕ пирĕн Ятманова пĕлместĕн-ха. Вăл нимпе те парăнасшăн пулмĕ.

— Тамара, пар аллуна! Тупа тунă пекех калатăп: сан ĕçне вĕçне çитермесĕр нимпе те лăпланмастăп. Ятманова тăна кĕртмеллĕх вăй-хăват тупàпăр. Малтан эпĕ Ухвандеевпа курса калаçасшăнччĕ, унтан правление кĕрсе тухма шухăшланăччĕ, санпа калаçассине ырана хăварнă пулсан та юратчĕ. Халĕ урăхла пулса тухрĕ. Санпа тĕл пулни питĕ вырăнлă. Хамăн мĕн тумаллине халĕ ĕнтĕ витĕрех курса тăратăп. Тата Верукран та ыйтса пĕлмеллисем пур. Ҫиле хăçан таврăнмалла вăл?

— Шăматкун килекенччĕ. Курсанах сан патна ярăп. Эсĕ ăçта чарăнасшăн?

— Ухвандеев патне кайса пăхам, вăл ăçта та пулин вырнаçтарĕ. Кирек епле пулсан та, кунти пуçлăхсемпе паллашнă хыççăн санпа тепре те пулин курса калаçмаллах. Эсĕ килтен ниçта та каяс çук пулĕ-ха?

— Килтех пулатăп.

— Апла пулсан, уйрăлăпăр. Яла çитиччен ларса пырас теместĕн-и?

— Инçе мар, çуранах кайăп. Ухвандеев

Вăрманкасра пурăнать. Унта сылтăм çул юппипе каймалла...

— Иксĕмĕр пĕрле пулнине никам та курманни лайăх-ха. Пирĕн, тĕрĕслекенсен, вăл тĕлĕшпе асăрханмалла. Тĕрлĕ сăмах калама пултараççĕ. Сывă пул, Тамара!

## XII

ЯЛА ХАÇАТ çынни килнĕ тени Ятманова питех хумхантармарĕ. Унашкал çынсене вăл пĕрре çеç мар курнă. Анчах çав çын малтан хăй патне кĕрсе тухманни кăмăла каймарĕ. «Ыттисем тӳрех кунта килсе ал тытаканччĕ, ку ахаль çынсемпе калаçма тытăннă. Ухвандеев та, тăмана, ăна манпа паллаштармасăрах фермăна илсе кайнă. Мухтанас терĕ пулĕ, анчах мухтанмалли çукрах-ха унта... Хула çыннине унта илсе кайиччен малтан пӳртне çуса тасатма, хаçат-журналсем пырса хума хушмаллаччĕ хуть»,— пăшăрханчĕ председатель.

— Эсĕ ăна ху куртăн-и е Ухвандеев каланинчен кăна пĕлтĕн?— ыйтрĕ вăл бухгалтертан.

— Хăй кунта кĕмерĕ, правлени умĕнче мотороллерĕпе чакаланса тăчĕ. Эпĕ, Ухвандеев ыйтнипе, ăна Шакмаков арăмĕ патне хваттере вырнаçтарма çеç хут çырса патăм,— хуравларĕ Мышкин.

— Эсĕ те çав...— йĕрĕннипе çĕре сурса каларĕ Ятманов.— Малтан хучĕсене тĕрĕслемеллеччĕ. Кам пĕлет вĕсене? Чăнахах редакцирен килнĕ пулсан юрĕччĕ. Темле аферист килсе тухасран хăрамалла. Хăçан та пулин намăс кăтартаттăрах-ха мана.

— Ухвандеева шантăм. Вăл унта документсене куртăм, терĕ.

Тарăхнипе алăка хытă шалтлаттарса хупрĕ те, Борис Петрович хăй пӳлĕмĕ тăрăх каллĕ-маллĕ утма тытăнчĕ.

«Пурнăç тип-тикĕсех пыратчĕ. Темле пĕчĕк çеç винт тухса ӳкрĕ пулмалла, механизм уксахлакан пулчĕ. Ку таранччен никам та ман çине тӳртĕн пăхни палăрманччĕ, халĕ урнă йытăран хăранă пек инçетренех пăрăнма пăхаççĕ. Мĕне пĕлтерет ку? Хам халăхпа харăс утайми пулнине мар-и? Тен, тахăшĕ юриех чăрмантарать пулĕ? Парторгĕ те пулин чирлерĕ. Йывăр килсен, вăл яланах мĕн тумаллине каласа кăтартаканччĕ. Халĕ пĕр-пĕччен тăрса юлтăм», шухăшларĕ председатель.

— Кĕме юрать-и?— илтĕнчĕ паллакан сасă.

— Кĕрĕр!

Пӳлĕме Ухвандеевпа Хум Микулайĕ кĕрсе тăчĕç.

— Сывă-и, Борис Петрович? Паллашăр: Хумов юлташ, вăл пирĕн колхоза хаçатран килнĕ,— терĕ Ухвандеев, хăйпе пĕрле кĕнĕ çын çине кăтартса.

— Ятманов,— аллине сĕтел урлă тăсса каларĕ председатель.— Эсир фермă курма кайнă, терĕç. Мĕнле, килĕшрĕ-и? Пурте тип-тикĕс теме çук-ха унта, çитменлĕхсем сахал мар. Анчах комсомолла фермă пĕтĕм районĕпе те ман колхозра кăна. Тин çеç пуçарса янă ĕç кăлтăксăр пулмасть ĕнтĕ. Çамрăксем коммунизмла ĕçлекен фермă ятне илесшĕн кĕрешеççĕ, çавă паха. Тата ялĕ мĕнле пек туйăнчĕ?

Хум Микулайĕ часах хуравламарĕ. Малтан вăл председатель çине сăнаса пăхрĕ, унтан хăйне ларма чĕнессе кĕтмесĕрех хыçлă пукан çине ларчĕ. Çавна курсан, Ятманов хĕрхӳн кулчĕ. «Çак сĕт тута умĕнче те йăпăлтатса тăма лекет,— вĕлтлетрĕ ун пуçĕнче.— Эх, çарта мар... Кăтартнă пулăттăм сана пуçлăхсемпе епле калаçмаллине. Сывламасăр хытса тăнă пулăттăн...»

— Ялĕ питĕ илемлĕ, çыннисем тата илемлĕрех. Пурте пикенсе ĕçлеме тăрăшаççĕ. Чăнах та, сирĕн колхозра виç-тăватă сехет çеç пурăнтăм-ха, кунти пурнăçа хăрах куçпа кăна курнă темелле. Йăнăшма та пулать,— асăрханарах каларĕ хăна.

— Çук, йăнăшмастăр. Çыннисем чăнахах тăрăшаççĕ. Ĕçрен пăрăнакансене эпир ирĕксĕрлеместпĕр, колхозран кăларса çапатпăр çеç. Ун çинчен Ухвандеев каласа панĕ пулĕ ĕнтĕ...

— Мĕн эсĕ, Ятманов юлташ!— хыпаланса ӳкрĕ комсомол секретарĕ.— Правлени ĕçĕсем çинчен калама эпĕ правлени членĕ мар-çке, ăна-кăна чухлатăп.

— Чухлатăн эппин? Апла пулсан, хăнана малтан кунта илсе килес вырăнне мĕншĕн фермăна илсе кайрăн?— шăнтса пăрлантараслла сасăпа ыйтрĕ председатель.— Хуларан килнĕ çыннăн пушă вăхăт ытлашшиех пулакан мар, ăна хаклама пĕлес пулать. Çапла-и, Хумов юлташ?

— Эпĕ ытлашшиех васкамастăп.

— Ку аван ĕнтĕ. Пирĕн патра миçе кун пурăнас тетĕр?

— Командировкă срокĕ тăватă кун. Тунтикун ирхине района тухса кайма ĕмĕтленетĕп, унтан вара хулана таврăнма та пулать.

— Мĕнле ĕçпе ячĕç сире редакцирен?

Хуравлас вырăнне, çамрăк çын командировкă хутне кăларса хучĕ.

— Çакăнта калană...

Ятманов пичетлĕ хута тĕплĕн вуласа тухрĕ. «Хумов Н. Г. «Çутă маяк» колхоза редакци хушнă ĕçсене тума тăватă кунлăха каять...»

— Ним те ăнланаймарăм. Сире колхоз пурнăçĕ хăш енчен ытларах интереслентерет?

— Ку таврара кукурузă ăстисем йышлă. Астăватăп, пĕлтĕр эпир ун çинчен хамăр хаçатра та çырнăччĕ. Çавăнпа, комсомолла

фермăпа паллашнă хыççăн кукурузă уйне кайса курас шухăш пур. Тата нимĕç пăрçи те акнă, теççĕ. Ăна та курасчĕ.

— Пурте пур, кукурузĕ те, пăрçи те. Анчах кĕçех каç пулать. Çавăнпа уй курса çӳресси-не ырана хăварăпăр. Сире миçе сехетре вă-ратмалла?

— Колхозниксемпе пĕрле тăрса уя тухсан питĕ аванччĕ.

— Тĕрĕс. Ир тăракан кайăк тутă пулнă, теççĕ. Ыран Ухвандеев кĕрсе тăратĕ. Сывă пулăр!..

Çамрăксем тухса кайсанах, Ятманов бух-галтера чĕнчĕ.

— Ну, Ермолай Ефимч, пирĕн хăна мĕн ĕçпе килнĕ пек туйăнать сана?— ыйтрĕ вăл.

— Питĕ чее çын, пуçри шухăшсене пытар-ма пĕлет. Çапах та вăл кунта мĕн тума шу-хăшланине сисме пулать. Асăрхарăр-и, куку-рузă ăстисене асăнчĕ, пĕлтĕр хаçатра пичет-ленĕ, терĕ. Чăнах та, унта пирĕн ялти кукурузă звени çинчен темскер çырнăччĕ. Хам вуламан, анчах Тамара портретне кăларнине лайăх ас-тăватăп. Çавăн жалобине тĕрĕслеме килмен-ши вăл?

— Апла та пулма пултарать. Юрать-ха, корреспондент тӳрех Кураковсем патне кай-ман. Тем те пĕр каласа панă пулĕччĕç.

— Вăл унта ыран та кайма пултарать. Бо-рис Петрович, ман шутпа, пирĕн вĕсене пĕр-пĕринпе курса калаçтармалла мар пек туйă-нать. Тамарăн чĕлхи çĕçĕ пекех, пире турамăн-турамăнах касса ваклĕ.

— Çынпа çынна курса калаçма ăçтан чаран?

— Чарма çук ĕнтĕ, анчах чăрмантарма пу-лать. Тамарăна Хумов тухса кайиччен ялтан кăларса ямалла çеç. Вара иккĕшĕн тĕл пулас-си пĕтрĕ те.

— Калама çăмăл та, тума йывăр. Мĕнле майпа кăларса ярас-ха, суйса илĕртме ача мар, ăна часах улталаймăн.

— Бригадир каланă тăрăх, иртнĕ эрнере вăл амăшне больницăна леçме тесе лаша ыйтнă пулать. Амăшĕ унăн тахçантанпах йы-вăр чирленĕччĕ. Эпĕ колхозра тăман çынна лаша пама хушмарăм. Халĕ пама та пулать. Тухса кайччăр амăшĕпе иккĕшĕ те пĕреххут. Жалобă çыраканăн килĕнче чирлĕ çын пурри пире усă тăвас çук, ăна больницăна илсе кай-ма пулăшни вара эпир халăхшăн тăрăшни çинчен усăмлăнах каланă пулĕччĕ.

— Тĕрĕс, Ермолай Ефимч!— ырларĕ ăна хытă хавасланнă Ятманов.— Анчах амăшне больницăна хăварсанах Тамара киле таврăн-ма пултарать. Вара ыран Хумовпа иккĕшĕ каçа хирĕç чип-чиперех курса калаçĕç.

— Эпир вĕсене райбольницăна мар, Шу-пашкара ярăпăр. Машинпа кайччăр та шофе-рĕ, мотор пăсăлчĕ тесе, хулара ăна тунтикун-ччен тытса тăтăр. Чирлĕ çынна леçме çăмăл машинă панăшăн сана Хумов кăна мар, пĕтĕм ял халăхĕ ырлĕ.

— Апла пулсан, шофера чĕн те, мĕн тумал-лине каласа кăтарт. Тата бригадирсемпе прав-лени членĕсене те халех чĕнтер. Вĕсемпе те калаçса пăхас...

Çав каç правлени çуртĕнче автансем виçĕ хут авăтиччен ах çутă çунчĕ.

## XIII

КУРАКОВСЕМ ПАТНЕ фельдшер хĕвел аннă чух пычĕ.

— Ыран эпĕ эмелсем илме Шупашкара тух-са каятăп. Çула май аннӳне больницăна леçес теместĕн-и? Мана колхоз çăмăл машинă пачĕ,— терĕ вăл.

— Ялтан миçе сехетре тухса каймалла?— хыпаланса ӳкрĕ Тамара.

— Тул çутăлнă-çутăлманах кайăпăр. Çап-талăк шăрăх тăрать, кăнтăрла машинпа лар-са пыма аннӳне пăчă пуласран хăрамалла.

— Хĕвел çӳле хăпарсан чăнах шăрăхла-нать ĕнтĕ. Миçен каймалла пулать?

— Эпир шоферпа иккĕн тата эсир çеç.

— Пире лартса кайнăшăн правленире сире ятламĕç-ши?

— Ун çинчен ан шухăшла: Ятманов хушни-пе килтĕм кунта. Мĕнле тăвăпăр, пыратăр-и е çул майлă урăх машинă тупăнасса кĕтес тетĕн?

— Чипер калаçăр! Эпĕ аннене тахçанах больницăна леçме тăрăшнине хăварах пĕлетĕр вĕт. Лаша пулманни кăна хупласа тăнăччĕ. Халĕ ĕнтĕ хавасланах каятăп! Хулари тух-тăрсем ăстарах ĕнтĕ, тен, анне унтан сывалса таврăнĕ. Хамăрпа пĕрле мĕн илмелле?

— Нимех те кирлĕ мар. Аннӳне мунча кĕрт-се таса кĕпе-йĕм тăхăнтарни аван ĕнтĕ...

Тĕттĕмччен Тамара амăшне шыва кĕртрĕ, йăмăкĕсене кукамăш патне леçрĕ те каçхи апата ларчĕ. Çак самантра тин вăл хăйĕн те-пĕр кунне Хумовпа тĕл пулмаллине аса илчĕ. «Тĕлĕнмелле,— шухăшларĕ хĕр,— пĕр эрне каярах райбольницăна кайма тем чул тархас-ласа та лаша памарĕç, халĕ, редакци çынни килнине пĕлсен, лаша мар — çăмăл машинне те хĕрхенсе тăмарĕç. Пире пулăшам пекки туса ырра тухас терĕç пулĕ. Епле чееленме пĕлеççĕ! Юрĕ-çке, чееленччĕрех. Çапах та ку пире те усă кӳрĕ. Унсăрăн аннене тухтăрсем патне пурпĕрех илсе каяс çукчĕ пулĕ».

Çак шухăшпа Тамара сĕтел хушшинчен тух-рĕ те вырăн сарма пуçларĕ. Амăшĕ мунча кĕнĕ хыççăн тĕлĕрсе кайнăччĕ. Пурнăç ăнма пуçланнăн туйăннăран, хĕр шăппăн юрлама тытăнчĕ. Сасартăк ун куçĕ умне Хумов сăнарĕ

тухса тăчĕ. «Ыран касчен киле таврăнаяс çук ĕнтĕ, кирлĕ пулмăп-ши ăна унччен? Кирлĕ пулсан, кăлăхах шыраса çӳрĕ. Хам Шупашкара кайнине пĕлтермеллех ăна, унсăрăн тарăхма пултарать. Анчах ăçта курса калаçас унпа? Çитменне кас пулчĕ, халĕ вăл çывăрма та выртрĕ пулĕ. Колхоза килнĕ çынсене Шакмак арăмĕ хваттер яраканччĕ. Хумов та çавăнтах ĕнтĕ. Кайса пăхас мар-ши?..»

Тамара тӳссе тăраймарĕ, штапель пирĕнчен çĕлетнĕ пĕртен-пĕр ĕренкеллĕ кĕпине тăхăнчĕ те, анкарти витĕр уя тухса, ансăр сукмакпа Вăрманкас еннелле васкарĕ.

Лăпкă кас. Çĕре хупăрласа илнĕ сĕм тĕттĕм çăралнăçемĕн çăралса пынă пек туйăнать. Уйăх тухайман-ха, çавăнпа уяр тӳпере çунакан çăлтăрсем яланхинчен пысăкрах пек курăнаççĕ. Хĕрӳ ĕçре ĕшеннĕ колхозниксем канма васкаççĕ пулас, ялта çутăсем сахалланса пыраççĕ. Улăхран сывлăм хăпарать пулмалла, нӳрĕк сывлăш туртăнать.

Тамара чупнă пек утать. Хумовпа çын куçĕ умне пĕрле пырса тăрассинчен асăрханмалла. Çамрăк çын патне çĕр хутах пынине пĕлсен, тем калама та пултарĕç. Ĕçпе пымалла пулнине те шута илмĕç, тӳрех усал ят сарма тытăнĕç.

Акă Вăрманкас. Ансăр тăкăрлăк пуçĕнче Виçилис инкен пысăк пӳрчĕ ларать. Кĕтесри кантăкĕнчен урама çутă ярăмланса тухать. Тахăшĕ çывăрма выртман пулас. Кил хуçи-ши е Хумов-ши? Тамара шăппăн кăна кантăк айне пырса тăчĕ те кармашса пăхрĕ. Чӳрече янахĕ ытла та çӳлĕ, ним те курăнмасть. Хĕр кăшт шухăшласа тăчĕ. Унтан тăкăрлăк леш енне кайса пăхрĕ. Инçетрен лайăхрах курăнать-мĕн. Сĕтел хушшинче Хум Микулайĕ темскер çырса ларать. Вăл пӳлĕмре пĕччен иккенне пĕлсен, Тамара хăюллăнах пырса чӳречерен шаккарĕ.

— Кам унта?— ыйтрĕ каччă, кантăка уçса.

— Хумов юлташ, тух-ха урама, сăмах пур...

Каччă хĕре палларĕ.

— Юрать...

«Ах, аван мар-çке, вăл тем шухăшлама та пултарать. Çĕр хута килме кирлĕ марччĕ. Йăнăшрăм пулмалла», пăшăрханчĕ хĕр.

Пӳртре çын калаçни илтĕнчĕ, кĕçех юнашар пӳлĕмре çутă çутăлчĕ. Хĕрарăм сасси темскер ыйтрĕ. «Мана чĕнеççĕ, эс алăкне ан питĕр!» терĕ Хумов. Унтан çутă сӳнчĕ, алăк шалтлатрĕ. картишĕнче сурăхсем тĕпĕртетсе чупса кайни илтĕнчĕ.

— Эсĕ ăçта? Çутă пӳлĕмрен тухнипе ним те курмастăп.— терĕ хапхаран тухнă Хумов.

— Кайăпăр кунтан. Мана кăштах ăсатса яр. Çул çинче хам мĕншĕн сана çĕр хута чăрмантарса çӳренине пĕлтерĕп,— шăппăн каларĕ Тамара.

Çак вăхăтра кантăк уçăлчĕ.

— Римма, эсĕ-и ку?— пуçне урамалла кăларса ыйтрĕ Виçилис инке.— Эп хвулигансем астарса илсе тухмарĕç-ши пирĕн хăнана, тесе сехĕрленнĕччĕ. Эсĕ пулсан, çӳрĕрех эппин.

— Маншăн ан шиклен, Виçилис инке. Эпĕ кăшт уçăлкаласа çӳрĕп те кĕçех каялла таврăнăп,— терĕ Хумов.

— Çапла ĕнтĕ. Çамрăк чух ирхи автансем авăтмасăр камăн пӳрте кĕрес килĕ? Хĕрпе çӳремен каччă — каччă та мар...— терĕ лешĕ ăна хирĕç.

Микулай, хĕре хулĕнчен çепĕççĕн тытрĕ те, вĕсем çутă ӳкмен тăкăрлăкпа уй еннелле утрĕç.

— Кил хуçи сана палламарĕ. Римма тени мĕнле çын пулчĕ?— ыйтрĕ Хумов.

— Пĕр чаплă пике. Хутран-ситрен ялта ун йышшисем те тупăнкалаççĕ. Эсĕ те мана çăмăлттай тесе шутлатăн ĕнтĕ.

— Çук, Тамара, эсĕ ун йышши маррине аван пĕлетĕп.

— Тавтапуç! Васкавлă ĕç тупăнман пулсан, нимпе те килес çукчĕ.

Вара хĕр мĕн пулнине йĕркипе каласа пачĕ.

— Пулăшас тесех кăларса яраççĕ-ши сана Шупашкара е чăрмантарасран шикленнипе санран хăтăлас теççĕ çеç?

— Манран мар, санран шикленнипе машинă пачĕç пулмалла. Анчах эпĕ вĕт касчен таврăнатăп. Çавăнпа манран никам та хăтăлаймĕ. Эсĕ ялтан хăçан тухса каяс тетĕн?

— Тунтикун ирхине района каятăп, вара, унти ĕçсене туса пĕтерсен, касчен киле таврăнасшăнччĕ. Ухвандеев, эпĕ ыйтнипе, вырсарникун клуба комсомолецсене пуçтарать. Унта санăн та пулмаллах. Унччен Шупашкартан таврăнсан, чĕнмесĕрех пыр.

— Юрĕ, çапла тăвăп. Хуларан ыран таврăнаймасан, вырсарникун ирхине ирех персе çитетĕп. Халĕ уйрăлăпăр. Чăрмантарса çӳренĕшĕн касару ыйтатăп. Сывă пул!

— Тăхта, Тамара. Манăн санран кун пек уйрăлас килмест. Хăвăр яла çитиччен ăсатса ярам-и?

Хĕр ним те чĕнмерĕ, пуçне чикрĕ те çул тăрăх хăвăрт утма пуçларĕ. Микулай пĕр самант, ним тума пĕлмесĕр, хытса тăчĕ. Унтан чупса пырса татах хĕре хулĕнчен тытрĕ те юнашар утма пуçларĕ.

— Эс çиленместĕн-и?— шăппăн ыйтрĕ Хумов.

— Çук, çиленместĕп. Чăннипе каласан, ман уй урлă пĕччен касас килместчĕ, сана чăрмантарса çӳрессинчен тесе çеç уйрăлас терĕм.

Тамара хăйĕнчен ним те пытарманни Микулая килĕшрĕ. Вăл çӳхе кĕпе вĕççĕн утса пы-

ракан хĕр çӳçеннине сисрĕ те, курткине хыв-са, ун хулпуççийĕсем çине уртса ячĕ. Тав тăвас вырăнне, лешĕ каччă хулне хăй çумне хытăрах тытрĕ çеç.

— Қала-ха, хаçат пулăшаймасан мĕн тăвас тетĕн? Ялтан тухса кайма шухăшламастăн-и?— ыйтрĕ каччă.

— Хаçат пулăшасса шанатăп. Тенепле вăл та нимех те тăваймасан, обкомола хам кайса пăхатăп. Ятманова çĕнтермеллех. Унсăрăн вăл çамрăксене колхозран пĕтĕмпех пистерме пултарать. Колхоз пирĕншĕн ама çури мар, тăван анне пулмалла. Ăпа яш-кĕрĕмсем, хĕрупраç-сем, ятне çеç мар, чун-чĕререн юратчăр тесен, ĕç кун хакне ӳстерни çеç сахал, эртеллĕ ĕçе колхозра та савăтри пек йĕркелемелле. Тумла-нассишĕн, хырăма тăрантарассишĕн кăна ĕç-лесси — пирĕн йăла мар, кивĕ саманари йăла. Ĕçре эпир савăнăç тупасшăн. Анчах юратман ĕçе ирĕксĕрлесе ĕçлеттерни мĕнле савăнăç пултăр? Эп кăмăллана ĕç колхоза кирлĕ, ха-лăха пысăк усă парать. Çапах та Ятмановпа унăн тусĕсем мана çав ĕçпе пурăнма чараççĕ. Мĕншĕн? Кама кирлĕ ку? Çук, манăн вĕсене çĕнмеллех!

Витĕмлĕ тухрĕç çак сăмахсем. Хĕр ĕмĕчĕ Микулая та хавхалантарчĕ. «Идейăшăн чун тухиччен çапàçма хатĕр-çке ку,— шухăшларĕ вăл.— Коммунизм тăвакансен çапла пулмалла та. Кăшт йăнăшать ĕнтĕ вăл. Правлени ăна фермăна куçармалла тусан, ĕçе тухмасăр ку-тăнлашса тăма кирлĕ пулман ĕнтĕ унăн. Хă-йĕн шухăшĕ тĕрĕссине урăх майпа кăтартмал-ла пулнă. Çапах та ăна ытлашши айăплама юрамасть. Ун вырăнĕнче хам пулнă пулсан, кам пĕлет, тен, эпĕ те çаплах хăтланнă пулăт-тăм? Калăпăр, хама, калавсем çырас вырăнне, бухгалтер пулса пурăнма хушсан, килĕшмел-ле-и? Ним те килĕшес çук! Мĕншĕн? Шут ĕçĕ халăха кирлĕ мартан мар ĕнтĕ, ăна хам юрат-манран».

— Тамара, пурнăç çине эпир пĕр пекех пă-хатпăр. Епле пулсан та, сана тӳрре тухма пу-лăшатăпах эпĕ! Тĕрĕслĕх — сан енче, эсĕ çĕн-теретĕнех!— терĕ Хумов, пĕтĕм чунтан хавха-ланса.— Эсĕ ху мĕнле шутлатăн?

Хĕр чĕнмерĕ, анчах хăй хулне кăкăрĕ çумне хытăрах лăпчăтнине туйса, каччă вăл килĕш-нине сисрĕ.

## XIV

ЯТМАНОВА ПРЕДСЕДАТЕЛЕ кĕнĕренпе пĕрремĕш хут ыйхă вĕçни аптратрĕ. Колхоза тĕрлĕ комиссисем районран та, Шупашкартан та час-часах килсе çӳренĕ, хаçат-журнал çын-нисене те курман мар, анчах нихçан та пăл-ханман вăл. Мĕншĕн-ха Хум Микулайĕ килни чуна çав териех хумхатрĕ?

«Мĕн пур инкек çав чăрсăр хĕр пирки пуç-ланса кайрĕ,— вĕчĕрхенсе шухăшларĕ Борис Петрович.— Кураковсемпе хирĕçмен пулсан, чип-чиперех пурăнмаллаччĕ. Тамара та... ту-тинчен амăш сĕчĕ типмен — хисеплĕ çын авто-ритетне тапăнчĕ. Кассан турпассăр пулмасть, теççĕ. Тен, хĕрсе кайнипе, хам та ытлашширех хăтлантăм пулĕ. Çапах та вăрçă пуçлаканĕ эпĕ мар. Халĕ ак корреспондент умĕнче пуçа чиксе тăма лекет. Çынни те пулин ыттисем пек пулмарĕ. Тĕрĕслеме килекенсене хуть те хăçан та çырлахтарма пулаканччĕ. Чун каниччен ĕçсе-çиеççĕ те, пире хамăр пĕлнĕ пек ĕçлеме пиллесе хăвараççĕ. Ку пĕтĕмпех урăхла хăт-ланать. Ырра мар-ха ку, чун сисет. Мĕн те пулсан туса хăваратех вăл асăнмалăх...»

Ирхине ирех вырăн çинчен тăрса тумланчĕ те правление тухса утрĕ. Яланах йăпăлтатма та, элеклеме те юратакан икĕ питлĕ Мышкин пуçлăха курсан хытă сехĕрленнипе çӳçенсе илчĕ те, хăй йăлипе, пуçне усса тăчĕ.

— Салам!— ун çине пăхмасăр мăкăртатрĕ председатель.— Хула çынни мĕнле сĕр касрĕ?

— Малтанхи кунах хăй ытти çынсем пекех пулнине кăтартрĕ. Висилис инкерен ыйтса пĕлтĕм. Тĕттĕм пулсанах Риммăпа тухса кай-рĕç тет те тул çутăлас умĕн тин киле таврăнчĕ, тет. Пирĕн пекех çылăхлă çын.

— Каччă хĕрпе тĕттĕмре йăпанса çӳреме юратнинчен тĕлĕнмелли çук. Кампа та пулин курса калаçман-ши вăл? Çавна пĕлмелле пирĕн.

— Как калас... Хамăра ытлашши хĕсĕрлеме тытăнсан, хăй тунă çылăхсене те асăнма пу-лать. Эпир те вăхăта ахаль сая яманнине сис-сен, часах шăлне çыртĕ. Виçилиса Хумовпа Риммăна куç сиктермесĕр сыхласа çӳреме хушрăм. Хĕрне хăйне чĕнесшĕнччĕ,— вырăн çинчен тăман, терĕç.

— Тĕрлĕ-мĕрлĕ ирсĕр ĕç тăвас пулсан, сан пеккине кун çутинче те хунарпа шырамалла çав. Тулькка, тархасшăн, мана ан хутăштар çав ĕçсене. Çын хыççăн сыхласа çӳрени çин-чен илтсенех ăш пăтранать.

— Ăна-кăна чухлатпăр. Сансăрах туса пы-рăпăр ку ĕçе. Кайран хăвах мана тав тăвăн. Тăшмана çĕнес тесен, вăл кашни самантра мĕн тунине пĕлес пулать. Хумова та куçран вĕçертмĕп.

— Куракова пирки мĕн хыпар пур?

— Тул çутăлнă-çутăлман Шупашкара тухса кайрĕç. Шофер мĕн тумаллине пĕлет. Хумов кунтан тухса каймасăр та киле таврăнас çук.

— Лаша кӳлме кама ятăн?

— Ухвандеев кайрĕ. Каялла килнĕ чух кор-респондентне лартса тухмалла. Кураковсен жалобинех тĕрĕслеме килнĕ пулсан, протокол-сене курас тейĕ. Эпĕ йĕркелесе хутăм.

— Вĕсене колхозран кăларнă пухура халăх сахал пулнăччĕ. Устав тăрăх «кворум» тени çитес çук. Çав пăшăрхантарать-ха.

— Вăл хамăртан килет. Протоколсем кунтах вĕт, кирлĕ пек юсама кирек хăçан та кая пулмĕ.

Çак вăхăтра правлени çурчĕ умне хура лаша кӳлнĕ çатан урапа чарăнчĕ те ун çинчен Ухвандеевпа Хумов анчĕç. Корреспондент тӳрех протоколсене пăхасшăн пуласран шикленнипе, Ятманов вĕсем пӳрте кĕрессе кĕтсе тăмарĕ, хăй урама тухма васкарĕ. «Мышкина ирĕк парас, хăтланса пăхтăр, тен, усăллă пулĕ», йĕрĕнсе шухăшларĕ вăл.

— Салам, Борис Петрович!— алă пачĕ председателе Ухвандеев.

Анчах лешĕ малтан Хумовпа ал тытрĕ, унтан тин комсомол секретарьне саламларĕ.

— Атом ĕмĕрĕнче лашапа çӳрени питех мар та, каçарăр ĕнтĕ, машинă ерçӳллĕ пулмарĕ: юнашар ялта пĕр хĕрарăм хытă чирлесе ӳкнĕ. Çавна Шупашкара ăсатма ятăм,— айăпа кĕнĕ çын сассипе каларĕ колхоз пуçлăхĕ.

— Машинă таврашĕпе ларса çӳремен мар, çӳренĕ. Тăрантас çине вара паян пĕрремĕш хут ларса курма тӳр килчĕ. Асаттесем вăрăм çула мĕнле тухса çӳренине те пĕлмелле-çке, пурнан пурнăçра вăл та кирлĕ пулĕ,— лăплантарчĕ хăна.

Ухвандеев ларчăк çине тилхепе тытса ларчĕ, Хум Микулайĕпе Ятманов тăрантас тĕпне вырнаçрĕç.

— Кайрăмăр-и? Но-о! Юрттар майĕпен!

Çăмарта пек мăнтăр лаша тӳрех вырăнтан тапса сикрĕ те урам тăрăх уй еннелле çиçкĕнчĕ.

«Çутă маяк» уйĕсене курса çӳресси çапла пуçланчĕ. Çатан урапа ыраш пусси витĕр тухрĕ, тыр выраканссм патĕнче кăштах чарăнса тăчĕ, çуртри пусси тавра чупса çаврăнчĕ. Ним калама та çук, тырă ăнса пулнă. Çынсем те пикенсех ĕçлеççĕ. Хумов хăшĕсемпе калаçкаласа та пăхрĕ.

— Халĕ ĕнтĕ кукурузă уйне курасси çеç юлчĕ пулĕ,— терĕ хула çынни, хуратулпа пăрça анисене пăхса тухнă хыççăн.

— Вăл культурăна пирĕн колхозра виçĕ бригадăра акнă. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш бригадăра пулас килсен, курса савăнмалли чылай тупăнĕ, виççĕмĕш бригадă çыннисем пирĕн колхозра иртнĕ хĕлтенпе çеç ĕçленĕ пирки мухтава тивĕçли унта сахалтарах. Хăш бригадă уйне каяс тетĕр?— ыйтрĕ Ятманов.

— Манăн виççĕмĕш бригадăра кукурузă епле ӳстернине курас килет. Вăл Уйпуç ялĕнчеччĕ пулас? Унти кукурузă ăстисем çинчен пирĕн хаçатра пĕлтĕр репортаж кăларнăранпа мĕнле улшăнусем пулни интереслентерет. Хаçатра ырлани çынсене тата лайăххах ĕçлеме хавхалантараканччĕ. Сирĕн колхозра та çаплах пулĕ...

«Сапăрлă çын, ним те калаймăн,— вĕчĕрхенчĕ Ятманов.— Анчах сапăр сăпса сарăмсăр сăхать, теççĕ. Ку та мана йĕплесе илес темест-ши? Тăхта пăртакçă, санран çивĕч шăллисем те мана çыртма пăхкаланă та — усси пулман».

— Хамăршăн мар, сирĕншĕн уя тухрăмăр паян,— терĕ вăл.— Писателĕн пархатарлă ĕçĕнче юрăхлă пулмалли питех тупăнас çуккине пĕле тăркачах кайса килĕпĕр эппин виççĕмĕш бригадăна.

Çатан урапа виçĕ çухрăм ытларах кăлтăртаттарса чупнă хыççăн пĕр симĕс уй патне çитсе чарăнчĕ. Тĕрĕссипе каласан, уйăн пĕр хĕрри çеç çĕр утăма яхăн симĕс, ытти лаптăкĕ таçта çитичченех сап-сарăн курăнса выртать. Ятмановпа Ухвандеев кунта çуркуннеренпе те килсе курманччĕ. Халĕ кукурузă уйĕ виç пайран икĕ пайĕ анра çарăк айне пулнине курсан, вăтаннипе, ирĕксĕрех куçĕсене çĕрелле усрĕç.

Çул хĕрринчех çум çумлама пынă хĕрарăмсем шăкăл-шăкăл калаçса ларатчĕç, çатан урапа çине ларса килнĕ çынсене курсан, вĕсем пурте ура çине тăчĕç.

— Вăй патăр!— саламларĕ Хумов.

— Тавтапуç! Ĕçех тумастпăр та, ырă сăмах калани те паха.

— Акă, хуларан килнĕ юлташ сирĕн ĕçĕрсемпе паллашасшăн. Кăтартăр ĕнтĕ, мĕнпе мухтанма пултаратăр?— хăй пăлханнине пытарасшăн кулкаласа ыйтрĕ Ятманов.

— Унăн куçĕсем çамрăк, эпир кăтартмасăрах курать пулĕ. Анра çарăк ӳстернипе кăна мухтанма пултаратпăр. Пăхăр-ха, епле илемлĕ вăл, сарă пурçăн çитти пек йăлтăртатса выртать. Кукурузă уйĕ мар, чечек пахчи темелле,— куç умĕнчех мăшкăлласа илчĕ хĕрарăмсенчен пĕри.

— Эсир редакцинчен килнĕ теççĕ, чăнах-и?— ыйтрĕ тепри, хĕрлĕ тутăрне майралла туртса çыхни.

— Ку тĕрĕс... Ну, мĕнле пурăнатăр? Еçĕрсем еплерех?

— Лайăх пурăнатпăр. Колхозра мар, кану çуртĕнчи пекех. Авă, кĕçех кăнтăрла çитет, эпир тин çеç уя тухрăмăр-ха. Кăнтăрла апатчен ĕçленĕ ят тăватпăр та каллех киле таврăнатпăр. Тавтапуç Борис Петровича пире ырă пуçлăх тупса панăшăн. Ĕмĕр-ĕмĕр асăнса пурăнăпăр,— уççăнах йĕплесе илчĕ хĕрлĕ тутăрли.

— Тăхта-ха, Тарук кин, ĕçе сана та ытти çынсем пекех иртерех тухма кам чăрмантарать? Ачупчу çукчĕ пулас, выльăх-чĕрлĕхĕ те

ытлашши нумаййине асăрхаман,— тарăхса кайрĕ председатель.

— Кам пултăр, звеньевой ĕнтĕ! Ĕнер киле саланнă чух ирхине лапка патне пуçтарăнма хушрĕ. Кĕтӳ хăваласанах чупса пытăмăр. Пĕр сехет кĕтетпĕр, икĕ сехет... хăй çук та çук. Чăтса тăраймарăмăр, эртелпех килне кайса пăхрăмăр. Вăл пырса чĕнессе кĕтмен-мĕн, Ачча пасарне тухса вĕçтернĕ. Кашни кунах çавăн майлă хăтланать: каç пире ĕçе тухма хушать те хăй тепĕр кунне куçран çухалать. Мĕн тăвас, пуçлăх пур çинчех пуçлăхсăр ĕçлеме чун туртмасть, кăштах чакаланатпăр та килсене саланатпăр. Камăн тăрăшас килĕ? Юлашки виçĕ эрнере хамăр миçе ĕç кунĕ тунине те пĕлместпĕр вĕт! Тен, уя тухни харама çеç каять пулĕ. Çавăнпа аласем лăштăрах усăнаççĕ. Малашне те çаплах пулсан, çак уя кĕркуннеччен те çумласа пĕтерес çук.

Хĕрарăмсем шавлама пуçларĕç. Пĕри, малтанах Хумов çине куç харши айĕн пăхса кулса тăраканĕ, ун патне пычĕ те калаçма пуçларĕ.— Хаçат çыракан юлташ,— терĕ вăл, кулма чарăнмасăр,— эсир нумай курса çӳренĕ ĕнтĕ, пирĕн звенори пек йĕрке пурри çинчен урăх колхозсенче илтнĕ-и?

— Кăш-ш! Кăлăклама тытăнтăр ĕнтĕ. Корреспондент юлташ сирĕнпе йĕркеллĕн калаçасшăнччĕ, эсир пур, кирлĕ мара пакăлтатса çăвар тутине пĕтеретĕр,— тарăхнине систерес мар тесе шӳт тăванçи пулчĕ Ятманов.

— Хытă тĕлĕнтертĕр мана, пытарассăм çук,— терĕ Хумов — Сирĕн звенона Куракова Тамара ятлă хĕр ертсе пыратчĕ пулас-ха, эпир ун портретне хаçатра та кăларнăччĕ. Ырланă хыççăн çапла хăтланасса кĕтменччĕ унран. Калăр-ха, кам пăснă ăна?

Хĕрарăмсем пĕр-пĕрин çине тăн-тан пăхса илчĕç.

— Сире пирĕн звенона Куракова ертсе пырать тесе кам каларĕ?— тĕлĕнчĕç вĕсем.

Хумов папкă ăшĕнчен асамлă хаçата кăларса кăтартрĕ. «Уйпуç ялĕнчи ĕçченсем çĕнĕ культурăна питĕ тухăçлă туса илме вĕреннĕ. Кăçал кашни гектартан сакăр çĕршер центнер симĕс кукурузă вырса илчĕç. Кукурузă ăстисен звенине Куракова Тамара комсомолкă ертсе пырать»,— саспах вуларĕ вăл портрет айне çырнине.

— Тĕрĕс мар-им?

— Пĕлтĕр тĕрĕс пулнă та... кăçал пĕтĕмпех урăхла. Тамара халĕ комсомолкă та, звеньевой та мар. Ăна унтан та, кунтан та кăларчĕç.

— Э-эх, мĕн каламалли, Тамара хамăрпа пĕрле ĕçленĕ пулсан, кăçал пин центнертан кая пухас çукчĕ. Халĕ тĕнче кулли пулса тăтăмăр ĕнтĕ. Хаçатра эсир кунта мĕн курнине çырсан, пĕтĕм республикипе пирĕн çине пӳрнепе тĕллесе кăтартакан пулĕç. Намăса ăçта чикес?— чунтан кӳренсе каларĕ Тарук тени.

— Авă, Тамарăна звеньевойран кăлариччен çумласа сайралатнă кукурузă вăрман пек кашласа ларать,— уй хĕрринелле кăтартрĕ кулаканни.

— Анра çарăк пуснишĕн Ксения Мышкина айăплă. Звеньевой ячĕ пур, ĕçлекенĕ çук. Пĕтермеллипех пĕтерчĕ вăл пире кăçал. Хамăр та тыр-пул илеймĕпĕр, фермăри ĕнесем те выçса хăрăнĕç,— хушса хучĕ тепĕр хĕрарăм.

— Каçарăр, эпĕ ниепле те ăнланаймарăм: Куракова лайăх ĕçленĕ пулсан, ăна мĕншĕн вырăнтан кăлартăр?— ыйту пачĕ журналист.

— Ăна эпир кăларман, Ятмановпа Ухвандеев юлташсенчен ыйтса пăхăр. Вĕсем пĕлме кирлĕ,— терĕ кулакан хĕрарăм.

— Мĕн пĕлмеш пулса тăмалли пур, пурте лайăх пĕлетпĕр. Бухгалтер арăмне валли ăшă вырăн кирлĕ пулнă, çавăнпа пирĕн Тамарăн ĕçрен тухмалла пулчĕ,—терĕ малтанах хăраса тăман Тарук.

Ятмановăн хĕрарăмсене çав тери вăрçса тăкас килчĕ. Ют çын умĕнче колхозницăсем парăнас çуккине сисни çеç чарса тăчĕ.

— Ĕçсĕр аптранипе пустуй сӳпĕлтетсе тăраççĕ, итлесе хăлха шанчĕ. Юрĕ, звеньевой пирки правленире сӳтсе явăпăр та кирлĕ мерăсем йышăнăпăр. Эсир ăна кĕтсе ан тăрăр, хăвăр пĕлнĕ пек тăрăшса ĕçлĕр!— терĕ те Ятманов урапа çине ларчĕ.

— Пире Тамарăна тавăрса парăр, вара тин ĕç ăнма пултарать!— кăшкăрчĕ колхозницăсенчен пĕри.

— Сывă пулăр!— терĕ Хумов та урапа патнелле утса.

— Чипер кайăр!

— Кунта мĕн курнине пĕтĕмпех хаçат çине çырăр!

— Кĕтсех тăратпăр!— илтĕнчĕç сасăсем... Тăрса йăлăхнă лаша тилхепине тытсанах уçăмлă чупма пуçларĕ. Урапа çинче ларса пыракан çынсем ним те чĕнмеççĕ. Виççĕшĕ те шухăша путнă, анчах кашнине урăх шухăш хумхантарать.

«Уйпуç ялĕнчи арăмсем питĕ харсăр, ют çын умĕнче те пуç тайса тăмаççĕ. Тăна кĕртмелле-ха вĕсене. Мышкин арăмĕ ĕçе юрăхсăррине сисрĕм, çитес кунсенчех звеньевойне улăштармалла. Эх, маларах килсе курмалла пулнă çак уя! Хумов хăй мĕн курни-илтнине хаçатра çырса кăларсан, лекетех мана. Райкома чĕнессе кĕтсех тăр»,— шухăшларĕ Ятманов.

«Тип мунча кĕртрĕç председателе,— аса илет Ухвандеев.— Хама та кăштах лекрĕ. Тамарăна комсомолтан кăларма васкамарăмăр-ши эпир? Пырать-ха, пуху протоколне райкомола яма ĕлкĕреймен. Шарикова пĕл-

сен, бюрора мана хама пĕçертсе илме пултарать. Тен, каплипех иртсе кайĕ, кĕтсе пăхас».

«Тамара пирки эпĕ йăнăшманни халĕ тата уçăмлăрах палăрчĕ,— терĕ ăшра Хум Микулайĕ.— Ку ĕнтĕ савăнтарать. Пĕрле ĕçленĕ çынсем ăна халĕ те хисеплеççĕ, сăлтавсăр нуша курмалла пулнăшăн хĕрхенеççĕ. Хамăн мĕн тумалли паллă. Кирлĕ фактсене пуçтарса пĕтеретĕп те, ăна кунта хўтлеме май килмесен, статья çырма тытăнатăп».

— Кураковсене колхозран хăçан кăларнă?

— Иртнĕ уйăхра кăлармалла пулчĕ,— хуравларĕ Ятманов.

— Мĕн сăлтавпа?

— Хĕрĕ ĕçе тухма пăрахрĕ. Ялта ун пеккисем татах та пур. Анкартипе усă курас тесе, колхозра ват супнă карчăксемпе стариксене хăвараççĕ те, хăйсем чукун çул çине ĕçлеме каяççĕ. Кăçал хамăр колхоза çавăн йышши харам пырсенчен тасатас терĕмĕр. Ĕçлес килмест пулсан, кил вырăнĕпе те усă ан курччăр. Колхоз вăл богадельнă мар, йўтенĕ карчăксемпе вĕтĕр-шакăрсем çеç юлсан, пурнăç тăвасси пĕтрĕ вара. Çавăнпа, Тамара ĕçе тухма пăрахсан, ăна хăйне те, ашшĕ-амăшне те колхозран кăлармалла турĕç,— тăнлантарчĕ председатель.

— Кураковĕ хăй инвалид темеççĕ-и?

— «Ăна та пĕлет,— шухăшларĕ Ятманов.— Çавсем жалобă панипех килнĕ ĕнтĕ. Питĕ чееçке, малтан пурне те хăй куçĕпе курса çўрерĕ, унтан тин мĕн ĕçпе килнине систерме пуçларĕ».

— Уксахласа çўрет. Халĕ госпитальте выртать-ха, нисĕпсĕр ĕçнĕрен шур амак тытнипе аптраса ўкрĕ. Ĕçкĕ пуçа çиет, теççĕ çав.

— Арăмĕ те чирлĕ марччĕ-и?

— Пўре чуллипе аптранăччĕ, паян Шупашкар больницине операци тума ăсатрăмăр.

— Апла килĕнче хĕрĕ пĕчченех тăрса юлнă-и?

— Пĕччен мар. Курак Иванĕ хăй ури çуккине пăхса тăман, вăрçă хыççăн арăмне тата виçĕ хĕр çуратгарнă,— калаçăва хутшăнчĕ Ухвандеев.

«Санран ыйтмаççĕ!»— тесшĕнччĕ Ятманов, анчах вăхăтра чарăнса тăчĕ.

— Ачаллă пулма ăс кирлĕ мар, ача ўстерме пĕлме ăс кирлĕ, теççĕ. Кураков çинченех калана пулĕ ăна. Пўрт тулли ачапча, хăй вырăнсăр кутăнлашса çўрет. Çавăнпа колхозран та тухса ўкрĕ.

— Кăçарăр, эпĕ ăнлансах çитеймерĕм. Ял хуçалăх артелĕн уставĕнче çитĕнсе çитнĕ ачисем ĕçе тухма пăрахсан, вĕсен ашшĕ-амăшне колхозран кăлармалла тесе çырманччĕ пек туйăнать? Çитменне, Тамара ашшĕ—инвалид, амăшĕ — йывăр чирпе асапланать, тетĕр. Унашкал çынсене ĕçрен кăларма закон та чарать. Çапла мар-и?

— Эпĕ юрист мар, колхоз председателĕ, Закон мĕн тума чарни-чарманни çинчен шухăшласа тăма вăхăт та, кăмăл та çук. Манран ăна мар, тыр-пул, сĕт-çу, аш-какай ыйтаççĕ. Эпĕ вара, вăй çитнĕ таран, вĕсене парса тăратăп. Райĕçтăвкомпа райком ку тарана çитсе те манран урăххине ыйтса пăхман, хам тунă ĕçсене сивленине те систермерĕç. Малашне те çаплах пулассăн туйăнать. Ман шутпа, кашни çыннăн чăн малтан патшалăх умĕнчи парăма татма тăрăшмалла. Хаçатсенче эсир ун çинчен пĕрмаях çыратăр марччĕ-и?— тĕртсе илчĕ Борис Петрович.

— Пухăвĕ мĕнле иртрĕ? Кураковсене колхозран кăларас мар текенсем тупăнмарĕç-и?

— Пухăвĕ чип-чиперех иртрĕ. Çăвар карма юратакансем кашни пухурах пулкалаççĕ, ун чух та кутăнлашакансем тупăннăччĕ, анчах вĕсен сасси халăх сасси айне пулчĕ. Иккĕленетĕр пулсан, пуху протоколне вуласа пăхма пултаратăр.

— Тавтапуç! Хамах ыйтас тенĕччĕ ун çинчен.

— Эсир ăна Ухвандеевпа правление кĕрсе бухгалтертан ыйтăр. Вăл тупса парĕ. Манăн хамăн тыр тасатнă çĕре кĕрсе тухас пулать-ха. Тепĕр сехетрен эпĕ те правление пыратăп.

Çамрăксем урапа çинчен анса юлчĕç, Ятманов тилхепине ярса тытрĕ те лашине сиккипех чуптарчĕ.

## XV

ЯТМАНОВ РЕДАКЦИ сотрудникĕпе уйхир курса çўренĕ хыççăн чун канăçлăхне пуçĕпех çухатрĕ. Ăш вăркать. Тата çĕнĕрен çĕнĕ инкек-синкек тухассăн туйăнать. Ĕлĕкрех кам та пулсан хăйне тапăнма хатĕрленнине сиссен, вăл пĕтĕм вăйя пухса сыхланаканччĕ, кĕрешўре çиеле тухма тăрăшаканччĕ. Халĕ пĕтĕмпех улшăнчĕ. Темле сўрĕклĕх, мăранлăх тыткăнне лекрĕ. Пуринчен ытла тĕрĕслĕх хăй енче марри ăна хытă пăшăрхантарчĕ. Халиччен нихçан та çынна улталаманччĕ, суя сăмах каламанччĕ. Юлашки уйăхра улталама та, суйма та лекрĕ. Ирĕксĕрех шухăша кайăн.

«Мĕн çитмен-ха мана?— темиçе хут та ыйтнă пулĕ Борис Петрович.— Арăмпа иксĕмĕр ватăлсах пыратпăр, ачапча çук. Хамăра пурăнмалăх укçа-тенкĕ те, пурлăх та çителĕклĕ. Хисеп-чапне те курнă, орден-медаль те кăкăр туллиех. Хама хам никам умĕнче те парăмлă пек туймастăп: ĕмĕрĕмри аллă пилĕк çулран вăтăр пилĕкĕшне тăван çĕршывшăн, халăхшăн пурăнса ирттертĕм. Ĕçрен тухма вăхăт мар-ши? Канас пĕреххут. Лăпланас та ним хуйхăсăр пурăнас».

Çак шухăшсенчен тарса пытанас тенĕ пек хăвăрт утса пырса кĕчĕ Ятманов правлени çуртне. Тулти пӳлĕмре бухгалтер хăйне ӳрĕк-сӳрĕк ĕçлет тесе айăплассинчен хăранă пек шут шăрçисене калама çук хăвăрт шачлаттарса ларать. Тепĕр сĕтел хушшинче Ухвандеевпа Хумов пуху протоколĕсене вуланă май шăппăн калаçаççĕ.

— Пирĕн ялти пек пысăк клуб ку таврара урăх çук. Ĕçлессе те лайăх ĕçлет. Кино, лекцисем, пултарулăх каçĕсем, концертсем — кашни эрнерех темиçешер пулса иртеççĕ. Паян та кино кăтартатпăр. Пыратăр-и?— ыйтать Ухвандеев.

— Пыма пулать, ма пырас мар?— килĕшет Хумов.— Зала миçе çын шăнăçать?

— Лармалли вырăнсем виç çĕр аллă, тата икĕ енĕпе юлнă пушă вырăнсене тăрса тухсан, мĕн пурĕ тăват çĕр çын та шăнăçма пултарать.

— Кураковсене колхозран кăларнă пуху çав залра пулса иртнĕ-и?

— Çавăнта пулмасăр, ăçта пулĕ? Çĕнĕ клуб лартнăранпа пур пухусене те унта ирттеретпĕр.

Ятманов вĕсем патне пырса тăчĕ.

— Борис Петрович, калăр-ха, клуба тăват çĕр çын кăна шăнăçать пулсан, колхозниксен пухăвĕнче мĕнле майпа пин те ик çĕр çирĕм çын пулнă? Сакăр çĕр çынни урамра пăхса тăман пулĕ-çке?— ыйтрĕ Хумов, протокол çине кăтартса.

«Пухура 1220 çын пулнă», тесе çырнă унта. Ăна курсан, Ятманов хĕремесленсех кайрĕ. «Тăмана,— чунтан тарăхса пăхрĕ вăл Мышкин çине,— намăс кăтартрĕ ку!

— Çыруçи йăнăшнă пулмалла,— куçĕсене çĕклемесĕр каларĕ Ятманов,— пухура халăх ун чул пулманччĕ.

— Тĕрĕссипе миçе çын пулнăччĕ?

— Астумастăп. Ухвандеев, эсĕ пĕлместĕн-и?

— Протоколне Кошкин çырнă. Вăл урам урлă çеç пурăнать. Эпĕ ăна халех чĕнсе килетĕп. Хамăр клуба мĕнле майпа халăха виçĕ хут ытларах шăнăçтарнине каласа кăтарттăр! Эпĕ ăна, комсомолеца, суйма вĕрентем!

Çапла каласа, Ухвандеев пӳртрен чупса тухрĕ те, вунă минут та иртмерĕ пулĕ, кăтра пуçлă курпунтарах каччăпа пĕрле каялла таврăнчĕ.

— Пар-ха протоколне,— терĕ каччă, сĕтел патнелле утса,— кам манран ыйтмасăр тӳрлетнине хам куçпа пăхса курам. Лайăх астăватăп, пухура 220 çын çеç пулнăччĕ. Борис Петрович, эпĕ çав çынсен списокне хăвăра ун чухнех çырса панăччĕ. Акă протокол çине хам алăпа «220» тесе çырнă. Анчах ман хыççăн тахăшĕ ун умне единицă лартнă та «1220» пулса тăнă. Пăхăр-ха, эп çырнă авторучкă чернилĕ шупкарах, единицă лартаканнин йăмăхрах.

Пурте протокол патне пĕшкĕнчĕç. Комсомолец калани тĕрĕс пулчĕ. Ăна никам та хирĕçлемерĕ.

— Ермолай Ефимч, мĕне пĕлтерет ку?— шăппăн ыйтрĕ председатель.

— Правленире кунĕпех халăх вĕркĕшет. Единицине тахăшĕ кула-кула çырса хунă пулмалла,— тӳрре тухма пăхрĕ бухгалтер.

— Апла пухура мĕн пурĕ те ик çĕр çирĕм çын çеç пулнă? Пĕтĕм колхозниксен шутне илсен, сакăр пайран пĕр пайĕ кăна. Колхоза кĕртес е кăларас ыйтăва татса пама çителĕклĕ-и вăл? Эсир мĕнле шухăшлатăр, Ятманов юлташ?— вырханса ыйтрĕ Хум Микулайĕ.

Ятманова хăй айăплă пулнине туйни тата ытларах шăртлантарчĕ. Унăн çак вăхăтра хăйпе пĕр пӳлĕмре тăракан çынсемпе тӳпелешес килекен пулчĕ. Ăшри пĕтĕм вăйне пухса çеç хăйне хăй чарса тăчĕ.

— Акă мĕн, Хумов юлташ,— сиввĕн каларĕ вăл,— эсир следователь мар, эпĕ те айăпланакан шутне кĕмен. Хамăр мĕн шутланине колхозниксен пухăвĕнче каланă, урăхла шухăшлама пирĕн вăхăт та, кăмăл та çук. Çавăнпа ку калаçăва пĕтерĕпĕр. Урăх ыйту çук пулсан, эпĕ ĕçе тытăнам.

— Ăс панăшăн тавтапуç! Мĕн пĕлмеллисене пурне те пĕлсе çитнĕ пек туйăнать. Урăх ыйтса чăрмантарас мар пулĕ сире. Сывă пулăр!

— Чипер кайăр!

## XVI

ТАМАРА ÇАВ КУН ТА, тепĕр кунне те Шупашкартан таврăнмарĕ. Хумов аптраса ӳкрĕ. Командировкă срокĕ тухать, Ятмановпа урлă калаçнă хыççăн колхозра та урăх пурăнма аван мар. Тунтикун юлашки хут вăл Кураковсен тайлăк пӳрчĕ патне пырса пăхрĕ. Çенĕк алăкĕ çинче çакăнса тăракан çăра Тамара таврăнманнине ĕнерхи пекех аван пĕлтерчĕ. «Тек кĕтме çук. Тумалли ĕçсене туса пĕтерес те хулана таврăнас», терĕ çамрăк писатель. Вара мотороллерĕ çине ларчĕ те района тухса кайрĕ.

Комсомол райкомĕнче ăна Шарикова питĕ сăпайлă кĕтсе илчĕ, Хумова мĕн интереслентернине тĕплĕн каласа пачĕ.

— Тамара кунта тепĕр юлташĕпе чăнах та килсе кайнăччĕ. Эпĕ вĕсене райкомола заявлени çырса пама сĕнтĕм. Кайран хăйсем те таçта çухалчĕç, Ухвандеев та çак икĕ хĕре комсомолтан кăларнине кăтартакан хутсене ярса памарĕ. Урăх ун çинчен никам та асăнманран, эпĕ те маннă. Тĕрĕслесе пăхăпăр. Мĕн пулса иртнĕ «Çутă маяк» колхозри комсомол

организацинче? Айӑпсӑр ҫынсене хур тума памӑпӑр, шантарсах калатӑп,— терӗ Юлашкинчен Наташа.

Райӗҫтӑвком председателӗ те Хум Микулайне тимлесех итлесе ларчӗ. Протокола «юсани» ҫинчен каласан, тӳссе тӑраймарӗ, симӗс пустав сарнӑ сӗтеле графин чанкӑртатиччене хытӑ чышрӗ. Унтан телефон трубкине ярса тытрӗ те «Ҫутӑ маяк» правленипе ҫыхӑнтарма ыйтрӗ.

— Ятманов юлташ,— ҫиллеслӗн чӗнчӗ вӑл.— Каласа пар-ха, колхозниксен пухӑвӗнче ҫырнӑ протокола кам пӑснӑ?..

Нумай калаҫрӗҫ вӗсем. Пӗрре ятлаҫса каяҫҫӗ, тепре чи ҫывӑх туссем пек пуплеҫҫӗ. Юлашкинчен темиҫе минут хушши Ятманов ҫеҫ каларӗ, райӗҫтӑвком председателӗ «ҫапла» текелесе кӑна ларчӗ.

— Кураков ҫемйине колхозран кӑларни пӗтӗмпех тӗрӗс теме ҫук, унпа эпӗ те килӗшетӗп, Ятманов хӑй те хирӗҫлемест. Паллах, ним ӗҫлемен ҫын ҫеҫ нихҫан та йӑнӑшмасть. Колхоз председателӗпе правлени членӗсен ӗҫ-хӗл мӑй таранах, ҫавӑнпа йӑнӑшасса та вӗсем нумайрах йӑнӑшаҫҫӗ. «Ҫутӑ маяк» районра чи пысӑк та чи пуян колхоз. Ятмановӑн пысӑк коллектива ертсе пымалла. Ку — питӗ кӑткӑс. Колхозниксем вара пӗр пек мар: пӗрисем халӑхшӑн, теприсем хӑйсемшӗн ытларах тӑрӑшаҫҫӗ. Мӗн тӑвас? Ятлама пулать, выговор та пама пултаратпӑр. Ҫапах та вунӑ ҫул ытла тӗрӗс те пултаруллӑ ӗҫлесе пурӑннӑ ҫынна пӗрре такӑннӑшӑнах пӗтерсе хума пире никам та ирӗк паман. Кураковсене колхозран кӑларнине пӑрахӑҫлас тени — Ятмановпа колхозри активистсен авторитетне пӗтерес тенипе пӗрех, эпир апла хӑтланма пултараймастпӑр. Шухӑшласа пӑхӑр-ха, йӗркерен тухнӑ алкоголике хӳтӗлесе чи лайӑх та пултаруллӑ председательсӗр юлма кам килӗшӗ? Ятманов ыйтӑва ҫапла лартрӗ: «Е эпӗ, е Кураков», терӗ. Вӑл сӑмахпа перкелешекен ҫын мар, ӑна питӗ аван пӗлетпӗр. Колхозниксем йышӑннине эпир ӗҫтӑвком ларӑвӗнче ҫирӗплетнӗ. Пурӑнса пӑхар-ха, Кураковӗ больницӑран сывалса таврӑнсан, ӑна колхоза кӗме тепӗр хут заявлени ҫыртарма та пулать. Ун чух Ятманова та йӑвашланма сӗнӗпӗр. Редактора ҫакӑн ҫинчен йӗркипе каласа пама ыйтатӑп...

Айӑпсӑр айӑпланнӑ ҫынсен хутне ҫийӗнчех кӗме май килменни ырӑ кӑмӑллӑ Хумова хытӑ пӑшӑрхантарчӗ. Ҫавӑнпа вӑл райӗҫтӑвкомран хуйхӑ пуснӑ ҫын пек пуҫне усса тухрӗ. «Хаҫата ҫырмасӑрах киревсӗр ӗҫе пӗтерме пулассине шаннӑччӗ, ним те тухмарӗ. Каплипе Тамара куҫне курӑнма та аван мар. Уйпуҫ ялне кӗрсе тухмасӑрах киле таврӑнас мар-ши? Ҫук, ӑна манран ҫӗр хут йывӑртарах пулӗ. Ашӑ сӑмахпа та пулин чунне лӑплантармалла. Унсӑрӑн хама хам ҫын вырӑнне хуми пулӑп. Каҫа хирӗҫ тепре кӗрсе тухас та, вӑл килте ҫук пулсан, редакцине таврӑнса, ҫырма ларас. Тамара тӗлӗнмелле лайӑх хӗр, ӑна та хӳтлемесен, кама хӳтлемелле? Статья ҫырнипе те лӑплланас марччӗ. Тамара пек таса чунлӑ хӗр пирӗн литературӑра героиньӑ пулма тивӗҫлӗ».

Ҫак шухӑшпа вӑл мотороллерӗ патнелле пычӗ те сасартӑк тетте курнӑ ача пек савӑнса кайрӗ: унӑн кӑвак «лашине» Тамара хӑй ачашласа тӑрать мӗн.

— Эсӗ-и, тусӑм?— хӗр аллине тытса кӑшкӑрса ячӗ каччӑ.— Сана виҫӗ кун ларма-тӑма пӗлмесӗр кӗтрӗм. Аҫта ҫухалса пурӑнтӑн? Ну, сывӑ-и?

Хӗр те калама ҫук савӑнчӗ. Кӑмӑлӗ тулнипе вӑл кӑшт ҫеҫ йӗрсе ямарӗ.

— Ах, Хумов юлташ! Санпа тепре курса калаҫасса шанманччӗ. Эсӗ хамӑр ялтан тухса кайнине пӗлсен, аллӑмсем шалтӑрах усӑнчӗҫ. Ытахальтен ҫеҫ кунта килсе пӑхам, терӗм. Ҫул майлӑ грузовикпе килтӗм те, урамра сан машину тӑнине курса, тем пекех савӑнса ӳкрӗм. Эсӗ, ак, мана виҫӗ кун кӗтрӗм, тетӗн... Маншӑн ҫав виҫӗ талӑк ӗмӗр тӑршшӗ пекех туйӑнчӗ. Аннене больницӑна вырнаҫтарнӑ кунах киле таврӑнасшӑнччӗ. Фельдшер, эмелсем илме ӗлкӗреймерӗм тесе, ҫӗр выртма сӗнчӗ. Паллакан ҫынсем патне илсе кӗчӗ те, хӑйсем, шоферӗпе иккӗшӗ, ҫӗрӗпех эрех ӗҫрӗҫ. Тепӗр кунне вунӑ хут та вӑратса пӑхрӑм. Мухмӑрпа аптранӑскерсем нимпе те тӑмарӗҫ. Иккӗмӗш кунне те, вырсарникун базӑ ӗҫлемест тесе, таврӑнма килӗшмерӗҫ. Хам ҫумра пӗр пус та укҫа пулман пирки автобуспа ларса каяймарӑм. Ирӗксӗрех тунтикунччен юлмалла пулчӗ. Паян ирхине пит-куҫсене ҫусанах машинӑ ҫине ларчӗҫ те, базӑна кӗрсе тухмасӑрах, ялалла вӗҫтерчӗҫ. Тарӑхнипе чӑтса тӑраймарӑм, киле ҫитсенех вӗсем хулара вӑхӑт мӗнле ирттернине каласа паратӑп, терӗм. Вара фельдшерпа шофер ахӑлтатса ячӗҫ. «Айван-ҫке эсӗ,— терӗ фельдшер.— Ятманов хушмасӑр колхозра улӑм пӗрчи те тепӗр вырӑна куҫса выртмасть. Вӑл пире хулара сӑлтав тупса виҫӗ кун пурӑнма хушман пулсан, эпир ун машинне епле тытса тӑнӑ пулӑттӑмӑр?..» Вӑт, пыр та калаҫ унашкал ҫынсемпе!

— Колхоз председателӗ эпӗ санпа курса калаҫассинчен шикленнӗ. Ҫавӑнпа сана, сӑлтав тупса, ялтан вӑхӑтлӑха кӑларса яма шут тытнӑ. Иксӗмӗр унччен курса калаҫнине пӗлнӗ пулсан, вӑл аннӳне больницӑна леҫме ҫӑмӑл машинӑ мар, хӑлтӑр-халтӑр урапа та парас ҫукчӗ пулӗ. Эх, чунсӑрсем, ыр ӗҫе те хӑйсене кирлӗ пек ҫеҫ тӑваҫҫӗ!— тарӑхса ал сулчӗ Хумов.

— Турра шӗкӗр!— ҫӑмӑллӑн сывласа ячӗ

хĕр.— Тинех эсĕ те вăл мĕнле çын иккенне пĕлтĕн. Хам каланине ĕненмерĕн пулĕ тесе хытă куляннăччĕ.

— Сиссе çитрĕм, тусăм,— Ятмановне те, Мышкинне те, Ухвандеевне те витĕрех курса тăратăп. Анчах усалсăр ырлăх пулмасть, теççĕ. Колхоз председателĕ санран хăтăлас темен пулсан, кам пĕлет, тен, эсĕ те аннўне больницăна часах леçейместĕнччĕ пулĕ. Тухтăрсем мĕн терĕç?

— Малтанхи кунах рентгенпа çутатса пăхрĕç. Пўре варринче арпус вăрри пысăкăш чул пур, теççĕ. Операци тунă хыççăн анне сываласса шантараççĕ.

— Хирург каланине ĕненме пулать. Шупашкарта вĕсем пек ăста тухтăрсем урăх çук та пулĕ...

Микулай хĕр çине ăшшăн пăхрĕ. Тамара ăна виçĕ хут çеç курнă çын пек мар, тахçантанпа пĕрле пуранна сывăх та çав тери кăмăллă тус пек туйăнчĕ. Вара ăна мĕнпе те пулин йăпатас, савăнтарас килчĕ.

— Хумов юлташ, мана мĕн пăшăрхантарнине пĕлетĕн ĕнтĕ. Эсĕ Ятмановсене витĕр курса тăратăп, терĕн. Кала-ха, эпир нуша курнăшăн кам айăплине пĕлетĕн-и? Хĕрхенсе ан тăр, тўррине çеç кала. Чăнни — хĕрхў, суйи — пылак, теççĕ пулин те суйса ан йăпат.

— Санра айăп тавраше пур пулсан, вăл— эсĕ ху телейўшĕн кĕрешме вĕренсе çитменнинче кăна. Чăнах та, фермăна куçарнăшăн ĕçе тухма пăрахни тĕрĕс теме çук ĕнтĕ, вăл Мышкин йышшисене ирсĕр ĕç тума çеç пулăшнă. Санăн комсомолтан, районри ытти влаçсенчен пулăшу ыйтмалла пулнă. Анчах хăвăра колхозран тĕрĕс мар кăларни пирки никам та иккĕленсе тăмасть. Итле эппин. Сана хам юлашки виçĕ кун хушшинче мĕн-мĕн тунине, мĕн курни-илтнине йĕркипе каласа парам. Урамра мар, пĕр-пĕр хўтĕ вырăн тупса лăпкăн калаçса ларар. Çитменне, паян ман ăшра пĕр тĕпренчĕк çăкăр та пулман пирки хырăмра арман чулĕ авăрнине туятăп. Авă, пире хирĕç капăрланса ларакан çурт çине «Чайная» тесе çырнă. Çавăнта кĕрер те, апат çинĕ май, чун килениччен калаçар...

— Çук, çук!— сехĕрленсе ўкрĕ хĕр.— Эп кĕместĕп. Ман çиес те килмест.

«Ытти сăпайлă хĕрсен йăлипе, ресторан таврашне çывăха та пырас мар тет пулĕ ку,— шухăшларĕ каччă.— Анчах унашкал йăла тахçанах кивелнĕ. Пирĕн ресторансенче аскăн йышшисем мар, ĕç çыннисем апатланаççĕ. Çавна каласа парам мар-ши ăна?»

— Тамара, тĕрĕссине пĕлтер-ха, мĕншĕн эсĕ унта кĕресшĕн мар? Ўсĕр çынсемпе тĕл пулассинчен шикленсе-и е урăх сăлтавпа?

Хĕр кăштах иккĕленсе тăчĕ те аллипе сулчĕ.

— Апат çинĕшĕн тўлеме ман пĕр пус та çук,— пуçне аяккалла пăрса каларĕ хĕр. Çав самантрах унăн пичĕ вут пек хыпса тухрĕ.

— Эх, Тамара, тĕлĕнтеретĕн эсĕ мана. Эс пуян маррине эпĕ тахçанах пĕлетĕп, çавăнпа ăна пытарса тăма кирлĕ мар. Тыт ман хулран, ан имен....

Апат хыççăн вĕсен уйрăлмаллаччĕ ĕнтĕ, анчах иккĕшĕ те пĕр-пĕрин патне чун туртнăран нимпе те уйрăласшăн пулмарĕç. Юлашки самантa кашнин тата ытларах тăсас килет, тусĕн сăнне, сассине, куллине ĕмĕрлĕхех астуса юлас килет. Çавăнпа вĕсем мотороллер патне пырас вырăнне урам тăрăх каллĕ-маллĕ уткаласа сўреме пуçларĕç. Пĕр пĕчĕк çурт умĕнчен иртнĕ чух унта çакнă фотовитрина илĕртнине тўсеймерĕç, пырса тăчĕç те районри кĕрнеклĕ çынсен сăнне пăхса савăнма тытăнчĕç.

— Тамара, иксĕмĕр тепре хăçан тĕл пуласси паллă мар. Асăнмалăх юнашар тăрса сăн ўкерттерер мар-и?

— Эпĕ ытла та начар тумланнă. Сана намăс кăтартасран хăратăп.

— Ан калаç! Тумтир вăл ниме те пĕлтермест. Ĕмĕт-шухăшу, чуну хитре пултăр! Урăх пĕр сăмах та ан кала, кĕрĕпĕр те тăрăпăр аппарат умне.

Каччă хĕре аллинчен туртсах пĕчĕк пўрте илсе кĕчĕ...

Хĕвел анас вăхăт çывхарсан тин Тамара Уйпуç ялĕ патĕнче мотороллер çинчен анчĕ. Тата ик-виçĕ минутран уйрăлса каяссине туйнипе, вăл сисĕнмеллех салхуланчĕ, куçĕсем, тĕтреленнĕ пирки йăлкăшми пулчĕç.

— Кольă, хулана çитсенех манмăн-ши мана?— шăппăн ыйтрĕ хĕр.

Каччă аллисене ун хулпуççийĕсем çине хучĕ.

— Çук, чунăм! Эсĕ ман ăша ĕмĕрлĕхех кĕрсе вырнаçрăн. Хам çырнă статья пичетленсе тухсанах хаçата ярса тытатăп та кунта вĕçтерсе çитетĕп. Пĕр иккĕленмесĕр кĕтсе тăр!

— Кĕтетĕп, Кольă. Пĕл, мĕн пур шанчăк санра. Эсĕ те мансан,— урăх нихçан та çынна шанма пултараймăп. Сывă пул! Умăнти çулу яланах такăр пултăр!

Каччă хĕрĕн тарăн куçĕсенчен вăрахчен пăхрĕ. Унтан чăтса тăраймарĕ, унăн мăкăнь чечекĕ пек тутисем патне туртăнчĕ. Анчах Тамара темскертен шикленнĕ пек каялла чакрĕ.

— Мĕншĕн?— шăппăн ыйтрĕ Хумов.

— Кирлĕ мар, чунăм. Хăвах пĕлетĕн, чуп тумасăрах эпĕ... ĕмĕрлĕхех юратрăм сана...

Çак сăмахсене каласан, Тамара пичĕ пĕçерсе кайрĕ. Вăл, хăй мĕн хăтланни çинчен шухăшласа тăмасăрах, каялла çаврăнчĕ те хыçалтан хăваласран хăранă пек униче хапхи патнелле чупрĕ.

## XVII

«ХАЛĔ ЕНТĔ Хум Микулайĕ хаçатра статья пичетлет те, повеç Ķураковсен пурнăçĕ тепĕр хут юсаннипе пĕтет», тесе шутлать пулĕ-ха вулакан. Пытарса тăрас мар: автор хăй те малтанах çапла шухăшланăччĕ. Анчах пурнăç тени ялан такăр çулпа çиçтерсе пымасть-çке, ун умне тепĕр чух тĕрлĕ чăрмавсем тухса тăраççĕ. Пирĕн паттăрсен кун-çулĕ шăпах çапла пулса тухрĕ.

Ялтан таврăнсан, тепĕр куннех Хумов тин çеç çырса пĕтернĕ статйине редактор сĕтелĕ çине пырса хучĕ. Петр Трофимч хаваслансах вуласа тухрĕ ăна. «Маттур, мур илесшĕ,— ырларĕ вăл.— Пултарать. Мускавра тухакан хаçатсенче те çакăн пек ăста çырнă материалсем кашни номертех пичетленеççĕ теме çук. Вулакан куçĕ умне чĕрĕ çын сăнĕсем тухса тăраççĕ: айăпсăр асапланакан хĕр, пуçлăх мĕн каласса сĕлехе юхтарсах кĕтсе тăракан йăпăлти Ухвандеев, тĕнчере хăй авторитетĕнчен пахи ним те çук тесе шухăшлакан Ятманов, икĕ уралла йĕке хўре Мышкин çырнă хут листи хыçĕнче чĕрĕ çын тăнине курман Шарикова тата райĕçтăвком председателĕ— кашни хăй евĕрлĕ манми сăнар. Ним калама та çук, талант тени Микулайăн пурах».

Ķĕмĕл Петти машинкăпа пичетленĕ хут листисем çине ăшшăн пăхса илет, анчах набора яма «улттăмĕш туйăм» тени чарса тăрать. Пĕр кун иртет, икĕ кун... Унтан эрне те васкамасăр шăвăнса иртет — Хум Микулайĕн статйи çав çавах «черет кĕтсе» выртать.

«Пурте лайăх, пурте хăй вырăнĕнче темелле,— шухăшлать редактор вырăнне вăхăтлăха юлнă çын.— Юлашки кунсенче пичетленсе пынă шупка материалсемпе танлаштарма та çук... Анчах та пĕр «анчах» пурри хуплать. Критикă кирлĕ япала ĕнтĕ вăл, ун пирки тавлашма çук. Çапах та мĕншĕн çак кирлĕ ĕçе редакторăн мар, манăн хамăн тумалла-ха? Эпĕ вĕт кунта вăхăтлăха çеç. Критикă вăл — патак пекех икĕ вĕçлĕ. Çынна критикленине юратакансем нумай, хăйне критикленине юратакансене вара эпĕ нихçан та курман. Кўренме пултараççĕ, майлă вăхăт тупăнсан, тавăрма тăрăшаççĕ. Хумов статйине пичетлесе кăларнăшăн ырлакансем те, хурлакансем те тупăнĕç. Ырă ячĕ, паллах, хаçата тивĕ, мана— хăлха чикки. Çук, малтан кун пирки пуçлăхсем мĕнле шутланине пĕлес пулать. Унсăр тем курса ларасси пулĕ».

Çак шухăшпа Серебров икĕ хутчен комсомол обкомне çитсе пăхрĕ. Обкомол секретарĕ унпа калаçма вăхăт тупаймарĕ, агитаципе пропагандă пайĕнче пĕри те татса каламарĕ: «Эсĕ редактор,— терĕç.— Мĕн тумаллине хăвăн пĕлмелле». Çавăн хыççăн вăл шалтах аптраса ўкрĕ.

Пĕрре, пурнăç тарасине мĕнле тĕрĕс виçмелли çинчен шухăшласа пынă чух, ăна урамра хăйĕн ача чухнехи тусĕ чарса тăратрĕ.

— А-а! Вăт кама тĕл пулма тўр килчĕ!— савăнса ўкрĕ Серебров.— Курманни миçе çул! Мĕнле пурăнатăн?

— Ĕлĕкхинчен кая мар, ыранхинчен аван мар,— ытарлă хуравларĕ лешĕ.— Ĕç вырăнĕ манăн, хăвах пĕлетĕн, ытлашши çўлех мар, анчах ăшă, сунас та аптратмасть, ўслĕк те ермест. Хе-хе-хе... Эсĕ ху мĕнле пурăнатăн?

Çак çын нумайранпа пысăк пуçлăхсен куçĕ умĕнче кунĕн-çĕрĕн юпа пек тăнине астуса, Петр Трофимч унпа канашласа пăхма шухăшларĕ. Вара хăйне юлашки вăхăтра мĕн канăç паманнине йĕркипех каласа пачĕ.

— Талант, тетĕн. Талантлă çын, паллах, мухтава тивĕçлĕ ĕнтĕ. Анчах ăна мухтани сан хырăмна тăрантарать-и е хваттерне ăшăтать-и? Хам ĕмĕрте ăна-кăна курнă. Талантлисем хăйсем ырă курнине те питех асăрхаман, пĕрле ĕçлекенсене телей пани те палăрсах каймасть. Аслă пуçлăхсем ун йышшисенчен вăхăтра хăтălма тăрăшаççĕ. Хум статйи пирки мĕн калас? Хăвах пĕлетĕн, мăн çынна мухтани, хавшак çынна хурлани вырăнлă пулакан. Ķама критиклет вăл статйинче?

— Колхозри тата районри пуçлăхсене.

— Çăрттанĕсем ĕнтĕ ытлашши пысăккисемех мар, çапах вĕсене те шăлсăр теме çук. Ķам пĕлет, райĕçтăвком пуçлăхĕн йăмăкĕ, тен, кунти пысăк пуçлăха качча тухнă пулĕ, тен, вăл хăй çав пысăк çыннăн аппăшне арăм тунă пулĕ. Вара талантлă статьяшăн ответ тытма лекĕ. Ķамăн тетĕн-и? Авторăн мар ĕнтĕ, санăн. Хам ĕмĕре эпĕ пысăк çын приемнăйĕнче ларсах ирттертĕм. Пуçлăхсем темĕн чухлĕ улшăнчĕç. Пĕрисем пĕлĕте çити çĕкленчĕç, теприсем тĕпсĕр ханкăра чăмрĕç. Эпĕ çеç тинĕс варринчи чул ту пек пĕр хускалмасăр ларатăп. Мĕншĕнне пĕлес килет-и? Итле. Эпĕ никампа та хирĕçлеместĕп. Лăпкă пурăнас тесен, ятлă çын çулне ан пўл, унпа ан тĕкĕш. Такасем тĕкĕшчĕр, вĕсене турă мăйракаллă тунă. Сан çамку çинче ун йышши хĕç-пăшал курăнсах каймасть-ха, пур пулсан та турă туни мар, арăму лартни çеç. Хе-хе-хе!— ĕхĕлтетрĕ Ķĕмĕл Петтин ача чухнехи тусĕ.

«Тĕрĕс калать,— шухăшларĕ Серебров,— аслă сăмах калать. Пенси илме пуçличчен пĕр хуйхăсăр пурăнас тесен, манăн никампа та тĕкĕшмелле мар. Микулая мĕн? Вăл — пĕр пĕччен пуç. Манăн арăм, ачасем... Таçта хăямматра тертленсе пурăнакан хĕре хута кĕрес тесе хама валли инкек шырама ухмаха ермен-ха. Пурнăç тăвасси вăл хамăртан килет,

асăрханса пурăнма пĕлнинчен пахи мĕн пултăр?»

Çавăн хыççăн Петр Трофимч пуçлăхсене чăрмантарас темерĕ, Хумова хăех чĕнчĕ.

— Тĕплĕн вуласа тухрăм,— терĕ вăл ал çырăвне аллипе хупăрласа.— Аста çырнă, хаçат апачĕ мар, автора чапа кăларакан романпа пĕрех. Халь тесен халь набора ямалла та... пĕр пĕчĕк кăлтăк чарса тăрать.

— Мĕнле кăлтáк? Тӳрлетме пулать-и ăна?— сыхланарах ыйтрĕ автор.

— Тӳрлетме май килмесен, чĕнес те çукчĕ. Эсĕ, ак, ĕç йĕркине пăсакан хĕре ырлатăн, ăна тăна кĕртме тăрăшакансене вара пылчăк ăшнех таптаса чикетĕн. Мĕнле ăнланмалла ăна? Анархие, йĕркесĕрлĕхе мухтас тени пек пулса тухмасть-и? Акă, çак страницăна илер. Эсĕ унта райĕçтăвком председательне тиркетĕн. Пуç тавра çавăркаласа пăх-ха, ăна халăх суйланă вĕт! Урăх йăнăшсем те пур. Пĕр сăмахла каласан, статьюна каплипе хаçатра кăларма май çук. Пирĕн комсомолецсене йăвăрлăхсенчен шикленмесĕр, пĕр çын пек кар! тăрса, ăçта вăй ытларах кирлĕ — çавăнта кайма чĕнмелле. Эсĕ те çамрăк хĕрĕн пĕр турткалашса тăмасăр фермăна кайма кирлĕ пулнине кăтарт, ку таранччен нуша курнишĕн колхоза ертсе пыракансем мар, вăл хăй кăна айăплине ăнлантарса пар. Вара сан статью çитес номере пĕр чăрмавсăрах кайĕ.

Çак сăмахсене илтсен, автор тĕлĕнсе хытсах кайрĕ.

— Чипер калаçăр, Петр Трофимч!— кăшкăрса ячĕ вăл.— Эсир мана шурă япалана хура, хурине — шурă тесе çырма хушатăр вĕт. Йăнăш илтмерĕм пулĕ-çке?

— Çук, шăллăм, йăнăш мар, тĕрĕсех илтрĕн. Тĕс таврашне курасси пĕтĕмпех этем куçĕнчен килет. Пĕрисем хĕрлĕ тĕсе симĕс пек кураççĕ, симĕссине — хĕрлинчен уйăраймаççĕ. Эсĕ, ак, хурапа шурра пăтраштарса янă. Асап куракан çынна пулăшас килни — питĕ илĕртӳллĕ туртăм ĕнтĕ. Çамрăк чух нумайăшĕ унпа йăпанаççĕ. Çитĕнсе çитсен вара çавна аса илеççĕ те, хытă вăтаннипе, хăмач пек хĕрелсе каяççĕ. Пирĕн саманара филантропсем чысра мар, эсĕ те филантроп пулас шухăша пăрах. Тата, ман шутпа... эсĕ хута кĕме шухăшланă Тамара ним те мар, чăркăшланма юратакан юнтармăш хĕр çеç!

— Ăна эсир хăвăр куçăрпа курнă пулсан, апла каланă пулмăттăр. Эпĕ ăна хама ĕненнĕ пекех ĕненетĕп.

— Ĕненесех тетĕн пулсан, ĕнен, анчах статьюна эпĕ каланă пек юсаса çыр!— пуртăпа каснă пек касса татрĕ Серебров.— Ятне те улăштар: «Тӳрĕ кăмăлпа пурăнмалла» вырăнне «Тамара, эсĕ йăнăшатăн!» е çавăн евĕрлĕ урăх ят туп.

— Çук, Петр Трофимч, мĕн калассине эпĕ çак статьяра пĕтĕмпех каланă, урăхла шухăшлама мана чĕре те хушмасть, кăмăл та туртмасть.

— Ытлах ан васка, лайăххах шухăшласа пăх! Ик-виçĕ кун кĕтме пултаратăп. Асту, мана хирĕç вăрçăпа тухни сана чапа кăлармĕ, иксĕмĕр килĕштерсе пурăнни вара хамăра та, ытти çынсене те усă парĕ. Эсĕ редакцире ĕçлемен пулсан, калавусем хальчченхи пек çăмăллăн çут тĕнче курнă пулĕ тетĕн-и? Кĕтсех тăр! Кутăнланса ан тăр, аслисем каланă пек ту. Вара малашне те пĕр хуйхăсăр пурăнăн. Сана юратнипе калатăп çак сăмахсене.

Хум Микулайĕ Серебров çине ăна пĕрремĕш хут курнă пек куçĕсене чарса пăхрĕ. Вара вăл ăна редактор вырăнче ларакан пек мар, авалхи халапри илĕртӳçĕ-çĕлен пек туйăнчĕ. Çамрăк писатель малашне мĕн курасси çинчен шухăшласа тăмарĕ, пуçлăх çине шăтарасла пăхрĕ те çапла каларĕ:

— Эпĕ хам ырлăхшăн тӳрĕ çынна шыва яракан сутăнчăк пулман, пулас та çук! Çавăнпа ман статьяна е çаплипех хаçата ярăр, е редактор киличчен тытса тăрăр. Вăл та ямасан — обкома çитетĕп! Ку — ман юлашки сăмах!..

— Кайран ӳкĕнмелле ан пултăрччĕ,— юнаса каларĕ Серебров.

— Эсир те ытлашши ан сикĕр. Çапа пĕлмен пушă хăйне çаврăнса тивнĕ, тет.

## XVIII

КОРРЕСПОНДЕНТ килсе кайни колхозра йĕр хăвармасăр иртмерĕ. Чи малтанах Укçине кукурузă звенинчен тухса ӳкнине аса илме пулать. Унтан председательпе бухгалтер пĕрпĕринчен сисĕнмеллех сивĕннине кăтартăпăр. Вĕсем хушшинчен хура кушак чупса иртнĕ тейĕн, кунĕ-кунĕпе сăмах чĕнмесĕр лараççĕ. Чăнах та, Борис Петровичшăн пулсан ку пысăк хуйхă теме çук ĕнтĕ, Мышкина вара пуçлăх ютшăнса пыни пачах канăç памарĕ.

Ермолай Ефимч, ăшă вырăнтан тухса ӳкес мар тесен пуçлăха юрама кирлине шута илсе, ăна хăй майлă çавăрмалли меслет шырарĕ. Анчах мĕн туса юрамалла-ши çав кăрсака çилĕллĕ çынна? Пуç ыратиччен шутласа та кирлине тупаймасăр асапланчĕ бухгалтер. Çапах та пĕр ирхине вăл правление çапăçура çиеле тухнă çын пек мăнаçлăн пырса кĕчĕ.

— Салам, Борис Петрович!— терĕ вăл.— Ĕнер района кайсан пĕр япала тупрăм. Сире интереслентерме пултарать пулĕ тесе, ăна хампа пĕрлех илсе килтĕм. Акă, курăр!



ма ҫӑмӑл машинӑ кӑна парӑр, ыттине хамах тӑвӑп.

— Ил!— йӗрӗнсе ҫитнине пытарса тӑмасӑр ал сулчӗ председатель.

Кӗҫех Мышкин «ГАЗ-69» ӑшне пыллӑ кӑрчама тултарнӑ пӗчӗк пичке кӗртсе хучӗ те вӑрӑм ҫула тухса кайрӗ.

## XIX

ЮРАТУ ТЕНИ — вӗҫӗ-хӗррисӗр савӑнӑҫ мар ҫав, тепӗр чух вӑл этеме хуйӑха яма та, асаплантарма та пултарать. Уйпуҫ ялӗ патӗнче уйрӑлнӑ хыҫҫӑн Хум Микулайӗ хӑйне хӑй тӗнчери чи телейлӗ ҫын пек туйма пуҫланӑччӗ. «Тинех тупрӑм ӑна, хамӑн ӗмӗтӗме,— тенӗччӗ вӑл мотороллерӗпе Шупашкар еннелле вӗҫтерсе пынӑ чух.— Епле пысӑк савӑнӑҫ! Мӗнешкел телей! Ӗмӗр-ӗмӗр Тамарӑпа пӗрле пурӑнасчӗ. Вӑл мана творчествӑллӑ ӗҫре вӑй-хӑват парӗ... Сӑпайлӑ, ырӑ кӑмӑллӑ, маттур хӗр».

Унтанпа вунӑ кун ҫеҫ иртрӗ, анчах ҫав савӑнӑҫран йӗрӗ те юлмарӗ. Хура пӗлӗтсем капланса килчӗҫ те хаваслӑх хӗвелне пур енчен те хупӑрласа илчӗҫ. Кӑварлӑ юрату чуна ӑшӑтас вырӑнне ӑша ҫунтарать кӑна. Мӗншӗн, тетӗр-и?

Статйине тӗпрен улӑштарма хушнӑ срок тухсан, Кӗмӗл Петти Микулая редактор кабинетне тепре чӗнчӗ.

— Ну, мӗнле, ҫырса пӗтертӗн-и?— ыйтрӗ вӑл.

— Эпӗ пӗр сӑмах та улӑштармастӑп терӗм-ҫке, мантӑр-им?

— Манасси манман та-ха, эсӗ ҫав териех кутӑнлашма пултарассине ӗненес килмест. Ҫавӑнпа ыйтрӑм.

— Сӑмах ваклама юратмастӑп, пӗрре каларӑм пулсан, ҫаплах тӑватӑп.

Петр Трофимч ҫакна илтсен шӑртланса кайрӗ.

— Сыхлан, ҫамрӑк ҫын! Тем чул тӑрӑшсан та кӑвапунтан ҫӳле сикеймӗн. Шухӑ лашана ҫӑварлӑх кунӗлетет, сана та ҫапла лӑплантарасси юлчӗ пулас. Ҫӑварлӑхӗ пур, ал айӗнчех. Взяткӑ тени мӗн иккенне пӗлетӗн ӗнтӗ. Чӑвашла ӑна «сӗрни» текенсем те пур. Илтнӗ пулӗ?

— Илткелене́, анчах ун пек ирсӗр япала ман таврара пуррине асӑрхаманччӗ. Мӗн пирки асӑнтӑр ӑна?

— Итле, каласа парам. Взяткӑ вӑл тӗрлӗрен пулать. Пӗрисем кирлӗ ҫынна укҫапа «сӗреҫҫӗ», теприсем — хаклӑ йышши парне пар-

Ҫак сӑмахсемпе Мышкин Ятманов умне хура конверт кӑларса хучӗ.

— Мӗн ку?— ыйтрӗ ытлах кӑсӑкланнине палӑртман пуҫлӑх.

— Сӑн ӳкерчӗкӗ. Районри фотограф хӑй мӗнле чаплӑ ӳкерме пӗлнине кӑтартас шухӑшпа ӑна витринӑ ҫине кӑларса ҫакнӑ. Укҫа тӳлесех туянтӑм. Уҫса пӑхӑр-ха, паллатӑр-и унти ҫынсене?

Борис Петрович конверт ӑшӗнчен сӑн ӳкерчӗкне кӑларчӗ те куҫне чарсах пӑрахрӗ.

— Ара, кунта пирӗн Тамарӑпа Хумов тӑраҫҫӗ мар-и? Хӑҫан тӗл пулма ӗлкӗрнӗ-ха вӗсем? Хӗрӗ корреспондент килсенех ялтан тухса кайнӑччӗ-ҫке, киле вӑл Хумов Шупашкарта чух тин таврӑннӑччӗ. Тӗлӗнмелле!

— Тӗл пулнӑ ҫав. Хаҫатра ӗҫлекенсем — чее ҫынсем, вӗсем йӗп ҫӑрти пысӑкӑш шӑтӑка та кӗрсе тухаҫҫӗ. Тамара каласа кӑтартнине пула ӗнтӗ хӑйне кирлӗ материалсене ытла та хӑвӑрт тупрӗ. Халӗ пире пӗтерсе хума статья ҫырать пулӗ. Анчах ҫак картӑчкӑ ӑна хытӑ чӑрмантарма пултарать.

— Мӗнле майпа?

— Пирӗн ӑна редакцине кайса памалла. Унта хӑйсен сотрудникӗ командировкӑра пулнӑ вӑхӑта хӗрсемпе асса ирттернине пӗлсен, ун статйине пичетлеме тытӑнса тӑрӗҫ. Ҫитменне, хӗрӗ ҫав ӗҫе пуҫараканӗ, вӑл унпа ыталашма килӗшни — взяткӑ панӑпа пӗрех.

— Мда-а,— тӑсса каларӗ Ятманов,— ирсӗр истори. Сан канашусене итлеме пуҫланӑранпа хама хам тислӗк шывӗ ӑшне кӗрсе выртнӑ пекех туякан пултӑм. Ҫитет, урӑх мана ан варала! Ҫынна сӑтӑр тумасӑр пурӑнаймастӑн пулсан, ху пӗлнӗ пек ту. Эпӗ ҫак сӑн ӳкерчӗкне курман, ун ҫинчен нихҫан та илтмен. Пӗлетӗн-и?

— Пӗлмесӗр, питӗ лайӑх пӗлетӗп. Сирӗн ята нисҫта та асӑнмӑп. Мана Шупашкара кай-

са, виççĕмĕшсем — эрех ĕçтерсе. Чĕр таварпа сĕрекеннисем те тупăнкалаççĕ. Акă, кур!

Çак сăмахсемпе Кĕмĕл Петти сĕтел сунтăхĕнчен Мышкин килсе панă сăн ӳкерчĕкне кăларса хучĕ. Ку вара çамрăк çыншăн уяр кун аça çапнăпа пĕрех пулчĕ. Унăн пичĕ пĕрре шуралса, тепре йăмăхланса кайрĕ.

«Таса хĕре «чĕр тавар» тет тата çак йĕксĕк! Тăхта, эпĕ сана вараланчăк аллуна çын чĕрине чикни мĕн хака ларнине кăтартам!»— чунтан тарăхса шухăшларĕ Хум Микулайĕ. Вара чышкисене чăмăртарĕ те малалла ӳпĕнчĕ.

— Лăпкăнрах, тусăм, лăпкăнрах!— ирĕксĕрех каялла чакса каларĕ Петр Трофимч.— Эсĕ урамра мар, редакцинче. Чышкă вăйне шанакансем çут тĕнче çине решуткаллă кантăк витĕр çеç пăхса ларни çинчен мантăн-им? Йĕркеллĕ калаçнине ним те çитмест. Итле, сана пĕр пĕчĕк урок парам. Хĕрарăмсем, инкек-синкекрен хăтăлас тесен, малтан хӳтлĕх шыраççĕ. Çут тĕнчере сăлтавсăр ним те пулманнине пĕлсе, вĕсем хăйсене хута кĕрекене укçа-тенкĕ парса тупма тăрăшаççĕ. Укçа çуккисем хăйсене сĕнеççĕ. Хитре Тамара та çав йăлапах сан çумна шăлăннă ĕнтĕ.

Хытă хумханнипе Микулай уçă чӳрече патне пырса тăчĕ. Çакăн пек ăна никам та кӳрентерменччĕ. Мĕн тери ирсĕр çынсем пулаççĕ иккен тĕнчере! Вĕсемшĕн çын чĕринчи чи таса туйăмсене пылчăклă атăпа таптаса тăкасси ним те мар иккен.

— Эх, Петр Трофимч, эсир йӳтеме пуçланă старик мар, хам пек çамрăк çын пулнă пулсан, чĕр тавар тени мĕн хака ларнине питĕ аван кăтартнă пулăттăм. Ватта хĕнеме ал çĕкленмест. Пĕл эппин, каласа парам: Тамарăпа иксĕмĕр пĕр-пĕрне чунтан-вартан юрататпăр. Илтетĕн-и, чунтан-вартан!

— Ĕненместĕп.

— Ăçтан ĕненĕн? Эсир вĕт пурне те хăвăрăн виçепе виçетĕр. Çынсем сирĕн пек чунсăр, киревсĕр маррине аса та илместĕр. Пĕлĕр, тĕнчере сирĕн йышши усалсем питĕ сахал, ыррисене вара шутласа та кăлараяс çук.

Хумов Серебров çине йĕрĕнсе пăхрĕ те алăк патне çаврăнчĕ.

— Тăхта,— чарчĕ ăна пуçлăх,— тепĕр сăмах калам. Ăс панăшăн тав тумалла та... çăмарти чăхха вĕрентни усăллă пулас çуккине пĕлни чарса тăрать. Редактора пăхăнман сотрудниксем пире кирлĕ мар. Çапах та сана тăнчă-тăнчă пĕтерсе лартас килмест. Акă хут, тыт та е Тамарăна питлесе халех статья çыр, е вырăнтан кăларма ыйтса заявлени пар.

Серебров çак сăмахсене çамрăк писателе хăратас тесе çеç каланăччĕ, анчах лешĕ хут çине: «Серебров пек ирсĕр çынпа пĕрле ĕçлеме пултараймастăп, çавăнпа та хама ĕçрен кăларма ыйтатăп», тесе çырчĕ те, алă пусса, никампа сывпуллашмасăрах редакцирен тухса кайрĕ.

«Мана сăн ӳкерчĕкĕпе шантаж тума шухăшланă, йĕксĕк»,— чунтан тарăхса пăшăлтатрĕ Микулай.— Мĕскĕне тупрăм терĕ пулĕ. Кăтартăп эпĕ сана кам мĕскĕннине! Ăс парасшăн тата, ухмах тăмана! Хăй утмăл çул пурăнса пĕр путлĕ статья çырса курман, çапах вĕрентесшĕн. Ун йышши литературă тислĕкĕ çинче йăшăлтатакан хуртсене итлесен, çыравçă пулас ĕмĕте ĕмĕрлĕхех манмалла. Аслă çул çине Кĕмĕл Петтисĕрех тухнă, ун тăрăх мĕнле утса тухмаллине те çав ăçтиçуксăрах курса тăрăпăр!»

...Хумов тарланă çамкине ал тутрипе шăлса типĕтет. Унтан, ăша варкатакан шухăшсенчен тарса пытанас тенĕ пек, тата хăвăртрах утать. Карл Маркс урамĕ, Хĕрлĕ площадь, хула сачĕ, Шупашкар шывĕ урлă хывнă кĕпер — пурте черечĕпе хыçа юлаççĕ. Кĕçех куç умне тĕнчери чи илемлĕ юхан шыв — Аслă Атăл тухса выртать. Мĕн авалранпа чăваша йывăр килсен йăпатса, халсăрлансан — вăй парса, ытлашши йăвашлансан — хастарлатса, кирек хăçан та кăмăла уçса тӳлеккĕн юхса выртакан анлă шыва курсан тин Микулай чарăнса тăчĕ те тулли кăкăрпа уççăн сывласа ячĕ.

## XX

ПĔРЕШКЕЛ ÇЫНСЕН кăмăлĕсем те, ĕмĕтшухăшĕсем те пĕр евĕрлех пулаççĕ. Тамарăпа Микулай пĕр-пĕринчен инçетре пурăннă пулсан та пĕр сывлăшпа сывланă темелле. Вĕсене пĕр йышши сисĕм-туйăмсем хумхатнă, пулас пурнăçа пĕр пек курни хавхалантарнă.

Ĕçрен кăларма ыйтса заявлени çырнăранпа Хумов ниепле те лăпланаймарĕ. Салхуллă шухăшсем пĕрин хыççăн тепри пырса кĕрсе пуçа ыраттараççĕ, килес кун мĕн кĕтмеллине пĕлменни ăша вăркаттарать.

«Васкамарăм-ши? — темиçе хут та ыйтнă вăл хăйĕнчен хăй.— Ытлашши хĕрсе кайнипе йăнăш турăм пулсан? Статья пичетленменшĕн çав териех тарăхмаллаччĕ-и? Чăнах та, çырнă япала çут тĕнче курманни пăшăрхантарать ĕнтĕ, анчах эпĕ уншăн мар, ман статья юратнă çын пурнăçне тĕпренех улăштарма пултарнăран ăна хăвăртрах пичетлесшĕн çуннăччĕ. Юратнă çын. Сар кайăк пек тĕлĕнмелле илемлĕ Тамара. Саншăн тăрăшса, хама литературă тĕнчине илсе кĕрекен алăка шалтлаттарсах хупмарăм-ши? Хĕрпе литературăран пĕрне суйласа илме хушсан, хĕре илекенĕ писатель пулма тивĕçлĕ-ши?»

Ыйту хыççăн ыйту. Вĕсене хуравласшăн Микулай апла та шутлать, капла та шутлать,

анчах отвечёсем ăс-тăншăн тĕрĕс пек туйăнсан та чĕре хушнипе килĕшмеççĕ. Вара вăл куçне хупать те Тамара сăнарне кăларса тăрататъ. Илемлĕ сăнар, çурхи хĕвел пек хитре сăнар. Чăнах та, хулара пурăнакан каччă унтан хитрисене те сахал мар курнă, хăш-пĕрисем хăй тавраш ĕнче явăçнине те туйнă. Çапах та вĕсенчен нихăшĕ те ун чĕринче вырăн тупайман. Ял хĕрĕ вара унта ĕмĕрлĕхех кĕрсе вырнаçрĕ. Мĕншĕн? Юратас-савас ĕçе Тамара хăйĕн хулари тантăшĕсенчен лайăхрах, ăстарах пĕлнĕрен мар-и? Çук, пĕтĕмпех урăхла! Вăл унашкал ĕçе пачах пĕлмест темелле. Уйрăлнă чух чуп тума тăрсан, епле сехĕрленсе ÿкрĕ вăл! Сăпăланма, хуçкаланма юратнăран мар ĕнтĕ, сăпайлă пулнăран çын курман улах вырăнта та ыталашма килĕшмерĕ. Тамарăн пурри ытти хĕрсен çук, ытти хĕрсен пурри вара Тамарăн та пур. Çавăншăн чун-чĕререн юратнă та ăна.

Юрату... Савăнăç кăтартас вырăнне хуйха ярасса кĕтменччĕ Хумов. Мĕн чул шыранăччĕ ăна? Çынсем хушшинче те, ăсра та, кĕнекесенче те. Тĕслĕх тупасшăнччĕ. Акă халĕ тупăнчĕ вăл, тупăнчĕ те хавасланăха пĕтерчĕ. Алă сулас мар-ши ун çине? Çамрăк вĕт, пурнăç тин кăна тапранать. Малта хĕрĕ те, кăварлă юратăвĕ те пайтах пулĕ. Тамарăсăрах шырас мар-ши телее?

— Çук!— саспах хуравлать Микулай хăйне хăй.—Тамара пекки урăх çук, унтан хам ирĕкпе пăрăнни эпĕ халсăр, нишлĕ, хăравçă пулнине çеç пĕлтерет. Нимпе те парăнмастăп! Телей çĕртре выртмасть, ăна тупас тесен вăй шеллемесĕр ĕçлемелле, кирлĕ пулсан хаяррăн çапăçмалла. Эпĕ хатĕр!

Шухăшсем... Хăтсăр йышлă шухăшсем...

Мĕн пулса иртнĕ çав хушăра Уйпуç ялĕнче? Тÿрех каламалла, эпир паллакан çынсем питех савăнман унта. Вăхăт малалла шăваннă май Тамара пурнăçĕ тата ытларах хĕсĕнсе пынă. Ашшĕнчен нимле хыпар та çук, амăшне те тухтăрсем темшĕн халĕ те операци тăваймарĕç. Кайса та пулин курасшăнччĕ, автобуспа кайма билет илмелĕх укçа çукки хуплать. Кÿршĕсене тахçанах парăма кĕрсе пĕтнĕ, татах ыйтма аван мар, ыйтсан та парас çук. Пĕчĕк йăмăкĕсем валли сĕт илес тесе кирлĕ япаласенех сутма лекрĕ. Вăл та юрĕччĕ. Хумовран нимле хыпар та килменни шалтах аптратса çитерчĕ.

«Килчĕ. Ирхи çăлтăр евĕр çутăлса килчĕ те ун пекех хăвăрт çухалчĕ. Виçĕ хутчен çеç куртăм ăна. Халĕ татах унчченхи пекех пĕр-пĕччен тăрса юлтăм. Эх, Кольă, Кольă! Ĕмĕрлĕхех пăрахса каймарăн-ши мана? Мĕншĕн ăшăма вут чĕртрĕн? Хĕр чĕри пĕрре хыпса тухсан çунса пĕтмесĕр те сÿнес çуккине пĕлмерĕншим? Ма вăхăтсăр вăратрăн ман кăкăрта лăпкăн тĕлĕрнĕ юратăва? Эсĕ хытă кăмăллă çын марччĕ-çке, вĕçкĕнленесле, мĕскĕн хĕре парăнтарнипе мухтанасла марччĕ. Мĕншĕн мана çав териех хăвăрт мантăн?»

Çакăн йышши шухăшсем Тамара пуçĕнчен тухма пĕлмеççĕ. Чун хурланать, таса кăвак куçсем тĕксĕмленеççĕ, шывланаççĕ...

Хум Микулайĕ килни чĕрере шанчăк **çурат**нăччĕ. Тамара айăплă маррине сăмахпа каланине итлесе мар, хăй куçĕсемпе курса ĕненнĕччĕ. Ялтан кайнă чух çитес кунсенчех ăна хÿтлекен статья пичетлеме пулнăччĕ. Чăтаймасăр кĕтрĕ Тамара çав хаçата. Анчах икĕ эрне иртрĕ ĕнтĕ, хаçат çук та çук. «Те манчĕ вăл, те ман ĕçе хаçат урлă çутатса пама тивĕçсĕр терĕç,— чунтан хурланса шухăшлать Тамара.—Чăннине пĕлесчĕ. Пулăшу килет-ши е ман енне пурте çурăмпа çаврăнса тăчĕç-ши? Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕм татăлсан, хам туma шухăшланине тăваймасан, Ятмановсене колхоз çамрăкĕсене çын вырăнне хума вĕрентеймесен, мĕн туса пурăнас манăн кунта? Тăван ялăм, ама çури пулмарăн-ши эсĕ маншăн?»

Пĕрре, чун ытла та хытă кÿтсе çитнĕ вăхăтра, уçнă кантăк умĕнче Тамара хĕвел хĕмленсе аннине пăхса ларнăччĕ. Йăмăх хĕрлĕ пĕлĕтсем çине куç сиктермесĕр пăхнипе вăл хăй патне Укçине пырса тăнине те сисмен.

— Пикеçĕм, мĕн çав териех тĕмсĕлсе ларатăн? Савнирен хыпар çукки хурлантармасть-и? Вăл мĕнле пурăннине пĕлесех килет пулсан, каласа пама пултаратăп,— хĕре асаплантарма май тупнăшăн савăнса каларĕ Укçине.

— Мĕнле савни çинчен сÿпĕлтететĕн эсĕ, Укçине инке? — пачах хумханман пек курăнасшăн тăрăшса лăпкăн ыйтрĕ Тамара. Хăйсем иккĕшĕ те пĕр çултах çуралнă пулин те, тантăшне урçана качча тухнипе йĕксе, ун ячĕ çумне «инке» сăмах хушса хучĕ.

— Эх, чаплă хыпар илсе килтĕм-çке, пĕлсен пуçу пĕлĕте перĕниччен сиксе ÿкĕн. «Савни» тени тĕрĕсех пулас çук, «еркĕн» темеллеччĕ. Вĕт вăл сана савман, улталаса тĕттĕмре çеç ыталанă. Те калас ĕнтĕ ку хыпара, те шăла çыртас. Пĕлсен эсĕ пĕтĕм яла упа юрри юрласа тĕлĕнтерессинчен шикленетĕп. Хи-хи-хи!

«Тата мĕнле инкек сиксе тухрĕ-ши? — хыпăнса ÿкрĕ Тамара.— Сарăмсăр чирлемен пулĕ-çке вăл? Тен, мотороллерĕпе пынă чух хирĕç килекен автомобиль айне пулнă? Ах, пĕтрĕ пуçăм».

— Санран ыррине кĕтме çуккине пĕлетĕп пулин те — кала. Тульккĕ асту, тăрăшни харама кайма пултарать: эпĕ вĕт макăракан йышши мар!

— Итле эппин. Унпа чупни ахалех харама кайрĕ санăн. Эсĕ пире пĕтерсе хурасшăн хытă

тăрăшрăн. Ку тĕлĕшпе еркĕнӳ пулăшасса тӳсейми кĕтетĕн ĕнтĕ.

— Ан лĕпĕртетсе тăр! Нимле еркĕн те çук манăн!

— Пур çав, пур, ятне те пĕлетпĕр, хăйне те курнă. Хум Микулайĕ тесе чĕнеççĕ ăна. Астăватăн пулĕ, хамăр пата вăл редакцинчен килнĕччĕ. Эсĕ ĕшĕртнипех мана звеньевойран кăларттарчĕ. Халĕ ĕнтĕ хăйĕн те шалчи тулнă. Иртнĕ эрнере Ярмулай хулана кайса килнĕ тенине илтнĕ пулĕ-ха. Çав каласа пачĕ. Редактор патне кĕрсе тухрăм, тет. Хăйĕн сотрудникĕ пирĕн колхозра хушнă ĕçе тăвас вырăнне санпа чупса вăхăт ирттернине пĕлсен питĕ тарăхрĕ, тет. Вара Микулая вырăнтан кăларса çапрĕ, тет. Халĕ тата комсомолтан та кăлармалла, теççĕ.

— Ĕненместĕп! Курайманран суятăн, йĕрĕнчĕк!— кăшкăрсах ячĕ хытă пăлханнă Тамара.— Эпĕ Хумовпа «чупнине» мар, куçа-куçăн тăрса калаçнине те никам та курман.

— Курнă çав, райцентрта ыталашса сăн ӳкерттернине те курнă. Пĕр ӳкерчĕкĕ халĕ те редактор сĕтелĕ çинче выртать, тет. Çапла, пикеçĕм, тек хаçат пулăшасса ан та кĕт. Уйра, уçă сывлăшра ĕçлесе ĕмĕр-ĕмĕр ыр курса пурăнас терĕн пулĕ. Сысна витине çĕрĕк тислĕк шăршлама каяс килмест-и? Ятманова выртсаййăванса тилмĕрсе пăх, тен, хĕрхенсе, свинаркă туса хурĕ. Ну, мĕнле, килĕшрĕ-и хыпарăм? — йĕкĕлтесе илчĕ Мышкин арăмĕ.

— Питĕ килĕшрĕ. Куншăн сана кантăк витĕрех ыталаса чуп тумаллаччĕ те, каçар тархасшăн, ху ытла кутамас пулнăран хытă пĕшкĕнме лекнипе чӳречерен кутăн тухса ӳкесрен сехĕрленетĕп,— ним пулман пекех лăпкăн каларĕ Тамара.

— И-и, намăссăр! Çакăншăн та тавăрăп-ха сана! Эпир ним те манмастпăр...

Укçине, кукăр тунисене вĕтĕртеттерсе, тăвалла утрĕ. Тамара пĕр тапхăр ăна хыçран пăхса ăсатрĕ. Унтан шкап патне чупса пычĕ. «Эпир мĕн пурĕултă картăчкă тума заказ панăччĕ. Ултташне те илсе тухрăм-çке, ăçтан хăяматран тупнă вĕсем пирĕн ӳкерчĕке? Хам килте пулман вăхăтра вăрласа тухман-ши? — пăшăлтатрĕ вăл, хут таврашсене тĕрĕслесе.— Ултташĕ те пур! Суеçтерчĕ пулĕ çак эсрел. Çук, картăчкă вĕсен аллине лекмен пулсан, эпир сăн ӳкерттернĕ чух ыталашса тăнине ăçтан пĕлччĕр-ха? Тупнах пулĕ çав. Упăшки иртнĕ эрнере хулана кайса килнĕ тенине чăнах илтнĕччĕ. Пире элеклеме кайнă ĕнтĕ вăл. Элекĕ ĕненмеллерех тухтăр тесе, редакторне пирĕн сăн ӳкерчĕкне пырса тыттарнă. Ах, эсреметсем! Пĕтереççех пулĕ пире...»

Тĕнчене сĕм тĕттĕм хупласа илчĕ. Ăш çуннипе, Тамара ларма-тăма пĕлмест. Кĕнеке уçса пăхрĕ — саспаллисем сиксе ташлаççĕ, вырăн çине саланса выртрĕ — тӳшек çитти хĕртнĕ тимĕр пек вĕтелет. Пӳртре сывлăш пăчăран ыйхă вĕçрĕ пулĕ тесе, кантăк уçрĕ — усси пулмарĕ: куç хупас тесен те уçăлать. Асапланса тертленсе пĕтсен, тепĕр хут тăрса çутă çутрĕ. Сĕтел çинче хут листисем. «Çыру çырам марши ун патне? Вăл та ман пекех асапланать пулĕ. Тен, ăшă сăмахсем ăна кăшт та пулин лăплантарĕç. Анчах çыруне ăçта ярас? Редакцирен кăларнă пулсан, вăл унта пырас çук, килти адресне пĕлместĕп. Ах, мĕн тăвам-ши, мĕн тăвам-ши?»—чĕрине аллипе тытса пăшăлтатать хĕр.

Аптранипе кантăкран пырса пăхать. Тулта пăч тĕттĕм, ниçта та пĕр хăй çути курăнмасть. Шыв арманĕ патĕнчи хунарсене те сӳнтернĕ. Вăхăт нумай пулмалла. Тамара сĕтел çине салтса хунă сехетне тытса пăхать: çур çĕр иртни икĕ сехет. «Тул çутăличчен çапла ăш çунтарса ларсан, ăсран кайма та пулĕ,— шухăшлать вăл.— Мĕн те пулин тумаллах. Хулана каяс мар-ши? Автобуспа кайма укçа çук, кун çутипе çурран тухса утма çынсенчен намăс. Каç мана никам та курмĕ. Пĕччен утма чун шикленет те, юрĕ-çке, никам та тытса çимĕ. Каç сывлăш уçă, тем пек васкаса утсан та шăрăх пулас çук. Çул майлă лартса каякан тупăнмасан та кăнтăрлаччен çитĕп-çитĕпех. Вăхăта сая ярса тăрас мар, хăвăртрах çула тухас. Кольă маншăн нуша курать, ăна пулăшмаллах. Редакторĕ патне кĕрес те мĕн пулнине пĕтĕмпех каласа парас. Чунсăр çынна хаçат шанса парасла мар, вăл ырă çынах пулма кирлĕ. Тен, хĕрхенĕ, айăпсăр çынна урăх сарăплас темĕ...»

Çак шухăшпа Тамара йăмăкне вăратрĕ.

— Натюк, çывăрса тăрсанах виççĕр те кукамайсем патне кайăр. Эпĕ ыран килте пулмастăп. Ăнлантăн-и? — ыйтрĕ вăл куçĕсене ирĕксĕр уçма хăтланакан хĕрачаран.

— Мĕн?

— Ирхине кукамайсем патне кайăр, тетĕп. Мана ыран ан кĕтĕр.

— Юрать.

— Асту, ан ман!

— Юрать,— терĕ те хĕрача тӳшек çине тӳнсе кайрĕ.

Тамара хăвăрт тумланчĕ те алăк патĕнче пĕр самантлăх чарăнса тăчĕ. «Çăкăр илес марши? — ыйтрĕ вăл.— Çук, кирлĕ мар. Ытах выççа çитсен, пĕлтĕр кукурузă лайăх ӳстернĕшĕн парнелесе панă сехете, шел пулин те, сутма пулать. Хумова инкекрен хăтармасăр пурпĕрех апат анас çук. Ну, сывă пул, тăван ялăм!»

Çутă пӳртрен урама тухсан, пĕр тапхăр суккăр пулнă пекех туйăнчĕ. Тамара сехĕрленсе çӳлелле пăхать. Йăмра çулçисем хушшипе çăл-

тăрсем курăнаççĕ. Ку ăна самаях лăплантарать. Вара вăл урам хĕррипе лартса тухнă йывăçсем айĕн тĕттĕмре тĕлĕрсе ларакан пӳртсуртсем çине пăхса илет те уй еннелле утать...

Лăпкă кас. Пĕтĕм тĕнче тарăн ыйăха путнă. Тараватлă уйăх çеç хăйĕн ĕçне манмасть: анлă уя вăл ывăнма пĕлмесĕр кĕмĕл çăнăхĕ сапать. Вара тулли тĕшĕпе йывăрланнă пуçĕсенеуснă урпасем асатте сухалĕнчи çӳç пĕрчисем пек кăвакарса каяççĕ. Уй варрипе тăсăлакан тӳрĕ çул сарса хунă хура хăю пек туйăнать. Тамара çав хăю çине пырса тăрать те юрă сăмахĕсене аса илет:

> Уйăх витĕр çул курнать,
> Эпĕ каяс çул мар-ши?..

— Çав çул,— пăшăлтатать вăл.—Савни патне илсе каякан вăрăм çул... Савни... Кĕтет-ши вăл мана? Чĕнмесĕрех пынине пĕлсен, мĕн калĕ-ши? Ял хĕрĕ хăй хыççăн хулана пынăшăн çиленмĕ-ши? Манпа, начар тумланнă хĕрпе, юнашар тăма намăсран хăрамĕ-ши?

Тамара тавралла сехĕрленсе пăхать. Ăна тĕнче темшĕн тĕттĕмленнĕ пек туйăнакан пулать. «Уйăх анать пулмалла,— тавçăрса илет вăл.— Ан васкасамччĕ, уйăхăм! Мана пăрахса ан хăвар, тепĕр сехет те пулин çутатсамччĕ! Кĕтсе тăма вăхăт çук, кăнтăрлаччен хĕрĕх çухрăм утмалла. Çитес çĕре çитмеллех. Савнă çынна пулăшас пулсан, хĕре нимле чăрмав та чарма пултараймасть. Шанчăк пур чух утасха. Тĕнче ырă çынсăр пулакан марччĕ, пире пулăшакансем те тупăнма кирлех. Эсĕ те пулăш-ха, кĕмĕл уйăхăм! Анма ан васка, çутат уйăхăм, çутат çулăма!»

## XXI

НИКИФОР ТАРАСОВИЧ УРПАШЕВ, вăтăр çултан иртнĕ йăрăс пӳллĕ çын, парти аслă шкулĕнчен вĕренсе тухнăранпа виçĕ çул хаçат редакторĕнче ĕçлет. Пирĕн калаври ĕçсем пулса иртнĕ вăхăтра вăл отпуска кайнăччĕ, халĕ Хура тинĕс хĕрринчи санаторирен таврăннă та редакци сотрудникĕсене алă парса саламлать.

— Хумова курмастăп, командировкăна тухса кайман пулĕ-çке? — ыйтрĕ вăл.

— Ниçта та кайман, хуларах пулма кирлĕ. Эпĕ сире ун çинчен тĕплĕрех каласа парăп, анчах кунта мар, хăвăр кабинетра,— хуравларĕ Кĕмĕл Петти. Вĕсем редактор кабинетне кĕчĕç.— Аптратса çитерчĕ пире вăл Хум. Кашни кунах тĕрлĕ «художествăсем» туса кăтартать. Виçĕм кун хăй ирĕкĕпе ĕçрен тухатăп, тесе заявлени çырчĕ те унтанпа куçа курăнмарĕ. Шел, пултаруллă ачаччĕ. Çын илĕртни хыççăн кайсах пĕтет. Кĕнеке издательствин илемлĕ литературă редакцине куçасшăн çунать, теççĕ.

— Йĕркипе кала-ха, мĕн пулса иртнĕ кунта эпĕ отпуска кайнăранпа? Тата Хумов заявленийĕ ăçта?

— Папкă ăшĕнче пулма кирлĕ. Акă вăл,— алăпа çырнă хут листине тыттарса каларĕ Серебров.— Унтан литсотрудник командировкăна мĕнле кайса килни çинчен хăй майлă каласа пачĕ.— Вăл ялтан таврăнсанах редакцине жалобă хыççăн жалобă килме пуçларĕ. Телефонпа та шăнкăртаттараççĕ, кунта килсе те калаççĕ. Йăлăхтарса çитерчĕ. Çак фотокарточкă вăл командировкăра мĕн хăтланнине питĕ лайăх кăтартать.— Секретарь редактора Мышкин килсе панă сăн ӳкерчĕкне тыттарчĕ.— Кăшт хăтăрма лекрĕ. Вара, тăна кĕрес вырăнне, вăл заявлени çырчĕ те кунтан тухса кайрĕ.

Урпашев заявление вуласа тухрĕ, ӳкерчĕке çавăркаласа пăхрĕ те шухăша кайрĕ. «Кĕтӳçсĕр юлнă кĕтӳре йĕрке пĕтет, тесе ахаль каламан пулĕ çав,— пăшăрханчĕ вăл.— Хăшĕ айăплă-ши? Серебров — ватă çын, аташасла мар, Хумовран та айванланасса кĕтме çукчĕ. Хам отпуска кайнăранпа ухмаха ермен пулĕ-çке вĕсем?»

— Кăмăлла хуçрăн, Петр Трофимч! Ун пек пуласса ĕмĕрне те кĕтменччĕ. Юрĕ, ыран ирех Микулая кунта чĕнтер. Вăл мĕн каланине илтмесĕр ним тума та пĕлместĕп. Халĕ юлашки вăхăтра тухнă номерсене тупса пар, эп çук чух мĕн çĕмĕрттерсе пурăннипе паллашам.

Секретарь шкапран хаçат тĕрки кăларма пуçланăччĕ кăна, алăка тул енчен шаккарĕç.

— Кĕме юрать-и? — илтĕнчĕ хăюсăр хĕр сасси.

— Кĕрĕр!— терĕ редактор.

Пӳлĕме чăвашла тумланнă хĕр кĕрсе тăчĕ. Тусанланса пĕтнĕ тумтирĕ, хытă ĕшеннине уçăмлă палăртса тăракан сăнĕ, саланса кайма пуçланă çивĕтĕнчен усăнса тăракан çӳç пайăркисем тата йĕпе курăк çинче утса вараланнă пушмаксем — çаксем пурте вăл инçетрен килнине сăмахсăрах каласа пачĕç.

— Эпĕ редактор юлташпа калаçса пăхасшăнччĕ,—пӳлĕмри икĕ çынтан хăшĕ хăйне кирлине тӳрех уйăрса илеймен пирки пĕрре Урпашев, тепре Серебров çине пăхса каларĕ хĕр.

— Редакторĕ эпĕ. Ирт, пукан çине лар!

— Эпĕ — Куракова Тамара. Эсир, тен, ман çинчен илтнĕ пулĕ. Нумаях пулмасть, сирĕн сотрудник ман çырăва пырса тĕрĕслесе кайнăччĕ. Вăл каласа панă ĕнтĕ.

— Илтнĕ, тин кăна сире асăннăччĕ.

«Акă мĕнле хĕр ăсран янă иккен пирĕн Микулая,— хĕр çине сăнаса пăхса шухăшларĕ Урпашев.— Сăн-сăпачĕпе çи-пуçне пăхсан, ăна аскăн йышши теме çук пек туйăнать. Поэт ăна çул хĕрринче шăтса ӳснĕ чечекпе танлаштармалла: ун çине кунĕн-çĕрĕн тусан тăкăнать,

вăл çаплах чечек тĕсне çухатмасть. Итлесе пăхар, мĕн калĕ».

Тамара пукан çине хăюсăррăн ларчĕ те, хăйне тата мĕн тума хушасса кĕтнĕ пек шăпланчĕ.

— Мĕн çинчен каласа парасшăнччĕ-ха эсĕ? Кала, эпĕ итлетĕп,— терĕ Урпашев.

— Манăн сирĕнпе куçа-куçăн калаçасчĕ,— пуçне тата аяларах усса шăппăн каларĕ хĕр.

— Апла тума та юрать,— килĕшрĕ редактор.— Петр Трофимч, хăвар-ха пире Тамарăпа иксĕмĕре!.. Аçтисемччĕ-ха эс? — Хĕр хăш районран килнине пĕлтерчĕ.— Апла эпир кўршĕсемех. Çывăх çул мар, лашапа килтĕн-и, автобуспа-и?

— Çуранах килтĕм. Хăрăм хăрăмлакан пекех хуралса пĕтрĕм. Хулара паллакан çын çук пирки кĕрсе çăвăнма та пулмарĕ. Тирпейсĕр çын тесе ан айăплăрсамччĕ.

«Çук, ку çилхăван та, аскăн та пуласла мар. Петр Трофимч йăнăшни паллах»,— хĕр сăпайлă пулнине сиссе шухăшларĕ редактор.

— Каласа кăтарт эппин, мĕнле нуша çав тери инçе çула çуранах хăваласа кăларчĕ?

Тамара ассăн сывларĕ. Унтан кăкăртан ăшăнса тухакан кăмăллă сассипе юлашки вăхăтра хăй мĕнле тертленсе пурăнни çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе, пĕтĕмпех каласа пачĕ.

— Çак ĕç çинчен Хум Микулайĕ хаçатра çырма пулчĕ, тетĕн-и? Ма çырман-ха вара вăл, пĕлместĕн-и? — ыйтрĕ редактор.

— Вăл çырасси çырнă пулĕ те, эсир, Мышкин элекленине ĕненсе, пичетлеместĕр пулмалла. Укçине халĕ ялта Хумова ĕçрен кăларттартăмăр тесе мухтанса çўрет. Урпашев юлташ, айăпли эпĕ кăна пулам, Хумова тархасшăн ан тивĕрсемччĕ. Вăл никама та усал туман. Статйине хаçатра кăларас мар тетĕр пулсан, мĕн тăвас, каплипех юлтăр, эпĕ хам янă çырăва та каялла илме хатĕр. Нуша тўсесси — маншăн çĕнĕ япала мар, ăна эпир хăнăхнă. Хытă амантрĕç пулсан та чăтăп. Анчах хама пула айăпсăр çын асапланнине тўсме ниепле те вăй çитерейместĕп. Мана кăшт та пулин хĕрхенетĕр пулсан, тархасшăн, каçарăр Хумова. Ĕлĕкхи пекех редакцире ĕçлеттерĕр. Сире эп ĕмĕрĕмĕр ырăпа асăнăп...

Юлашки сăмахне каласан, Тамара питне ывăç тупанĕсемпе хупăрларĕ те хурланса йĕрсе ячĕ. Редакторăн тек иккĕленсе тăрасси пĕтрĕ. Кураковăпа Хумов айăпсăррине халĕ ĕнтĕ питĕ лайăх сиссе çитрĕ. «Кĕмĕл Петти тет тата хăйне,— тарăхса шухăшларĕ вăл секретарĕ çинчен.— Тислĕк Петти тени тĕрĕсрех пулмалла. Мĕнешкел çынсене пĕр сăлтавсăр асаплантарнă! Çук, пенси вăхăчĕ çитсенех хăваласа ярас ăна».

— Лăплан, Куракова юлташ, ак, сивĕ шыв ĕç,— сĕнчĕ редактор.— Хам уйăхĕпех отпускра пулнă пирки çак ĕç çинчен тин пĕлтĕм-ха. Тăхта, эпир Микулая кунта чĕнĕпĕр.

Урпашев тулти пўлĕме тухса Хумова халех тупса килме хушрĕ.

— Килĕнче çук пулсан? — сехĕрленсе ыйтрĕ Серебров.

— Хуть те çĕр тĕпĕнче пултăр — тупса килĕр!— касса татрĕ Никифор Тарасович.

— Эсир мана ĕненместĕр ĕнтĕ,— чунтанах хурланчĕ хĕр.— Ах, мĕн тăвам-ши? Кăкăртан чĕрене кăларса кăтартăттăм...

— Ĕненетĕп, Тамара, эс кунта чăнлăх тупма килнине те пĕлетĕп. Анчах пĕр япала çинчен калама мантăн пулмалла. Пирĕн патра Микулайпа иксĕр ўкерттернĕ картăчкă пур. Хăçан, тата мĕн тума ўкерттертĕр ăна?

Хĕр пуçне чикрĕ. Унăн пит çăмартисем çырла шывĕ сĕрнĕ пек йăмăхланса кайрĕç.

— Унта эпир ыталашса тăни тĕлĕнтерчĕ пулĕ сире. Вăл ниме те пĕлтермест. Фотограф хушнипе эпир, айвансем, кула-кула çапла тăнăччĕ. Халĕ тин хамăр йăнăш тунине сисрĕм. Анчах сиртен ним те пытарас килмест: эпĕ ăна... чун-чĕререн юрататăп. Уншăн халь тесен халĕ шыва сикме те, вутта кĕме те хатĕр. Çавăншăн пире айăпламалла-и? Тĕрĕс мар ку! Редакци сотрудникĕ те этемех вĕт, ăна та савма юрать.

Урпашев савăнăçлăн кулса ячĕ.

— Тĕрĕс, Тамара! Редакцири каччăсем ытти çĕрте ĕçлекен тантăшĕсенчен пĕртте кая мар. Вĕсене юратма та, качча кайма та юрать. Анчах сăн ўкерчĕкне тирпейлĕрех пуçтарса хурас пулать. Унсăрăн усал çынсем тупаççĕ те хăйсем пĕлнĕ пек усă курма пултараççĕ.

Çак вăхăтра алăка шаккаса секретарь кĕчĕ.

— Хумов эсир отпускран таврăннине пĕлнĕ те хăех чупса килнĕ. Сирĕн пата кĕресшĕн...— пăлханса ўкнине пытараймасăр мăкăртатрĕ Серебров.

— Куракова юлташ кунтине пĕлтертĕн-и ăна?

— Çук, ун çинчен асăнман та.

Урпашев темскер шыранă пек тавралла пăхса çаврăнчĕ. Кĕçех унăн куçĕсем урайне çитиех усăнса тăракан сарă пурçăнран тунă кантăк каррисем çинче чарăнчĕç.

— Тамара,— терĕ вăл,— кил-ха кунта, çак чаршав хыçне пытан та эпир мĕн калаçнине шăппăн итлесе тăр.

Хĕр курăнми пулсан вара алăка уçрĕ те Хумова хăй патне чĕнчĕ.

— Сывă-и, маттур каччă? — сассине хăна кĕртекен ялти чăвашăнни пек туса каларĕ Никифор Тарасович.— Мĕн çĕмĕрттерсе пурăнатăн? Лар, лар! Курманни нумай пулать, калаçкалăпăр. Петр Трофимч, эсир те ларăр!

— Чи малтанах сире чип-чипер сывалса

çитнĕ ятпа саламлатăп!— ал тытрĕ Хумов.— Сывви сывах та, ĕçĕмсем питех мар,— сарăпланчĕ вăл.

Вĕсем виççĕшĕ те сĕтел тавра ларчĕç. Редактор аллинче хăй çырнă заявление курсан, Микулай хумханма пуçларĕ. «Ах, эсремет,— шухăшларĕ вăл, Сереброва куçпа виççе,— ман çинчен элеклеме ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Тата иртерех килмелле мĕн, ăс çитерейменĕм. Редакторпа унран малтан курса калаçмаллаччĕ. Тем те пĕр каласа суйрĕ пулĕ-ха. Мана ĕмĕрлĕхех тухса кайнă тенĕ ĕнтĕ. Çук, Серебров юлташ, эпĕ ытла та çăмăллăн парăнаканни мар. Çапăçса пăхар-ха, кам çиеле тухĕ».

— Тĕлĕнтертĕн эсĕ мана, Микулай. Камранкамран, анчах санран кĕтменччĕ ун пеккине. Мĕнле шăна пырса çыртнипе çыртăн çак хута? Мĕншĕн ман вырăна юлнă юлташпа хирĕçсе кайрăн?

— Шăнин ячĕ — Кĕмĕл Петти. Çав пырса çыртсан çырмалла пулчĕ ку заявление,— терĕ те Микулай, хăй командировкăна кайсан мĕнмĕн курни-илтнине, ялтан таврăнсан Серебровпа мĕншĕн хирĕçмелле пулнине йĕркипе каласа пачĕ.

— Петр Трофимч, Хумов çырнă статйине пар-ха, вуласа тухам,— терĕ редактор.

— Астумастăп, тахăшĕ вуласа тухас тесе илчĕ те каялла тавăрса памарĕ. Эсир ыйтасса туйса, паян пуринпе те калаçса пăхрăм. Пĕри те тупса памарĕ,— куçĕсене çĕклемесĕр хуравларĕ секретарь.

— Çапла пуласса сиссе, эпĕ сирĕн валли иккĕмĕш экземплярне илсе килтĕм. Акă вăл!— Микулай Урпашев умне статья ал çырăвне кăларса хучĕ.

Редактор ăна хăвăрт вуласа тухрĕ.

— Петр Трофимч, эпĕ ниепле те ăнланаймарăм: мĕншĕн хаçата ямарăн çав тери ăста çырнă статьяна?

— Малтан унта-кунта согласовать тăвас теннĕччĕ... ерçӳ пулмарĕ,— шăппăн хуравларĕ Серебров.

— Эх, каламаллаччĕ сана пĕр сăмах...—чунтан тарăхса кайрĕ Урпашев.—Халăхран татăлса кайнă хăй еккипе ухмахланса пурăнакан бюрократ таса чунлă комсомолкăна хыпса çăтасси çеç юлнă, эсĕ пур — «согласовать» тесе ларатăн. Хаçат кăларасси — обком ĕçĕ мар, редакци ĕçĕ. Ăна пире шанса панă! Хăçан пăрахăн-ши эс мулкачла сехĕрленсе пурăнма? Ме, ил те пĕр сăмах улăштармасăр набора яр. Ыранхи номерте тухнă пултăр! Ăнлантăн-и?

— Ăнлантăм, Никифор Тарасович. Эпĕ сире урăх кирлĕ мар-и?

— Кирлĕ пулсан, чĕнĕп.—Кĕмĕл Петти тухса кайсан, Урпашев Хумов енне çаврăнчĕ.— Сана та ятлама тивет. Хăй сăмсинчен маларахра мĕн пулнине курайман çын статьюна пичетлеменшĕнех вырăнтан тухаççĕ-и?

— Эпĕ уншăн çеç мар. Пичетлеменни вăл, пысăк инкек пулин те, ĕçрен тухса тарма сăлтав паманнине питĕ лайăх пĕлетĕп. Анчах Серебров мана, Ятмановпа Мышкин йышшисене критиклес вырăнне, айăпсăр хĕре питлесе урăх статья çырма хушрĕ. Хуйхă пырса пуснă айăпсăр хĕре ним сăлтавсăр намăслантарма аллăм çĕкленеймерĕ. Çитменне, вăл таçтан ман сăн ӳкерчĕкне тупнă та шантаж тума пăхрĕ. Вара тӳссе тăраймарăм, кукша пуçне çапса çуриччен хам ĕçрен тухса каям, терĕм...

— Чăнлăха, чунтан ĕненнĕ шухăша хирĕç пыма хушнипе килĕшменни, хăвна ирĕксĕрлеме пуçласан ĕçрен тухса кайма хăраманни, пĕр сăмахпа каласан, йывăр килсен те пуçа усманни — ырлама тивĕçлĕ ĕç ĕнтĕ ку. Айăпсăр çынна хӳтлесе ху нуша курма хатĕр пулни вара темрен те паха. Çавăншăн хисеплетĕп сана, çамрăк тусăм. Çапах та заявлени париччен малтан чăнлăхшăн пĕтĕм вăя пухса çапăçмаллаччĕ. Серебровран вăйли тĕнчере урăх çук терĕн-им? Обком ăçтине пĕлетĕн вĕт, унта каймаллаччĕ. Ăнаçлăх вăл — çутта туртăнакан каçхи лĕпĕш мар, çын темле пысăк талантпа çиççе тăрсан та, ун патне хăех вĕçсе пымасть. Ăна тытас тесен, вăя шеллемесĕр кĕрешмелле, тепĕр чух хаяррăн çапăçма та лекет. Вăй çитмесен — шăлпа çыртса çур, тенĕ авалхи чăвашсем. Çавна та асра тытмалла. Ăнлантăн-и?

— Питĕ лайăх ăнлантăм. Тек нихçан та парăнас çук!— тупа тунă пек каларĕ Микулай.

— Тĕрĕс! Йăвашран Йăван тухать теççĕ. Эсĕ Йăван мар вĕт? Ну, вăл-ку юрĕ-ха, йăнăшасси вăл çамрăк чух кирек камăн та пулкалать. Эсĕ мана редакцине çыру çырнă хĕрпе мĕншĕн сăн ӳкерттернине каласа кăтарт.

— Мĕн калас? Хам ĕмĕрте пĕрремĕш хут куртăм çав тери таса чунлă хĕре. Куртăм та юратса пăрахрăм. Пĕлетĕп: жалобă тĕрĕслес тăвас ĕç вăхăтĕнче ун пек хăтланни — пысăк айăп. Çапах та чĕре хушнинчен нимпе те ирттеймерĕм. Çылăхлă. Ятлас тетĕр пулсан, ятлăр, анчах ăна пăрахма ан хушăр, мĕншĕн тесен пурпĕрех пăрахмастăп! Тамара маншăн сывлăшпа пĕрех, унсăр пурăнма пултараймастăп!

Урпашев сĕтел çинчен сăн ӳкерчĕкне илсе нумайччен тинкерсе пăхса ларчĕ.

— Хĕрĕ чăнахах кăмăллă, хитре. Ун пеккисене хаклама пĕлес пулать. Акă, ил фотокарточкуна. Заявленине те илме пултаратăн.

— Тавтапуç, Никифор Тарасович! Çак саманта ĕмĕрне те манмăп. Хама сирĕн умăрта яланах парăмлă пек туйăп. Савăнтартăр чунăма. Хуйхă-суйхă тĕтре пекех сирĕлчĕ,— хавасланса ӳкрĕ çамрăк писатель. Унтан вăл

заявленине çурса карçинкка тӗпне пăрахрӗ те пӳлӗм алăкӗ патне пычӗ.

— Тăхта-ха, ăçта васкатăн? — ыйтрӗ редактор.

— Ӗçлеме,— терӗ Микулай.— Эрнипех ӗçлеймерӗм вӗт, тумаллисем темӗн чухлех пуçтарăнчӗç пулӗ.

— Эпӗ сана урăх ӗç хушасшăн. Паян пирӗн пата инçетрен пӗр хăна килнӗ. Ăна хула кăтартса çӳрес пулать. Эсӗ тытăнмăн-ши çак ӗçе?

— Ăçта, мӗнле çын вăл? — сыхланарах ыйтрӗ Микулай.

— Йӗркеллӗ çынах. Савнине инкекрен хăтарас ӗмӗтпе вăл хӗрӗх çухрăм çуран утса килнӗ. Мухтава тивӗçлӗ хӗр! Акă вăл, хулӗнчен тыт та урăх нихçан та ан вӗçерт!

Çак сăмахсемпе Никифор Тарасович кантăк каррине туртса уçрӗ. Чăшăлтатакан пурçăн чаршав хыçӗнчен хăй умне савнийӗ тухса тăнине курсан, Хумов мӗнле савăннине сăмахпа калама та, хут çине çырма та хăватăм çук. Ăна куçпа курмасăр никам та тăнланаймӗ. Хӗрӗ хăй те çурхи хӗвел пекех çутăлса кайрӗ...

— Эсӗ мана ăçта илсе каятăн? — ыйтрӗ Тамара, урама тухсан.

— Ăçта пултăр? Хамăр пата ӗнтӗ. Апат вăхăтӗнче аннепе атте килте пулаççӗ. Эпӗ вӗсене санпа паллаштарăп. Ара, мӗн пулчӗ? Ма эсӗ каялла туртăнатăн?

— Кольă, пăх-ха ман çине! Тусан айне пулнă çӳске пуçлă хӗре курсан, тăванусем мӗн калӗç? Тумланасса та эпӗ пулас хунямăшпе хуняшшӗ куçӗ умне тухса тăма хатӗрленнӗ хӗр пек тумланман. Мана вӗсем килтен пӗр сăмахсăр хăваласа ярӗç.

— Тусана çуса тасатаççӗ, тумтир тени — ăс-тăн мар, ăна укçа парса туянма пулать. Эсӗ ăслă хӗр. Ман кил-йышсем çавна юратаççӗ. Малтан эпир çакăнта кӗрсе тухăпăр,— терӗ Микулай, алăкран та пысăк кантăксемпе ялтăртатса ларакан çурт çине кăтартса.

— «Уни-вер-маг»,— сасăпа вуларӗ хӗр метр тăршшӗ саспаллисемпе çырнă сăмаха.— Мӗн тума кӗмелле унта?

— Кăмăлупа, сăн-сăпатупа эсӗ ытти хӗрсенчен кая мар, тумланасса та вӗсем пекех тумланмалла. Магазина кӗрӗпӗр те мӗн кирлине суйласа илӗпӗр. Çапла-и?

Тамара ним те чӗнмерӗ, куçӗсемпе кăна тусне ăшшăн пăхса тав турӗ.

## XXII

ТИН СЕÇ ПИЧЕТЛЕНСЕ тухнă хаçата Хум Микулайӗ алла илчӗ те, ялав пек вӗлкӗштерсе, хăпха патӗнче кӗтсе тăракан хӗре пырса тыттарчӗ.

— Акă вăл, хаклăран та хаклă япала! Ытти çынсемшӗн вăл кулленхи хаçат кăна ӗнтӗ, анчах пирӗншӗн вара анлă çула тухма панă путевкăпа пӗрех пулӗ. Тыт ăна, ӗмӗтленнӗ ӗмӗте пурнăçлассишӗн епле кӗрешнине асăнмалăх усра!

Тамара, сăр шăрши сӗвӗрӗлмен хаçата чӗтрекен аллисемпе тытса, хунар айне пырса тăчӗ.

— «Тӳрӗ кăмăлпа пурăнмалла!» — саспах вуларӗ вăл.— Кольă, питӗ тӗрӗс çырнă эсӗ. Ӗмӗр-ӗмӗр çапла пурăнăпăр. Юрать-и?

— Юрамасăр! Хамăр çеç мар, ытти çынсене те çапла пурăнма чӗнӗпӗр.— Вӗсем хапхаран васкамасăр утса тухрӗç.— Ăçта кайăпăр, киле-и е каçхи хула курма? — ыйтрӗ Микулай.

— Хытă савăннипе кӗçӗр пурпӗрех çывăраяс çук, чунăм ирӗке туртăнать. Хула курса çӳрер. Каçӗ те тӗлӗнмелле лăпкă, шухăшлама та, калаçма та никам чăрмантарас çук.

Вӗсем пӗр-пӗрин çумне лăпчăнчӗç. Пушанса юлнă урамра ура сасси инçете илтӗнет. Тӗттӗм. Хунарсене çур çӗр иртсенех сӳнтернӗ. Урам кӗтессисенче тата магазинсем умӗнче çеç вӗсем сӗм тӗттӗмпе хастарлă кӗрешеççӗ.

Шăкăл-шăкăл калаçса, уçă сывлăшпа чун киленичченех сывласа, нумайччен çӳрерӗç вӗсем. Шуçăм кăвакарма тытăнсан тин чăнкă çыран хӗррине тухса тăчӗç. Таçта аялта тӗксӗм шыв тӳлеккӗн чăмпăлтатса юхать. Йăлăмран вăштăртатса вӗрекен касăк çил хыр шăршипе тулнă уçă сывлăша питрен ачашшăн сапать. Сылтăм енчи тӳпе самантсерен хӗрелсе йăмăхланса пырать. Атăл леш енчи вăрман çийӗн кăшт кăна палăрмалла йăсăрланса тăракан кăвак тӗтрене те хӗрлӗ сăн çапрӗ. Вара хула куçӗсене уçрӗ те канлӗ ыйхăран вăранчӗ. Таçта инçетре халăха ӗçе тытăнма чӗнекен завод гудокӗ хăватлă сасă кăларчӗ...

Тул çутăлнăçемӗн çутăлса пырать. Анатри сăртсем хыçӗнчен хӗмленсе тухнă хӗвел сурăх çăмӗ пек кăпăшка пӗлӗтсем хушшипе çӗр çине ăшшăн пăхрӗ. Çак вăхăтра çил амăшӗ те вăранчӗ пулас: хăватлă çуначӗсене уçа-уçа хупса каç сивелнӗ сывлăша варкăштарса йăлăмри тӗтрене хăвăрт сирчӗ, унтан шурă пӗлӗтсене таçта хуса ячӗ те кăвак тӳпене тасатрӗ. Туран пысăк пăрахут ишсе анни курăнчӗ. Пристань тӗлне çитсен, вăл çӳлӗ çыран хӗррипе сапаланса ларнă чăваш хулине вăрăммăн шăхăртса саламларӗ.

— Епле илемлӗ Атăл çинчи ир!— терӗ тавралла ытарайми савса пăхса тăракан Тамара.— Ӗмӗрне те манас çук ăна.

— Илемлӗ ир. Пирӗн пӗрле пурăнса ирттерес пурнăçри малтанхи ир,— хушса хучӗ Микулай.

Унтан вӗсем, алран ал тытăнса, ӗçе васкакан халăх хушшине кӗрсе çухалчӗç.

ХЫҪСАМАХ

Халӗ ӗнтӗ авторӑн Хумов статйи пичетленнӗ хыҫҫӑн «Ҫутӑ маякра» пулса иртнӗ улшӑнусем ҫинчен каласа кӑтартмаллаччӗ. Анчах вӑл, повеҫ пысӑкланса каясран хӑраса, урӑх пӗр сыпӑк та ҫырас мар, терӗ. Асӑннӑ колхозра мӗн-мӗн пулнине пӗлесшӗн ҫунакансем «Колхозник» хаҫатӑн 165-мӗш номерне тупса вулама пултараҫҫӗ. Тӑваттӑмӗш страницӑра «Хаҫатра ҫырнӑ хыҫҫӑн» ятлӑ заметкӑ пур. Унта ҫапла каланӑ:

«Пирӗн хаҫатра «Тӳрӗ кӑмӑлпа пурӑнмалла» ятлӑ статья пичетленнӗччӗ. Ун хыҫҫӑн эпир ҫырусем нумай илтӗмӗр. Хамӑр вулакансене эпир райкомран килнӗ ҫырӑва ҫеҫ кӑтартас терӗмӗр. Акӑ вӑл:

«Хисеплӗ редактор! Хаҫатра ҫырни тӗрӗс пулчӗ. Хум Микулайӗн статйине малтан бюро ларӑвӗнче, унтан «Ҫутӑ маяк» колхозра сӳтсе яврӑмӑр. Ятманов юлташ тунӑ йӑнӑшсене пӗтӗмпех йышӑнчӗ, малашне ялти ҫамрӑксемпе тӗрӗс ӗҫлеме тата колхоз демократине пӑсмастӑп, тесе сӑмах пачӗ. Ҫавна шута илсе, ӑна пӗрреллӗхе выговор ҫеҫ патӑмӑр. Колхозниксем пухура Мышкина тӗрӗс ӗҫлеменшӗн бухгалтертан кӑлармалла, Кураков ҫемйине тепӗр хут колхоза илмелле турӗҫ. Тамара Куракова халӗ малтанхи пекех кукурузӑ звенине ертсе пырать, ашшӗ те госпитальтен таврӑнсанах механик ӗҫне тума пуҫларӗ. Колхозри комсомол организацин отчетлӑ пухӑвӗ пулса иртрӗ. Ухвандеева бюрон ҫӗнӗ составне кӗртмерӗҫ, ун вырӑнне Куракова Тамарӑна суйланӑ.

Парти райкомӗпе райӗҫтӑвком сирӗн хаҫатра кӑтартнӑ ытти ҫитменлӗхсене хӑвӑртрах пӗтерме тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑннӑ.

КПСС райкомӗн пӗрремӗш секретарӗ —

Кузнецов».

Мускав — Дубулты,
1961—1962 ҫҫ.

---

**Георгий ЕФИМОВ**

* * *

Сывлӑш, хурӑн шывӗ евӗр, тутлӑ.
Чаплӑ туй тӑваҫҫӗ кайӑксем.
Ҫурхи кун мӗн-ма-ши питӗ шутлӑ?
Ҫимӗҫ тӗвви ҫакрӗҫ йывӑҫсем.

Пӗр хӗре куҫ хывнӑччӗ кӑна эп:
«Кӗҫӗр, ак, калап», тенӗ чухне
Тӑтӑм юлтӑм, халӗ мӗн тӑвайӑп,
Тӑтӑм юлтӑм эпӗ пӗччене.

Ҫӗрӗпех-ҫке кӗреке шавларӗ,
Мӑшӑрланчӗ икӗ савнӑ чун.
Кӗвӗҫсе курмашкӑн та каймарӑм,
Тарӑхса ҫӳрерӗм эп ун-кун.

Хире тухрӗ ирхине ҫӗн мӑшӑр,
Упӑшки ак ларчӗ руль умне.
Арӑмӗ, хӗвел пек, кулчӗ ӑшшӑн,
Вара тӑчӗ сеялкӑ хыҫне.

Пиҫсе ҫитнӗ ҫӗр ытла та ыррӑн
Карӑнать те —
Тӗмсӗлсе ыйтать:
— Акӑр ӗнтӗ... вӑхӑт... акӑр тырӑ,
Тулӑ пӗрчисемшӗн ӑш ҫунать...

Мотор шавӗ тӑрие хупларӗ,
Ытамларӗ нӳр тӑпра пӗрче.
...Ахаль мар пуль ялта туй шавларӗ.
Пурте,
Пурте хӑй вӑхӑтӗнче!..

Сывлӑш, хурӑн шывӗ евӗр, тутлӑ.
Чӗп кӑларнӑ мар-и шӑнкӑрчсем?
Ҫурхи кун мӗн-ма-ши питӗ шутлӑ?
Чӑмӑртанӗҫ ӗнтӗ улмасем.

# Алексей Сурков сăввисем

Кăçалхи мартăн 18-мĕшĕнче пирĕн республикăри суйлавçăсем, пурте пĕр кăмăллă пулса, вырăссен халăхи паллă поэтне, СССРти писательсен Союзĕн правлени секретарьне Алексей Александрович Суркова СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулма суйларĕç.

Эпир кунта А. А. Сурковăн темиçе сăввине пичетлетпĕр.

## Коммунистсен маршĕ

Эпир вăтăр ултă мĕльюнăн
Пыратпăр пĕр ĕмĕтпеле.
Сахал-и пиртен ўксе юлнă,
Çунтарнă пире чĕрĕлле.

Пире яланах вилĕм суннă,
Хуплană хаяр элекпе.
Таптанă та сĕмсĕррĕн кулнă
Çўренĕшĕн çут тĕллевпе.

Рабочи клас çирĕп пилленĕ
Ăру шăпине хамăра.
Çулпуçăмăрсем Маркспа Ленин
Пире çирĕплетнĕ вутра.

Эпир ĕмĕрех харсăр пулнă,
Тăшман умĕнче найкăшман.
Эпир, вăтăр ултă мĕльюнăн,
Ĕçре çирĕпленнĕ ялан.

Эпир вăтăр ултă мĕльюнăн —
Çапăçăва тухнисем.
Кам ирĕкшĕн, кам хĕрў юнлă —
Каятпăр хыçран халь ертсе.

Эпир халăха йăлтах панă,
Çулпуç вăй-хал хушнă чуна.
Эпир пусмăртан хăтарнă
Тĕнчери миллиард çынна.

Хурçă ту евĕр çирĕп тăратпăр,
Хĕрет кĕрешў хĕрнĕçем.
Пĕр кăмăллăн харăс утатпăр
Октябрьпе вăй илнисем.

Паратпăр-çке çĕнĕ саккунăн
Мĕн пур ырлăхне çĕршыва.
Эпир, вăтăр ултă мĕльюнăн,
Никам çĕнми паттăр хăват.

Эпир, вăтăр ултă мĕльюнăн,
Пыратпăр пурне те чĕнсе.
Пирĕн рете ĕнтĕ тăнă
Мĕн пур таса чунлă çынсем.

Вилес умĕн урнăн шавлаççĕ
Мул хуçисем хĕрĕнсе,
Тавăрмашкăн хăюллăн тăраççĕ,
Çĕкленеççĕ колонисем.

Ялав вĕлкĕшет-çке вĕçрен-вĕç,
Тăрать çапăçмашкăн чура.
Хĕрў çулăма сўнтереймĕç,
Вăй çук — ылтăнра, тăхланра.

Тронсен кунĕсем шутлă юлнă,
Ишеççĕ вĕсен никĕсне.
Эпир, вăтăр ултă мĕльюнăн,
Çĕклер коммунизм çуртне!

*Г. ЕФИМОВ куçарнă.*

* * *

Текех спортсменла ыткăнмашкăн пулмасть-тĕр:
Çитет кĕркуннем, чакарать хăвата.
Пĕр-пĕр ухмахрах шуйттана ман тупасчĕ
«Ту çамрăк!» тесе чун хума саклата.

Анчах политграмотă ассăн сывларĕ,
Вăранчĕ те ак пўрнипе вăл юнать:

«Шуйттан — иртнĕ пурнăçăн тĕшмĕшĕ мар-и!
Халь тин коммунист пăхăнаймĕ ăна!»

Çапла, çамрăк ĕмĕрĕм тек таврăнаймĕ,
Эпир Фаустла хăтланни — кулăшла.
С ă м а х — ак вăл вилĕмсĕрлĕх: тăрăшсам-и,
Çине тăр, шыра: сан ăна тупмалла.

* * *

Иртет иккен кун-çул, шуралтăмăр пăртак,
Шăратнă сăвăсем аса килеççĕ ак:
«Эп, ывăннă чура, шутлап инçе тарма —
Таса ачашлăхпа ĕçре пĕр савăнма»[1].

Çак сăмахсен ăсне туйманччĕ эс хальччен,
Çулта астурăн та пуçларăн ăнланма:
Эс ывăннă чăнах, мехел çитет иккен
Кăштах ларса канма, кăшт сывлăш çавăрма.

Анчах та хăй, çакна çырса хăваракан,
Хыпса та кĕрешсе, чĕр пурнăçа савса,
Писсе ачашлăхран, тўлек канăçлăхран,
Чунне кăвар çинче вăл янă çунтарса!

Пире те, савнă тус, канма пўрмен, паллах:
Çар-йыш çаплах куçать, çулсем инçе-инçе...
Юлташусем санран иртсессĕн малалла,
Ăçтан вĕсен шайне эс çитĕн пĕр-пĕччен!

[1] Пушкин сăмахĕсем.



СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ А. А. Сурков чăваш писателĕсем патĕнче. Сулахайран сылтăмалла: А. Қăлкан, В. Краснов-Асли, А. А. Сурков, А. Алга.

* * *

Кăмакара хаваслăн вут çунать,
Çур çĕрелле эп ĕçĕме пĕтертĕм.
Çӳлте таçта пĕр самолетваскать,
Аран çитен сасса тăрса итлерĕм.

Ак календарĕн тепĕр кун листи
Выртать ман чун çине, çулсем иртеççĕ...

Хăш чух çӳлтен çӳле сын çул тытни —
Вăраххăн аннинчен те çăмăл, теççĕ.

Чăнах-ши! Пулĕ... Çăлтăр хушшинче
Çап-çутă уйăх сар хĕр пек илемлĕ.
Шухăшлам мар кун-çул иртни çинчен;
Час çуркунне çитет, ма чун киленмĕ!

* * *

Çук ĕнтĕ шурă хурăн, пусма-çи,
Çук шăнкăр-шăнкăр шăнкăрав сасси.

Мана хуланалла илсе каян
Лаши те, урапи те çук паян.

Усет лăс курăк сукмаксем çинче,
Анне тăраймĕ нӳр çĕр айĕнчен.

Мăрье те тĕтĕм кăлармасть хитрен —
Пӳртне те ишнĕ тахçанах иккен.

Вут-шанкăлăх туранă хурăнне,
Кун-çул сиреймĕ чунăм хурлăхне.

Эп хальчченех куратăп тĕлĕкре:
Ачалăхăм утать инçе çĕре;

Аннем, куççулĕпе ӳле-ӳле,
Кури-курми пăхать ман çинелле;

Шывра йăлтăртатаççĕ пуллисем,
Юрлаççĕ, ăсатса, кайăкĕсем;

Тăрса юлса пыраççĕ каялла
Сăрланă çухрăм юписем — ула;

Юлаççĕ пăхăр пек хыр вуллисем,
Юлать ачалăхри мĕн пур илем.

. . . . . . . . .

Çапла çав иртнĕ хытă самана
Çăлса кăларчĕ кĕрешме мана.

*П. ХУСАНКАЙ куçарнă.*

Г. КРАСНОВ-КĔÇЕННИ

# ИСЕВЕТ

ИСЕВЕТПЕ ЛЕВЕНТЕЙ иккĕшĕ мĕн ачаран туслăччĕ.. Пĕр урамра, пĕр йĕркере, пĕр-пĕринчен икĕ кил урлă кăна пурăнатчĕç. Пĕр шкулта, пĕр класра вĕреннĕ, пĕр пионер отрядĕнче, пĕр комсомол организацийĕнче ӳссе çитĕннĕ.

Пĕр-пĕрне чунтанах килĕштернĕ, юратнă. Анчах ку юрату хĕрпе каччă юратăвĕ пек пулман. Арçын ачапа арçын ача, хĕрачапа хĕрача туслăхĕ пекрех пулнă вăл. Ялан вĕсем пĕрле пулма тăрăшнă. Уйран-и унта, вăрмантан-и таврăннă чух ялан пĕрле калаçса таврăннă. Хушăран Исеветсен пӳрчĕ умĕнчи ватă йăмра айĕнче те ларнă. Вăрахчен тата питĕ ăшшăн калаçнă вара вĕсем ун пек чухне.

Нихçан та пĕрне-пĕри савни темен, юрататăп тесе те каламан. Çапла пулин те, хăйсем те, ытти çынсем те вĕсем пĕр-пĕрне юратнине лайăх пĕлнĕ. Исевете комсомол организацийĕн секретарьне суйласан, Левентей, хăйне хисеп тунă пекех, пĕтĕм чунтан савăннă. Левентейĕн ватă аслашшĕ вилсен, Исевет хăй ашшĕ вилнĕ пекех, куççуль шăпăртаттарсах макăрнă.

...Малтанах Исевет нимĕн те пăшăрханман. Пурнаççĕ — çитнĕ, аван пулнă. Юратнă-и, юратман-и пĕр-пĕрне?— кун çинчен вăл, тĕрĕссипе каласан, шухăшламан та. Ăна пурнăç урăхла пулма пултарайман та пек, çакнашкалах пулмалла пек туйăннă. Анчах пĕрре акă вăл хăй Левентее хĕрачана юратнă пек мар, çук, пачах урăхла юратупа юратнине туйса илчĕ.

Ун чухне Исевет хулари виçĕ уйăхлăх курсран таврăнни иккĕмĕш талăк кăначчĕ-ха. Вырсарникунччĕ. Хĕрипраçсем кăçалхи çул чи малтанхи хут ял çывăхĕнчи вăрман уçланкине выляма тухнăччĕ.

...Пирвайхи çумăр çуса иртнĕччĕ. Çăвăнса тасалнă нӳрлĕ хурăн тунисем çинче хĕвел шевли вылятчĕ. Йăмрасем çинче хура кураксем кранклататчĕç. Кашни турат çинчех тенĕ пек, курак йăви çакăнса тăратчĕ. Кусене çапах вырăн çитместчĕ, куран, кранклатса хăлхасене çуратчĕç, сăмсисемпе тĕрлĕ патак-çатрака тултатчĕç.

Сулахайра Шăнкав шывĕн ейĕвĕ таçта çити сарăлса кайнăччĕ, вăл пысăк кӳлĕ пек илемлĕн çуталса выртатчĕ.

Вăрман ăшĕнчи çырма-лакăмсенче шыв кĕрлесе юхатчĕ. Туратсем çинче çунат çапса шăнкăрчсем юрласа ларатчĕç.

Исеветĕн çамрăк чĕри те ун чухне çав шăнкăрчсем пекех савăнса юрлатчĕ ĕнтĕ.

Уçланкăн пĕр хĕрринче арçын ачасем кĕпĕрленсе тăратчĕç. Хут купăс сасси илтĕнетчĕ. Левентейĕн çутă кăвак сатин кĕпи таçтанах курăнса, Исевете кăчăк туртса çĕклентерсе-савăнтарса тăратчĕ.

Пĕр çур сехет юрланă-савăннă хыççăн Исевете — савăнăçне ниçта хума пĕлейменрен-и ĕнтĕ — Левентейпе курса калаçасси килчĕ. Вăл юрлама чарăнчĕ те йĕри-тавралла пăхма пикенчĕ. Хальхинче ниçта та çутă-кăвак кĕпе курăнмарĕ.

Исевет чĕри вара çавăнтах, теме сиснĕ пек, пăшăрханма пуçларĕ.

Тата пĕр çур сехете яхăн иртрĕ. Левентей çаплах çук-ха. Вара пирĕн хĕр чăтса тăраймарĕ. Тантăшĕсенчен уйрăлчĕ те вăрман ăшнелле кĕрсе кайрĕ.

Пĕлтĕр Исевет ик-виç хутчен те Левентейпе пĕрле çак вăрманта çӳренĕ. Кунта вăл Левентей кăмăллакан кашни вырăнах тенĕ пек пĕлет. Левентейĕн чи юратнă вырăнĕ кунтан кăшт сулахайраччĕ. Унта вĕлтĕрккe шурă хурăнпа пĕр яштака чăрăш çума-çумăн ӳсетчĕç. Хурăнĕ хунав йывăçчĕ.

Кирлĕшĕн мар, мăшкăллашса кăна каснă чухнехи пек, питĕ çӳлтен каснă йывăç тункати çине мăк витсе кайнăччĕ. «Хурăнпа чăрăш пĕр-пĕрне юратнă,— тесе каласа панăччĕ Исе-

* Роман сыпăкĕсем.

вете Левентей, чи малтанхи хут иккӗшӗ ҫак вырӑна ҫитсе тӑрсан.— Анчах пӗринне тахӑшне ҫак юрату кӑмӑлне кайман. Вӑл вара хурӑна касса пӑрахнӑ. Хурӑнӗ те хӑй тӑшманне парӑнасшӑн пулман: паттӑр хунав кӑларнӑ та каллех савнийӗ ҫумне йӑпшӑннӑ... Куратна, епле вӑл хӑйӗн турат аллисемпе яштака чӑрӑшне, чун савнине, темиҫе тӗлтен ыталаыталаилнӗ».

Исевет вӑрмана Левентейпе иккӗшӗ килсен яланах ҫав тункатa ҫине ларма юрататчӗ. Халӗ вӑл ак ниҫта та мар, тӳрех ҫавӑнталла утрӗ.

Утрӗ те утасса... ҫук, хӑй валли вӑл канӑҫ тупаймарӗ. Ун куҫӗсем ҫав хунав хурӑн патӗнче Хитре Ануш ларнине курчӗҫ.

Хитре Ануш хӑйӗн улма-чӑпар симӗс кӗпине тӑхӑннӑ, сарӑ пурҫӑн чӗрҫитти ҫакнӑ, хӗрлӗ шӑрчануй тутӑр ҫыхнӑ. Ахаль те хитрескер, капла тата та хитререх курӑнать. Вӑл Исевет ларма юратакан тункатa ҫинче аҫтӑрхан мӑйӑрӗ катса ҫисе ларать. Левентей (пӗр шухӑшласан, ӑсран тайӑлмалла вӗт!) ун умне тӑнӑ та хӑйӗн шап-шурӑ пӳрнисемпе унӑн чӗрҫитти кӑкӑрлӑхӗн ҫаккисене тӳрлеткелесе тӑрать.

Левентейпе Ануш иккӗшӗ питӗ телейлӗ пулас: ҫавӑнпа та-и, тен, вӗсем хӑйсем ҫывӑхне килсе тухнӑ Исевете асӑрхамарӗҫ те.

— Тахҫанах пирӗн санпа иксӗмӗрӗн пӗрле пулмалла пулнӑ-мӗн,— тет Левентей, аллисемпе хӑлаҫланса. Ун куҫӗсем мӑшӑр сенкер ҫӑлтӑр пек йӑлтӑртатса вылянса тӑраҫҫӗ. Унтан вӑл Хитре Ануша ыталаса илсе, тутинченех чуп тӑвать.

Ануш (намӑссӑр!) хӑнк та тумарӗ. Ӗҫерӗнме мар, ирӗлсе каҫсах кайрӗ. Кӑна Исевет хӑй куҫӗпе хӑй курман пулсан та, Ануш хавассӑн кӑвакарчӑн пек кӑлтӑртатса кулса янинченех, паллах ӗнтӗ, пӗлнӗ пулӗччӗ.

Исевет чӗри ҫурмалла ҫурӑлса кайрӗ. Халех, ҫак самантра-секундрах унӑн кунтан тапса сикмелле! Вӑл, чӑнах та, пӑрӑнса чӑтлӑх ӑшнелле кӗрсе каясшӑн пулчӗ. Анчах урисене ниепле те вырӑнтан хускатаймарӗ. Қалӑн, вӗсем сасартӑк ҫӗр айне тымар ярса, ҫак хӑй тайӑннӑ ҫирӗп юман пек ӗмӗрлӗхех пӗр вырӑна хытса ларнӑ. Куҫӗсем хӑйӗн ҫапах курчӗҫ-ха, хӑлхисем те илтрӗҫ-ха.

— Санӑн Исеветӳ пур вӗт...— терӗ те Ануш каллех кӑлтӑртатса кулса илчӗ.

— Исевете эпӗ йӑмӑка юратнӑ пек кӑна юрататӑп. Нихҫан та вӑл манӑн савни пулас ҫук.

...Исевет пӗтӗм вӑйне пухса (чун хавалӗпе тенӗ пек) урине курӑк ӑшӗнчен туртса кӑларчӗ те, «чӑх куҫӗ» пулнӑ ҫын пек йывӑҫсем ҫумне пыра-пыра ҫапӑнса, чӑтлӑх ӑшнелле кӗрсе кайрӗ...

Ҫакӑнтан вара вӑл хӑй Левентее ҫитӗннӗ хӗрачасем хӑйсен савнӑ каччисене юратнӑ пек юратнине питӗ лайӑх ӑнланса илчӗ.

Исевет чунтанах тарӑхрӗ. «Мӗншӗн-ха Левентей ӑна мар, ҫав пушӑ пуҫ Ануша юрататъ?!. Ҫитменнине тата ҫынтан, Қиуртан туртса илет?!. Қиурӗ пӗлтӗртенпех Ануша качча илесшӗн касӑхса ҫӳрет вӗт... Ҫук, Левентее каплах хӑварма юрамасть-ха. Пӗрре лайӑх кӑна ӑса кӗртмеллех». Вара Исевет, йӑлӑнтарса, Левентейпе пачах калаҫми пулчӗ. Курсан-тусан та, лешӗ унпа сӑмахласшӑн пулсан та, унтан пӑрӑна-пӑрӑна кайрӗ.

Вӑхӑт кӗтмест, шӑвать, хӑйӗн ӗҫнех тӑвать. Ҫапла ӗнтӗ акӑ колхоз уявӗ те персе ҫитет. «Ну, уявра Левентее ӑса кӗртетӗпех», тесе ӗмӗтленет Исевет. Уявӗ вара Исевет хуйхине ҫӑмӑллатма мар, ӑна акӑ икӗ урараниах ҫапса хуҫрӗ.

* * *

— Исевет, ман санпа калаҫмаллисем пур,— терӗ Левентей, уяв кунӗ ӑна сценӑ ҫывӑхӗнче шыраса тупса.— Мӗскер ҫак эсӗ яланах манран тарса ҫӳретӗн?..

Исевет, ҫав тери ӗҫлӗ ҫын пек, аллине ҫеҫ сулчӗ. Хӑй ӑшӗнче, хӑй ӑшӗнче вара Исевет халех Левентее хулӗнчен хыттӑн пӑчӑртаса тытса пӗтӗм халӑх умӗнчех (ҫапла, пӗтӗм халӑх умӗнчех!) вӑрмана, пӗр-пӗр улах вырӑна сӗтӗрсе кӗме хатӗрччӗ. Калаҫнӑ та пулӗччӗ ҫав вӑл унпала! Чӗри ҫинчи пӗтӗм хуйхине уҫса парӗччӗ.

«Ах, Левентей тусӑм, пӗлетне, эпӗ сана юрататӑп вӗт. Малашне пӗр кун та, пӗр сехет те сансӑр пуҫсӑр пурӑнма пултараймастӑп. Питӗ йывӑр, йывӑр мана пӗччен. Ухмаха тухатӑп пуль ӗнтӗ эпӗ сан ҫинчен шухӑшлашухӑшла. Ну мӗн тума, мӗн тума ҫапла хӑтланатӑн-ха эсӗ? Мӗн пур ҫав Анушӑн? Илемлӗ сӑнлӑ, яка пит-куҫлӑ? Ҫӗлен те яп-яках вӗт. Қам-ха ӑна савни туса унпа килӗштерсе пурӑнакан пур?.. Ах, Левентей, Левентей»,— тейӗччӗ вӑл, ун ҫумне ачашшӑн йӑпшӑнса. Анчах вӑл Хитре Ануш вӑрманта, Исевет хӑй ларма юратакан тункатa ҫинче ларнине (унтанпа темиҫе уйӑх иртрӗ пулин те) манайманччӗ ҫав. Манма мар, ҫав ӳкерчӗк унӑн куҫӗ умӗнчех тӑратчӗ. Левентей ун чухне каланӑ сӑмахсем те ун ӑшӗнчехчӗ, хӗрача чӗрине арман чулӗ пек пусарса, этем ывӑлӗ-хӗрӗ тӳсейми ыраттарса выртатчӗҫ.

Левентей Исевете час-часах пӗр сӑмахранах, куҫран пӑхсанах ӑнланатчӗ пулин те, хальхинче вӑл тусӗ хӑй ӑшӗнче мӗскер шухӑшланине сиссе илеймерӗ.

Исевет кăмăлсăр пулнине туйрĕ вăл, унăн сăлтавне те кăштах сĕмленчĕ... Анчах Исевет хăйне çапла качча юратнă пек юратасса аснепилне те илмерĕ-ха. Вăл Исевет çине çаплаххa хăйпе пĕр-тăван йăмăкĕ çине пăхнă пекех пăхрĕ. Ку кăна мар, Исевет çитĕнсе çитнĕ, вăл ĕнтĕ качча каймалли хĕр тенĕ пулсан та вăл, шет, ĕненсех кайман пулĕччĕ-и. «Паллах, Исевет питĕ ăслă хĕрача, лайăх комсомолкă. Унпа пысăккисемпе каласмалли япаласем çинчен те калаçма пулать. Сăмахран, паян ак Левентей хăй Ануша çураçма шутлани çинчен унпа калаçасшăнччĕ, пĕрле канашласшăнччĕ. Авланасси вăл — пурнăçра пысăк ыйту-çке-ха. Кунта ĕçе пули-пулми çынпа мар, йĕркеллĕ, пурнăçа лайăх пĕлекен, хурапа шурра курнă çынпа канашлани кирлĕ. Çавăн пек сын пулать ĕнтĕ Исевет. Анчах вăл çапах та хăй питĕ самрăк-ха,— тенĕ пулĕччĕ.— Ытла ĕненмесен, пăхăр-ха эсир, епле вăл пĕр кулма тытăнсан каçса кайса, пăркалана-пăркалана варне тытса, ахăлтатса кулнине. Куççуллийĕ тухать вĕт. Епле тата çав кулнă чухне тухнă куççульне пĕчĕк ачасем пек икĕ чăмăрĕпе шăлкаланине асăрханă-и эсир?.. Çук, качча каймалли хĕр нихçан та ун пек хăтланмасть»,— тенĕ пулĕччĕ Левентей татăклăн.

Исевет, Левентейрен уйрăлсан, тӳрех колхоз счетовочĕ Киур патне утса пычĕ.

— Мĕн эсĕ паян питĕ салху?— терĕ те вăл ăна пĕр ывăç мăйăр пачĕ.— Хăна пул.

Каччă çунатланса кайрĕ:

— Эпĕ сана мăйăр çимест пуль тесе... Канихвет çиетне?

Çапла каларĕ те Киур кĕсйинчен канфет ывăçласа кăларчĕ.

— Çăкăр-тăвар хире-хирĕç эппин?— шăнкăртатса кулса илчĕ Исевет.— Юрататăп чипер те йĕркеллĕ çынсене.

Юлашки сăмахсене вăл, сывăхри Левентей илттĕр тесех пулас, юри хытă каларĕ.

— Эсĕ, Киурăм, пачах савăнма пĕлместĕн. Хамăн вĕрентес мар-и, пĕреххут.— Кăна та вăл çаплах хытă сасăпа каларĕ. Унтан вăл ăна пĕр кĕтмен çĕртен хулĕнчен ярса тытрĕ те, вĕсем вара иккĕшĕ пăшăл-пăшăл пăшăлтатса хĕрипрассен ушкăнĕ патнелле утрĕç.

Левентей çакна питĕ лайăх курчĕ ĕнтĕ.

* * *

Пĕр вун пĕр сехетре çамрăксен пултарулăхне кăтартма пуçларĕç. Чи малтанах хор, асаттесен йăлипе, «Асран кайми аки-сухине» юрласа пачĕ. Унтан симĕс улăхра хальхи чăваш кĕввисем илемлĕн шăранса юхма пуçларĕç.

...Пăртак тăрсан акă пирĕн Исевете те юрласа пама вăхăт çитрĕ.

Исевет сценă çине именерех хăпарчĕ. Сасси уçах тухмĕ тесе пăшăрханчĕ. Çынсем çине пăхса илчĕ те — вара çавăнтах хăй ăçтине пĕтĕмпех манса кайрĕ пулас. Кăвак тӳпене вăскамасăр лăпкă та çепĕç сасă вĕлтĕртетсе вĕçсе улăхрĕ. Вăл хавaслăн та, çав вăхăтрах салхуллăн та илтĕнчĕ.

Исевет çынсен чунĕсем патне темĕнле йăпшăнса-йăпшăнса çывхарса пынă пек туйăнчĕ. Çапла çуллахи йăлтăркка илемлĕ кун пĕчĕк ачасем чечексем çинче вĕçсе çӳрекен хитре лĕпĕшсене ярса тытас тесе, куç сиктермесĕр пăхса, аллисене тăсса хуллен-хуллен йăпшăнса утса пыраççĕ.

Ăна çынсем итлесшĕн-и, итлесшĕн мар-и, халлĕхе Исевет кун çинчен хăй те-ха пĕлмест пек туйăнать. Тен, çавăнпах та-и сасси унăн ытла хăюллах илтĕнмест-ха. Анчах акă вăхăт нумай та иртмест, ун сасси вăйлăланнăçемĕн вăйлăланса, хăюлланнăçемĕн хăюлланса пырать. Хытăран хытăрах çын чĕрисен алăкне шаккаканă пек туйăнать.

Çынсем сисеймеççĕ те — ачаш, черченкĕ сасăсем вырăнне янравлăрах та янравлăрах сасăсем илтĕнме пуçлаççĕ. Юлашкинчен пĕтĕм тавралăх янрама тытăнать. Халĕ ĕнтĕ акă Исеветĕн чăп-чăмăр кăкăрĕ куç кĕрет хăпарса ӳссе, пысăкланнăçемĕн пысăкланса пырать. Хĕрача пĕтĕм тăлă-пĕвĕпе пĕрре малалла туртăнать, тепре çӳлелле хăпарать. Вăл, шапшурă кĕпе тăхăннăскер, çĕр çинчен хăпса халь-халь пĕлĕте вĕçсе хăпарма тăнă та ниепле те хăпарма пултарайман шурă акăш пек курăнать. Пĕрре вăл хăй вĕçсе хăпарайманшăн хăй çине тарăхать те пек, тепре савăнать пек те туйăнать.

Исевет юрри çынсен чĕри патне çитрĕ ĕнтĕ. Çитрĕ кăна мар, вăл вĕсене ыталаса çавăрса та илчĕ. Халĕ Исевете хăйне ют çын пек хăюсăррăн тыткалама кирлех те мар. Халь вăл кунта хăй хуçа. Çынсен чĕрипе мĕн тăвас тет, çавна тума пултаракан юмахри хăватлă асамçă хĕр ĕнтĕ вăл.

...Исевет сасси шăпланчĕ. Çынсем ытарайми тутлă ыйхăран ниепле те вăранасшăн пулман пек, хĕрачан йĕс шăнкрав пек сассине татах илтесшĕн пулнă пек, нимĕн те чĕнмесĕр кĕтсе тăчĕç. Унтан Исевет халха алкисене ялтăртаттарса сценă картлашки çинчен анма тытăннине асăрхарĕç те, шарлаттарса алă çупса ячĕç.

Киур, уксахне пăхмасăрах, Исевет патне пуринчен малтан чупса çитсе алă пачĕ.

— Питĕ аван, аван... аван,— тесе тăчĕ вăл, савăннипе урăх нимĕнле сăмах та тупса калаймасăр.— Аван.

— Маттур, Исевет!— тесе, аллине тăсса, инçетренех кăшкăрса, ун патне пырса çитрĕ

Левентей те.— Пултаран! Анчах пĕр çĕрте, ман шутпа, эсĕ тĕрĕс мар юрларăн. Хитрех мар тухрĕ.

— Мана пырать, эпĕ хам та хитри мар,— терĕ те Исевет, вăрт çеç кутăн çаврăнса тăрса, Киурпа калаçма пуçларĕ.

* * *

Тата тепĕр сехет иртсен, уçланкăра, шурă чатăр карса тунă кухньă патĕнче колхозниксем уяв апатне ларчĕç.

Вăрăм сĕтел çинче, чи курăнмалли вырăнта — икĕ пысăк пичке. Унта иккĕшинче те — сим пыл.

Пичке хуçи пулма, хай Хветте каларĕшле, пичке председательне правленире ятарласа Якку Кирукне уйăрнă. Мĕншĕн тесен ĕçкĕ тĕлĕшĕнчен ялта ăна çитекенни пĕри те çук: çур литра вăл пĕр сывламасăр ĕçсе яма пултарать. Виçĕ туй ĕçкине ĕçсен те урараи ÿкмест вăл. Ĕçтернĕçемĕн паттăрланса пырать.

Кирук çынсене хăналиччен малтан пичкери сим пылне хăй тутанса пăхнă пулмалла. Çавăн чух, тен, асăрхаймасар, алтаре çине ытларах та янă-и. Çавăнпах пуль ун пичĕ нар пек хĕрелсе кайнă та йăлтăр-йăлтăр çиçсе çуланса тăрать. Çавăнпах пуль ытлашши хавасла, ытлашши правур, ытлашши нумай калаçать.

Сарă сатин кĕпепе вăл, кĕпе çухине ярханах янă, çаннисене иккĕшне те чавса таран тавăрнă.

Колхоз хăмли — сар хăмла,
Сак хĕрринчен тыттарать...—

тесе такмакла-такмакла стакансем çине пĕрвĕçĕмрен хăймаллă сим пыл тултарса тăрать вăл.

Исевет хреснашшĕ Хветте те çавăнтах. Вăл çулла тăхăнакан хăйĕн яланхи тумĕпех — тĕп хунă кăçатăпа, çуталса сăранланса кайнă шăлаварпа (çĕнĕ чух мĕн тĕслĕ пулнине Хветте хăй те манса кайнă пуль), саппунпа. Анчах пуçĕ çинче, праçник ячĕпе, таçтан сарлака çунатлă улăм шлепке тупса тăхăннă. Пысăк хĕвелçаврăнăш пуçĕ пек курăнать унăн шлепки.

— Кирук, маххă ан пар!— тесе кăшкăрать вăл тăрсан-тăрсан. Калăн, Кирук мар ăна, вăл хăй Кирука хăна тăвать.

— Ĕç, Хветте тусăм, ĕç,— ÿкĕтлет ăна кÿрши.

— Мана ытлашши юрамасть, шăллăм,— тет Хветте.— Ытлашши ĕçсен ытлашши шухăланса каятăп эпĕ...

...Колхоз сим пылĕ чăнахах та хаяр-мĕн. Сĕтел хушшинчисем часах ак хĕрсе кайрĕç. Унта та кунта юрланă сасăсем илтĕнме пуçларĕç.

Хветте сĕтел хушшинчен тухса, яш-кĕрĕмсем патĕнче çапкаланса çÿрерĕ. Курнă пĕр хĕрачана ытакласа чуп тума пăхрĕ. Хĕрсенчен хăш-пĕрисем çиленсе кайсан, Хветте хăйсенех ятла-ятла хăварчĕ.

— Хăвăр айăплă. Ара, çавăн пек ытлашши илемлĕ пулма сире кам хушнă?.. Сире курсан, ман пек каччă мар, виçĕм çул вилнĕ старик те масар çинчен тăрса чупса килĕ!

Левентей çак çула çитсе те эрех сыпса курман. Паян ак вăл та хĕрсе кайрĕ, пĕр стаканпах пуç патне пычĕ.

Сим пылне те ĕçмен пулĕччĕ-и те вăл — Ануш хистерĕ, çавăн кăмăлне ытараймасăр ĕçсе пачĕ.

— Мана саватăн пулсан ĕç, савмастăн пулсан ан ĕç,— терĕ ăна Ануш, хăй стаканне ун стаканĕпе чанклаттарса.— Паян пĕтĕм çын ĕçет, пĕтĕм çын савăнать. Эсĕ акă... иксĕмĕршĕн çавăн пек паллă кун та пĕр тумлам ĕçместĕн.

Вĕсем паян иккĕшĕ малашне пĕрле пурăнма, тепĕр вырсарникун туйне тума вăрттăн калаçса татăлнă. Çавăнпа Ануш çапла каланă та ĕнтĕ. Вăл Левентее, хăйĕн пулас упăшкине, юриех ĕçтерсе ÿсĕртсе, унăн ĕçки усаллипе усал маррине сăнаса пĕлесшĕн пулнă-мĕн.

Левентей часах хĕрсе çитрĕ, анчах хĕрĕнкĕ пулин те, хăйне вăл питĕ лайăх, йĕркеллĕ тыткалать.

Хветтепе иккĕшĕ вĕсем килĕштерсе пурăнаççĕ. Левентей Хветтене кăмăллать. «Хветте хăйне манирлĕ талант,— тет вăл вара Хветте çинчен сăмах тапрансан.— Пăртак çамрăк пулнă пулсан, тата вĕрентнĕ пулсан, вăл пĕр хут мар, икĕ хут тава тивĕçлĕ деятель пулмалли çын». Халĕ те ак ăна курсан, ун куçĕсем йăлкăшса çуталса илчĕç.

— Хветте мучи, эс, тархасшăн, ашкăнма пăрах,— терĕ вăл, кулкаласа.— Кирлĕ-кирлĕ марпа хăвăн талантна сая ан яр. Луччĕ пĕреххут мĕн çинчен те пулсан суйса пар-ха эс пире!

— Каккуй суйма, шăллăм! Çыннăн кунта хуйхă-ха,— терĕ Хветте.

— Мĕн пулчĕ апла, Хветте мучи?— Левентей юри хăраса ÿкнĕ пек куçне чарса пăрахрĕ.

— Фермăна ĕнер сельпоран шăналăк çине сарса тăвар турттарса килнĕччĕ. Тăварне пушатсан, паян ирпе шăналăкне куштăр-ха тесе, вĕрлĕк çине тухса çакнăччĕ. Пĕр сысни — айван — пынă та, çав шăналăка чăмлама тытăннă. Тăварне пула ĕнтĕ. Шăналăкăн пĕр вĕçĕ

хайхискерӗн пыршинчен тухса хӳри айӗнче тӑсӑлса тӑрать, тепри малта — ҫӑварӗнчен тухса тӑрать. Тем тумалла ӗнтӗ, паян йӑлтах аптрарӑм вӗт. Праҫник те праҫник пек мар туйӑнать. Те ҫӑварӗнчен туртса кӑлармалла, те хӳри айӗнчен?..

Ҫамрӑксем ахӑлтатса кулса яраҫҫӗ. Хветтене ку савӑнтарать, анчах вӑл хӑй савӑннине систересшӗн мар:

— Калана-ҫке ваттисем ҫын хуйхи йывӑҫ ҫинче тесе, тӗрӗс калана стал быт. Кулмалли нимӗнех те ҫук кунта, тӑвансем.

— Эс ӑна, Хветте мучи, хӑйма ӗҫтерсе пӑх. Хӑйма вӑл ҫемҫетет. Тӑварӗ ирӗлет те вара, ман шутпа, шӑналӑкӗ хӑех тухса ӳкет,— канаш парать ӑна Левентей, кулкаласа.

— Хӑйма?!— Хветте ҫамки картланса ларчӗ, унтан каллех тӳрленчӗ.

Пурте ахӑлтатса кулса ячӗҫ. Мӗншӗн тесен хӑйма пирки Хветте мӗнле мыскара курса пӗтни ҫинчен Хурӑнкасси ҫамрӑкӗсем пурте илтнӗ ӗнтӗ. Пӗлтӗр фермӑра сысна ами чирлесе ӳкнӗ. Хветте — фермӑ заведующийӗ — аптранӑ енне ӑна сӗт ӗҫтерсе сыватма шут тытнӑ. Ӗне фермине кайма инҫерех пек туйӑннӑ. Ҫитменнине тата унта пӗр литр сӗт илес тесен бухгалтеринче хутсем ҫыртара-ҫыртара пӗр уйӑх пурӑнас сывлӑхна пӗтерӗн. Кунта ак хӑйсен килӗ фермӑпа юнашарах. Матки курмасть. Вӑл ир тӑрсанах пасара тухса кайнӑ. Хветте хӑпӑл-хапӑл нӳхрепне анса каять те пӗр пысӑк чӳлмек сӗт вӑйса тухать. Тӳрех фермӑна. Сысна ами чаплашка сӑмсине чӳлмек ӑшне чиксе хума кӑна ӗлкӗрет, лӑп та шӑп ҫав вӑхӑтра кӑшкӑрашса-вӑрҫса, аллисемпе сулкаласа, арӑмӗ пырса та кӗрет.

— Эсӗ, шӗшлӗ аври, килтен мӗскер вӑрласа тухрӑн унта чӳлмекпе?!— тет.

— Нимӗн те мар-ҫке,— тет Хветте.— Ак, кивҫен пӗр чӳлмек сӗт илсе килтӗм. Пирӗн фермӑри чи пултаруллӑ та чаплӑ племенной сысна ами, Наташа Хрюковна, чирлерӗ те. Фермӑран ҫыртарса илсен лӑп та шӑп пӗр чӳлмек сӗт сан патна илсе пырса парӑп. Покранимер свежи сӗт пулӗ. Ку мӗн... Халех йӳҫӗхнӗ, кӗвӗлсе ларнӑ. Сысна апачӗ кӑна.

— Мӗнле «кӗвӗлсе ларнӑ»? Кӗвӗлнӗ сӗт пирӗн пулман,— тет матки.

— Хӑҫан эп суйни пур? Мӗн, Шаккаман-им эпӗ,— тет Хветте, чунтанах тарӑхса.— Упӑшку куҫне ӗненместӗн-тӗк, ме ак ху куҫупа пӑх,— тет.

Арӑмӗ пырса пӑхать те икӗ пӗҫҫине шарт ҫапать. Хветте, сӗт илсе тухатӑп тесе, хӑйма чӳлмекне йӑтса килнӗ иккен.

Матки тарӑхса каять те ҫавӑнтах чӳлмекне тытса хӑймипе упӑшки питӗнчен чашлаттарать...

Ҫакӑн пек ӗнтӗ, кӗскен каласан, хӑйма мыскари. Ҫавӑнпа Левентей хӑйма ҫинчен асӑнсан, ҫамрӑксем ахӑлтатса кулса ячӗҫ те. Ҫапах та Хветте хальхинче те аптраса ӳкмерӗ.

— Ара, халь нӳхреп уҫҫине арӑм хӑйӗн йӗм кӗсйинче чиксе ҫӳрени ҫинчен илтмен-им ҫак эсӗ?— ыйтрӗ вӑл Левентейрен.

Ҫынсем тепӗр хут ахӑлтатса кулса янипе, Хветтен юлашки сӑмахӗсене Левентей аранаран илтсе юлчӗ.

— Фермӑ сыснисене текех сӗт ӗҫтерес мар тесе, ятарласа йӗм кӗсйи турӗ вӗт шӑпӑрлан карчӑкӗ. Чунтан-вартан юратнӑ ҫумри мӑшӑр мар, чаплӑ докладчиксем пек каласан — капитализм ланчашкийӗ вӑл ман!

Ҫав вӑхӑтра ҫывӑхрах Хветте маткин симӗс чечеклӗ сарӑ пурҫӑн тутӑрӗ курӑнса кайрӗ.

— Мархва аппа!— терӗ тахӑшӗ, Хветтене асӑрхаттарса.

Ҫакна илтсенех, Хветте кам хушшине кӗрсе кайсан арӑмӗнчен тарса пытанма пулать-ши, тенӗн, ун-кун пӑхкалама пуҫларӗ. Нихҫан та тата никамран та хӑраман Хветте хӑй арӑмӗнчен темрен хӑранӑ пек хӑрарӗ.

— Куратӑп, куратӑп!— инҫетренех кӑшкӑрчӗ ун карчӑкӗ.— Ниҫта та тараймастӑн, шӗшлӗ аври!..

Капан пек пысӑкскер, вӑл хӑрах аллипе пуссах имшеркке Хветтене ҫӗр ҫине чӗркуҫлентерсе лартрӗ.

— Шуйттан карланки, икӗ турилкке ҫӑмарта, виҫӗ булкӑ кӳпсе ятӑн, ҫапах тӑранайман. Халь ӗнтӗ арӑмна ҫиме тапратас терӗнем? Илтрӗм-илтрӗм... ята ярса ҫӳреме вӗрентӗп-ха эп сана киле ҫитсен...

— Хулленрех, сар кайӑкӑм, хулленрех, чӗппӗм. Ҫынсем пӑхса тӑраҫҫӗ. Хӑвна шеллесе калатӑп — ҫур миллион доход паракан фермӑ начальникне ырӑ халӑх умӗнче намӑс кӑтартнӑшӑн прокурор аллине тытса пама пултараҫҫӗ.

— Э-э, прокурор-и?! Эп хам — прокурор!

Мархва ҫапла каларӗ те упӑшкине аллинчен ҫатӑртаттарса тытрӗ, тӗппӗл-теппӗл кухньӑ патнелле сӗтӗрсе кайрӗ.

— Эп хамах пыратӑп, сар кайӑкӑм, хамах ылтӑнӑм,— тени ҫеҫ илтӗнсе юлчӗ.

* * *

Хӗвел хӗртнӗҫемӗн хӗртет. Лӗм ҫил те ҫук. Пӑчӑ.

Исевет тӑнлавӗсем тарласа йӗпенсе кайрӗҫ. Ана ҫак уҫланкӑра тӑвӑр пек, сывлӑш та питӗ сахал пек туйӑнчӗ. Вӑл, кӑшт уҫӑласшӑн пулса, тутӑрне пушатса ҫыхрӗ. Ку та пулӑшмарӗ.

Вара зӑл, зӑрман ӑшӗнче сулхӑнрах пулӗ тесе, Киура вӑрман ӑшне илсе кӗчӗ.

Вӑрманта, шалта, чӑнах та, ырӑ-мӗн. Сывлӑшӗ те кунта уҫӑрах, сасӑсем те хӑлхана янратмаҫҫӗ. Вӗсем Киурпа иккӗшӗ шӗшкӗ айне тӑсӑлса выртрӗҫ.

Картласа тухнӑ илемлӗ ҫулҫӑллӑ туратсем хуллен кӑна пӗр сасӑсӑр пуҫ тӗлӗнче сулланкаласа тӑраҫҫӗ. Вӗсем сулланкаланӑ май, тӑрсан-тӑрсан ҫулҫӑсем хушшипе хӗвел ҫути ӳкет те вара Исевет пичӗ пӗрре тӗксӗмленет, тепре йӑлтӑртатса ҫуталса каять.

Хушӑран таҫта-инҫетре улакатка такканӑ сасӑ илтӗнкелет.

Пӗр-ик утӑмрах кӗрен шӑнкравсем ҫакса янӑ пек курӑнакан чечек ӳсет...

Пӗр сиккеленмесӗр выртакан Исевет тути ҫине, чечек тесе-и ӗнтӗ, вӗлтӗр-вӗлтӗр йӗп вӑрри пырса ҫулӑхрӗ. Исевет ӑна кап! ярса тытрӗ те тӑрса ларчӗ.

— Аха, лекрӗне!

Йӗп вӑрри пӗтӗм кӗлеткипе чӗтренсе илсе, аванса ӳкрӗ...

— Айван, ан хӑра, эпӗ ахаль кӑна каларӑм,— терӗ те Исевет, ҫавӑнтах йӗп вӑррине вӗҫтерсе ячӗ. Исевет пӳрни ҫумне мамӑк пек ҫемҫе те шап-шурӑ япала ҫыпҫӑнса юлчӗ... Вара ӑна темӗнле лайӑх мар пулса кайрӗ. Усал тӑвас темен ҫӗртенех усал ӗҫ туса хунӑ пек туйӑнчӗ... Темшӗн тата ҫавӑнтах Левентейӗн кӑшт хурлӑхлӑрах сӑнӗ асне килсе тухрӗ.

— Эпӗ айӑплӑ мар, ху эсӗ пырса лартӑн,— терӗ вара вӑл, хӑй ҫинчен айӑпне сиресшӗн пулса.

Кӑна вӑл йӗп вӑррипе калаҫрӗ, анчах, тӗрӗссипе каласан, йӗп вӑррипе те мар, ҫук, хӑй умӗнче тӑракан Левентей сӑнӗпе ҫапла калаҫрӗ вӑл.

Ҫак хӑйсем кӑмӑлланӑ вырӑн сасартӑках улшӑнса кайрӗ. Ҫеп-ҫемҫе курӑк та ҫемҫех мар пек туйӑна пуҫларӗ. Курӑксем айӗнче пӗлтӗрхи хыт-хурасем пур пек, турат-ҫатракасем выртаҫҫӗ пек туйӑнчӗ.

— Атя, урӑх ҫӗре,— терӗ вара вӑл, ура ҫине сиксе тӑрса.

— Ытла та канӑҫсӑр чунлӑ-мӗн эсӗ, Исевет,— терӗ Киур, уксах урине ытла та меллӗ вырнаҫтарса ларнӑран-и ӗнтӗ е ӑна ҫак вырӑн вӑрманта хӑйне чи илемлӗ вырӑн пек туйӑннӑран-и, кунтан хӑпасшӑн мар пулса.— Халтан кайрӑмӑр паян санпа вырӑн шырашыра.

— Кашкӑртан хӑрасан вӑрмана тухмаҫҫӗ,— терӗ те Исевет, ҫилӗллӗн аллипе сулчӗ. Вӑл темшӗн ак паян ҫӗтӗк чун пек ҫӗтӗлсе кӑна тӑрать.

Туратсене сире-сире, темӗнле ҫырмасем урлӑ каҫса, такӑна-такӑна, аллисене чӑрмалантарса пӗтерсе, пысӑк ҫаврӑнӑҫ туса, вӗсем каллех паҫӑрхи ҫарана тухрӗҫ.

Кунта вӗсем Миххайпа Веруҫа, Исевет аппӑшин хӗрне, тӗл пулчӗҫ.

— Эсӗ Ивана курмарӑна, ӳсӗрӗлсе выртмасть-и?— ыйтрӗ вӑл Веруҫран. Хӑй вара Иван ҫинчен мар, ҫук, ытти ҫинчен ыйтса пӗлесшӗнччӗ.

— Вӗсем халӗ ҫеҫ акӑ ватӑ юман патӗнче ташлатчӗҫ.

Исевет хӑй аллине тахӑш вӑхӑтра ярса тытнӑ темӗнле хуҫӑк турата ҫӗре ывӑтса ячӗ.

— Ну а Левентей ӳсӗр мар пуль?— ыйтрӗ вӑл так ахальтен кӑна интересленнӗ пек сасӑпа. Унтан куҫ харшине пӗрчӗ те хушса хучӗ:— Вӑл распорядитель, йӗркелекенни. Ӑна паян пӗр тумлам та ӗҫме юрамасть.

— Ӳсӗр мар, вӑл та Ивансемпе пӗрлехчӗ.

Исевет куҫӗсем ҫуталса кайрӗҫ.

— Кӑшт ҫӳрӗпӗр те, Киур, эпир те ташланӑ ҫӗре кайӑпӑр.

— Эп ташламаннине пӗлетӗн вӗт эсӗ...

— Ҫамрӑксемпе ҫамрӑк пулас пулать, Киур.

...Пӗр чӑрсӑр турат Исевет ҫамкине чӗрсе ячӗ. Пырсан-пырсан тата вӗсем вӑрӑм курӑкпа хупланнӑ темӗнле тунката ҫине пырса такӑнчӗҫ... Ҫапла пулин те, Исевете пурте лайӑх пек халь, илемлӗ те ырӑ пек туйӑнать.

Вӑл алӑ айне пулнӑ ландыш чечекне татса илчӗ те чӗрҫитти кӑкри ҫине булавкӑпа тирсе лартрӗ.

Хавасла та, темӗнле кулӑшларах шӑхӑркаласа илчӗ. Юлашкинчен ак вӑл,— ватӑ юман ӳсекен уҫланкӑ патне ҫитеспе — хӑй часах унта пырса ҫитессе такама, такама мар, паллах ӗнтӗ, хӑй юратнӑ ҫыннине пӗлтересшӗн пулнӑ пек, пӗтӗм вӑрмана янратса юрласа ячӗ:

Савни, ан ӳпкеле...
Ҫиленнипе ҫеҫ пулчӗ вӑл,
ҫиленнипе...

Ак вӗсем ватӑ юман ларакан уҫланкӑна пырса тухрӗҫ... Юман айӗнче яш-кӗрӗмсем ташлаҫҫӗ.

Ташларӗҫ-ташларӗҫ те ҫамрӑксем, шавласакӗрлесе, Левентее хупӑрласа илчӗҫ. Ӑҫтан килчӗ ҫавӑнтан ярса тытса, ӑна пуҫ ҫине ҫӗклерӗҫ. Унччен те пулмарӗ, Левентей хӑй кепкине ҫухатса, ҫӳҫне-пуҫне варкӑштарса, лапсӑркка ватӑ юманӑн аялти турачӗ патне ҫитиех ҫӳлелле ывтӑнса кайрӗ.

— Тата ҫӳлерех, тата ҫӳлерех!— тесе кӑшкӑрчӗҫ хӗрсе кайнӑ ҫамрӑксем, пӗр-пӗрне хавхалантарса.

— Ҫитет, ҫамрӑксем! Ӳкерӗр тата! Вӑйӑ-

ран вăкăр тухса ан кайтăр!— асăрхаттарчĕç ватăраххисем.

— Тĕк пек çăмăл вăл!

— Халь ĕнтĕ унăн хăрах çунат мар, икĕ çунат — эпир тытмасан та ӳкес çук!— тесе кĕрлерĕç яш-кĕрĕмсем.

Меллĕн кăна çӳлтен антарса, хăйне ура çине тăратсан, Левентей çӳçне-пуçне ун-кун якаткаларĕ те, хăй таврашĕнчи юлташĕсене пĕрерĕн-пĕрерĕн алă парса, кашнине тав туса тухрĕ.

— Çитес вырсарникун пурте ман пата, туя!— терĕ вара вăл юлашкинчен, йăл-йăл кулкаласа.

«...Çитес вырсарникун»...— Тупата, мĕнле кăна çурăлса каймасăр чăтса тăчĕ-ши çавăн чухне пирĕн Исевет чĕри!

Çамрăксем каллех юрлама-ташлама пуçларĕç.

Исевет пуçне усса, хăй ăçта кайнине хăй те пĕлмесĕр, тутлă кăвас ĕçмелли шурă чатăр патнелле утса кайрĕ.

— Исевет!— тесе кăшкăрчĕ ăна Киур. Вăл Исевете хăна тума хул хушшине ик-виçĕ пакетпа кучченеç хĕстернĕ-мĕн.— Исевет, чимха, чим!

Анчах Исевет ун сассине те, таврари ытти сасăсене те пĕрне те илтмерĕ. Пĕр Левентейĕн: «Çитес вырсарникун» тенĕ сăмахĕсем çеç ун хăлхинче шавласа шăхăрса, кĕрлесе те сĕрлесе тăчĕç. Чатăр умне çывхарасла кăна вăл хăй хыçĕнче тăп-тăп ура сассисене илтрĕ. Унтан ăна тахăшĕ çывăхрах ассăн сывласа илнĕ пек туйăнчĕ. Вăл çаврăнса пăхрĕ те хавасла сăн-питлĕ Киура курчĕ.

— Ах тур, ну утатăн та... Аран-аран хăваласа çитрĕм. Кусем, Исевет, пурте сан валли,— терĕ Киур, шап-шурă сăмса тутрипе ĕнси çинчи тарне шăлкаласа.

— Ху Анушна кайса пар!— терĕ те Исевет чупнă пекех малалла утса кайрĕ, урăх вара вăл пĕрре те каялла çаврăнса пăхмарĕ.

Киур шăлне çыртса, ним чĕнмесĕр, пĕрпĕччĕненех пăхса тăрса юлчĕ.

Исевет пĕр чарăнмасăр умлăн-хыçлăн виçĕ стакан кăвас ĕçсе ячĕ. Çапах та унăн ăшĕ пусăрăнмарĕ. Вара вăл ăнланчĕ: çук, ăшри вута ăна пĕр пичке кăвас ĕçсе ярсан та сӳнтереес çук...

Укçине тӳлерĕ те шурă чатăр кутĕнчен пăрахса кайрĕ.

— Çук, хуть те мĕн пулсан та, йышран уйрăлма юрамасть,— тесе шухăшласа илчĕ вăл.— Мĕн, эпĕ çынран катăк-им?!. Ну, ташлатăп-ха акă пĕрре паян хам та...

Анчах та вăл çав кун ташласа кăтартаймарĕ. Лăп та шăп çав вăхăтра Хурăнкасси енчен мотоциклпа Санюк персе çитрĕ.

Машинне чарчĕ те вăл, тӳрех колхоз председателĕ Петĕр тăракан ушкăн патне чупрĕ.

Çарапуç. Хура çӳçĕ тăраткаланса кайнă. Чыса çеç тăхăнакан кĕпинчен пăс тухса тăрать. Кĕпине вут тĕслĕ йăлтăркка хĕрлĕ пурçăнтан çĕлетнĕ,— те çавăнпа вăл акă Исевете çурри таран çунса шĕл-кăвар пулса кайнă пекех курăнать. Мотоциклпа ларса килнĕ çын пек мар, çуран пĕр чарăнмасăр вунă-вун пилĕк километр чупса килнĕ пек пашкать хăй.

— Инкек!— терĕ вăл, сывлăшне аран-аран çавăрса илсе,— акăш-макăш пысăк инкек, Петĕр пичче: пире Гитлер тапăннă...

Санюк çак сăмахсене ытлашши хытах каламарĕ пулин те, вĕсем аслати авăтса аça çапнă пек илтĕнсе кайрĕç.

* * *

Тепĕр кунне, ялтан тухса каяс умĕн, Левентей Исеветсем патне пычĕ.

— Урамалла тухкаласа килер-ха, — терĕ вăл Исевете.— Каласмаллисем пур.

Исевет хĕрлĕ шăрчануй тутăрне çыхса ячĕ те, вĕсем кил хушшинчен тухрĕç. Тăкăрлăк тĕлне çитсен пăрăнчĕç. Иккĕшĕ те тарăн шухăша путса, пĕр-пĕрне ним чĕнмесĕр, шăппăн утрĕç. Мунчасем умне çывхарсан, пĕр-пĕринпе малтан калаçса таталмасăрах, иккĕшĕ те сулахаялла пăрăнчĕç, каçма урлă каçса, сăрталла хăпарса пычĕç.

Çак вырăнтан вăрман, Шăнкав шывĕ хĕрринче купаланса выртакан пĕренесем курăна пуçларĕç.

Хĕрпе каччă чарăнчĕç.

— Астăватăн-и, пĕрре эпир çакăнта санпа иксĕмĕр вăрахчен тăтăмăр,— терĕ Исевет,— астăватна... Эпир сăмах панăччĕ...

— Астăватăп,— терĕ Левентей.

Сывлăш уçă. Колхоз сад-пахчийĕ енчен ăшă çил вĕрет.

Исевет умне çавăн чухнехи картинă килсе тăчĕ... Клуб. Клубра яш-кĕрĕмсем. Яш-кĕрĕмсем хушшинче — Левентей.

— Çакăнта пирĕн электростанци тăвас пулать. Кунта шыв хăвăрт юхать,— тет Левентей.

— Çапла та, çулла, шăрăх вăхăтра типсе ларать.

Левентей юлташĕ çине куç айĕн пăхрĕ:

— Вара?.. Мĕн тесшĕн вара эсĕ?

— Тен, электростанци валли шывĕ çитмĕ.

Левентей çиленсе кайрĕ.

— Тĕлĕнетĕп санран. Пĕвине мĕн тума тăваççĕ тата?

— Пĕве тусан çарана шыв илме пултарать,— хирĕçлерĕ Киур. Анчах та хальхинче вăл иккĕленни таçтанах сисĕнчĕ. Кăна пур

ачасем те асăрхарĕç. Левентей çакна кура пушшех хăюлланчĕ:

— Эпир пурин çинчен те малтанах шутласа хунă. Ак пăхăр-ха.

Ачасем çамрăк «инженера» сăрса илчĕç. Санюк кăна хăй вырăнĕнчен хăпмарĕ. Левентей кăсйинчен кăранташ кăларчĕ те: «камăн хут пур?» тенĕ пек, малтан арçын ачасем çине, унтан хĕрачасем çине пăхрĕ. Пĕрин те хут тупăнмарĕ. Исевет хăйĕн хут тупăнманшăн Левентей умĕнче айăплă пулнă пек, пуçне усрĕ. Левентей ăна-кăна асăрхамарĕ пулас. Вăл, пĕр иккĕленмесĕр, тӳрех сĕтел çинчи «Сунтал» журнал хуплашки çине сăрлама тытăнчĕ.

— Кунта ак Шăнкав юхса выртать. Хĕрлĕ çыр патĕнче вăл çакăнталла пăрăнать. Кунта ун çыранĕсем чăнкă та çӳллĕ.

— Вăл çаплах-ха,— терĕ Киур,— анчах...

Левентей вăл мĕн каласшăн пулнине итлемерĕ:

— Çак вырăнта пĕве тăватпăр. Вара çурхи шыв пĕр пиллĕк метра яхăн хăпарать.

Киур чăтаймарĕ:

— Вара çарана пĕтĕмпех шыв пусать...

Çапла каларĕ те Киур çамрăк «инженер» çине мăн кăмăллăн пăхрĕ. Халĕ ĕнтĕ, ун шучĕпе, Левентей пĕтĕмпех пĕтсе ларчĕ. Лешĕ акă хăнк та тумарĕ

— Пустăр. Утти вăйлăрах пулĕ.

Исевет куçĕсем йăлтăртатса çиçсе илчĕç. Вăл Левентей капла та «тăшманне» парăнманшăн пĕтĕм чунтан хĕпĕртерĕ. Анчах вăл хăй те ăнланмарĕ-ха, мĕнле апла шыв айĕнче утă пулма пултартăр?

Левентей, Исевет шухăшне сиснĕ пекех, ăнлантарма пуçларĕ:

— Шыв пиллĕк метра хăпарсан, çӳлти кӳлле пухăнать. Ак çакăнта, çак айлăма. Кунта ак пирĕн иккĕмĕш пĕве пулать.

— Вара?

— Вара эпир шлюзне хупатпăр. Шыв çӳлти кӳлле юлать. Аялти шыва уçса яратпăр, пĕр ик-виç метр тарăнĕш кăна хăваратпăр. Вара ак санăн улăху та типет, шыв та тепĕр çуркуннеччен çитет. Аялти пĕвери шыв çитмесен çӳлтен хушатпăр.

— Вăт, ку аван! Акăш-макăш аван! Шыва кĕме те пулать. Пулă ĕрчетме те лайăх. Акăш-макăш!— тесе кăшкăрса ячĕ Санюк.

Левентей Санюк çине ăшшăн пăхса илчĕ:

— Тĕрĕс, Санюк. Ун çинчен эпĕ хам та шутласа хунă. Карас пулă ĕрчетĕпĕр. Хурсемпе кăвакалсемшĕн тата епле ырлăх пулать!

— Станцийĕ хăш вырăнта пулать вара?

— Вăл ак çакăнта пулать, сылтăм çыран хĕрринче.

— Çук, сулахайра лайăхрах,— терĕ Санюк.

— Сылтăмра меллĕрех. Яла та кунтан çывăхрах. Юпасемпе пралуксем нумай кирлĕ пулмаççĕ. Тата фермă та пирĕн ку хĕрринче. Пахча та кунтан инçех мар.

— Халап! Юмах!— Киур ахăлтатса кулма тытăнчĕ.

— Ман шухăшпа, кунта кулмалли нимех те çук,— тенĕ сасă илтĕнсе кайрĕ хыçалта пĕр кĕтмен çĕртенех. Ку Якрав пичче пулчĕ, парторг. Вăл клуба кĕнĕ те ачасем мĕн калаçнине илтнĕ иккен. Левентей тавра кĕпĕрленнĕ ачасем пĕри те ăна асăрхайман.

— Юмах яратпăр-ха, Якрав пичче,— терĕ Киур, куçĕпе Левентей еннелле кăтартса.— Ун сасси «мĕн тăвас тетĕн: ачапча», тенĕ пек илтĕнчĕ. «Мĕншĕн Киур Левентее кураймасть çак,— тесе шухăшларĕ Исевет.— Вăт путсĕр ача».

— Юмах мар, пирте ун пеккине план, теççĕ,— терĕ парторг,— çамрăк ленинецсем вара кирек хăçан та хăйсен планне пурнăçа кĕртеççĕ.

Çапла каларĕ те вăл, сĕтел умне пĕшкĕнчĕ.

— Чертежĕ те аптрасах каймасть. Пĕр енчен кăна начар. Культурлă пурăнас тетĕр, хăвăр культурлă мар аппаланатăр.

Левентей куçне чарса пăрахрĕ:

— Мĕн культурлă мар, куматте?

Якрав сăмахпа ăнлантарса памарĕ. Левентей тĕрлесе пĕтернĕ «Сунтал» журнала аллине тытрĕ те васкамасăр уçкала пуçларĕ.

— Лайăх журнал... Пурте вуларăр-и?..

Левентей çавăнтах сиссе илчĕ. Хĕрелсе кайрĕ:

— Йăнăш пулчĕ-ха, куматте. Каçар. Алă айĕнче хут пулмарĕ те...

— Ну, юрĕ, пĕррелĕхе каçарăпăр...

Вара Якрав пĕр сехете яхăн ачасемпе калаçса ларчĕ... Вăл комсомолецсем хускатнă ыйту çинчен бюрора сӳтсе явма пулчĕ.

— Ман шутпа, коммунистсем сире ырлĕç кăна,— терĕ вăл юлашкинчен.

...Çакăн хыççăн ачасем килĕсене саланчĕç. Левентейпе Исевет иккĕшĕ клубран пĕрле тухрĕç.

— Эсĕ тунă план, Левентей. питĕ аван,— терĕ Исевет, çынсенчен уйрăлсан. Паçăр вăл çынсем умĕнче калама хăяймарĕ. Ăна: «Эсĕ Левентейĕн çывăх тусĕ, çавăнпа ырлатăн» тесе калассăн туйăнчĕ.

— Кăмăллатăн апла?— ыйтрĕ Левентей.

Исевет пуçне тайрĕ.

— Ну, шанатна çав плана пурнăçласса?

— Шанатăп...

Левентей хĕпĕртесе кайса, Исевет аллине хыттăн чăмăртарĕ. Вăл вара ăна ял тулашне илсе тухрĕ.

— Атя, Исевет, çитсе курар-ха эппин электростанци тумалли вырăна...

Ляп та шап çак халĕ иккĕшĕ тăракан ырăна çитсен, вĕсем çĕкленсе кайса, иккĕшĕ пĕр-пĕрне пулăшма, ĕмĕр-ĕмĕр туслă пулма тупа турĕç. Мĕнешкел савăнчĕ вăл ун чухне! Эх, епле пурнăç ырă, паянхи кун çутă, ыранхи тата çутăрах пулать,— тесе çунатланчĕ ун чунĕ... Акă сана «тата çутăрах пулать!» Ăçтан кăна сиксе тухрĕ çĕр çăтман Гитлерĕ?!.

Исевет сасартăк карт! туртăнчĕ те Левентее хулĕнчен ярса тытрĕ.

— Мĕн тăвăпăр-ха ĕнтĕ, Левентей?

— «Мĕн тумалла?» Çапăçмалла! — терĕ каччă.— Эпир лере, эсир кунта.

— Электростанци?..

— Тăвас пулать!— терĕ пĕр иккĕленмесĕр Левентей.— Кăна санăн, сирĕн тумалла ĕнтĕ.

...Левентей куç харшине пĕрсе йывăç купи енне, пулас электростанци еннелле пăхса тăчĕ. Халĕ вăл темĕнле хаяр çын пек, хаяр та мар, пĕр тума йышăннине тума пултаракан çын пек, никама та парăнма пултарайман улăп пек курăнать. Ăçта кайса кĕчĕç-тĕр ĕлĕкхи кулса çеç тăракан тутисем, хăш вăхăтра сÿнсе ларма ĕлкĕрчĕç-тĕр куçĕнчи хаваслă йăлтăрккасем. Хăш вăхăтра çамки çине тухса выртрĕç-тĕр пĕрĕнчĕксем!

Левентей хĕр еннелле çаврăнчĕ те ăна икĕ аллипе икĕ хулĕнчен ярса тытрĕ.

— Исевет,— терĕ вăл,— Исевет, эсĕ манăн çывăх юлташ-и?

— Юлташ.

— Эпĕ те çапла шутлатăп çав,— терĕ ним пулман пекех Левентей.

— Пăрахмастна, Исевет, эсĕ мана?

— Мĕн виличчен...

Исевет пуçĕ çаврăнса кайрĕ, пит çăмартисем унăн вут пек пĕçереççĕ. Ара, пĕтĕм чунтан юрататакан çын, тĕлĕкре те кашни каç тĕлленекен çын унпа çапла ăшшăн калаçать те.

— Шанатна эс мана, Исевет?— ыйтрĕ каччă паçăрхи сасăпах ляпкăн.

— Шанатăп.

— Эпĕ те сана шанатăп.

Çапла каларĕ те Левентей хĕвĕнчен пĕр тĕрке хут туртса кăларчĕ.

— Кил-ха, çакăнта, тикĕсрех çĕре, ларар-ха.

Каччă хĕре хулĕнчен тытса çыран хĕрринелле илсе пычĕ.

— Лар, тусăм. Колхозĕпе те манăн сан пек шаннă çыннăм çук,— терĕ вăл, Исевете хăй çумне лартса.— Хĕрсем эп сахал мар курнă. Анчах, Исевет тусăм, сана çитекенни пĕри çук.

Çапла каларĕ те каччă тетрадь çине хăй тунă ÿкерчĕксене ăнлантарма тытăнчĕ:

— Ку акă Шăнкав юхса выртать. Эпир санпа иксĕмĕр çакăнта ларатпăр. Шыв акă кукăрлать те сылтăмалла пăрăнать. Çак тĕлте канав чавас пулать. Кунта акă пĕвелемелле. Пĕве çумĕнчех электростанци. Ак çакăнта...

Левентей куçĕ йăлтăртатнăçемĕн ытларах йăлтăртатса пычĕ. Исеветĕн пуçĕ усăннăçемĕн çĕрелле усăнчĕ. Куçĕсем тĕксĕмленнĕçемĕн тĕксĕмленчĕç. Çук, Левентей, ĕлĕкхи пекех, Исевете мар, хăйĕн пĕвине, хăйĕн электростанцине иккен юратать.

— Ăнланатна?— ыйтрĕ Левентей, хĕр çине пăхмасăрах.

— Ăнлантăм,— терĕ Исевет шăппăн,— ăнлантăм.

— Лайăх-и план?

— Лайăх!— терĕ хĕр, хăй мĕн каланине хăй те лайăххах тавçăрса илеймесĕр. Ун шухăшĕ халĕ электростанци çинчен мар, пачах урăххи çинчен пулчĕ: «Мĕншĕн ăна Левентей юратмасть-ши? Мĕншĕн вăл хăй пăртак илемлĕрех пулман-ши? Мĕншĕн тата Левентей хăй начартарах пулман-ши? Сăнпа усал пулнă пулсан, ăна никам та астаракан пулас çукчĕ. Мĕншĕн Ануш пек пушă пуçлă хĕрсем çеç илемлĕ пулаççĕ-ши?»

— Эх, тусăм, сан çине шанатăп эпĕ. Илемлĕ чунлă, ылтăн чунлă юлташ эс, Исевет!— Левентей хĕр аллине тытса хыттăн чăмăртарĕ.

Исевет чĕрине ăшă кĕрсе кайрĕ.

— Темле çав...— терĕ вăл кулкаласа,— суймастăн пулсан питĕ ырăччĕ те.

— Суятăп пулсан çакăнтах ак, ларнă çĕртех, çĕр çăтса антартăр. Ну, кам-ха пур сан пекки?..— Левентей пуçне кăшт пăрарах çĕклерĕ те, куçне хупса, шухăша кайрĕ, вăл Исевете ытти хĕрсемпе танлаштарса пăхрĕ, куран.

— Çук, Исевет, эсĕ пĕр-пĕччен пирĕн ялăмăрта. Пĕр сана кăна эпĕ çак плана шанса парса хăварма пултаратăп. Эс мана пит лайăх ăнланатăн... Çырсах тăрăр вара Анушпа иксĕр. Çырăр.

Исевет аллисем ляштăрах кайрĕç. «Ануш? Ануш?! Каллех çавă!.. Ну, мĕн пур ĕнтĕ унăн ытлашши хапсăнмалли?! Планне те ак ăна шанса парса хăвараймасть те. Çук, çук, вăл Левентее тивĕçлĕ мăшăр мар. Ăна çураçса питĕ пысăк йăнăш турĕ Левентей,— тесе шутларĕ Исевет.— Мăшăр тени, чи малтанах, шанчăклă юлташ пултăр. Арлă-арăмлă пурăнакан çынсем пĕр-пĕрне лайăх ăнланмалла, пурнăçра пĕр-пĕрне пулăшса пымалла... Ну юрĕ, мана мăшăр тума ан пултарайтăр, эпĕ чăнах та илемсĕр ĕнтĕ. Анчах та нивушлĕ вара çав пуçтах Анушсăр пусне çĕр çинче урăх никама та тупма çук?!» Çапла шухăшларĕ те вăл çакăн çинчен пĕтĕмпех каласа ăн-

лантарасшăн пулса, пĕр авка нимĕн чĕнмесĕр, шăппăн кăна, Левентей куçĕнчен пăхса тăчĕ. Сăмахпа калама вăл хăяймарĕ-ха: «Кĕвĕçнипе çеç Ануша хурлать» теесрен шикленчĕ. Левентейĕн çапла калама сăлтавĕ те пулнă пулĕччĕ. Мĕншĕн тесен (Исевет çакна лайăх туйрĕ) вăл Ануш çинчен тĕрĕссине каланипе пĕрлех тата, чăнах та, кĕвĕçет те-мĕн. Вăл хăй ăшĕнчи çав туйăма кĕвĕçӳ мар тесе шутлать пулин те, кĕвĕçĕвех пулĕ çав. Çак туйăма çав тери начар туйăм вырăнне хурса, çав туйăма пула юратнă юлташа тӳрĕ сăмах калама май çукшăн пĕтĕм чунтан тарăхса, Исевет хăйне хăй те кураймн пулчĕ. «Хам та эпĕ пиçмен пашалу çеç», тесе вăрçрĕ хăйне вăл ăшĕнче. Вăл сасартăк, чирлесе ӳкнĕ çын пек, пĕтĕм вăйран сулăнчĕ. Çапла пулсан та, вăл Левентей панă хут тĕркине чиперех килне илсе çитерчĕ. Çак хутсем Левентейшĕн, юратнă çыннишĕн хаклине пĕлнĕшĕн-и ĕнтĕ е вăл колхозшăн çав тери кирлишĕн-и — хăшиншĕн ытларах-тăр — Исевет çав хутсене хăйĕн пурçăн тутăрĕпе, праçниксенче хĕрхенсе кăна çыхакан тутăрĕпе чĕркерĕ те арчине хучĕ.

Çак курнăçу Левентейпе юлашки хут курнăçни пулчĕ.

Левентей тепĕр ирхине ирех, кăвак шуçăмпах ялтан тухса кайрĕ.

* * *

Левентей вăрçа тухса кайсан, Исеветшĕн кунсем пурте пĕр тăтăш салхуллă пулчĕç. Вăл Левентее манас тесе, ялан ĕçре пулма тăрăшрĕ. Çапах ун шухăшĕ пĕрмай хăй юратнă каччи тавра çаврăнчĕ. Выртсан та, тăрсан та ун умĕнче Левентей сăнĕ тăчĕ. Юлашки хутĕнче Левентей мĕнле костюм тăхăннăччĕ,— ялан çав костюмпа курăнчĕ вăл.

Исевет Левентейрен хыпар куç пек кĕтрĕ. Лешĕ ăна нимĕн те шарламарĕ. Эх, пĕр пĕчĕк çыру çеç илесчĕ, çапах хĕр чĕри лăпланĕччĕ. Çук вĕт, çук.

Левентей кайнă хыççăн, хĕр ик-виç хутчен Ануша тĕл пулчĕ. Пĕринче те вăл унпа калаçасшăн пулмарĕ. Хăйĕн чи хаклă çыннине туртса илнĕ хĕрпе сăмах хушма ăна çав тери йывăр-мĕн. Çавăнпа та вăл Анушран пăрăнма тăрăшрĕ. Пĕринче вăл Ануша итем çинче курчĕ.

Ануш, вăрçăчченхи пекех çап-çутă питлĕкуçлăскер, ним пулман пекех, çынсемпе хаваслăн калаçрĕ-кулчĕ, шӳт турĕ.

Ку пĕртте Исевет кăмăлне каймарĕ. Ăна хальхи йывăр вăхăтра çавнашкал шухă пулни ытлашши пек туйăнчĕ. Çитменнине тата Ануш хăй пек хĕрачасем патĕнче мар, ялан арçынсем тавра явăçрĕ. Пĕрехмай çавсемпе шӳт турĕ: тĕрткелешрĕ, çурăмран пыра-пыра çапрĕ е ура явса ӳкерме хăтланчĕ. Ульхери аппăшĕ, бригадăра чи ватăраххи,— Ануш ытлашши шухă пулнинчен тĕлĕнсе пулас,— темиçе хутчен те ав пуçне сулла-сулла илчĕ. Çавăнпа та Анушпа иккĕшĕ кăна юлма май тупăнсан, Исевет ăна тӳрех çапла каларĕ:

— Ануш, эсĕ кун пек йăлуна пăрах... Капла эсĕ Левентей ятне яма пултаратăн,— терĕ.

Ануш çиленсе кайрĕ.

— Левентей çук тесе, манăн макăрса лармалла-ши вара?

— Никам та сана макăрма хушмасть... Çапах та çураçнă хĕрачан унăн кăшт сапăртарах пулни килĕшет пуль?

— Ара, эсĕ пĕлетĕн пуль çав. Тахçанах сана ун пеккисене пĕлме вăхăт,— терĕ лешĕ, хулĕсене çăмăллăн выляткаласа.

Вăл Исевете: «Эсĕ ватта юлнă хĕр», тесшĕн пулчĕ ĕнтĕ, кулма пăхрĕ.

Исевет çакна ăнланчĕ, анчах ку унăн чĕрине ыраттармарĕ. Ăна ытти ыраттарчĕ. «...Вăт мĕнле çăмăлттай хĕре юратать Левентей,— тесе шухăшларĕ вăл, салхулланса кайса.— Нивушлĕ Ануш камне курман вăл?.. Тата çынсенчен те намăс вĕт!»

Вăл ялти комсомол организаци секретарĕ. Çавăнпа та комсомолецсене — çав шутрах Ануша та — пурне те чыслă, сапăр çамрăксем пек курасшăн пулчĕ. Камсем çавсем, качака путеккисем пек, ним шухăшсăр тăрăс-тăрăс сиксе çӳрекенсем? Комсомолецсем, Исевет хĕрĕсем! Тӳрех çапла калаççĕ вĕт-ха çынсем. Анушран кулни ăна хăйĕнчен кулнă пекех туйăннă.

— Эс, Ануш, комсомолкă. Çакна нихçан та ан ман,— терĕ вăл хыттăн.

Тата хытăрах каланă пулĕччĕ те вăл, каламарĕ. Мĕншĕн тесен Ануш хăйне Левентейшĕн, каччине туртса илнĕшĕн хирĕçет, тесе каласран шикленчĕ.

Çакăн хыççăн вăхăт нумай та иртмерĕ — ялта ырă мар хыпар, Анушпа Киур явăçса кайнă тенĕ хыпар сарăлчĕ...

Исевет Анушран темĕн те кĕтнĕ пулин те, çакна кĕтменччĕ. Çавăнпа вăл Анушпа ятарласах курса калаçма тăрăшрĕ. Анчах ниепле те ăна тӳрĕ килеймерĕ-ха.

— Ануш,— терĕ вара вăл пĕринче, ăна тĕл пулсан.— Ялта ырă мар хыпар çӳрет сан çинчен.

Ануш тутине пăркаларĕ.

— Эсĕ тата хытăрах итле шаккамансене...

Хурăнкассинче ĕлĕкех ĕнтĕ Шакkаман ятлă пĕр элекçĕ хĕрарăм пурăннă. Ăна Ануш та, Исеветпе пĕр тантăшлисем те тата вĕсенчен пĕр вунă çул аслăраххисем те астумаççĕ. Çапах та ун ячĕ манăçа тухман, пурăнать. «Шак-

каман сăмахĕ ку»,— теççĕ вара Хурăнкасси çыннисем пĕр-пĕр элек сăмах илтсен-тусан, е тата: «Шаккаман пек суйса ан тăр-ха эс»,— теççĕ. Исевет те Ануш мĕн каласшăн пулнине чиперех ăнланчĕ.

— Юрĕ, элек тейĕпĕр. Анчах асту, Ануш, вут чĕртмесĕр тĕтĕм тухмасть... Эсĕ манран ан пытар.— Çыру çыратна Левентей патне?

Ануш пуçне сулларĕ:

— Юлашки вăхăтра çырман. Хут та, конверчĕ те çук та...

— Çырас пулать... Хавхалантармалла çар çыннине...

«Ну мĕн тума çапла çырман çынна çыртарасшăн-ха эсĕ? Ан тив, хуть те мĕн хăтлантăр. Хăвнах лайăх. Ху Левентейӳ, тен, хăвнах пулĕ...»— терĕ Исевет ăшĕнчи пĕр сасă. «Çук, çук... Левентей çав-çавах мана мар, Анушне юратать. Унсăр вăл пурăнаймасть»,— терĕ Исевет çав сасса хирĕç. Ăна темĕнле пăчă пек, сывлăш çитмен пек, кăкăрне такамсем курăнми кăшăлпа кăшăлланă пек туйăнчĕ.

— Çыр. Конвертне эп сана хамах парăп,— терĕ вăл, хăй кама лайăх тата кама лайăх мар туни çинчен ĕнтĕ пачах та шухăшласшăн мар пулса.— Итле-ха, Ануш, атя санпа эпир иксĕмĕр çырăпăр ун патне... Левентей лайăх ача. Ăна эпĕ хам та юрататăп.

Исевет нимĕн усал шухăшсăр каланине туйса-и ĕнтĕ, те пуçне унăнне мĕнле те пулсан шухăш пырса кĕчĕ — Ануш хĕрелсе кайрĕ.

— Юрĕ,— терĕ вăл,— эпĕ сан патна унăн адресне илсе пырăп.

Унтанпа ĕнтĕ темиçе кун та иртрĕ, Ануш çаплах Исевет патне пымарĕ-ха. Ку кăна мар, Исевет хăлхине тата тепĕр çĕнĕ хыпар кĕчĕ. Киур, имĕш, Ануша пысăк тутăр илсе панă. Хальхинче Ануш хăй те Исевете, ыйтсан, тунмарĕ:

— Паракантан ил, çапакантан тар. Ваттисен сăмахĕ,— терĕ вăл, кулкаласа.

* * *

Левентей кайнăранпа темиçе уйăх та иртрĕ ĕнтĕ. Вăрçă çаплах чарăнмарĕ-ха. Вăйпитти арçынсем ялта, пĕри те тенĕ пек, юлмарĕç. Юлашкинчен ака колхоз председателĕ Петĕр те хаяр тăшманпа çапăçма хăй ирĕкĕпех тухса кайрĕ. Ун вырăнне председатель пулма Киура суйларĕç.

Правленире чӳрече куçĕсем пăрланса шакăртатса хытса кайнă.

Исевет стена çинче çакăнса тăракан карттă çине пăхать.

Ануш сĕтел хушшинче счёт шăрçисемпе выляса ларать.

— Ăса кĕтĕн пулать,— тет Исевет ун еннелле çаврăнса.— Киур патне йăрт та йăрт чупса килеттĕн. Кутăруçăн курăнми пултăн-ха.

— Анланаймастăп сана?..

— Хăвна çураçнă каччуна пĕтĕмпех манăччĕ пуль тесе эпĕ. Киур та Киур теттĕнччĕ. Чĕрĕ йытă вилнĕ арăсланран вăйлăрах тесе шутлать пуль, теттĕм.

— Савăнатăн апла?

— Левентее пăрахнăшăн-и?

— Ара, эсĕ юратнă-çке-ха ăна.

— Эпĕ халĕ те ăна юрататăп.

— Ну... халĕ ĕнтĕ сана чăрмантараканни пулмĕ.

— Ухмахланмарăн пуль вĕт эсĕ, Ануш! Ара, кам сана çураçнă пĕтĕм халăх умĕнче!

— Ан ман, Киур Левентейрен малтан пирĕн пата хăтана çӳренĕ. Алăри çерçи пĕлĕтри тăрнаран хаклăрах.

— Ануш, эсĕ комсомолкă...

— Комсомолкă тесе вара манăн та сан пек ватта юлмалла-и?

— Ну, асту, Ануш. Кайран ӳкĕнмелле ан пултăр.

— Ануш хăракан йышшиех мар.

Вĕсем правлени пӳлĕмĕнчен иккĕшĕ те пĕрле тухса кайрĕç. Пăртак тăрсан вара пӳлĕме Ануш пĕр-пĕччен пырса кĕчĕ...

* * *

Амăшĕ кӳрше каçнă. Исевет паян килте пĕрпĕчченех. Ун умĕнче сĕтел тулли «альбомсем» выртаççĕ.

...Çав альбомсене пурне те хĕр-тантăшсенчен, арçын ачасенчен илнĕ. Мĕн-мĕн çырман унта! Мĕнле кăна тĕслĕ чечексемпе эрешлемен, мĕнле кăна сăвăсем сăвăласа паман! Исевет — калăн, хăйĕн çамрăк чухнехи тантăшĕсемпе юлашки хут калаçса уйрăлать — çав «альбомсене» пăхса ларать. Яш чухнехи ытарайми вăхăтсем асне килсе, ун умне тухса тăраççĕ. Нихçан та вĕсем каялла таврăнас çук. Çапах та мĕнле ырă вĕсене халь аса илме!.. Ушкăнпала çырлана çӳренисем, карталанса вăйă каланисем, клубра спектакль лартнисем, вылянисем-кулчисем... Çаксем ĕнтĕ пурте иртсе кайрĕç. «Асăнмалăх»,— терĕ те Исевет, хаш! сывласа илсе, альбомĕсене пĕр çĕре майласа çыхма тытăнчĕ. Пĕчĕкçеççĕ илемлĕ кĕнеке туса çĕленĕ пĕр альбомне уйăрса илчĕ, сăрсемпе сăрласа тунă чечексем хушшинче çакăн пек сăмахсем тупрĕ:

«Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен...»

Унтан кăшт аяларах:

«Неужели ула лаша
Çула кайма юрамĕ;

Неужели ман çак альбом
Санăн кăмăлна каймĕ?
Ан кул... Асăнмалăх — Левентей».

Исевет хурлăхлăн, тути кĕтессипе кулса илчĕ. «Ула лаша туласа кайрĕ. Вăл халь питĕ инçетре ĕнтĕ».

Хĕрача шывланнă куçĕсене шăлса типĕтсе, тантăшĕсем çырнă альбомсем хушшинче Ануш альбомне уçрĕ.

«Пĕрчĕ-пĕрчĕ пĕрлĕхен —
Çулçи витĕр курăнать.
Исевет тус, сан сăну
Тĕлĕкре те курăнать.

Хамăр хыçри кӳл урлă
Шурă явлăк вĕçтертĕм.
Тантăш, сана юратнине
Альбом çырса систертĕм.

Çитĕ ĕнтĕ, çитĕ ĕнтĕ,—
Çырса сăмах пĕтес çук.
Хăвна курса калаçмасан,—
Манăн чунăм канас çук».

Исевет сĕтел çине чавсаланса пĕр самант хушши шухăша кайса ларчĕ. Пуçне сулларĕ. «Çук, ĕненместĕп эп сана, Ануш... Мана мар, эсĕ хăвна пĕтĕм халăх умĕнче тупа туса юратакан каччуна мантăн та...»

Исевет хăйĕн альбомĕсене пуçтарса çыхса, икĕ чӳрече хушшинче çакăнса тăракан тăрăхларах тăваткал пысăк тĕкĕр хыçне хучĕ.

Çав вăхăтра унăн куçĕсем тĕкĕр çине ӳкрĕç те, ун умне вара чĕкеç çуначĕ пек хура куç харшиллĕ, кăркăс хĕрĕсенни пек сарлакарах питлĕ, пĕчĕк куçлă, кăшт каçăртарах сăмсаллă та çӳп-çӳхе тута-çăварлă хĕр сăнĕ тухса тăчĕ. Çав хĕр Исевет çине тахçан ĕлĕк лайăх палланă та халĕ ĕнтĕ унпа ăçта тата хăш тĕлте тĕл пулнине пĕтĕмпех манса кайнă çын пек, чим-ха, ăçтаччĕ-ха, хăçанччĕ-ха эпĕ сана курнăччĕ, тесе астуса илме тăрăшнăн тинкерсе пăхса тăчĕ. «Аха, астурăм, астурăм,— Левентее ăсатнă кун санпа эп курнăçнăччĕ. Питĕ ватăлса кайнă-çке, тусăм, эсĕ унтанпалан».

Тĕкĕр çинчи хĕрача куçĕсемпе кăна пĕр сасăсăр, шăппăн Исевете çапла каларĕ те ун патнелле тата ытларах çывхарчĕ. «Паллах, паллах, ватăлнă эсĕ, Исевет тусăм,— терĕ вăл, куç харшисене пĕрсе.— Çиленсен санăн ĕлĕкех икĕ куç харши хушшипе икĕ енчен икĕ йĕр çамку çине çурса кĕретчĕ. Анчах вĕсем ун чухне çутăрахчĕ пулас, ăшăкрахчĕ, ытлашши хытă тинкерсе пăхсан кăна асăрхама пулатчĕ вĕсене. Халĕ ав мĕнле тарăнланса кайнă вĕсем».

Çапла каларĕ те тĕкĕр çинчи хĕрача темĕнле салхулланнă пек пулчĕ. Анчах ку вăраха пымарĕ. «Çук, Исевет тусăм, пире санпа иксĕмĕре ватăлма юрамасть-ха. Хăçан та хăçан савнă каччăмăрсем вăрçăран таврăнĕç, хăçан та хăçан эпир вĕсене санпа иксĕмĕр пĕрре лайăх кăна ытакласа чуп тăвăпăр, çавăн хыççăн вара ватăлма та юрать. Ара, каппла пире, ватă карчăксене, яш Левентей чуп тăвать-и! Ну, ну... Пуçна çĕкле-ха, çĕкле... Вăт çапла. Хăюллăрах, хăюллăрах. Халь ĕнтĕ эпир санпа иксĕмĕр кулса кăтартăпăр. Астăватна, сана пĕррехинче Левентей: эсĕ кулнă чухне илемленсе каятăн, теменччĕ-и çав?»

Çапла каларĕ те тĕкĕр çинчи хĕрача йăл кулса ячĕ. Кулса ячĕ те çавăнтах юмахри пек хăвăрт улшăнса, темĕнле çамрăкланса та илемленсе кайрĕ. Икĕ пит çăмарти çине тăпăлтăпăл илемлĕ путăк килсе тухрĕ. Вĕсем ахаль те кăмăллă сăнлă хĕрачана тата кăмăллăрах, тата ăшăрах кăтартма пуçларĕç. «Вăт çапла,— терĕ те тĕкĕр çинчи хĕрача, Исеветрен аяккалла, алăк патнелле кутăн чакма пуçларĕ.— Пӳртре никам та çук чух эпир санпа пăртак ухмахланар-и? Пирĕн санпа иксĕмĕрĕн пӳ-çийĕмĕр те ытлашши хурласах тăкмалла марччĕ-ха»...— терĕ вăл кулкаласа. Кăна вăл мухтанса мар,— Исевет лайăх пĕлет,— тивĕçлипе çапла каларĕ. Ара, вăл пĕрре мар, çĕр хутчен те хăй хăлхипе хăй илтнĕ-çке хĕр-тантăшĕсем ун ӳтне ăмсанса калаçнисене. «Ну пулать те-мĕн кăкăр-çурăм,— тетчĕç вара ăна çарамас çинчен курсан — шыва кĕнĕ чухне-и унта е мунчара курсан-тусан.— Вылянса, юхăнса тăрать вĕт саççим. Çук, санăн, Исевет, каччăсене сăхлантарас тесен, чăваш кĕпипе мар, майралла, тăп-тăп тытса тăракан платйĕ тăхăнса çӳремелле». Исевет вара çапла шухăшлатчĕ: «Çук, кăкăр-çурăмпа сăхлантарасси вĕçне юлсан, пĕтрĕ вара...»— тетчĕ. Чăнах та, ăна ялта майралла кĕпе тăхăнса çӳренине халиччен никам та курман-ха...

Тĕкĕр çинчи хĕрĕн шап-шурă йĕтĕн пир кĕпи пилĕкĕнчен туртса çыхнă симĕс пурçăн пиçиххине салтсан, ура тупанне çити усăнса анчĕ. Çавăнтах ытла пысăк та, пĕчĕкçĕ те мар çансурăмăн илемлĕ пилĕк авăнчăкĕсем палăрма тытăнчĕç. Хĕрача сылтăм еннелле пăрăнса карăнса илнĕ май, чăп-чăмăр улма пек палăрса тăракан кăкăрĕсем тата та çӳлелле çĕкленсе илемлĕн хăпарса тăчĕç...

...Пăлтăр алăк сасси Исевете шартах сиктерчĕ. Вăл йăпăр-япăр пиçиххине çыхса ячĕ.

Пӳрте кăштăртатса Левентей амăшĕ пырса кĕчĕ.

— Пирĕн килес,— терĕ вăл, куçне тутăр кĕтессипе шăлкаласа.— Куççем те курсах каймаççĕ ĕнтĕ, çапах та килес терĕм-ха. Ачам, ырă сехет пултăр, эпĕ сирĕн пата хут вулаттарма килес терĕм те. Тепле, вăхăт тупайăрши? Ашшĕ чукун çул тунă çĕре кайнă.

Çак сăмахсене илтсен, хĕрачан çан-çурăмĕ вутпа пĕçертнĕ пек пĕçертсе кайрĕ. Алăк умĕнче тăракан Варвари аппăшне аллинчен тытса, тĕпеле çавăтса пырса, сĕтел патне лартрĕ. Карчăк чĕтрекен аллисемпе хĕвĕнчен çыру кăларчĕ.

Конвертне уçсанах Исевет çав çырăва Левентей хăй аллипе çырманнине пĕлчĕ. Хăйне хăй пусарасшăн пулса, пĕр тикĕс, васкамасăр вулама пуçларĕ.

Варвари аппăшĕн хăлхисем хыта пуçланă-мĕн:

— Ачам, пăртакçă хытăрах, хытăрах,— тесе кăшкăрса ыйтрĕ. Анчах Исевет, малтан хытă сасăпа вулама пуçланăскер, каярахпа хуллен, унтан шăппăнран шăппăн вуларĕ. Пырарахпа, шывланса тулнă куççуллисене шăлса, пачах вулама пăрахрĕ. Тутисене кăна мăльт-мăльт сиктеркелерĕ.

Варвари аппăшĕ куçне илмесĕр Исевет çине тинкерсе пăхса ларчĕ. Калăн, вăл хăйĕн хăлхине ытлашши шансах та каймасть, тейĕн. Калăн, Исевет сăн-пичĕ улшăнса пынă тăрăх çырура мĕн пурри çинчен ытларах пĕлме пулать. Исевет сасси хăлхана кĕми пулсан, аппăшĕ тата тепĕр хут асăрхаттарчĕ:

— Мĕн тет?— Исеветĕн чĕтренсе тухакан сасси ăна пăшăрхантара пуçларĕ, куран.— Мĕн çырать?..

— Варвари аппа, Левентей чĕрĕ...— Унăн тата каламаллаччĕ те, вăл калаймасăр сăмах шыраса тăчĕ.

Аппăшĕн куçĕсем йăлтăртатма тытăнчĕç.

— Чĕрĕ?..

Вăл, ырă хыпар илтнипе сасартăк çăмăлланса кайнăскер, ура çине тăчĕ те турăш кĕтесси енне çаврăнса сăх-сăхма пуçларĕ. Исеветсен турăш кĕтессинче паллах ĕнтĕ, пĕр турăш та çук, унта кĕнекесемпе тетрадьсем кăна выртаççĕ. Çакна карчăк асăрхаймарĕ.

— ...Эй, турă амăшĕ, малашне те сыхла манăн пĕртен-пĕр ачама...— тесе пĕтĕм чунтан кĕл туса сăх-сăхрĕ вăл.

Çакна кура, Исевете калас тенĕ сăмахĕсене калама пушшех йывăр пулчĕ. Анчах вăл каларĕ-каларех. Мĕншĕн тесен кăна ниепле те пытарса тăма май çук.

— Варвари аппа,— терĕ вăл, лешĕ кĕл туса пĕтерсе каллех хăй вырăнне ларнă хыççăн.— Варвари аппа (çакна Исевет нихçанхинчен йăшшăн, çемçен каласшăн пулчĕ), Левентей чĕрĕ, сывă... Анчах... аманнă.

— Мĕн?.. Аманнă?!

Йăшăлтатсанах çĕре тĕшĕрĕлсе персе анас пек, Варвари аппăшĕ пĕр самант хушши нимĕн те чĕнмерĕ те, сиккелемерĕ те. Анчах...



этем чунĕ темĕне те чăтать-мĕн. Варвари аппăшĕ кăшт сывлăш çавăрса ячĕ те ыйтрĕ:

— Аçтан?.. Хăш тĕлтен аманнă?

Исевет аллинчи çырăва тепĕр хут сарса, вулама тапратрĕ. Хальхинче вăл, куçĕнчен шăпăртатсах куççуль юхнипе, саспаллисене часах палласа илеймерĕ. Вара тутăр вĕçĕпе куçне шăлса илчĕ те хăйне хытарсах кăшкăрса вулама пуçларĕ. Чи хăрушă вырăна çитсен, унăн пырне темĕскерле муклашкасем тул-

са ларчӗҫ. Ҫапах та вӑл вулама чарӑнмарӗ.

«...Эпӗ ӗнтӗ, тен, сынсем пек ҫивӗч куҫлӑ пулаймӑп та, пӗр куҫӗ, тен, манӑн пачах та куракан пулмӗ...»

— Ах, ачам, ах, пепкем!..

Исевет халран кайнӑ аппӑшне пӗтӗм чунтан шеллесе, йӑпатма пуҫларӗ. Хӑй ҫав хушӑра ҫырӑвӑн тепӗр листине вуласа тухасшӑн хыпӑнса ҫунчӗ. Унта: «Ҫакӑ Ануш валли», тесе асӑрхаттарса ҫырса хунӑ. Паллах, ҫав листара мӗн ҫырнине Варвари аппӑшӗ те, Исевет те пӗлме тивӗҫлӗ мар та ӗнтӗ,— пӗр алла лекнӗ чух вуласа пӑхни Исевете, темшӗн, ытлашши пысӑк айӑпах мар пек туйӑнать. Ҫавӑнпа та вӑл аппӑшӗ пӑртакҫӑ лӑпланнӑ пек пулсанах, чӑтаймасӑр, тепӗр хут ҫыру ҫине пӑхрӗ. Вӑл аван мар тесе, пӗтӗмпех вуласшӑн та марччӗ, ҫапах (мӗн тӑвас тетӗн-ха) Левентей Ануш патне ҫырнӑ сӑмахсем вуламасӑрах тенӗ пек, куҫпа пӑхнипех, хӑйсем тӗллӗнех вуланса тӑчӗҫ:

«Ануш, чунӑм, ан кулян манпа ҫапла пулнӑшӑн. Тухтӑрсем каланӑ тӑрӑх, операци тусан ман куҫ тӳрленме те пултарать. Паллах, манӑн пайтах больницӑра выртма тӳрӗ килӗ. Ануш, эпӗ эсӗ каланӑ сӑмахсене, юрататӑп тесе тупа тунисене нихӑҫан та манас ҫук. Паян кун эпӗ больницӑра, анчах эпӗ телейлӗ, санӑн сӑн-питна питӗ лайӑх курса тӑратӑп. Сан сӑну манӑн хупӑ куҫ умӗнче хӗвел пек ҫуталса, мана вӑй парса тӑрать. Эх, санӑн сассуна пӗр хут илтесчӗ, пӗрех ҫеҫ хут!..

Ануш, чунӑм, мӗн ҫӗмӗрттерет Исевет? Вӑл питӗ ӑслӑ, лайӑх хӗрача. Эсир унпа иксӗр яланах туслӑ пурӑнӑр. Ӑна эс ятарласах манран салам кайса кала. Кала, эпӗ вӑл хӑйӗн сӑмаххи ҫине тӑрасса пӗтӗм чунтан шанатӑп».

Исевет чӗри хаваслӑн тапма пуҫларӗ, ҫав вӑхӑтрах юлашки сӑмахӗсем ӑна шухӑша ячӗҫ. «Мӗн тума сӑмах панӑччӗ ҫав эпӗ?.. Хӑшин ҫинчен асӑнать вӑл?.. Мӗн тума тата ман пата хам ятпа ҫыру ҫырмасть?..»

— Тата мӗн ҫырнӑ, веҫех вуларӑн-и?

Варвари аппӑшӗ сӑмахӗсем Исевете вӑратрӗҫ.

— Тата пур, Варвари аппа, анчах ыттисене Ануш валли уйрӑм хут ҫине ҫырнӑ. Хамах леҫсе парас-и?

— Ануш?..— аппӑшӗ салхуллӑн аллине сулчӗ. Мӗн каласшӑн пулчӗ вӑл, Исевет ӑнкарса илеймерӗ. Ҫапах вӑл туйрӗ: Варвари аппӑшне Ануш нихӑш енчен те интереслентермест ӗнтӗ. Ӑна вӑл хӑйӗн «кинӗ пуласси» тесе те шутлама пӑрахнӑ, куран. Ҫавӑнпа та Ануш ячӗпе ҫырнӑ ҫырӑва Исевет хӑй патнех хӑварчӗ.

* * *

Исевет, амӑшне пулӑшса, килти ӗҫсене турӗ те каҫпа вара колхоз правленине тухса утрӗ.

Клубпа правлени хушшинчи вӑрӑм коридора кӗрсе, алӑк умне ҫитсенех ун хӑлхине: — Кай, шуйттан!— тесе кӑшкӑрса каланӑ хӗрарӑм сасси илтӗнсе кайрӗ. «Кунта камсем? Мӗн тӑваҫҫӗ?» Исевет ҫакна пӗлесшӗн пулса, пӗр вырӑна хытса итлесе тӑчӗ.

— Никам та курмасть вӗт,— терӗ Киур сасси. Унтан такамӑн пӑшӑлтатнӑ сасси илтӗнчӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑнах алӑк патнелле утакан ура сассисем илтӗнме пуҫларӗҫ. «Иртсе кайччӑр, темӗскер шутлама пултарӗҫ, юри итлесе ҫӳрет тейӗҫ тата». Хӗр ҫапла шухӑшласа илчӗ те коридорти тӗттӗм кӗтесселле пӑрӑнчӗ.

Пӳлӗмрен коридора тухнӑ икӗ ҫын урам алӑкне уҫмарӗҫ. Пӗр вырӑна чарӑнса тӑчӗҫ те тем ҫинчен хыттӑн пӑшӑлтатса, аллисене сулла-сулла хӗрсе тавлашрӗҫ...

...Исевете ырӑ мар пулса кайрӗ. «Ухмах, луччӗ манӑн кӗмелле пулнӑ; капла мӗнле килсе тухрӗ-ха? Акӑ вӗсем мана кураҫҫӗ, унтан ыйтаҫҫӗ: «Мӗн эсӗ, кама сыхласа ҫӳретӗн?» Мӗн кӑна шухӑшламӗҫ вӗсем ман ҫинчен». Ҫакӑн пек шухӑшсем Исевете пӗтӗмпех пӑшӑрхантарса ячӗҫ. Вӑхӑт нумай иртмерӗ пулин те, ӑна Киурсем питӗ вӑрах калаҫса тӑнӑн туйӑнчӗ. Вӑл вӗсем вӑрттӑн ҫӗрте мӗн калаҫни ҫинчен мар, вӗсенчен мӗнле майпа, куҫ тӗлне пулмасӑр, пӑрӑнса тарасси ҫинчен шухӑшларӗ. Ҫапла пулин те, хӗрачана акӑ ирӗксӗрех лешсем мӗн калаҫнине илтмелле пулчӗ.

— ...Асатса хӑварам,— терӗ юлашкинчен Киур.

— Ҫук, паян мар,— пӑшӑлтатрӗ тепри.— Урӑх чухне.

Ҫав сасӑ Ануш сасси пулнине лайӑх уйӑрса илсен, Исевет тӗменле вӗриленсе кайрӗ. Унӑн ӑш-чикӗ пӑтранчӗ. Кӗҫйинче Левентей ҫырӑвӗ. Ҫав ҫыру хӗр аллине сасартӑк вут пек пӗҫертме тытӑнчӗ. Исевет колхоз правленинче ыранхи ӗҫсем ҫинчен калаҫса татӑласшӑнччӗ те Ануш патне каясшӑнччӗ, ҫул май тата тепӗр ӗҫ туса хурасшӑнччӗ. Халӗ ак икӗ ҫӑмӑлтан пӗрне те тума май ҫук. Анушпа Киур ҫакӑн пек вӑхӑт иртерни Исевет кӑмӑлне йӳҫӗ ватпа пӑтратрӗ. «Акӑ мӗнлелле ларутӑру! Пӗркун илтнисем тӗрӗсех иккен...»

Анушпа Киур, алӑка хупмасӑрах хӑварса, урама тухрӗҫ. Пӑртак тӑрсанах правленипе кӳршӗллӗ пурӑнакан Антунсем умӗнче пӗр йытӑ тытса ҫиес пек вӗрме тапратрӗ. Исевет ӑнланчӗ: Анушсем хӑйсем енне мар. Хайпӑҫ кассине, спекулянткӑ аппӑшӗ патнелле ҫул тытрӗҫ.

«...Иккĕшне те пурпĕр ятламаллипех ятлатăп-ха»,— терĕ те Исевет, правлени канцелярине кĕрсе кайрĕ.

Пусарса хăварнă лампă çутине хăпартрĕ те сĕтел умне вырнаçса ларчĕ.

Никам та çук. Пўртре ăшă. Шăп. Стена çумĕнче çакăнса тăракан сехет сасси çеç кăмака хыçĕнче чĕриклетекен шăрчăк сассипе тавлашать. Стенасем çумĕнче темиçе тĕрлĕ плакатсем, вĕсем паянхи кунăн йывăрлăхĕсем çинчен асăрхаттарса, пĕтĕм халăха ирсĕр тăшмана хирĕç тухма чĕнеççĕ. Совет Союзĕн картти çакăнса тăрать. Карттă çине хĕрлĕпе хура сепетсем лартса тухнă. Çак икĕ тĕслĕ хирехирĕç лартса тухнă пăнчăсем кашни килен каян колхознике интереслентернĕ... «Алăка питĕрмен, лампă пусарса хăварнипех çырлахтарнă пулас»,— тесе шухăшларĕ Исевет; сĕтел хушшинчен тухса калла-малла уткаласа çўрерĕ. «Хăçан вăл килет? Вăт чĕре, манса кайнă пулсан çеç,— терĕ, хутсемпе кĕнекесен шкапĕ питĕрĕнмесĕр тăнине курсан.— Мĕне пĕлтерет ку? Мĕн темелле çакна?» Питĕрмесĕр хăварнă шкапа уçса пăхсан, вара тĕлĕнмеллипех тĕлĕнсе кайрĕ.

Исеветĕн шăртланса кайнă нервисем темĕнле ал-урисене чĕтретме пуçларĕç. «Эсĕ хĕрсемшĕн çапла пĕтĕм халăх ĕçне пăрахатăн иккен, сана куншăн вĕрентмелле-ха», тесе шухăшласа илчĕ вăл. «Вĕрентес пулать. Анчах мĕнле майпа? Хăш-пĕр хаклăрах папкисене илес те шкапа стена хушшине пытарас? Çук, ун пек тусан темĕнле пĕчĕк ачалла тухать. Луччĕ эп хам çакăнта сыхласа ларам... Ануша ăсатса ярсан, таврăнать пуль-ха».

Тулти сивĕ çил чўрече хупписене кашăртаттарать.

Исевет сĕтел хушшине вырнаçрĕ те, вăхăта сая ярас мар тесе, Левентей патне çыру çырма пикенчĕ...

«Левентей тусăм!— тесе çырчĕ Исевет.— Туятăп, эсĕ пысăк асапа кĕрсе ўкнĕ... Анчах ан ман, совет науки, совет медицини темĕн те тума пултарать. Эп шанатăп, эсĕ сывалатăнах...»

Пĕр саманта Исевет çырма чарăнса, шухăша кайса ларчĕ. Ун умне Левентей сăнĕ килсе тухрĕ. Хĕрача Левентей куçран суранланнине пĕлет ĕнтĕ. Ун куçĕсене сыхнă пулĕ. Кăна та вăл туять. Çапла пулин те, Левентей сăнĕ, ĕлĕкхи пекех, чап-чакăр куçлă курăнать.

«Левентей тусăм,— тет хĕрача, Левентей инçетри госпитальте выртнине, халĕ вăл кунта асĕнче кăна иккенне пĕтĕмпех манса кайса...— Сан куçусем курмаççĕ, тетĕн? Мĕнле-ха ку капла?»

Левентей ăна хирĕç пĕр сăмах та чĕнмест. Анчах хĕр çапла ыйтсанах ун куç хупанкисем хупăнма тытăнчĕç те вăл вара куç кĕретех суккăр çын пулса тăчĕ. Ун сăнĕ паçăрах, куçĕ уçă чухнех хурлăхлăн курăнаканскер, халĕ ак ун çине пăхма та йывăр пулчĕ. Этем ывăлĕхĕрĕ тўсейми асаппа асапланакан çын çеç çавăн пек мĕскĕннĕн курăнма пултарать.

Исевет чут çеç кăшкăрса ямарĕ. Майĕ пулсан вăл халĕ тесен халь хăйĕн хăрах куçне савнă çыннине кăларса пама хатĕр. Пĕри — хăйне, тепри — тусне.

Çурçĕр енчен пĕр ушкăн çил пырса çапăннипе, урам енчи пĕр чўрече хуппи шăлт-шалт туса илчĕ. Исевет пуçне йăлт çĕклерĕ те, Левентей сăнĕ çавăнтах куç умĕнчен çухалчĕ.

«Çыру çырма ларнăччĕ-çке...»— астуса илчĕ хĕр. Хăй мĕн çырнине тепĕр хут вуласа тухрĕ те малалла тăсрĕ.

«...Таруç аппа Шупашкарта куç институтĕнче ĕçлет. Доцент. Филатов профессорăн чи юратнă ученикĕ, тет. Тен, çавăн патне килсен лайăххах пулмĕ-и?»

Исевет хăй аппăшĕ ăста хирург, паллă окулист пулни çинчен хаçатсенче пĕр хут кăна мар вуланă, çынсенчен те сахал мар илтнĕ, хăй те лайăх пĕлет. Аппăшĕ патне килсен Левентей куçне сыватасса вăл пĕтĕм чунтан ĕненсе тăчĕ. Анчах аппăшĕнчен ытларах вăл хăй çине шанчĕ. Ăна Левентей тусĕ Шупашкарта, Исевет çывăхĕнче пулсан, темĕншĕн, чĕрĕлетех пек, Исевет ăна хăть мĕн пулсан та сывататех пек туйăнчĕ.

«Кил, тусăм, таврăн Шупашкара. Сана эпир кунта сывататпăрах,— тесе çырса хучĕ вăл.— Кунта эсĕ пĕччен мар. Кунта...»

Исевет «Кунта эпĕ пур» тесе çырасшăнччĕ те — хăяймарĕ. «Ну, мĕн эпĕ уншăн,— тесе шутларĕ вăл, сасартăк салхулланса кайса.— Юлташ çеç, урăх никам та мар... Уншăн эп мар чи хаклú, Ануш... Ануш... акă камшăн касăлать Левентей чĕри».

Хĕрачан пичĕ çине асап паллисем тухса выртрĕç. Анчах хĕрача хальхинче Анушран кĕвĕçнĕрен те мар, тата урăххишĕн асапланчĕ. Мĕншĕн асапланнине вăл чăннипе хăй те пĕлеймерĕ-ха.

Пĕр енчен вăл кĕвĕçрĕ те, тепĕр енчен кĕвĕçмерĕ те. Левентей ăна мар, Ануша юратать — ку кĕвĕçтерчĕ. Ануш Левентее пăрахса, Киур çумне çыпăçать. Апла пулсан, Левентей чĕри ирĕке тухать — ку кĕвĕçме пăрахтарчĕ.

Левентей Ануша юратни ăна тарăхтарчĕ. Мĕншĕн тесен вăл хăй Левентее юратать. Анушĕ хăйĕнчен лайăх пулсан пырĕччĕ, тен, Исевет çиленмĕччĕ те-и. Анушĕ çăмăлттай-çке. Вăл ăçтан Левентее тивĕçлĕ мăшăр пулма пултарĕ?

Ануш çăмăлттай... кăна та каçарĕччĕ Исевет. (Тĕрĕссипе, каçармĕччĕ те ĕнтĕ). Тен, пыра-киле тӳрленĕ, ăса кĕрĕ, тенĕччĕ Исевет. Кунпа кăна çитмест вĕт-ха. Вăл ак вăрçăри тусне манса, Киурпа явăçрĕ... Çакă вара Исевете тарăхтармаллипех тарăхтарчĕ. «Путсĕр хĕрача. А вăл ăна юрататать...» Кунпа кăна çитмест. Тен, Левентей сываласси, куçлă пуласси те çавăнтан килет-и?.. Эх, Ануш вырăнĕнче Исевет хăй пулас пулсан! Пĕлĕччĕ халь вăл мĕнле юратмаллине. Отпуск илĕччĕ те тӳрех госпитале, Левентей патне вĕçтерĕччĕ... Вăл сываласси, тепĕр тесен, çавăнтан та пăртак килет.

Исевет халĕ ĕнтĕ лăп та шăп Ануш çинчен çырмаллине чухлать. Халь ĕнтĕ Левентее йăпатмалла, шантармалла. Ăна юратаççĕ, кĕтеççĕ, темелле. Анчах ăçтан Ануш çинчен çапла çырайтăр-ха вăл Ануш мĕн хăтланнине пĕле тăркачах?

Тен, чăнах та Анушпа калаçса пăхсан? Левентей патне кайса килтĕр вăл, Левентей чунне лăплантартăр, вилĕмпе кĕрешекен йывăр суранлă вăйсăр ӳте чĕр пурнăç сывлăшĕ вĕрсе кĕрттĕр...

Хĕрача çапла шухăшларĕ те çавăнтах тутине пăрчĕ: Ануш унта каяссинчен иртнĕ ĕнтĕ. Вăл халĕ Киурпа мĕнле майпа лайăхрах йăпанасси çинчен пуçне ватать пуль.

Çапла шутларĕ те Исевет, Киур пулман пулсан, Ануш тĕрĕс çул çинчен пăрăнас çук пек, Киур çине те ак тарăхма тытăнчĕ.

Темиçе тĕрлĕ шухăш хĕре асаплантарчĕ. Пĕр енчен Ануш Левентейрен уйрăлни лайăх пулчĕ. (Халĕ Левентей чĕри пушă юлать, тен, çав пушă вырăна... О-о, кун çинчен асăнсанах Исевет чĕри кăкăрне ватса тухас пек тапма тытăнать, тен, çав пушă вырăна пыра-киле Исевет хăй те йышăнма пултарĕ). Тепĕр енчен, Ануш лăп та шăп çак йывăр вăхăтра Левентейрен пăрăнни калама çук ирсĕр пулчĕ. Вăл Левентейĕн ахаль те йывăр асапне тата ытларах йывăрлатса, ачана арман чулĕ пек пĕтĕмпех пусарса хума пултарать. Левентей пĕтсен, пурте пĕтет вара. Çавăнпа та Ануш Киурпа çӳренинчен усалли ытларах пек туйăнчĕ.

Хуть те мĕн пулсан та, хĕрача Ануш çинчен усаллине нимĕн те çырса пĕлтересшĕн мар пулчĕ. «Кайран унта курăнĕ, халлĕхе Левентей чĕрине хуйхатма кирлĕ мар».

Исевет çапла тума йышăнчĕ те хăй мĕн çырнине тепĕр хут вуласа тухрĕ.

«...Кунта эс пĕччен мар. Кунта...»

Çак вырăна çитрĕ те пĕр иккĕленмесĕрех çапла çырса хучĕ: «Кунта сан аçу-аннӳ, кунта сана юратакан тусусем...»

* * *

«Левентей яла таврăнать. Халĕ вăл резъездра. Ялтан лаша пырасса кĕтсе тăрать». Çак кĕтмен хыпара Исевете правленире дежурить тăвакан Тимуш, Киур шăллĕ, пырса пĕлтерчĕ.

— Халĕ çеç разъездран шăнкăртаттарчĕç. Пичче уйра. Çавăнпа та, сире кунта ампарсем патĕнче куртăм та, тӳрех чупса килтĕм,— терĕ Тимуш, сывлăшне аран-аран çавăрса. Вăл мĕн вăйĕ çитнĕ таран чупса килнĕ: пĕрре — хыпарĕ ытла савăнăçлă, тепре — телефон патĕнче никам та çук. Вăхăчĕ вара — самай хĕрӳ вăхăт. Райкомран та унта, таçтан та шăнкăртаттарма пултараççĕ.

— Левентей?.. Йăнăш илтмерĕне, шăллăм?..

Исевет чĕри, кăкăрне çĕмĕрсе тухас пек, талт-талт, талт-талт! тапма пуçларĕ.

Тимуш, хăйне хăй нихçан та йăнăшма пултараймасть тесе шутлаканскер, кăмăлсăрланчĕ. Шанмасть тата! Хăйне ырă тăваççĕ. Чи лайăх хыпара пуринчен малтан пĕлтереççĕ... Вăл ак ăнах хур тăвать. Тимуш чăн малтан Исевете мар, тимĕрç лаççине кайса, Якрав старике те пĕлтерме пултарнă. Вăл та правлени членĕ. Çитменнине тата парторг та. Ара Якрав лаçа кĕрсе кайнине вăл курчĕ-çке. Анчах Исевете ялан хăй аппăшĕ çине пăхнă пек пăхнипе, ăна калама çук хытă кăмăлланипе, вăл ак ун патнех чупса килчĕ. Çавăнпа та Исевет ăна ĕненменни пушшех килĕшмерĕ. Вăл: «Эх, эсĕ те çав...» тенĕ пек, Исевет çине ӳпкелешсе пăхрĕ.

— Тимуш хăçан йăнăшни пур?

— Ну-ну, ан çилен. Пĕлетĕп, эсĕ маттур ача. Чăнах Левентей таврăнать-и?..

— Сана суйма эп мĕн, пĕчĕк ача-им! Калатăп вĕт телефонпа пĕлтерчĕç, тесе.

— Кам пĕлтерчĕ? Левентей хăй-и?

Тимуш пуçне усрĕ, мĕншĕн тесен ытла савăнса кайнипе вăл хăйĕнпе кам калаçнине ыйтса пĕлме чухлайман. Çакăншăн вăл ак халĕ хăй çине хăй çиленчĕ.

— Хăй мар,— терĕ вăл, аппăшĕ çине хальхинче куçран пăхма хăяймасăр.

— Кам?

— Разъезд начальникĕ пулмалла..,— терĕ Тимуш хăюсăррăн. Унтан вăл, аппăшĕ темĕнле иккĕленерех пăхнине асăрхарĕ те, хушса хучĕ:

— Ватă çын сассиччĕ.

Çапла каласа вăл ватă çынсем улталас çук, ун сăмахĕсем пурте тĕрĕс, тесшĕн пулчĕ ĕнтĕ. Вăл хăй çак телефон тăрăх Левентей çинчен пĕлтернине пĕтĕм чунтан ĕненчĕ. Мĕншĕн тесен вăл ырă хыпар, тата, тепĕр тесен,— кам-ха çак хĕрӳ вăхăтра телефон тăрăх çавар вылятма хăйтăр!..

...Исевет кӗлет патӗнче ӗҫлекен кладовщике: «Ну, юрӗ, кайран эппин вӗҫлӗпӗр»,—тесе хӑварчӗ те урам тӑрӑх лаша вити еннелле чупрӗ.

Хӗвел кӑнтӑр тӗлӗнче. Кӑн-кӑвак тӳпере вӗлтӗр-вӗлтӗр шурӑ пӗлӗтсем. Вӗсем темӗнле ҫӑп-ҫӑмӑл пек курӑнаҫҫӗ, илемлӗ...

Пӗтӗм тавралӑх тап-таса, ҫап-ҫуттӑн, халь ҫеҫ ҫӑвӑнса тасалнӑн курӑнать. Ак мӗнешкел илемлӗ иккен ҫак тахҫантанпах Исевет курассӑн сунман савӑнӑҫлӑ кун!

Фермӑра, сакӑр вунӑ ҫулхи Антун стариксӗр пуҫне, никам та ҫук. Вӑл нимӗн те-ха пӗлмест, ахӑр. Хӑех хитрелетсе тунӑ кукӑр пуҫлӑ чӗлӗмне хыпнӑ та кӗлет алӑкӗ умӗнче йӗнерчӗк юсаса ларать.

— Антун пичче, Левентей таврӑнать. Разъездра. Халех лаша кӳлес пулать.

— Левентей? Таймансен Левентейӗ-и?—старик саралса кайнӑ яп-яка чӗлӗм чӑпӑкӗпе янаххине хыҫса илчӗ. Ун куҫӗсем йӑлтӑртатса ҫуталса кайрӗҫ. Ӗнер кӑна Тайман тусӗ унпа мӑнуксем вӑрҫӑран ҫыру ҫыраҫҫӗ-и, тесе калаҫса ларчӗ. Паян ак унӑн хӑйӗн ывӑлӗ таврӑнать. Антун Левентее лайӑхах пӗлсе каймасть пулин те — старик вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче кӑна ял ҫине тухкала пуҫларӗ, унччен ялан кил таврашӗнче кӑна айайлатса ҫӳретчӗ. Ҫавӑнпа та ялти ҫамрӑксене чылайӑшне паллаймастчӗ — ҫапла пулин те, Тайманне хӑйне юратнипе, халӗ калама ҫук савӑнса кайрӗ. Ытлашши хӗпӗртенипе, вӑл, аллинчи йӗнерчӗкне хума та манса кайса, йӗнерчӗкӗ-мӗнӗпех витене васкарӗ.

Пӗр ҫирӗм минут та иртмерӗ пулӗ, Исевет лаша кӳлсе тухрӗ те.

Тимӗр кӑвак лаша, ытти лашасем пекех ырхан пулин те, лайӑх юртать. Анчах Исеветшӗн вӑл ҫапах та васкаман пек, калама ҫук мишун лаша пек туйӑнать.

— Но-о, туймастнам кама илме кайнине! Васкарах, васкарах!—тесе хавхалантарчӗ вӑл лашине.

Ялта, куҫса кайнӑ пек, чӳрече хупписем хупӑ. Урамра пӗр ҫын чунӗ те курӑнмасть. Пурте, вӗтти-шакки мӗнӗпех, хирте.

Исевет ялтан тухса, пӗр ҫухрӑм ҫурӑ пек кайсан, станцӑ енчен тусан мӑкӑрлантарса, грузовик килни курӑнчӗ. Часах ак грузовик ҫул пама ыйтса кӑшкӑртса ячӗ.

Левентей те ҫак машинӑ ҫинче мар-ши? Исевет грузовике чарасшӑн пулса, юрҫех ҫул ҫинчен пӑрӑнмарӗ. Анчах шофер руль ҫаврашкине карт пӑрчӗ те, машинӑ Исевет умӗнчен вӗлт ҫеҫ иртсе кайрӗ.

Машинӑ ҫинче икӗ хӗрарӑм, виҫ арҫын лараҫҫӗ. Исевет вӗсенчен пӗрне кӑна паллать. Вӑл Сухви — кӳршӗ колхоз председателӗ. Кабинӑра, шофер ҫумӗнче, салтак тумтирӗ тӑхӑннӑ ҫын ларса пырать. Унӑн питне те, пуҫне те шап-шурӑ пӳспе чалмаласа-пиелесе ҫыхнӑ. Ҫавӑнпа та вӑл кам иккенне паллама ҫук. Ӑна курсанах Исевет ӳчӗ сӑрлатса кайрӗ, чӗри тем пулнӑ пек сикме тытӑнчӗ. «Мекейӗн ҫавӑ»,—терӗ те хӗр, лашине чарчӗ. «Левентей! Левентей!—тесе кӑшкӑрчӗ вӑл, хыҫалалла ҫаврӑнса. — Левенте-ей!».

Мотор сасси хупланипе-и ӗнтӗ, е ҫил урӑх еннелле пулнипе, грузовик ҫинчисем Исевет сассине илтмерӗҫ. Машинӑ чарӑнмарӗ.

Хӗрача мӗн грузовик сӑртран анса курӑнми пуличченех пӑхса тӑчӗ. Ӗнтӗ мӗн тумалла халӗ унӑн? Лашине малалла хӑваламалла-и, е каялла ҫавӑрмалла-и? Левентей пулчӗ-ши е Левентей мар-ши? Хӗр пӗр вӑхӑт хушши ҫапла иккӗленсе тӑнӑ хыҫҫӑн ҫамки ҫинчи тарне шӑлса илчӗ. Унтан тилхепине карт туртса, лашине каялла ҫавӑрчӗ...

Юратакан ҫыннӑн чӗри йӑнӑшмарӗ. Пуҫне пӳспе пиелесе ҫыхнӑ арҫын Левентей пулчӗ. Госпитальтенех Левентее ӑсатма килнӗ сестра, разъезд начальникӗ Хурӑнкассипе калаҫнӑ хыҫҫӑнах, платформӑ патӗнче пӗр грузовик тӑнине асӑрханӑ. Вӑл чӑваш хӗрӗсене шофере вӗрентекен шкул машини пулнӑ-мӗн. Левентей хӑш ял ҫыннине пӗлсен, шофер хӗпӗртесе кайсах ӑна ҫул май хӑй машини ҫине лартса килнӗ...

...Левентей яла кӑнтӑр апачӗ вӑхӑтӗнче ҫитрӗ. Колхозниксем ытти кунсенче хиртех апатланатчӗҫ. Паян ак, Левентей таврӑннӑ тесен, пӗр-пӗринпе малтан калаҫса таталнӑ пекех, пурте яла васкарӗҫ.

Таймансем патӗнчен вара мӗн хире кайма чан ҫапиччченех ҫынсем туха пӗлмерӗҫ. Ҫав кун кунӗпех ӑҫта пыр унта сӑмах Левентей ҫинчен пычӗ:

— Ах, мӗскӗн, нимӗн те курмасть, тет, вӗт.

— Ӑҫта унта курма, пӗтӗмпе пӳспе хупӑрласа лартнӑ та...

— У-у, ирсӗрсем! Хӑйсенне ҫапла куҫӗсене чике-чике шӑтарасчӗ.

— Ҫитӗ-ха вӑхӑт, ҫитӗ. Халӑх куҫҫулӗ ҫӗре тӑкӑнмасть, тенӗ ваттисем.

— Ниушлӗ тухтӑрсем тӳрлетеймен?

— Тӳрлетнӗ пулсан, сестрана ҫавӑттармастчӗ те...

— Эх, мӗн тери лайӑх ҫынсене пӗтереҫҫӗ...

— Пӗтессе пӗтмен те-ха...

— Халь тухтӑрсем нумай пӗлекен пулчӗҫ. Сыватӗҫ-ха Левентее те. Эх, ҫакӑнта хамӑр Таруҫ пулсан! Ӑна калама ҫук ӑста теҫҫӗ. Час профессора тухать, имӗш.

— Ахаль те вӗсем ҫавӑн патне пуль-ха. Шупашкара каяҫҫӗ, тет. Кунта ҫул май кӑна кӗрсе тухнӑ.

* * *

Левентей патне Антун старик те кайса курчĕ. Ун патĕнчен вăл Хветтепе пĕрле тухрĕ.

— Эх, пурнăç,—терĕ Хветте хуллен, халь çеç чикаркă тĕпне пăраунă пулин те, каллех табак енчĕкне туртса кăларса.—Мăкăрлантарса ямăпăр-и ак çакăнта ларса,—Хветте ик хутлăхра выртакан пысăк каска çинелле аллипе сулчĕ.

— Табак? — старик хытă тĕлĕнсе кайнă сын пек Хветте çине кăнн! пăхса тăчĕ. Унтан куç харшине çилĕллĕн пĕрчĕ.

— Туртмастăп,—терĕ кĕскен кăна.

— Йăпанчăкăмăр та пĕр çакă кăна,—терĕ Хветте.—Табак та пулмасан, хăть паянах... ак.— Вăл мăйне пăяв çыхса йывăçран çакăннă пек туса кăтартрĕ.

Старик чĕнмерĕ. Вăл Хветте çине пăхмарĕ те. Куçне ури пуçĕ çине тĕллесе, çилĕллĕн малалла утрĕ.

Хветтене лайăх мар пулса кайрĕ. Ăна старик çапла çилĕллĕ пулнăшăн, темĕнле, хăй айăплă пек туйăнчĕ.

Хветтепе пĕрле çынсене нихçан та кичем мар. Унпа калаçсан темле хуйхă та сĕвĕрĕлет. Кăна Хветте лайăх пĕлнĕ. Ку ăна савăнтарнă. Вăл Хветте ыттисенчен лайăхрах, ăслăрах, пултаруллăрах пулнине пĕлтернĕ. Çынна йăпантарасси, савăнăç кÿресси Хветте пурнăçĕнче пĕрремĕш вырăн йышăнса тăнă. Хветтене çакă çăкăр пекех кирлĕ. Ку унăн пурнăçĕн тĕллевĕ пулнă. Ӳсен-тăрансем хĕвелсĕр пурăнаймаççĕ... Çавăн пекех, Хветте те çынпа калаçмасăр, çынна мĕн те пулин каласа парса култармасăр самант та чăтса тăрайман.

Халĕ ак вăл старике чĕлĕм çинчен кулăшла истори каласа пама хатĕрленчĕ.

— Чĕлĕм вăл, самай чун уççи, Антун тете...—Хветте çапла каларĕ те, тахçан ача чухне илтнĕ пĕр кулăшла халапа, яланхи пекех хăй пуçĕнчен хушса, илемлетсе каласа парасшăн пулчĕ.

Лешĕ аллипе кăна сулчĕ. Вăл Хветтене итлемерĕ. Çакна кура, Хветтен кăмăлĕ, Левентей суккăррине курнипе ахаль те пăсăлнăскер, халĕ пушшех пăсăлса кайрĕ.

— Халĕ, шăллăм, юмах ямалли вăхăт мар,—терĕ те Антун, каллех хăй шухăшне путрĕ... Кĕтесрен пăрăнса тăкăрлăка кĕрсен çапла каларĕ:

— Чĕлĕме эпĕ çак самантран пуçласа çăвара та хыпмастăп. Табак вăл эсрел куракĕ. Ăна туртакан пĕр вунă çул маларах вилет, тет.

«Вилес килмест эппин»,—тесе шухăшларĕ те Хветте, сухал айĕн кулса илчĕ.—Хăй тата Хветте астăвассах кĕлетне юман тупăк туса хунă.

Çапла шухăшларĕ те, ун чĕлхи кĕçĕтсе илчĕ. «Тупăкне тураса хутса ярар мар-и?» тесе шÿт тăвасси килсе кайрĕ унăн. Хăяймарĕ.

— Пĕр чăваш эрех ĕçме пăрахма шутлать. Ырашне пасара кăларса сутать те хăюллăн хупах умнелле утса пырать. Хупах тĕлне çитсен, чĕри унăн йăйăр пек тăпăртатма тытăнать. Аллисем тытамак тытнă чухнехи пек чĕтреме тапратаççĕ. Чăтма çук хупаха кĕрсе эрех ĕçес килет ĕнтĕ. Ку çапах та тÿсет. Шăлне шатăртаттарса çыртса лартать те, чип-чиперех хупах умĕнчен иртсе каять. Пĕр çурт урлă каçсан чарăнать те хăйĕнчен хăй тĕлĕнет. «Молодчинă, çакăн пек çирĕп кăмăллă пулнăшăн сана премй пама тивĕç»,—тет, васкаса каялла çаврăнать. Хупаха кĕрет те çавăнтах пĕр шкалик «Московскине» янклаттарса ярать...

Хветте çапла каларĕ те старик çине пăхса йăл кулса илчĕ. (Вăл Антун тетĕшĕ чĕлĕмсĕр пĕр минут те тăрайманнине аван пĕлет ĕнтĕ. Старик табак пĕтсен, чĕлĕм чăпăкне те пулин тураса туртать-мĕн.)

— Пирĕн те, Антун тете, çав чăвашăнни пек пулса ан тухтăр.

Старик хальхинче нимĕн те чĕнмерĕ. Вара Хветте сасартăк салхулланса кайрĕ те:

— Да-а, никамăн та вилес килмест çав,— терĕ.

Антун пĕр вăхăт хушши каллех нимĕн те чĕнмесĕр утрĕ. Унтан сасартăк тăп чарăнчĕ те Хветте çине шăтарас пек пăхрĕ.

— Вилме юрамасть халь пирĕн...

Вăл çамрăк чухнех сăмаха ваклама юратман. Ватăласпа пушшех те калаçми пулса кайнă. Ун карчăкĕ вара, чакак пек чакăлтатма юратаканскер, «ман старик вуннă чĕнсе те пĕрре чĕнмест», тесе тарăхнă.

Халĕ ак çав чĕмсĕр текен старике темĕн пулчĕ. Вăл туйипе сулкалашса, хĕрсе кайсах калаçма пуçларĕ.

— Çук, пирĕн пурăнмаллах, шăллăм... Çав хатĕр çынсене, çав хатĕр çынсене чăлах тăваççĕ те... ăçта унта, вилме. Çук, вăхăт мар халь вилсе выртма. Ватă шăмшака кантарса выртни килĕшмест халь... А эсĕ туртма пăрахаймăн, тетĕн.—Старик Хветте çине çилĕллĕн пăхрĕ.—Туртма пăрахма мар, эпĕ тем тума хатĕр тата пĕрер çул та пулин пурнăçăма тăсма май пур пулсан. Ăнлантăна?

Старик Хветте çине темĕнле ытлашши хавшак çын çине пăхнă пек йĕрĕнерех пăхрĕ те туйипе çĕре так! таклаттарчĕ:

— Пурăнмалла! Нумай пурăнмалла... Тăшмансене тавăрмалла. Ку чух вилĕм çинчен шутлакана каçарма çук пысăк çылăх пулать.

Калаçман старик калаçма тытăнни малтан Хветтене тĕлĕнтерчĕ те, унтан старик сăмахĕсем ăна хумхантарса ячĕç. Вăл, тÿсейменнипе,

енчӗкне туртса кӑларчӗ, табак чӗркесе ярасшӑн пулчӗ те ҫавӑнтах ӑна каялла кӗсйине чикрӗ: халӗ табак туртни старике мӑшкӑллана пек туйӑнасран шикленчӗ.

«Антун тете тӗрӗс калать. Юман пек ҫирӗп чунлӑскер, вӑл, ак кур, чӑнахах та туртма пӑрахӗ. Тен, Хветтен хӑйӗн те туртма пӑрахсан юрамӗ-ши»,—тесе шутларӗ.

Ҫакӑн пек вӑхӑтра шӳт тума юрасах кайманнине Хветте туйрӗ те шӳт тӑвасшӑн та пулмарӗ. Ҫапах ак персе ячӗ:

— Ну халӗ, Антун тете, тупӑкне санӑн ирӗксӗрех кӗлетрен выселить тума лекет, ӑна вакласа ҫунтарса ямалла пулать ӗнтӗ.

Старик тепӗр хут туйипе ҫӗре таклаттарса илчӗ те, урӑх нимӗн те каламасӑр, малалла утса кайрӗ.

Вӗсем тӑкӑрлӑк вӗҫне тухрӗҫ, шкул патӗнчен иртрӗҫ.

Паҫӑрах ҫил вӗркелетчӗ. Уҫӑ ҫӗре, Ҫеремкассине, тухсан вӑл пушшех сисӗне пуҫларӗ. Ясли ҫурчӗ умӗнчи ватӑ хурӑнсем кашлани старик хӑлхине пырса кӗчӗ. Вара старик тӗлӗрсе кайса утса пынӑ ҫӗртен вӑраннӑ пек пулчӗ те пӗлӗт ҫинелле пӑхрӗ. Ҫав вӑхӑтра хӗвеле пӗр пӗлӗт татки хупласа илчӗ те сасартӑк сулхӑнлатса ячӗ. Старик ырӑ мар япалана аса илнӗ чухнехи пек куҫ харшине пӗрчӗ. Пуҫне ясли еннелле пӑрса темӗн итлерӗ. Ясли карташӗнче вӗт-шак ача-пӑча сасси илтӗнет. Старик вара Хветте енне ҫаврӑнчӗ.

— Тупӑк пирки эсӗ тӗрӗс каларӑн. Ун вырӑнӗ, чӑнах та, кӗлетре пулмалла мар...—терӗ.—Атя-ха, ывӑлӑм, ман хыҫҫӑн.

...Тепӗр сехетрен Хветтепе Антун старик кӳме урапипе тупӑк туртса ясли еннелле утрӗҫ.

Урам варринче вӗсене кӗвентепе шыв ӑсма каҫакан Тимуш амӑшӗ, Сахиме карчӑк, тӗл пулчӗ.

— Кам вилнӗ?—тесе ыйтрӗ вӑл, сӑх-сӑхса илсе.— Ай тур-тур, ара, ним пӗлмесӗрех юлаттӑм вӗт...

Хветте кунта та шӳт тумасӑр чӑтаймарӗ, утнӑ хушӑрах ун еннелле ҫаврӑнчӗ те:

— Вилӗм вилнӗ, Сахиме аппа, вилӗме пытарма каятпӑ-ӑр!—тесе кӑшкӑрчӗ.

...Тата тепӗр ҫур сехетрен вара Антунпа Хветтене ясли сад пахчинче, улмуҫҫисем хушшинче, ачасене уҫӑ сывлӑшра кантарса выртмалли ҫурт патӗнче курчӗҫ. Ҫав ҫуртӑн пусма картлашкисем питӗ начар-мӗн. Вӗсене тахҫанах тӳрлетмелле пулнӑ та — алӑ ҫитмен, тата хӑмисем те юрӑхлисем тупӑнман. Антун старик виҫӗм кун ирпех — хӑй мӑнукӗн ачине кӳме урапа ҫине лартса, яслине туртса килсен—ҫакна асӑрханӑччӗ. Халӗ ак вӗсем Хветтепе иккӗшӗ лӑпах ҫав пусма патӗнче муталашрӗҫ.

Антун старик яп-яка саваласа тунӑ тупӑк ҫийӗнчен пӗр сарлака хӑмине пуртӑпа ҫапса уйӑрса илчӗ те, сывлӑш ҫавӑрса янӑ май, Хветтене ҫапла ӑнлантарса пачӗ:

— Ачасем вӗсем — пурнӑҫ тымарӗсем. Каснӑ вӑрманта вӗсем ҫӗнӗрен хунав ямалласкерсем, — терӗ.

* * *

— Ануш ӑҫта, мӗншӗн халь те вӑл килсе курмасть?—ӗнтӗ виҫҫӗмӗш хут Левентей Ануш ҫинчен ыйтать.

Исевет Ануш килес ҫуккине лайӑх туять. Вӑл, суйма хӑнӑхманскер, Левентей малтанхи хут ыйтсанах ӑна Ануш ҫинчен пӗтӗмпех каласа парасшӑн пулчӗ,—хӑяймарӗ. Мӗншӗн тесен вӑл Левентее калама ҫук хытӑ юратрӗ. Вӑл ӑна, ахаль те йывӑр суранпа асапланаканскере, ҫак усал хыпара илтсен тата йывӑртарах пуласран хӑрарӗ. «Ҫук, ҫук, калас пулмасть... Кӗҫӗр ак Анушпа хӑйӗнпе курса калаҫас пулать. Килсе кайтӑр... Кайран унта, сывалсан, хӑть мӗн тутӑр та, халӗ, чи йывӑр вӑхӑтра, Левентее пӑрахни калама ҫук киревсӗр ӗҫ туни пулӗччӗ. Кӑна никам та каҫарас ҫук...»—тесе шухӑшларӗ Исевет. Левентей ҫине пӑхма ӑна ҫав тери хӗн пулчӗ. Мӗскӗн, епле вӑл Анушшӑн ҫунать! Мӗн те пулсан тумаллах ӗнтӗ. Анушпа курса калаҫмасӑрах, тӳрех кунта килме васканӑшӑн Исевет хӑйне хӑй ятларӗ...

— Ӑҫта та пулсан кайман-и вӑл?—ыйтрӗ Левентей каллех Ануш ҫинчен.—Мӗскер эсир манран пытаратӑр?

Ыйтрӗ те (калӑн, вӑл чип-чипер сывӑ куҫлӑ ҫын) Исевет ҫине тӳрех куҫран пӑхрӗ.

Исевете лайӑх мар пулса кайрӗ. Ӑна пӗр авка, темӗнле, Левентей пӗтӗмпех курать пек, пӳспе хупланӑ пулин те, вӑл ӗлӗкхи пекех, акӑ ун ҫине хӑйӗн илемлӗ сенкер куҫне вылятса пӑхса ларать пек туйӑнчӗ. Ӗнтӗ вӑл пӗтӗмпех пӗлет пек. Исевет, унӑн ҫывӑх тусӗ Исевет, мӗнле-ха, суйнӑ чух хӗрелме пӗлет-и, ҫук-и? тесе кӑна ҫапла ыйтать пек туйӑнчӗ. Хӗрачан пит ҫӑмартисем пӗҫерсе кайрӗҫ. «Халех шыраса тупас пулать Ануша», тесе шухӑшларӗ вӑл. Хӑйне Левентейрен уйӑрлма ҫав тери йывӑр пулсан та, ура ҫине тӑчӗ.

— Левентей, эпӗ пӗр ҫӗре кайса килем-ха.

Левентей шартах сикрӗ.

— Исевет, эсӗ те мана пӑрахса хӑварасшӑн-и? Эп сисетӗп вӗт...

Исевет, вӑйран кайса, лӑштӑрах хӑй вырӑнне ларчӗ. «Мӗскер сисет вӑл?..» Ӑна каллех Левентей пурне те курать пек, шурӑ пӳс хыҫӗнче мӑшӑр куҫ ак шӑтарасла ун ҫине сӑнаса пӑхса тӑрать пек туйӑнчӗ.

— Левентей, эс куратăн вĕт?—терĕ те Исевет, Левентей çумне йăпшăнчĕ.—Куратăн?

— Куратăп...— терĕ лешĕ, хĕре çупăрласа.— Куçăмсем курмаççĕ пулин те, чĕре курать... Мĕн пулчĕ? Йăлтах каласа пар, Исевет. Нимĕн те ан пытар.

Исевет вара, тем пек пытарасшăн пулсан та, пытарса тăма пултараймарĕ...

— Çапла,—тесе вĕçлерĕ вăл хăйĕн сăмахне,—Ануш...

«Ануш ултавçă» тесе каласшăн пулчĕ те Исевет, калаймарĕ. Вăл халĕ те-ха Ануш çапла усал чунлă пулнине ĕненесшĕн пулмарĕ. Халĕ те-ха ăна хăй йăнăшать пек, пустуях ак Левентее çак сăмахсене каласа парать пек туйăнчĕ.

Палăк пек пĕр вырăна хытса, итлесе ларнă Левентей ун сăмахне хăй вĕçлерĕ:

— Ануш-и? Ануш вăл — ылтăн вĕлле хурчĕ... «Мĕн тума пытăр вăл типсе хăрса ларнă çеçке патне», тесшĕн пулчĕ те вăл — каламарĕ. Ун вырăнне хаш! çеç сывласа ячĕ. Сулахай енчи тути кĕтесси унăн турткаланса илчĕ. Исевет ăна асăрхаймарĕ.

Мĕн каласшăн Левентей? Мĕншĕн вăл Ануша çапла вĕлле хурчĕпе танлаштарать?.. Исевет тусĕ çине пăхрĕ. Анчах лешин питĕнче вăл нимĕнле ответ та тупаймарĕ.

* * *

Левентей халĕ те çамрăк, Ануша çураçнă чухне вара пушшех вăл çамрăк пулнă. Паллах ĕнтĕ, вăл Анушăн начар енĕсене чылайăшне курма та пултарайман-и? Çамрăк куç—çамрăк куçах ĕнтĕ. Çитменнине тата вăл ăна юратнă. Юрату тени çын куçне уçать те, çав вăхăтрах хуплать те. Юратакан çын сăррине те час-часах шап-шуррăн курать.

Çапла пулин те, Левентее, ăслăскере, Анушăн пĕр тулашĕнчи илемĕ çеç хăй патне илĕртме пултарайман. Мĕн те пулсан лайăххи, ырри, кăмăла каяканни Анушăн шалта та пулнах пулмалла.

Хăйĕнче çав лайăххи пуррипех-и ĕнтĕ Ануш халĕ ак пăшăрханчĕ те. Вăл, нихçан та ытлашши шухăшласа пуçне ватма юратманскер, халĕ ак шухăша кайрĕ. «Мĕнле тусан лайăхрах пулĕ-ши?»—тесе шухăшларĕ вăл. Левентейпе мĕнле пурăнасси мар, çук, урăххи ăна шухăшлаттарчĕ. Левентейпе, сĕм суккăрскерпе, вăл пурăнма пултараймастех. Кун çинчен нимĕн шухăшламалли те çук. Ăна ытти пăшăрхантарчĕ: Левентее вăл шеллет, хĕрхенет, юратать. Мĕн тери ырă ачаччĕ, епле вăл Ануша саватчĕ. Ануш хăй те ăна юратмаллипех юрататчĕ тата халь те юратать. Халĕ ак Левентей чăлах. Халĕ вăл ун упăшки пулма пултараймасть... Мĕншĕн апла? Мĕншĕн халĕ упăшки пулма пултараймасть?.. Кун çинчен Ануш шутламарĕ. Суккăр çын авланса, ачаллă-пăчаллă пулать тенине вăл пуссан та шанман пулĕччĕ. Ан тив, вăл калама çук хитре пултăр, герой пултăр, чунтан юратакан çын пултăр,—çавах, хитре хурăнпа хитре лĕпĕш мĕнле пĕрле пурăнма пултараймаççĕ, Левентейпе Ануш та, çавсем пекех, пĕрле пурăнма пултараймаççĕ.

Çапла иккенне Ануш кăна мар, Левентей хăй те пĕлет пек, тата ыттисем те пурте пĕлеççĕ пек туйăннă. Аслă çутçанталăкăн йăли, йĕрки çавăн пек туйăннă Ануша.

...Эх, шел ачана. Мĕнле тусан лайăхрах пулĕ-ши? Каяс-и халĕ ун патне, каяс мар-и?

«Каймаллах!— терĕ ăшĕнчи пĕр шухăшĕ.— Епле-ха апла. Чи çывăх тусу, чи юратнă çынну вăрçăран суранланса килнĕ те, эсĕ пырса та курасшăн мар. Кам эс? Фашист хĕрĕ-им?».

«Вăл тĕрĕс, каймаллах. Анчах, пĕлетне эсĕ, мĕнешкел ăна çак курнăçу йывăр пуласса,— хирĕçлерĕ ăна тепри.—Эсĕ ăна качча тухма пултарнă пулсан, ун чухне чăнах та курнăçма кирлехчĕ. Халĕ ак ку астарни кăна, мăшкăллани кăна пулмасть-ши? Шыв ĕçме пултарайманнипе шывсăр типнĕ çынна шыв кăтартни кăна пулмасть-и ку?»

Çакăн пек шухăшласа тарăхрĕ хĕрача. Нумай шухăшлама хăнăхманнипе, ун пуçĕ çурăлас пекех ыратма тытăнчĕ. Çавăнпа вăл урăх шухăшламарĕ. «Касрĕç пулсан, çав каснă чĕлле урăх çыпăçтарма май çук пулсан... мĕншĕн-ха хăйĕн юратакан çыннине тарăхтармалла?»

Çапла Ануш, Левентейне хĕрхеннипе, ун куçне пачах курăнасшăн пулмарĕ.

Киурпа та, Левентей ялта пурăннă вăхăтра, курнăçма пăрахас пулать. Тен, унпа пачах та явăçма кирлĕ мар. Тен, ăçта та пулин ĕмĕрлĕхех ялтан тухса кайма тивет. Ну, вăл малашне курăнĕ-ха. Халлĕхе унăн Левентейпе курнăçас пулмасть.

Çакăн пек тума йышăнчĕ Ануш. Çакăн хыççăн вăл амăшĕпе курса калаçрĕ. Вара каçпа, никама пĕлтермесĕр-тумасăрах, вăрă пек, çынсем куçне курăнма хăраса, йăпшăнса, кӳршĕ яла, кукамĕшсем патне тухса утрĕ.

* * *

Левентей ялта икĕ кун пурăнчĕ. Çак икĕ кун хушшинче Ануш пĕрре те ун патне пырса пăхмарĕ.

«Тен, тĕрĕс те тăвать-и,—тесе шутларĕ Левентей.—Паллах, халĕ ĕнтĕ вăл хăй те Ануша качча илсе, ăна асап кăтартас çук... Анчах мĕншĕн килсе курмасть-ха?.. Аван мар çапах

та. Е ирĕксĕрлесе, хăратса качча илесрен хăрать-и?

Ахалех хăратăн, Ануш, кăлăхах,—терĕ вăл (Қалăн, чăнах та савнийĕ хăй умĕнче тăрать пек).—Лăплан, эп сана ирĕксĕрлес çук. Эп ĕнтĕ çын мар. Çутçанталăк илемĕсем маншăн мар».

Ануш тутине çыртрĕ. Хăйне çав тери илемлетсе тăракан сулахай пит çăмарти çинчи хурарах тĕслĕ тур паллине çепĕç аллисемпе хыпашларĕ. Қăна ак Левентей куç кĕретех курчĕ. Анланчĕ те: хăй ним калама аптранă вăхăтра яланах Ануш çапла тур паллине хыпашлать. Ануш сăнĕ яланах Левентей умĕнче тăчĕ, вăрçăра чухне те, халĕ те ак...

— Ну, мĕн аптраса тăратăн,—терĕ Левентей хăй умĕнче чĕп-чĕррĕн тăракан Ануша.

Лешĕ пуçне усрĕ. Вăл нимĕн те калаймарĕ... Вара Левентейĕн хăйĕн те пуçĕ усăнчĕ...

...Йывăр, калама çук йывăр пулнă пулĕччĕ çак икĕ кун хушшинче Левентее. Анчах Исевет, яланах тенĕ пек, ун çумĕнче пулчĕ. Вăл ăна хăй пĕлнĕ пек йăпатса, унăн хуйхине пусарма тăрăшрĕ. Исевет сассине илтсенех Левентейĕн йывăр хуйхи çăмăлланчĕ.

Қилсен иккĕмĕш кунĕнче Исеветпе Левентей иккĕшĕ кăна сад пахчинче ларчĕç. Левентей амăшĕ те, ашшĕ те ачи çумĕнчен хăпасшăн мар пулчĕç, ялан ун тавра явăнчĕç. «У кирлĕ мар-и, ку кирлĕ мар-и?»—тесе аптратрĕ Варвари. Ватă Тайман хăй те ывăлĕпе каласса тăранаймарĕ. Çапла пулсан та, вĕсем Исевет пырсан, ывăлне аптратсах каймарĕç. Вĕсем Исевет сассине илтсенех ывăлĕ çĕкленсе, çĕнелсе, çăмăлланса кайнине сисрĕç те, курчĕç те. «Қалаçчăрах, çамрăксем калаçнине хăшнепĕрне ватăсен илтмесен те юрать»,— карчăкпа старик хăйсем хушшинче малтанах çапла каласса татăлнă пек, Исеветпе Левентее хăйсене иккĕшне кăна хăварчĕç.

Çанталăк лăпкă, ăшă тăрать. Пахчара лĕм çил те çук...

Исеветпе Левентей вăрахчен калаçрĕç. Юлашкинчен, Левентей Исевете юрласа пама ыйтрĕ. Хĕрача савăнса кайрĕ. Вăл хĕллехи вăрăм каçсенче хăй шыраса, хăй тупнă юррине юрларĕ.

Хĕр юрлакан юрă кĕввине Левентей нихçан та илтмен. Вăл темĕнле хальхи пурнăçри юрă пек мар, ача чухне илтнĕ юмахри юрă пек илтĕнет. Çĕр çинче паянхи кун этем ывăлĕ-хĕрĕ халиччен курман тискер вăрçă пырать. Тупăсем бахлатаççĕ, танксем кĕрлеççĕ, пульăсем шăхăраççĕ, ача амăшĕсем вырта-вырта йĕреççĕ... Ку паянхи пурнăç! (Çаксене Левентей хăй куçĕпе хăй курнă). Исевет юрри пачах урăхла. Вăл тăнăç пурнăç çинчен, мир çинчен. Анчах та вăл çак вăрçă пулман пулсан çапла



кĕвĕлленме пултарайманни паллах. Çук, шывсăр типсе хĕн курнă хыççăн çеç этем шыва хаклама пĕлнĕ пек, çак кĕвве те, çак илемлĕ, çак телейлĕ тăнăç пурнăç çинчеп хывнă кĕвве те вăрçă нушине тӳссе ирттернĕ хыççăн çеç кĕвĕлеме пултарнă.

Левентей Исевет кĕсле каласа юрласа ярсанах хăй умĕнчи сĕм хура чаршав çуккине туйрĕ. Чаршав ярр! уçăлса кайрĕ те, ума сарлака-сарлака, вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк лаптăк тухса тăчĕ. Малтантарах Левентей ку мĕншĕн çапла пулнине хăй те лайăххăн ăнланаймарĕ. Мĕншĕн тесен малтан нимĕнле сасăсене те уйăрса илме çукчĕ-ха. Те уй унта, те сăрт, те тинĕс? Пăртак тăрсан, сасăсем уçăрах та уçăрах илтĕнме тытăнчĕç те, вара Левентей иккĕленмерĕ: ун умĕнче ял, ял сарăлса выртать. Çуркунне, мĕншĕн тесен шăнкăрчсем çунат çапса юрлаççĕ, çавсем ши-ши! шăхăраççĕ. Çӳлте, çӳлте курăнми тăри юрлать. Хур кăвакалсем какăлтатаççĕ. Автан авăтать. Савăнăçлă ача-пăча сассисем янăраççĕ. Уйра, таçта инçетре-инçетре, курăнми трактор сасси кăшт илтĕнет.

Çывăхрах валак тăрăх шавласа пĕве шывĕ юхать. Çавăнтах ак машинăсем сывлăша кисрентереççĕ — ку ĕнтĕ электростанци...

Юррăн сăмаххисем çук. Юрласса та Исевет çăварне хупарах юрлать. Çавăнпа та хăй илтнине, хăй курнине Левентей чăн пурнăçри пек туять.

Вăл хăй ăçта пулнине, хăй патĕнче кам ларнине пĕтĕмпех ĕнтĕ манса кайрĕ. Суранĕсем те унăн ыратмарĕç. Хăй суккăррине те ĕнтĕ вăл туймарĕ. Ним хуйхă-суйхăсăр, пĕчĕк ача пек, савăнăçлăн кулса, çутă телейлĕ пурнăç сассине итлесе ларчĕ.

...Юрласа пĕтерсен, Исевет Левентей аллине тупрĕ те ăна ик-виç хутчен ачашшăн чăмăр-

тарĕ. Çывăрмасăрах тĕлĕк куракан çын пек ларакан Левентей вăранчĕ.

— Исевет, кăна чăнахах эсĕ юрларăн-и вара?

Хĕрача кулса ячĕ:

— Эпĕ-çке.

— Тĕлĕнмелле, тусăм, тĕлĕнмелле.

— Тĕлĕнмеллиех çук пулĕ те.

— Қала-ха, Исевет, мĕн çинчен эсĕ юрларăн?

— Электростанци çинчен.

Исевет Левентее мар, Левентей хăй хальхинче Исевет аллине чăмăртарĕ:

— Тавтапуç, тусăм... Манман апла?

— Аçтан манас тетĕн... Çуркунне хулана кайма тиврĕ. Хулана çитеспе кĕпер пур вĕт-ха?

— Пур.

— Вăт, пăхатăп та, çав кĕпер хĕрринче виçĕ кĕленче чашкă выртать. Хай пралук валли телефон юписем çине хураканнисем.

— Ну, вара?..

— Чăтаймарăм вĕт, Левентей. Лашине чартăм та, чашăксене аркă çине пухрăм.

Левентей ăнланчĕ. Çук, Исевет хăйсен ĕмĕтне татман. Вăл тăшмана çĕнтерессе ĕненет, электростанци пуласса шанать...

— Пĕлетне, тусăм, эсĕ талант! Эпĕ ăна куçăм пур чух курман, халь ак суккăрлантăм та витĕрех куратăп. Эсĕ талант!

Левентей Исевет аллине тепĕр хут чăмăртарĕ.

* * *

...Левентей часах Шупашкара кайрĕ. Унта чылай вăхăт хушши Одессă хулинче Филатов профессорпа ĕçленĕ чăвашсен паллă врачĕ, Хурăнкасси хĕрĕ Таруç пурăннă. Таруç çинчен чăвашсем кăна мар, пĕтĕм таврари халăхсем пĕлнĕ.

— Ылтăн алă,—тенĕ пĕрисем ун çинчен.

— Вăл сĕм суккăрсене куракан тăвать,— тенĕ теприсем.

Исеветсем Левентее çав тĕлĕнмелле чăваш хĕрĕ патне тӳрленме ăсатрĕç.

* * *

Левентей Шупашкара тухса кайсан, Ануш яла таврăнчĕ. Вăл шурса кайнă, куç айĕсене кăвак сăн çапнă. Шухăрах, ытлашши шухăшлама пĕлмен хĕр пулин те, ăна хăйĕн юратнă çыннипе ĕмĕрлĕхех уйрăлма çăмăлах пулмантăр çав.

Қиура вăл улах вăхăтра, правленире никам та çук чух тĕл пулчĕ.

— Ну, халь ĕнтĕ эп санăн,—терĕ те Ануш Қиур кăкăрĕ çине выртса, ик аллипе мăйĕнчен явса ыталаса илчĕ. Вăл Қиур хĕпĕртенипе ĕнтĕ нимĕн тума та пĕлеймĕ тесе шутларĕ.

Қиур шартах сикрĕ. Ырă та, хаяр та чĕнмерĕ.

— Ну, халь ĕнтĕ эс манăн,—терĕ вăл пăртак тăрсан. Ăна çав тери лайăх мар пулса кайрĕ. Çак чун пек кĕтнĕ сăмахсем ăна пĕрре те савăнтармарĕç. «Теприне макăртса тупнă савăнăç — савăнăç-и?», тесе шутларĕ вăл. Шутламарĕ те темелле, çавăн пек туйрĕ.

Асăннă инкек пуличчен малтан вăл Левентей çинчен ним те хуйхăрмастчĕ. Ну, Қиур унăн Анушне туртса илнĕ пултăр. Мĕн-ха çухатать Левентей? Вăл илемлĕ (илемлĕ çав!— кăна Қиур лайăх пĕлет), вăйлă, телейлĕ! Вăрçа та ăна пуринчен малтан илчĕç. Қиура ак çаплах тылра асаплантараççĕ-ха. Миçе хут военкомата кайса фронта яма тархасламан пуль.— Ниме юрăхсăр пăрахăç çын ĕнтĕ — пĕр сăмах. Левентей вара — телейлĕ. Пĕр Ануш вырăнне вăл çирĕм пиллĕк Ануш тупма пултарать (Анушран çĕр хут лайăхраххисене тупĕха). Çитменнине тата Ануш вăл тахçанах Қиурăн пулмалла пулнă. Ануш хăй хыççăн Левентей çӳреме тытăниччен малтан Қиурпа питĕ ăшшăн калаçатчĕ. Çапла вара, Қиур мар Левентейрен туртса илекенни, Левентей хăй унтан туртса илнĕ. Халĕ ĕнтĕ Қиур çыннăнне мар, хăйĕнне кăна каялла илнĕ тухать.

Çапла шутлатчĕ вăл Левентей вăрçăран суранланса киличчен малтан. Халĕ ак ун шухăшĕ урăхланчĕ: Левентей асапра. Вăл сĕм-суккăр. Ĕнтĕ халĕ вăйли, телейлĕрехxи Левентей мар,—Қиур. Қиурăн хăрах ури кĕскерех. Ку мĕн Левентей суранне пăхнă çĕрте!? Левентейĕн икĕ куçĕ те курмасть... Қунтан хĕнни çутă тĕнчере урăх мĕскер пур?! Қиур тата, сыпсывă çын, чипер куçлă-пуçлă вăй питти арçын, çураçнă хĕрне унтан туртса илет...

Левентей инкекĕ иртнĕ çултисене: Ануша çураçсан Қиур хăй мĕнле тарăхнисене, кӳреннисене, ӳпкелешнисене, май тупса епле те пулсан Левентее тавăрасчĕ тесе касăлнисене,— пĕтĕмпех мантарса ячĕ. Халĕ ĕнтĕ Қиура Левентей яланах унпа ырă пулнă пек, Қиур хăй кăна унпа так ахалех çĕткеленнĕ пек туйăнчĕ.

Вăл халь Анушпа хăй явăçса кайнăшăн ӳкĕнчĕ. «Қам-ха пĕлнĕ кун пек пуласса?» Çакă çеç ăна пăртак лăплантарнă. Анчах халĕ ĕç шалах кĕрсе кайман-ха...

Тĕлĕнмелле, Қиур Ануш чунне çав тери хăй енне çавăрасшăн хыпса çуннăскер, Анушшăн вăл темĕн те тума хатĕр пулнăскер, халĕ Ануша хăйне юраттарасшăн мар пулчĕ... Пĕр тесен, мĕскер вăл Қиур? Левентей Ануша качча илме тивĕçлĕрех. Вăл герой. Вăл хăйĕн сывлăхне, пурнăçра чи хаклине, Тăван çĕршывă-

мăршăн панă. Ăна та хĕрсем юратмасан, кама тата юратмалла! Ķиур хĕр пулнă пулсан, хăй те ăна хаваслансах качча тухмалла...

Ануш, Ķиурăн хальхи шухăшĕпе, Левентейрен уйрăлмалла мар... Левентей, инкеке лекмен пулсан, çап-çамрăк, сывă... пăхаттир пек тĕреклĕскере, çитменнине тата героя, нивушлĕ Ануш юратмĕччĕ? Нивушлĕ çак чăлах Ķиур патнех килĕччĕ? Нивушлĕ фашистсемпе çапăçса суккăр пулнăшăн Левентей айăплă?..

...Тен, Ануш Ķиура Левентейрен ытларах юрататъ? Апла пулсан, мĕншĕн-ха вăл, Левентей герой тесе, хăйне хăй хирĕç пытăр? Çитменнине Ķиур та ăна юратать. Ķиур та çынах вĕт, унăн та пурăнмалла...

Ķиур çĕр тĕрлĕ те шухăшласа пăхрĕ Левентей яла таврăнсан. Мĕнле тусан лайăхраххине вăл хăй те пĕлеймерĕ-ха. Анчах чи вăйлă кăмăл унăн çакă пулчĕ: вăл Левентее калама çук хĕрхенчĕ. Ķирлĕ пулсан, хăйĕн чи юратнă çыннинчен, Анушран та уйрăлма вăл хатĕр пулчĕ.

Ķиур Анушăн чăн-чăн шухăшне пĕлмерĕ... Çапах вăл, Ануш мĕн тунине халлĕхе пĕтĕмпех ăнланса илеймерĕ пулин те, темĕнле, вăл лайăх мар япала, ирсĕр ĕç тунине лайăх туйрĕ. Анчах вăл ăна юратрĕ. Çавăнпа та вăл хăй юратакан çыннине хăть мĕн пулсан та хўтĕлесшĕнех пулчĕ. Кăшт та пулин хўтĕлеме сăлтав пекки тупăнсанах вăл ак савăнса кайрĕ. «Чăнах,—терĕ вăл,—ара, паян кăна мар вĕт Ануш Ķиурпа пĕрле пулма тăрăшать. Ĕлĕк те вăл мана юратнă. Хăех калатчĕ вĕт... Левентейпе çўресе йăнăш турăм, тетчĕ...

Ķиур хăй Анушне ырă енчен кăна асăнтаракан япаласем пĕрре кăна мар шыра-шыра тупрĕ... Çапах та хăйне хăй лăплантарсах çитереймерĕ.

Ануш Ķиур шухăшне сисмерĕ. Хăйне ытакласа илнĕ те çапла ытакланă халлĕнех хытса кайнă Ķиура вăл ытла хытă савăннипе çавнашкал ним туma пĕлмест, чĕлхине те ак çĕтрĕ, тесе шутларĕ. Вăхăт та (çав хушăра Ķиур шухăшĕпе таçта та çитсе ўкме ĕлкĕрчĕ пулин те) ытла сисĕнмеллех нумай иртмерĕ ĕнтĕ. Ķиур ним чĕнменнипе, Ануш хăех калаçма пуçларĕ.

— Ну, мĕн чĕнместĕн? Чĕлхесĕр пулса каймарăн-тăр ытла хытă савăннипе?

— Шухăшлатăп-ха, Ануш. Санăн çапах та Левентей патне кайса курмалла. Вăл ялан сан çинчен ыйтать, тет. Пĕр-ик кунтан эпир Шупашкара каятпăр. Тен, эсĕ те ларса пырăн. Левентей патне кĕрсе тухăн.

Ануш Ķиура тĕрĕс мар ăнланчĕ. Вăл Ķиур юри Ануш мĕнле юратнипе юратманнине сăнасшăн пулнăран кăна çапла каларĕ тесе шухăшларĕ. Ара, Ķиур ахаль чухне Левентей ятне асăннине те чăтаймастчĕ. Халĕ мĕншĕн çав тери ăна кăмăлласа хучĕ-ха? Çавăнпа та Ануш Ķиура хăй юратнине тата ытларах ĕнентересшĕн пулчĕ,— вăл калас килмен сăмахсенех ак персе ячĕ:

— Левентей патне кĕме?.. Мĕн тăватăп эпĕ унпа? Эсĕ тата качча тух, тейĕн, çав суккăра? Çавăтса çўре, тейĕн?

Çапла каларĕ те, хăйне те ăна, темĕнле, аван мар пулса тухрĕ. Мĕншĕн тесен вăл Левентей мĕнле сăлтавпа суккăр пулнине аван пĕлчĕ, ăна халĕ ĕлĕкхинчен те ытларах савмаллине лайăх туйрĕ... Хăй ăна качча тухма халĕ асне-пилне те илменнишĕн вăл хăйĕнчен хăй вăтанчĕ.

Ануш сăмаххисене илтсен, Ķиур хытса кайрĕ. Халĕ ĕнтĕ чăннипех те вăл нимĕн калама та пĕлмерĕ.

...—Эсĕ пĕлетне ху камне?—ыйтрĕ Ķиур шăппăн, пĕр хушă пырĕ пăвăннипе сăмахне калаймасăр тăнă хыççăн. Вăл хăйĕн сассине хăпартасшăн мар пулса, пĕтĕм янах шăммисене туртса хытарчĕ, шăлне шатăрах çыртса лартрĕ. Чĕтрекен аллине кăсйине чиксе пытарма-пытарма тăрăшрĕ те сасартăк кăсйине çурсах кăларчĕ.

— Пĕлетне, тетĕп, ху камне?

Ануш Ķиур мĕн каласса ăнланмарĕ, хăйĕн илемлĕ тутине ейсе, ним калама аптраса тăчĕ.

— Эсĕ çĕлен... Яп-яка... Анчах ăшу-чиккў сан... хура юн.

Ķиур çапла каларĕ те, вăйран сулăнса, тенкел çине кутăн кайса ларчĕ. Унтан темĕнле акăш-макăш хăватлă вăй ăна тенкел çинчен тапса тăратрĕ те, вăл вара:

— Ķай кунтан!—тесе хаяррăн кăшкăрса ячĕ.

* * *

Левентей çуркунне сывалса тухрĕ. Ăна пĕтĕм ялĕпе тенĕ пек кĕтсе илчĕç.

Кикик-какак какаласа кайăк хурсем вĕççĕ. Вĕсем хĕллехи сивĕ кунсем иртни çинчен, çутă та ăшă кунсем килни çинчен хыпарланă пек туйăнать.

Çурхи савăнăç хăйсен пурнăçĕнчи савăнăçĕпе пĕрлешнипе таймансем çĕнĕрен тунă çынсем пек пулса кайрĕç. Савăнчĕç ял çыннисем те: Левентей куçне сыватни вăл Пурнăç Вилĕмрен вăйлине, хăть мĕнле пулсан та, Пурнăç Вилĕме çĕнтерессе ĕнентерчĕ.

Çынсем хăйсен ăшĕнче фашизма Вилĕмпе, социализма Пурнăçпа танлаштарчĕç. Вĕсем мĕскер ырри пур, çавсене пурне те социализм майлă, социализмăн тесе шутларĕç. Тухтăрсем-и?—Вĕсем те социализмăн.

Тухтăрсем вăйлă пулни социализм вăйлă

пулнине пĕлтерчĕ. Социализм пулчĕ-тĕк вара пурнăç та пур, пурте пур...

Ĕçпе пиçнĕ çынна хăть хăçан та строительствă савăнтарать. Юсама, тӳрлетме, çĕнĕрен тума юратакан этем нихçан та ватнине, пăснине, çĕмĕрнине килĕштермест... Çавăнпа та Левентей сывални пурне те савăнтарчĕ. Пĕр Исевет кусĕсем кăна савăнăçлăн йăлкăшмарĕç. Ку вара Исевет тантăшĕсемшĕн тĕлĕнмелле пулчĕ. Мĕншĕн тесен Исевет Левентее хăвăртрах сыватасшăн пулса мĕн-мĕн кăна туман-тăр. Кучченеçне те леçтере-леçтере панă, хăй те темиçе хутчен Шупашкара кайса килнĕ. Левентей сывлăхĕшĕн пăшăрханса калаçнисем те, ыттисем те... Исевет тантăшĕсем çакна аван пĕлнĕ. Вăл Левентее юлташла мар, тата сывăхрах çынна юратнă пек юратнине те вĕсем сиснĕ. Çавăнпа та халĕ Исевет Левентей патне пыма ютшăнса, пĕр хĕрринче тăнине курсан, нимĕн те ăнланайман.

Ануш пачах Исевет пек мар пулчĕ. Ун чĕри çиçсе кăна тăчĕ. Çав савăнăç пĕтĕмпех пичĕ çинче палăрчĕ. Ун пичĕ хаклă йышши таса кĕленче пек: ун витĕр пăхсан япаласем ним улшăнмасăр, хăйсем мĕнле, çавăн пек курăнаççĕ. Вăл хăй чунне, хăйĕн хуйхипе савăнăçне нихçан та пытарма пĕлмен. Хуйхи те, савăнăçĕ те çийĕнчех питĕнче палăрнă. Халĕ те çаплах ун савăнăçĕ питĕнче те, куçĕнче те ялкăшса çиçсе тăчĕ.

Левентей сывалнă, Левентей ĕлĕкхи пекех куçлă, тĕрĕс-тĕкел. Левентей, вăл чунтан юратнă каччă, ăна качча илме сăмах панă кăна та мар, çураçса хунă каччă — халĕ ялта... Мĕншĕн савăнас мар-ха Анушăн!

Ануш хăйне çав тери илемлĕ хĕр тесе шутлать. Пĕр сăмах çеç калатăр вăл — çаврăнман çын çаврăнать, тесе шутларĕ Ануш. Чăнах та, Ануш малтан тĕрĕс мар хăтланчĕ... Кăна вăл туйрĕ. Анчах Левентей хăй пулсан та çапла Ануш пекех тăвĕччĕ. Е суккăр Ануша çавăтса çӳреме авланăччĕ-и вăл?..

Çапла шутларĕ Ануш. Ăна хăй ытлашши пысăк айăпа кĕмен те пек туйăнчĕ. Ун вырăнне халĕ вăл ăна ытларах юратĕ... Ну, юратĕ те... Киурпа çулăхса пăртак çылăха кĕнишĕн те, пуриншĕн те, пуриншĕн те.

Вăл çунатланса, çĕкленсе кайса Левентейсем патне чупса пычĕ.

Вĕлле хурчĕ чечекрен чечек çине вĕçсе çӳрет. Хăшĕ йăлтăрккарах, çавă ăна илĕртет... Типсе хăрнă чечек патне вăл пымасть. (Ан тив, çав чечек хăй айăпĕпе мар, усал çил-тăвăлпа хуçăлнă пултăр). Кам пыл хуртне уншăн айăплĕ? Çавăн пекех, Левентей те Ануша айăпласшăн пулмарĕ. Çапах та ăна темĕнле лайăх мар пек пулчĕ. Анушра вăл пыл хурчĕ чунне мар, этем чĕрине курасшăнччĕ. Вăл ак... çавăн пек... Вăл ак çанталăк илемĕсенчен пĕри кăна иккен, чĕрешĕн мар, куçа килентермелли кăна-мĕн.

Ануш Левентее савăнăçлăн алă пачĕ. Левентей ыталаса илсе чуп тусан, вăл ак пĕр вăтанмасăр, пĕтĕм халăх умĕнче ăна хăйне чуп тума хатĕр. Анчах Левентей аллисем Ануш аллинче сасартăк пăрланса кайрĕç, унăн куçĕсем те салхулланчĕç.

— А-а, Ануш,—терĕ вăл,—ну, мĕнле пурăнатăн?..

Кăна вăл ахаль кăна, картиш тулли çынсенчен аван мар тенĕ пек кăна каларĕ.

Ануш çакна туйрĕ. Ун чĕри ыратса кайрĕ: «Левентей ăна хăй патĕнчен хăвалать».

Çакна пĕтĕмпех ăнланса илсен, Ануш пичĕ çынсен куçĕ умĕнчех хăврăлса тухрĕ, пăрнă тутăр пек шурса кайрĕ.

Ним калама аптраса, хăй çăмăл ăсланса Левентей патне килсе çапла мăшкăл курнăшăн этем ывăлĕ-хĕрĕ курман асаппа асапланса, ним тума пĕлмесĕр тăчĕ вăл. Левентей патĕнчен пăрăнмалла, вăл хăй те ăна хăвалать, çынсем те пурте çакăнта Ануш ытлашши иккенне туяççĕ. Анчах мĕнле кунтан кайтăр-ха вăл? Ăçтан тӳстĕр-ха вăл çакнашкал мăшкăла пĕтĕм халăх умĕнче? Ури айĕнче шăтăк пулсан, Ануш халех çĕр айне анса кайĕччĕ.

Левентей Ануша усал тăвасшăн пулмарĕ. Çапла пулин те, ăна вăл акă çапсах хуçрĕ.

— Исевет, мĕншĕн эсĕ ютшăнса тăратăн тата?.. Ма алă памастăн?

Çапла каларĕ те вăл пĕр хĕрринче, хĕрсемпе хĕрарăмсем хушшинче, йăпшăнса тăракан Исевет патнелле аллине тăсса, хаваслăн саламларĕ:

— Кил-ха, кил кунтарах, Исевет!

* * *

Левентей ялта пĕр-ик эрне пурăнсанах вăрçа кайма хатĕрленчĕ. Япалисене пухса хатĕрлесе хучĕ. Вăл сĕлкĕш те, çав вăхăтрах савăнăçлă та пулчĕ.

Ыран каяс тенĕ кун вăл сад пахчине тухрĕ. Йывăççем çулçă сараççĕ. Сывламасăр выртнă çĕр çĕнĕрен пурăнма тытăнать.

Левентей çатан урлă сиксе каçрĕ те тăкăрлăка тухрĕ. Çут тĕнче мунча кĕрсе çăвăнса тухнă пек ун умĕнче йăлтăртатса выртать. Левентей çĕнĕрен тунă çын пек, çăмăллăн утать. А ун чух... пĕлтĕр... сестрапа яла таврăннă чух вăл вилĕм çинчен шутлатчĕ... Çук, пурнăçра хуть мĕнле йывăрлăхсем пулсан та, пуçа усас пулмасть. Этем çĕнтеретех. Çамрăк та вăй питти Левентее çĕнми йывăрлăхсем çут тĕнчере пачах та çук пек туйăнать. Ăна халĕ нимĕн те хăратаймасть. Çунатлă чĕри

ун çĕнĕ йывăрлăхсене хирĕç ыткăнать. Унăн хăвăртрах вăрçа, хăйĕн юлташĕсем патне каясси килет... Йĕри-тавралăх калама çук илемлĕ, пĕр çак ылханлă Гитлер кăна çутçанталăк сăнне ярса, тискер пĕлĕт пек çакăнса тăрать.

Вăл хăй те сисмерĕ, хурăнлăха тухрĕ. Çак вырăнта вĕсем ĕлĕк Анушпа иккĕшĕ уçăлса çÿреме юрататчĕç. Хурăнсем ĕлĕкхи пекех, çавах симĕс хушпу çакнă капăр туй арăмĕсем пек мăн кăмăллăн хумханса тăраççĕ. Сывлăш ытарма çук уçă. Çавах, ĕлĕкхиех. Анчах Левентей халь пĕччен. Анушĕ ун çук. Ануш çинчен асăнсанах Левентей чĕри ыратса илчĕ. Пĕлĕт те çавăнтах тĕксĕмленсе кайнă пек туйăнчĕ. Çапах та сывалнă хыççăнхи савăнăç тата кĕрешес кăмăл калама çук вăйлă пулнипе, вăл пуçне усмарĕ. «Тÿрленĕ вăл та,—терĕ йĕкĕт çиле хирĕç утса,—тÿрленĕ ытти те».

* * *

Қаçхине Левентей Анушсем патĕнче пулчĕ. Ануш амăшĕ, Кĕтерук, Левентее курсан тĕлĕнсе кайрĕ. «Ку тата мĕн шăршласа çÿрет. Малтан пĕтĕм халăх умĕнче мăшкăл тăвать (Вăл Левентей госпитальтен таврăнсан Ануша сиввĕн йышăннине, хăйĕн хĕрĕ пекех, мăшкăл тунă пек ăнланчĕ)... Халĕ ак хăех пирĕн пата сĕтĕрĕнсе килчĕ».

— Ануш килте-и?—ыйтрĕ Левентей.

— Ануш-и? — Кĕтерук ĕненмесĕр Левентей çине пăхрĕ: «Ку мĕн, е куç кĕретех мăшкăллаbackса кулма килнĕ, е чăнах та нимĕн те пĕлмест-ха». Ĕçсем çапла пулнă: Ануш кĕçĕр килте çĕр каçман-мĕн. Вăл амăшне çыру çырса хăварнă та, ялтан куç курми çĕре тухса кайнă...

Кĕтерука ун хуйхине пĕтĕм çын пĕлет пек туйăннă. Çавăнпа та вăл Левентей çине çапла усал куçпа пăхрĕ те ĕнтĕ. Левентейшĕн вара çак хыпар чăнах та çĕнĕ хыпар пулчĕ.

— Кайнă, тетĕн? Ăçта кайнă вăл апла?

Левентейĕн чĕри, теме сиссе, ыратма тытăнчĕ.

Кĕтерук йĕрес мар тенĕ çĕртен йĕрсе ячĕ. Аллипе сулчĕ те, куççулине чĕрçитти вĕçĕпе шăла-шăла, пÿрте кĕрсе çухалчĕ.

Кĕтерук панă шурă хут таткине Левентей икĕ хут вуларĕ. Çапах ак виççĕмĕш хут куçĕ умне илсе пычĕ. Çыру кĕске: «Анне, мана ан та шыра. Шырасан та тупас çук, шырамасан та тупас çук».

* * *

Виçĕ кунтан Исевет Левентее ăсатма разъезда кайрĕ. Вĕсене кайма лаша кÿлсе парасшăн пулчĕç. Кусем акă çуранах утма шухăшларĕç.

Тÿпере тăрисем юрларĕç. Хĕрпе каччă аллааллăн тытăçса ансăр сукмакпа утрĕç. Çак сукмак пĕрре çырмана анчĕ, тепре хăпарчĕ—таçта инçете-инçете тăсăлнă пек курăнчĕ. Анчах хĕрпе каччăшăн вăл ытла та кĕске пек туйăнчĕ. Вĕсем, майĕ пулсан, çак ансăр сукмака вĕçĕ-хĕррисĕр вăрăм тунă пулĕччĕç.

Нумай та вăхăт иртмерĕ пек, ак вĕтлĕх урлă каçса разъезда çитсе те тăчĕç.

Левентей пуйăс çине ларма талон илме ĕлкĕрчĕ кăна, сылтăмра пăравус хашкани илтĕнсе те кайрĕ. Исевете калаçмаллисене нимĕн те калаçма ĕлкĕреймен пек, пуйăс ытла та васкаса килнĕ пек туйăнчĕ. «Тен, ку товарнăй кăна-ха, пассажир пуйăсне килме вăхăт çитмен-ха?» Ĕмĕтленни кăлăхах пулчĕ: товарнăй мар, пассажир пуйăсĕ килсе çитрĕ.

Левентей юлашкинчен Исевете ыталаса илчĕ те питĕнчен чуп турĕ.

Пуйăс мăнаçлăн саркаланса ларакан авалхи юмансем хушшине кĕрсе кайса, паçăрах курăнми пулчĕ ĕнтĕ. Исевет çаплах-ха, куç илмесĕр, çав еннеллех пăхса тăрать.

---

**Петĕр ВАШАВАТ**

# А Р Ă М А

Пит çинчи пĕрремĕш пĕркеленчĕк
Сан сăнна кăшт ватăлăх кÿрсен,
Куçусем татах та илемленчĕç —
Хитререх чи капăр куçсенчен.

Заводран каç кÿлĕм таврăнсассăн,
Эс килте те лартăн ĕç тытса.
Туйăнмасть пĕрре те ывăнассăн,
Сан аллу пырать ăсталанса.

Хĕрпе каччă чухнехи айванлăх
Халь йăлтах тасалчĕ пирĕнтен.
Çĕр çинче эпир те ăс пухмалăх
Пурăннă, юлман пуль çынсенчен?

Хуть мĕнле пулсан та, халĕ маншăн
Пурнăç темшĕн тин çеç пуçланать.
Кулянмастăп çирĕмре пулманшăн,
Вăтăрта та вăй çунат хушать.

Николай САНДРОВ

# ТӐВАТТӐМӖШ СТРАНИЦӐ

Хаҫата алла илсессӗн, чи малтан
Эс тӑваттӑмӗш страницӑна пӑхан.
Мӗнлерех-ха пурӑнать тӗнче паян!
Шухӑшпа ҫӗр чӑмӑрне йӑлт ҫаврӑнан.

Юрататӑн эс Фиделӗн ҫӗршывне,
Пӗчӗк Кубӑн пысӑк чунлӑ халӑхне.
Халь каллех ав пӑчӑртасшӑн Кубӑна.
Кубӑ, Кубӑ!
Парӑнман эс тӑшмана!

Конгӑра Гизенги авӑ тӗрмере.
Уншӑн сан мӗнле ыратмӗ-ха чӗре!

Вӑл ҫӗршывӗшӗн Лумумбӑ пек тӑрать,
Тертлӗ халӑхӗн телейӗшӗн ҫунать!

Парижра урсах пыраҫҫӗ «ультрӑсем»,
Кунӗн-ҫӗрӗн ҫурӑлаҫҫӗ бомбӑсем.
Жаннӑ халӑхӗ, кала хӑв сӑмахна,
Кар тухмашкӑн вӑхӑт ҫитнӗ-ҫке сана!

...Хаҫата алла илсессӗн, чи малтан
Эс тӑваттӑмӗш страницӑна пӑхан.
«Пӗчӗк» ҫын эс, эс премьер-министр мар,
Анчах эсӗ те политик ҫӗр ҫинче.
Сан ятна ун ячӗпе-ҫке юнашар
Эп курап премьерӑн кашни нотинче!

# Я Т

Юлташӑн арӑм ҫӑмӑлланнӑ.
Ача ҫуратмалли ҫурта
Тем пекваскать хӑй, ҫунатланнӑ,
Вӗҫсе каяс пек, тупата.

— Епле-ха савӑнмӑн! Ман арӑм
Пӗрре ыйтсаччӗ: мӗн тӑвас!
Эп ун чухне ӑна каларӑм:
Хӗр пур, халь ывӑл — ман саккас...

Ӗҫе пӗлтерчӗҫ, ывӑл, терӗҫ.
Эс ят пирки мӗнле шутлан!

Халь Германсем хурса пӗтерчӗҫ,
А эп хурасшӑн Андриан.

Ҫав ятлӑ космонавт та пур, тет,
Чӑваш ачи... Мана пӗри:
Тархасшӑн, ҫав ята эс хур, тет,
Ҫунатлӑ пултӑр, тет, чӗри!

Эп килӗшрӗм.— Илемлӗ ят!
Хума юрать, хума юрать!

Кала-ха, пӗчӗк Андриан,
Эс кам пулан, пысӑклансан!..

---

В. ДАВЫДОВ-АНАТРИ

# ПИРӖН ХӖРСЕМ

Маттур хӗрсем, чипер хӗрсем,
Сад пахчинчи сар кайӑксем.
Мӗнпе сире танлаштарас,
Мӗнле сӑмах тупса мухтас.

Маттур хӗрсем, чипер хӗрсем,
Ҫунса тӑран хура куҫсем,

Сире курсан чун савӑнать,
Чӗрем сиксе хавас тапать.

Маттур хӗрсем, чипер хӗрсем,
Ҫурхи хӗвел чечекӗсем,
Сире ӗҫре телей сунса,
Юрлас килет саркаланса.

---

Мария ВОЛКОВА

* * *

Эс мана чечек ҫыххи паратӑн
Савӑнса ҫу кунӗ ҫитнипе.
Чӗрӗлет ман пӳлӗм те хавассӑн
Вӑрманти фиалкӑ шӑршипе.

Чечексем нихҫан та йӑлӑхтармӗҫ,
Йӑпатаҫҫӗ ывӑннӑ чуна,—

Ӗмӗр ырлӑх-сывлӑх туйтарма ҫеҫ
Тӗнче тӗсӗ вӗсенче ҫунать.

Витӗр тӑрӑ, кӑн-кӑвак ҫеҫкеллӗ!..
Ҫӗнетет фиалкӑ сывлӑша.
Ҫутҫанталӑк ҫакӑн пек илемлӗ,
Тӳрӗ чунлӑ пурӑнма хушать.

# А. И. ГЕРЦЕН

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ кăçалхи апрелĕн 6-мĕшĕнче вырăссен революциллĕ демокрачĕ, писателĕ, публицисчĕ, философ-материалисчĕ Александр Иванович Герцен çуралнăранпа 150 çул çитнине чысласа иртterме йышăннă.

А. И. Герцен 1812 çулта Мускавра çуралнă. Мĕн ачаранах вăл крепăсла хресченсен тертлĕ те асаплă пурнăçне курса ӳснĕ, вĕсене чĕререн хĕрхеннĕ, май пур таран пулăшма тăрăшнă. Вырăс литературинчи ирĕк шухăшлă произведенисем ăна хăйне те ирĕклĕхшĕн кĕрешме хавхалантарнă, унăн ăс-тăнне хăюллă шухăшсемпе пуянлатнă.

1829 çулта Герцен Мускав университечĕн физикăпа математика уйрăмне вĕренме кĕнĕ. Кунта вăл студентсем хушшинче социализм идейисене саракан, «Пестельпе Рылеев декабристсем хыççăн пыма хатĕррисен» кружокне хутшăннă, каярах вăл хăй ăна ертсе пыма тытăннă. 1834 çулта патша правительстви çак кружок членĕсене арестленĕ, Герцена хăйне «обществăшăн сиенлĕ çын» тесе ссылкăна янă. Тĕрлĕ хуласенче ссылкăра пурăнни пулас писателе Российă пурнăçĕпе тĕплĕрех паллашма пулăшнă. Çав çулсенче вăл творчествăллă ĕçре малтанхи утăмсем тунă, çырма тытăннă. 1842 çулта вара Герцен çирĕпленсе çитнĕ шухăшлавçă-революционер тата писатель пулса Мускава таврăннă. Ссылкăри пурнăç ăна самодержавипе крепăсла правăна тата ытларах курайми пулма вĕрентнĕ. Революци демократин çулпуçĕ В. Г. Белинскипе иккĕшĕ вĕсем обществăллă деятельсен революциллĕ группине ертсе пынă, революци тăшманĕсене хирĕç хаяррăн кĕрешнĕ. Çак çулсенче Герцен «Отечественные записки» тата «Современник» журналсенче ĕçлеме тытăннă, унта хăйĕн вырăс философийĕнче материализмлă традицисене малалла аталантаракан произведенийĕсене пичетленĕ.

Патша пусмăрĕнче, реакциллĕ цензурă куç сиктермесĕр сăнаса тăнă вăхăтра, Герцен мĕн пур вăйне хурса ирĕккĕн ĕçлеме пултарайман. Российăра хăйне хĕсĕрлесе çитернĕ пирки, 1847 çулта вăл тăван çĕршывĕпе яланлăхах сывпуллашнă, хăйĕн çемйипе чикĕ леш енне куçса кайнă. Çакăн хыççăн Герценăн витĕмлĕ сăмахĕ тинех чăн-чăн вăй илсе çирĕп саслăн та илемлĕн янăрама тытăннă. Хĕвеланăç Европăна вăл шăпах 1848 çулхи революци умĕн пырса çитнĕ. Францири Италири революциллĕ событисене хăй куçĕпе сăнанă, буржуази пролетариата епле асап кӳнине курса чунне тарăхтарнă. Российăна янă çырăвĕсенче вăл, буржуалла обществăна хаяррăн питленипе пĕрлех, кивĕ пурнăç тĕп пуласса шанса, «тĕнчене суд тăвас вăхăт çитрĕ!» тенĕ.

1852 çулта Герцен Лондона куçса кайнă, тепĕр çулнех вăл унта «вырăссен ирĕклĕ типографине» уçнă. Унта Герценăн хăйĕн сочиненийĕсемсĕр пуçне, Российă империйĕнчи обществăлла йĕркесем пирки тĕрĕслĕхе уçса паракан, унăн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешĕве чĕнекен пур произведенисем те пичетленнĕ. Радищевăн «Петербургран Мускава çул çӳрени» произведенийĕ, Пушкин, Рылеев, Лермонтов, Огаревăн ирĕк шухăшлă сăввисем чи малтан шăпах çавăнта çутă кун курнă та ĕнтĕ.

1855 çулта Герцен «Полярная Звезда» ятлă альманах кăларма тытăннă. Ăна çапла ят парса, вăл альманах идейи Бестужевпа Рылеев декабристсен журналĕн идейипе пĕрешкеллине палăртасшăн пулнă. 1857 çулта Герцен «Колокол» ятлă политикăллă хаçат кăларма тытăннă. Унăн хаçат-журналĕсем крепăсла чуралăха пĕтерме, патша йĕркине хирĕç кĕрешме чĕнекен революциллĕ изданисем пулнă. Вĕсене Российăна вăрттăн илсе килсе сарнă. «Полярная Звезда» альманах декабристсен традицине çĕкленĕ. «Колокол» хаçат хресченсене ирĕке кăларассишĕн пĕтĕм вăйпа тăнă. Чуралла чĕмсĕрлĕхе хускатнă»,— тенĕ Герцен кăларăмĕсем пирки В. И. Ленин. Сăмах май каласан, СССР Наукă академийĕн Истори институчĕн коллективĕ Герценпа Огаревăн «Колокол» хаçачĕн 245 номерне халĕ 11 кĕнеке (том) туса кăларать.

Герцен аслă вырăс халăхĕн хĕрӳллĕ патриочĕ пулнă. «Вырăс халăхĕ — хăватлă социаллă вăй, вăл этемлĕхĕн чаплă пуласлăхĕ патне çул хывма пултарать»,— тенĕ аслă революционер-демократ.

Хăйĕн илемлĕ литературă произведенийĕсемпе Герцен крепăсла Российăпа кĕрешет, хăй вăхăтĕнчи пурнăçпа çынсене тĕрĕс сăнласа кăтартать. «Вăрă чакак» повеçĕнче писатель талантлă актрисăн ăраскалĕ сарăмсăр пулнине çырса кăтартать. «Кам айăплă!» романпа «Крупов тухтăр» повеçре те вырăссен чи лайăх çыннисен кун-çулĕ, пусмăр саманине пула, телейсĕр вĕçленнине куратпăр. Çак произведенисем вăл вăхăтри обществăллă йĕркесене курайми пулма вĕрентеççĕ, пурнăçа тĕпрен çĕнетсе улăштарассишĕн кĕрешĕве хутшăнма чĕнеççĕ. Хăйĕн чи паллă «Пулни-иртни тата ĕмĕт-шухăшсем» («Былое и думы») ятлă роман-хроникинче писатель Российăри тата Хĕвеланăç Европăри обществă пурнăçĕпе революциллĕ кĕрешĕве ăста, пысăк пултарулăхпа сăнласа кăтартать. «Кăна пĕтĕмĕшпех куççулĕпе, юнпа çырнă: ку вăл çунать те, çунтарать те»,— тенĕ çак кĕнеке пирки И. С. Тургенев. В. И. Ленин та ăна пысăка хурса хакланă.

Александр Иванович Герцен Совет Союзĕнчи вулакансемшĕн кăна мар, тĕнчери нумай çĕршывсенчи прогрессивлă çынсемшĕн çывăх та хаклă. Унăн «Кам айăплă!» романне, «Крупов тухтăр», «Вăрă чакак» повеçĕсемпе ытти произведенийĕсене темиçе ăру юратса вуланă, малашне те юратса вулĕç, аслă писателе ĕмĕр-ĕмĕр ырăпа асăнĕç.

Патша Российĕнче Герцен сочиненийĕсене сарма чарнă пулсан, Совет влаçĕ вăхăтĕнче чаплă писателĕн произведенийĕсем 193 хут, Совет Союзĕнчи çирĕм халăх чĕлхипе, çав шутрах чăвашла та, тухнă. Вĕсен пĕтĕмĕшле тиражĕ сакăр миллиона яхăн. Унăн сочиненийĕсен пуххи виçĕ хут пичетленсе тухнă.

Н. Г.



**И. А. МАРКЕЛОВ**
Чăваш АССР Культура министрĕ

# Коммунизм культури

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XXII съезчĕ пирĕн Тăван çĕршыври общества пурнăçĕн мĕн пур облаçĕсенче тунă социализм çĕнтерĕвĕсен аслă итогĕсене пĕтĕçтерчĕ тата халăх хуçалăхĕпе культури коммунизм патнелле аталанса пымалли çул-йĕрсене кăтартса пачĕ. Съезд пĕтĕм этемлĕх историйĕнче чаплăран та чаплă документ пулса тăракан çĕнĕ Программăна йышăнса хăварчĕ.

Парти съезчĕн докуменчĕсенче, Н. С. Хрущев тунă докладсенче пирĕн çĕршыв ĕлĕкхи саманара хăлтăр-халтăр урапа, сухапуçĕпе кĕнчелеççи çĕршывĕ пулнă пулсан, халĕ вăл тĕнчери чи малта пыракан техникăн, хăватлă станоксемпе тĕп-тĕрĕс ĕçлекен приборсен, автоматла линисен, электронсен вăйĕпе шутлакан машинăсемпе тĕнче уçлăхне вĕçтерсе ямалли чаплă карапсен çĕршывĕ пулса тăнине уççăн та витĕмлĕн кăтартса панă. Халĕ ĕнтĕ пирĕн çĕршыври хăватлă промышленноçпа унăн чаплă энергогиганчĕсем çинчен пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăрать, тĕлĕнсе калаçать. Çапла вара, социализм саманинче мухтавлă Тăван çĕршывăмăрăн сăн-сăпачĕ пур енчен те тĕпрен улшăнса çĕнелчĕ. Кунпа пĕрлех идеологи тĕлĕшпе те çав тери тарăн та аслă улшăнусем пулчĕç. «Çĕршывра культурăллă революци туса ирттернĕ. Вăл ĕç сынни массисене ăс-тăн чуралăхĕпе тĕттĕмлĕхрен хăтарчĕ, вĕсене этемлĕх пухнă культурă пуянлăхне алла илме май пачĕ. Халăхăн чи йышлă пайĕ хут пĕлмен çĕршыв наукăпа культурăн çўллĕ тўписем патне хăватлăн çĕкленчĕ» (КПСС Программи).

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Программи, пирĕн çĕршыв капитализмран социализма куçса пынă çул-йĕре тарăннăн тишкĕрсе хак панă май, культурăллă революци çĕршыва индустриализациленипе тата ял хуçалăхне кооперациленипе пĕрешкелех социализмлă общества тумалли ленинла планăн тĕп звени пулса тăнине палăртать.

Совет Союзĕнче культурăллă революци туса хунă май ленинизмăн вилĕмсĕр идейисем пурнăça кĕчĕç. Меньшевиксем, троцкистсем, буржуаллă националистсемпе ленинизмăн ытти тăшманĕсем рабочисемпе хресченсем культурă тĕлĕшĕнчен юлса пыни, пролетариат, хăйĕн нумай вĕреннĕ кадрсем çук пирки, çĕнĕ культурă тума пултарайманни çинчен тем те пĕр сўпĕлтетнĕ, анчах ленинла теори тата пирĕн çĕршыври культурăллă революци туни çак киревсĕр «теорисене» тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкрĕç. Ĕлĕкхи культурă пĕтĕм наци культури пулса тăрать, вăл класлă культурă мар, унта нимĕнле клас хирĕçĕвĕсем те çук тесе калакан «пĕрлĕхлĕх юхăм» теорийĕ те пуçĕпех путланса ларчĕ.

Кашни обществăлла стройăн хăйĕн культури пур. Çавăнпа та ĕнтĕ, паллах, социализм саманинче буржуаллă культурă вырăнне социализмлă культурă йышăнмалла. Капитализмран социализма куçнипе, обществăна социализмла улăштарса çĕнетнипе пĕр вăхăтрах культурăллă революци пулса иртет, буржуаллă культурă пăчланса ун вырăнне социализмлă культурă аталанма пуçлать, халăх массисен культурăлăхĕ нихçанхинчен те хăватлăн чечекленсе ўсет, наукăпа техникăн тата искусствăн мĕн пур çĕнтерĕвĕсем, пурлăхпа культурăн пĕтĕм ырлăхĕсем халăх аллине куçаççĕ. Мĕншĕн тесен социализмлă культурă хăйĕн идейăллă содержанийĕпе тата обществăллă тивĕçĕпе ĕç сыннисен интересĕсене кăна тивĕçтерекен çĕнĕ культурă пулса тăрать. Çавăнпа та вăл пур енĕпе те эксплуататорла обществăсен культуринчен пачах уйрăлса тăрать.

Октябрьти социализмлă аслă революци çĕнтернĕ хыççăн пирĕн çĕршыври ĕç сыннисем наукă çитĕнĕвĕсене хăвăрт алла илме, вĕренсе хăйсен

пĕлĕвĕсене ӳстерсе пыма, çутта тухас ĕçе анлăн сарса яма чаплă майсем тупрĕç.

Культурăллă революци совет халăхне ăс-тăн тĕлĕшĕнчен пачах улăштарса çĕнетрĕ, çак революци халăха моральпе культура тĕлĕшĕнчен çӳле ӳстерчĕ, политикă тĕлĕшĕнчен вăйлă турĕ, коммунизм обществи тăвассишĕн яланах активлăн та çирĕппĕн кĕрешме туптаса хатĕрлерĕ. Çапла вара, Совет Союзĕ политикă енĕпе çеç мар, культурă аталанăвĕн шайĕпе те тĕнчери чи малта пыракан çĕршывсенчен пĕри пулса тăчĕ.

Культурăллă революци туса ирттернĕ май, çĕршывра нациллĕ формăсемпе пуян социализмлă культурă хăватлăн сарăлса чечекленчĕ, кунпа пĕрлех халăх хушшинче социализм тăвас ĕçе чунчĕререн парăннă çĕнĕ интеллигенци ӳссе çитĕнчĕ.

Революциччен чăваш халăхĕ çав тери хĕн-хурлă та асаплă пурнăçпа пурăннă, ун чухне, кĕç-вĕç вилсе пĕтес патне çитнĕскер, вăл хăйĕн тăван культурине аталантарасси çинчен шухăшлама та пултарайман. Аслă Октябрьччен чăвашсен хаçат-журнал, издательствă, театр таврашĕ пачах пулман. Вунă çын пуçне пĕри çеç кăштах вулама-çырма пĕлкеленĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнисем пĕтĕмпе те 20—30 çынтан иртмен.

Мĕн тери паха улшăнусем пулса иртрĕç Совет влаçĕ çулĕсенче пирĕн Чăваш çĕршывĕнче! Епле ӳссе сарăлчĕ чăваш халăхĕн культури!

Халĕ республикăра хут пĕлмен çынсем пачах юлман. Хуласемпе районсенче пĕтĕмĕшле пĕлӳ илмелли 861 шкул ĕçлет, вĕсенче 200 пин çын ытла вĕренет. Чăваш республикинче 4 театр ĕçлет, государствă филармонийĕ пур, клубсем, библиотекăсем питĕ йышлă, писательсен, журналистсен, художниксен, композиторсен творчествăллă союзĕсем ĕçлеççĕ.

Совет влаçĕ çулĕсенче пирĕн республикăра 6,5 пин тĕрлĕрен кĕнекесем пичетлесе кăларнă, вĕсен пĕтĕмĕшле тиражĕ 40 миллион экземпляр ытла шутланать. Халĕ марксизм-ленинизм классикĕсен, тăванла совет республикисенчи, халăх демократи çĕршывĕсенчи тата ытти халăхсен паллă писателĕсен произведенийĕсене те чăвашла нумай куçарса кăлараççĕ. Чăваш чĕлхи чухăн, вăл наукăпа литературă ĕçĕнче юрăхлă пулма пултараймасть тесе пакăлтатнă ирсĕр питшă харам пырĕсенчен пирĕн саманара истори çавăн пек çивĕччĕн питлесе кулчĕ.

Хальхи вăхăтра пирĕн республикă хаçачĕсем виççĕ, район хаçачĕсем çирĕм пĕр, заводсенче, колхозсенче тухса тăракан нумай тиражлă хаçатсем вун пиллĕк шутланаççĕ. Кунсăр пуçне илемлĕ литературă журналĕ «Ялав», сатирăпа юмор журналĕ «Капкăн», «Тăван Атăл» альманах пур.

Халĕ Совет Союзĕ чăн-чăн прогрессивлă культурăпа тĕнчере чи малта пыракан наукă çĕршывĕ пулса тăчĕ. Çĕрпе хĕвелĕн искусственнăй спутникĕсем, тĕнче уçлăхне вĕçтерсе ямалли хăватлă карапсем, атом вăйĕпе ĕçлекен электростанцисем, совет çыннисем космос карапĕсем çинче Çĕр чăмăрĕ тавра ăнăçлăн вĕçсе çаврăнни — çаксем пурте коммунизмăн иксĕлми вăйхăватне кăтартса параççĕ, пĕтĕм этемлĕхĕн çутă шанчăкĕпе савăнăçне палăртаççĕ.

Культурăллă революци туса ирттернĕ çулсенче Коммунистсен партийĕн VIII съезчĕ йышăнса хăварнă иккĕмĕш Программăра культурăпа наукăна аталантарас енĕпе палăртнă задачăсене пурне те чыслăн пурнăçа кĕртнĕ.

Çавăн пекех парти хăйĕн Программинче пĕтĕм халăха хут вĕрентме палăртнине те ăнăçлă пурнăçланă. Вăтăрмĕш çулсен вĕçĕнчех ĕçлеме пултаракан мĕн пур çынсем вулама-çырма вĕренсе çитнĕ. 1933 çулта, тĕпрен илсен, кашни ача пуçламăш шкулран вĕренсе тухнă. Вăрçă умĕнхи вăхăтрах, 30-мĕш çулсен вĕçĕнчех, хуласенчи мĕн пур çамрăксене обязательнăй йĕркепе çичĕ çул вĕрентессине пурнăçа кĕртме тытăннă, ăна ялсенче, нацилле облаçсемпе республикăсенче пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çирĕп утăмсем тунă.

Вăрçă хыççăн (1951 çул тĕлне) пирĕн çĕршыв пурне те вăтам шкултан вĕрентсе кăларас задачăна пурнăçлама тытăнать. КПСС XX съезчĕ çĕршыври хуласемпе ялсенче, тĕпрен илсен, пурне те вăтам шкулта вĕрентсе кăларас задачă кăларса тăратать. Съезд çĕнĕ йышши шкулсем—интернат-шкулсем тăвас пирки питех те кирлĕ решени йышăнать. Халĕ Чăваш республикинче кăна 13 интернат-шкул уçнă. Вĕсенче 3.500 ача ытла вĕренеççĕ.

Совет çĕршывĕнче аслă шкулсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе те пысăк та пархатарлă ĕçсем туса ирттернĕ. Аслă шкулсен шутне ӳстерсе вĕсен ĕçне лайăхлатас тата пысăк пĕлӳллĕ специалистсем хатĕрлес тĕлĕшпе пирĕн çĕршыв мĕн пур капитализмлă çĕршывсене, çав шутра Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене те, хăваласа иртсе кайрĕ. Хальхи вăхăтра Совет Союзĕнчи аслă шкулсенче Европăри мĕн пур капитализмлă çĕршывсенчен тăватă хут ытларах студентсем вĕренеççĕ. Революцийченхи Российăра аслă шкулсенче пурĕ те 127 пин çын вĕреннĕ пулсан, хальхи вăхăтра иртнĕ вĕренӳ çулĕнче кăна аслă шкулсемпе техникумсенче 4,4 миллион студент вĕреннĕ, çав шутра аслă шкулсенче — 2396 пин çын. Çапла вара, партин иккĕмĕш Программинче аслă шкулсенче вĕренме кăмăл тăвакансене хăйсен ĕмĕчĕсене пурнăçлама тивĕçлĕ майсем туса памалăртнă задачăна ăнăçлă пурнăçланă.

1959 çулхи Пĕтĕм Союзри перепис тăрăх çĕршывра 13,4 миллион çын аслă тата специализациленĕ вăтам шкулсенче вĕреннĕ. 45,3 миллион çын вăтам тата çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче пĕлӳ илнĕ. 1939 çулта кашни пин çын пуçне аслă шкултан вĕренсе тухнисем ултă çын,

вăтам тата çичĕ çул вĕренмелли шкулсем пĕтернисем 77 çын пулнă пулсан, 1959 çул тĕлне кашни пин çын пуçне 18 çын аслă шкултан вĕренсе тухнă тата 263 çын вăтам шкулпа çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче пĕлӳ илнĕ. Культурăллă революци туса ирттернĕ тата Совет Союзĕнче халăха вĕрентес ĕç системине анлăн сарнă май халăх интеллигенцийĕн пысăк çарне вĕрентсе хатĕрленĕ.

Халăха вĕрентес тĕлĕшпе пирĕн республикă та Совет влаçĕ çулĕсенче пысăк утăмсем турĕ. Халĕ республикăра кашни пин çын пуçне аслă шкул пĕтернисем 9 çын шутланаççĕ. Ку вăл Франциринчен икĕ хут, Иранрипе танлаштарсан, 28 хут нумайтарах!

Наукăна халăх аллине парас тата халăхшăн ĕçлеттерес тĕлĕшпе парти хăйĕн иккĕмĕш Программинче лартнă задачăна та чыслăн пурнăçланă. Çĕршывра наукăна хăвăрт тата хăватлăн аталантарма пур майсем те туса хунă. 1961 çул тĕлне çĕршывра 3.828 наукă учрежденийĕ шутланнă. 1960 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне наукă енĕпе ĕçлекенсем пурĕ 354,2 пин çын пулнă. Вĕсенчен 10,9 пин çын наукă докторĕсен, 98,3 пин çын наукă кандидачĕсен ятне илнĕ. Революцичченхи Российăра пĕтĕмпе те 10,2 пин çын наукă енĕпе ĕçленине шутласан, ку питĕ пысăк çитĕнӳ вĕт-ха!

Совет наукисен штабĕн — СССР Наукисен академийĕн 1960 çул вĕçленнĕ тĕле наукă учрежденийĕсем пурĕ 241 пулнă, вĕсенче 23,8 пин çын ĕçленĕ. Кунсăр пуçне Союзлă республикăсенче Наукă академийĕсем тата 14 туса хунă.

Совет науки тĕнчере пĕрремĕш вырăн йышăнса тăрать. Вăл атом энергийĕпе усă курас, реактивлă техникăна аталантарас, тĕнче уçлăхне тĕпчесе вĕренес тата ытти нумай наукăсене аталантарас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсем халĕ пĕтĕм этемлĕхе тĕлĕнтереççĕ.

Совет Союзĕнчи халăхсен формипе нациллĕ, содержанийĕпе социализмлă литературипе искусствине хăватлăн малалла аталантарни те пирĕн çĕршывра туса ирттернĕ культурăллă революцин чи хаклă çитĕнĕвĕсенчен пĕри пулса тăрать. Совет литературипе искусствин паха енĕ вăл идейă тĕлĕшĕнчен çӳлти пусăмра пулнипе тата халăх кăмăлне туллин тивĕçтернипе вăйлăн палăрса тăрать. Ĕç çыннисен пурнăçĕпе ĕçĕсене тарăннăн сăнласа кăтартакан тата халăхпа тачă çыхăнса тăракан, коммунизмшăн хăюллăн кĕрешекен совет литературипе искусстви тĕнче культурин пуянлăхĕсене хăватлăн ӳстерсе пыраççĕ.

Парти Программинче ĕç çыннисене культурă тата политикă пĕлĕвĕсене туллин вĕрентес тĕлĕшпе кăларса тăратнă задачăсене те пирĕн çĕршывра ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ. Совет Союзĕнче тĕрлĕрен культурăпа çут ĕç учрежденийĕсем нумай уçнă, вĕсенче халăха коммунизмлă воспитани парас тĕлĕшпе пысăк та пархатарлă ĕçсем тăваççĕ.

Хальхи вăхăтра Чăваш республикинче кăна клубсемпе культурă дворецĕсем сакăр çĕр ытла шутланаççĕ, 1000 ытла библиотекă ĕçлет, 662 киноустановкă, краеведени музейĕ, картинăсен галерейи, халăх творчествин çурчĕ пур.

Революциччченхи Чăваш çĕршывĕнче вара пĕтĕмпе те пиллĕк библиотекă кăна пулнă. Çав библиотекăсенчи кĕнекесен хисепĕ вунă пине те çитеймен. Халĕ ак республикăри библиотекăсенче 5 миллион ытла кĕнеке шутланать!

* * *

Совет Союзĕнчи социализмлă революци идеологипе культурă енĕпе тунă çĕнтерӳсем эпир культурăллă революцие пĕтĕмĕшпех туса çитерниие, унăн мĕн пур задачисене пурнăçланине пĕлтермест-ха.

Партин çĕнĕ Программинче çапла каланă: «Анлăн коммунизм тунă тапхăрта культурă аталанăвĕ аслă культурăллă революцие вĕçлесе çитернĕ тапхăр пулать. Ку тапхăрта коммунизм туса çитерме идеологипе культурă условийĕсем пурте пулаççĕ».

«Коммунизм культури, тĕнче культурин лайăх енĕсене пĕтĕмпех илсе, вĕсене аталантарса пырса, этемлĕхĕн культурă аталанăвĕнче çĕнĕ, çӳллĕ пусăм пулса тăрать. Вăл обществăн ăстăн пурнăçĕнчи пĕтĕм пуянлăхне, çĕнĕ тĕнчен пысăк идейăлăхĕпе гуманизмне пĕтĕçтерсе тăрать. Вăл классăр обществă культури, пĕтĕм халăх, пĕтĕм этемлĕх культури пулать».

Анлă коммунизм обществи туса пынă тапхăрта пĕр-пĕринпе таччăн çыхăннă задачăсене—коммунизмăн пурлăхпа техникă никĕсне туса хурас, обществăри коммунизмла хутшăнусене аталантарас, коммунизмăн пархатарлă ĕçĕсене пĕтĕм чунчĕререн парăннă çынсем вĕрентсе хатĕрлес задачăсене татса параççĕ. Вăй-хал ĕçĕпе ăс-тăн ĕçне пĕр-пĕринпе çывăхлатма пурлăх енчен тивĕçлĕ майсем туса хунипе, пурлăхпа ăс-тăн пуянлăхĕсем ытлăн-çитлĕн хатĕрлессишĕн кĕрешнипе пĕрлех парти ĕç çыннисен коммунизмла ăнланулăхне ӳстерес тĕлĕшпе те çине тăрса ĕçлет, коммунизм тăвакансен нумай пĕлӳллĕ, пур енчен те çӳллĕ пусăмра тăракан кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлеме иксĕлми пысăк вăй хурать.

Культурăллă революцин юлашки тапхăрĕнче мĕн пур рабочисемпе хресченсене пĕлӳлĕх тĕлĕшĕнчен интеллигенци шайне çитереççĕ, халăха вĕрентес ĕçĕн пĕтĕм системинче ĕçпе вĕренĕве пĕр-пĕринпе тачă çыхăнтарса туса пыраççĕ, çапла вара ăс-тăн ĕçĕпе вăй-хал ĕçĕ хушшинчи уйрăмлăхсем пачах пĕтсе пыраççĕ.

Ăс-тăн ĕçĕпе вăй-хал ĕçĕ хушшинчи тĕп уйрăмлăхсене пĕтересси чи малтанах техникă прогресĕ



Пĕр тăван Федоровăсем.

туса хунипе, мĕн пур рабочисен, хресченсен тата интеллигенцин ĕçĕсене пĕр тан условисенче автоматизациленипе тата механизациленипе пулать. Çакă çынсене ăс-тăн ĕçĕпе вăй-хал ĕçне пуриншĕн те пĕрешкел ылмаштарса пыма май парать. Çапла вара, обществă членĕсемшĕн кашниншĕнех творчествăлла ĕçлеме тата вĕренме лайăх майсем уçăлаççĕ; çак кирлĕ ĕçре халăх пурнăçне пурлăх тĕлĕшĕнчен лайăхлатса пыни, ĕç кунĕ кĕскелни, çынсен пурнăçĕпе йăла условийĕсене çултан-çул лайăхлатни питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах та, кашни çын культурăпа пĕлӳ патне туртăннине кирлĕ пек тивĕçтермесен, çамрăк ăрăва пĕтĕмĕшле тата политехникăлла пĕлӳсем парассине çирĕппĕн пурнăçласа пымасан, ĕçлекен халăхăн пĕтĕмĕшле пĕлӳ тата культурăпа техникă тĕлĕшĕнчи пĕлĕвĕн шайне ӳстерсе пырассине кирлĕ пек йĕркелемесен, ку çителĕксĕр пулать-ха.

Программă çитес çирĕм çул хушшинче пурне те обязательнăй йĕркепе вăтам пĕлӳ парассине пурнăçлама тата çынсене аслă шкулсенче вĕрентессине малалла аталантарма пысăк та пархатарлă задачă лартать. Çак задачăна парти икĕ тапхăрта татса парать: малтанхи вунă çул хушшинче шкул çулне çитнĕ мĕн пур ачасене вун пĕр çул вĕренмелли вăтам шкултан вĕрентсе кăларса пĕтĕмĕшле тата политехникăлла пĕлӳсем параççĕ, халăх хуçалăхĕнче ĕçлекен, тивĕçлĕ пĕлӳ илеймен çамрăксене вара 8 клас чухлĕ вĕрентессине обязательнăй йĕркепе пурнăçлаççĕ; тепĕр вунă çуллăхра вара пурне валли те вăтам шкул пĕтерме майсем туса параççĕ.

Çитес çирĕм çул хушшинче мĕн пур çамрăксене аслă шкултан вĕрентсе кăларас задачăна пурнăçлама май килмесен те, çак тапхăрта аслă шкулсенче вĕренекен студентсен контингенчĕ виçĕ хут ытла ӳсет. Каярахпа вара, çирĕм çул иртнĕ хыççăн, вĕренме кăмăл тăвакан мĕн пур граждансене аслă шкулсенче пĕлӳ илме питех те паха майсем уçăлаççĕ.

Коммунизм тăвас ĕçре совет науки пысăк вырăн йышăнса тăрать. Коммунизмăн пурлăхпа техникă никĕсне туса хурассине тата коммунизмла обществăн членĕсене вĕрентсе ӳстерессине наукăпа техникă прогресĕсĕр тума май çук. Совет Союзĕнче туса хатĕрленĕ «Восток-1» тата «Восток-2» карапсем çинче Ю. А. Гагаринпа Г. С. Титов пилот-космонавтсем тĕнче уçлăхĕнче вĕçни ку чухнехи совет наукин чаплă çитĕнĕвĕсене палăртса тăрать тата совет наукин аталанăвĕнчи чаплă малашлăхсене кăтартса парать.

Партин çĕнĕ Программинче совет наукин аталанăвĕн çĕнĕ те чаплă пуласлăхне уççăн палăртса хунă: «Наукăпа усă курни обществăн производителлĕ вăйĕсене хăватлăн ӳстермелли тĕп фактор пулса пырать. Наукăна аталантарассишĕн, унăн çитĕнĕвĕсемпе халăх хуçалăхĕнче усă курассишĕн парти малашне те уйрăмах тимлĕ тăрăшĕ».

Теориллĕ тĕпчев ĕçĕсене аталантарассине тата наукăна производствăпа çыхăнтарассине парти ку тĕлĕшпе тухса тăракан чи кирлĕ задачăсем тесе шутлать. Программăра наукăпа техникă аталанăвĕн малашлăхĕ хальхи вăхăтра, чи малтанах, çутçанталăка тĕпчесе вĕренекен чи кирлĕ отраслĕсен — математикă, физикă, хими тата

биологи наукисен çитĕнĕвĕсенчен килнине кăтартса панă.

Медицинă ыйтăвĕсене ăнăçлă татса пама, ял хуçалăхне малалла çĕклеме кирлине кура, биологи наукисен пĕтĕм комплексне аталантарас енĕпе пысăк ӳсĕмсем тумалла пулать. Наукăн пурнăç явленийĕсен вăрттăн тупсăмне, пурнăç процесĕсене, уйрăм илсен, веществосен улшăнăвне, организмсен наследственноçне тата кунта кирлĕ пек улшăнусем тăвас ĕçе йĕркелесе пымалли тĕрлĕ майсене тĕпчесе пĕлмелле. Халăх хуçалăхĕнче тата сывлăха сыхлас ĕçре микроорганизмсене тĕпчесе вĕренесси тата вĕсемпе анлăн усă курасси пысăк вырăн йышăнать.

Çутçанталăкăн çĕнĕ явленийĕсемпе законĕсене тупса палăртма, планетăсем хушшинчи тĕнче уçлăхĕн уйрăмлăхĕсене пĕлсе çитме Совет çĕршывĕнчи тĕпчевçĕсем тĕнче уçлăхне тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе тунă ĕçсем вăйлă аталанни пулăшса тăрать. Ракетă техникине, космикăллă биологипе психологие малалла аталантарса пыни халĕ эпир этем организмĕ пирки сахалтарах пĕлекен нумай-нумай енсене лайăхрах пĕлсе çитме, çынсене планетăсем хушшинчи тĕнче уçлăхне çирĕп алла илме пулăшать. Ку, паллах ĕнтĕ, совет наукипе техникин çĕнĕ те чаплă çитĕнĕвĕсене, тĕнчери чи малта пыракан социализмлă обществă стройĕн аслă та паха енĕсене анлăн кăтартса парать.

Парти Программинче обществă аталанăвне ертсе пымалли наукăллă никĕс пулса тăракан обществăллă наукăсем енĕпе тĕпчев ĕçĕсене вăйлăн аталантарса пыма палăртнă. Кунта коммунизм строительствин практикине тĕпчесе вĕренесси тата теори енĕпе пĕтĕмлетесси, социализмăн экономикăллă, политикăллă тата культурăллă аталанăвĕн, социализмран коммунизма куçса пынин тĕп закономерноçĕсене тĕпчесе вĕренесси, ĕç çыннисене коммунизмла воспитани парас ыйтусене тĕпчесе хатĕрлесси тĕп вырăнта тăнине уйрăмах палăртса хунă. Обществăлла наукăсем, марксизм-ленинизм принципĕсен тасалăхне хӳтĕлесе, буржуалла идеологие хирĕç, ревизионизмпа догматизма хирĕç малашне те татăклăн кĕрешме тивĕç.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви наукă учрежденийĕсен хисепне сарса пыма тата вĕсен ĕçне лайăхлатма, аслă шкулсенче наукăпа тĕпчев ĕçĕсене вăйлатса пыма, мĕн пур союзлă республикăсенче тата пысăк экономикă районĕсенче наукăна малалла аталантарма майсем туса пама палăртаççĕ.

* * *

Коммунизм вăхăтĕнче обществăн ăс-тăн пурнăçĕ нихăсанхинчен те хăватлăн ӳсе чечекленет. Н. С. Хрущев литературăпа искусствă работникĕсен творчествăллă ĕçĕн пĕлтерĕшĕ хальхи вăхăтра — парти ĕç çыннисене коммунизмла воспитани парас, çĕнĕ шухăш-кăмăллă çынсем ӳстерес задачăсене пурнăçлассине чи кирли вырăнне хунă вăхăтра уйрăмах паллă вырăн йышăннине кăтартса парать.

Ленин «самăрăлса шыçăннипе асапланакан», «влаçра тăракан вунă пин çыннăн» интересĕсемшĕн мар, «çĕршывăн илемĕ, унăн вăйĕ, унăн пуласлăхĕ» пулса тăракан миллион тата вуншар миллион ĕç çыннисен интересĕсемшĕн тăрăшакан литературă çураласси çинчен каланăранпа çур ĕмĕр ытла иртрĕ. Ленин сăмахĕсем чăннипех те пророкла сăмахсем пулнă. Хальхи вăхăтра пирĕн çавăн пек литературă пур ĕнтĕ, тата вăл ăнăçлăн аталанса пырать. Ку вăл — коммунизм тăвас ĕçре пысăк вăй пулса тăракан, социализмлă реализм меслечĕсене çирĕп пурнăçласа пыракан нумай нациллĕ литературă. Ку вăл — иртнĕ ĕмĕрсенчи реализмлă литературăн малта пыракан чи паха традицийĕсене тивĕçлипе аталантарса пыракан, пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхĕн ăс-тăн пурнăçĕнчи чи пуян опытне палăртакан пирĕн совет литератури. Çавăн пек литературă çуралса аталанни Коммунистсен партийĕн, унăн ленинла наци политикин чаплă çĕнтерĕвĕ пулса тăрать.

Юлашки çулсенче совет литературипе искусствине хăватлăн аталантарса чечеклентерме уйрăмах паха майсем уçăлчĕç. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XX-мĕш, унтан тата XXII-мĕш съезчĕсен историлле решенийĕсем, уйрăм çынна пысăка хунин юлашкийĕсене хирĕç парти çирĕппĕн кĕрешни, парти пурнăçĕнче ленинла нормăсем туса хуни — çаксем пурте пирĕн обществăн ăс-тăн пурнăçĕнче чĕрĕ те хăватлă вăй пулса тăраççĕ. Юлашки çулсенче парти литературăпа искусствă аталанăвне тимлĕн сăнаса пычĕ, мĕн пур творчествăлла вăйсене партилле çирĕп принципа пăхăнса ĕçлеме пĕрлештерчĕ, литературăпа искусствă ĕçĕнче йăнăшнă çынсене тĕрĕс çул çине тухма пулăшрĕ. Пирĕн литературăна ăнăçлăн аталантарас ĕçре Н. С. Хрущев юлташăн «Литературăпа искусствăна халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнтарассишĕн», «Литературăпа искусствăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсемшĕн» статйисем, çавăн пекех вăл Пĕтĕм Союзри писательсен III съездĕнче тухса каланă сăмахсем пысăк вырăн йышăнчĕç. Çак партилле документсем совет культурин деятелĕсемшĕн шанчăклă компас пулса тăчĕç, пирĕн литературăпа искусствăн ку чухнехи задачисене тарăннăн ăнланма тата витĕр курса тăма пулăшрĕç.

Паллă ĕнтĕ, литературăпа искусствăна яланах произведенисен пахалăхне кура хак параççĕ. Юлашки çулсенче пичетленсе тухнă чаплă произведенисем — А. Твардовскин «Инçетрен инçете» поэмипе М. Шолоховăн «Уçнă çерем» романĕн иккĕмĕш кĕнеки, Л. Леоновăн «Вырăс вăрманĕпе» А. Довженкон «Тинĕс çинчен хунă поэми», Н. Погодинăн Ленина сăнласа кăтарта-

жан пьесисемпе М. Ауэзовăн «Абай çулĕ» романĕ, М. Стельмах романĕсемпе М. Рыльский, А. Прокофьев, М. Турсун-заде поэтсен сăввисем, Д. Шостакович, В. Соловьев-Седой, С. Рихтер, В. Мравинский, В. Пашенная творчествисем пирĕн литературăпа искусствăн çитĕнĕвĕсене çав тери уççăн кăтартса параççĕ! Литературăпа искусствăра çамрăк вăйсем çирĕппĕн те шанчăклăн ӳссе пыни те чунтан савăнтарать.

Çавнашкалах, чăваш литературипе искусстви те юлашки çулсенче пысăк ӳсĕмсем турĕ.

Чăваш литераторĕсем Яков Ухсай, Петĕр Хусанкай, Александр Алга, Стихван Шавлы, Георгий Ефимов, Уйăп Мишши, Мĕтри Кибек, Леонид Агаков, Илпек Микулайĕ, Александр Кăлкан, Николай Терентьев тата ыттисем те пирĕн тăван халăха хăйсен çĕнĕ те паха произведенийĕсемпе савăнтарчĕç. Чăваш писателĕсен чи лайăх произведенийĕсене вырăсла тата хамăр çĕршыври тăванла халăхсен чĕлхисем çине куçарса пысăк тиражпа пичетлесе кăлараççĕ.

Партипе государствă яланах тăрăшнипе тата вырăс халăх культурин пархатарлă витĕмне пула чăваш халăхĕн искусстви юлашки çулсенче чăннипех те пысăк ӳсĕмсем турĕ. 4—5 çул каялла кăна пирĕн оперă искусстви пулманччĕ. Ун пирки эпир пурте ĕмĕтленсе пурăннă. Халĕ ак пирĕн çак искусствă пур! Анчахрах йĕркеленĕ музыкăпа драмă театрĕ кĕске вăхăтрах халăха виçĕ оперă кăтартрĕ, çав шутра «Шывармань» ятлă чăвашла оперăна та ăнăçлă лартса пачĕ. Театр коллективĕ кăçалхи сезонра та лайăх ĕçлерĕ: партин историлле XXII съезчĕ тĕлне паллă совет композиторĕн Б. Мокроусовăн «Чапай» ятлă çĕнĕ оперине сценă çинче кăтартрĕ. Композитор хăй çирĕм çул хушши çырнă çак паха оперăна чи малтан паттăр Чапаевăн янташĕсене — чăвашсене лартма шанса парнелесе пачĕ.

Паянхи куна пирĕн балет искусстви çук-ха. Анчах эпир çак искусствă пулас пирки ĕмĕтленсе пурăнатпăр. Вăхăт нумай та иртмĕ — кĕçех чăваш театрĕн сцени çинче те балет искусствине курса савăнма пулĕ: пиллĕкмĕш çул ĕнтĕ Ленинградри А. Я. Ваганова ячĕпе хисепленекен хореографи училищинче чăвашсен балет студийĕ ĕçлет.

Юлашки çулсенче пирĕн театрсен коллективĕсем ял çыннисем валли спектакльсем ытларах лартма пуçларĕç. Чăваш академи театрĕн вăйĕпе кăна иртнĕ çулла чăваш ялĕсенче 300 ытла спектакль лартса панă, вĕсене çĕр пин çын ытла пырса курнă. Çамрăксен театрĕпе пуканесен театрĕ те мĕн пур спектакльсенчен 80—90 процентне ялсенче кăтартнă.

Мускавра нумаях пулмасть чăваш музыкипе искусствин кăçĕсене иртнĕ республикăн культурăллă пурнăçĕнче паллă событи пулса тăрать. Унта пирĕн юрăпа ташă ансамблĕ, халăх хорĕ, чăвашсен балет студийĕ, музыкăпа драмă театрĕн уйрăм солисчĕсем хăйсен пултарулăхĕсене лайăх кăтартса пачĕç. Музыкăпа искусствă кăçĕсен ĕçне республикăри пур композиторсем те хутшăнчĕç, столицăри музыкă деятелĕсене хăйсен творчествипе анлăн паллаштарчĕç.

Чăваш композиторĕсем А. Орлов-Шуçăм, Филипп Лукин, Герман Лебедев, Григорий Хирбю халăх юратса юрлакан юрăсем сахал мар çырчĕç. А. Орлов-Шуçăм «Кукурузă ӳстеретпĕр» юрăшăн Пĕтĕм Союзри радион дипломĕпе иккĕмĕш премине илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Халĕ Федор Васильев композитор А. Алган «Хамăр ялсем» поэми тăрăх çĕнĕ оперă çырать. Анисим Асламас «Айдар» ятлă оперине çырса пĕтерчĕ. Аверий Токаревпа Михаил Алексеев композиторсем балет валли çырнă малтанхи произведенийĕсене вĕçлеççĕ.

Чăвашсен паллă художникĕсем Н. Овчинников, Ф. Осипов, Р. Ермолаева тата ыттисем çырнă живопиçпе графикă произведенийĕсем Мускаври Пĕтĕм Союзри художествă выставкине тăратма тивĕçлĕ пулчĕç.

Буржуаллă идеологсем социализм вăхăтĕнче ăс-тăн пурнăçĕ, Совет Союзĕнчи халăхсен культури чакса пырать тата унăн нациллĕ уйрăмлăхĕсем пĕтеççĕ тесе элек сарнине чăваш литературипе искусствин аталанăвĕнчи ӳсĕмсем те тӳрреммĕнех сирсе яраççĕ. Чăваш республикинчи культурă строительстви те социализмпа коммунизм тунă тапхăрсенче мĕн пур нацисемшĕн литературăпа искусствăна хăватлăн аталантарса чечеклентерме, çавнашкалах обществăн кашни членĕн творчествăлла пултарулăхĕсене пур енчен те аталантарма чи паха майсем пулса тăнине кăтартса параççĕ.

Буржуаллă культурă вара хальхи вăхăтра чăнах та пысăк кризис умĕнче тăрать, çĕрсе кăмпасланса пырать. Халĕ вăл этеме курайманлăхăн ирсĕр лачакине анса ларнă.

Капитализмлă çĕршывсенче художниксем, музыкантсем, артистсем пĕр правасăр тата нимĕн хӳтлĕхсĕр тертленсе пурăнаççĕ. Аса илер-ха эппин Хĕвеланăç çĕршывсенче чи лайăх симфони оркестрĕ шутланнă «Симфони Он Зи Эйр» оркестрăн хурлăхлă историне. Çак оркестра Нью-Йоркра йĕркеленĕ, ăна нумай çулсем хушши паллă композитор Артуро Тосканини ертсе пынă. Оркестр хуçи — Америкăри радион «Нейшил броднастинг компанин» ятлă чи пысăк компани дирекцийĕ оркестра укçа-тенкĕ енчен пачах пулăшма пăрахнă, çавăнпа та Америкăри пĕртен-пĕр чаплă коллективăн ирĕксĕрех саланса кайма тивнĕ.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи Нью-Йорк хулинчи «Метрополитен опера» ятлă пĕр-

тен-пĕр операй театрĕн шăпи те çавнашкалах хурлăхлă.

Çак паллă оперăн оркестранчĕсем хăйсен ĕç укçине ÿстерме ыйтнă пулнă. Анчах театрăн генеральнăй директорĕ музыкантсен профсоюзĕпе килĕшÿ тума пачах килĕшмен тата оперă театрĕн сезонне пĕтĕмĕшлех пăрахăçласси çинчен пĕлтернĕ.

Совет литературипе искусствин çитĕнĕвĕсем пысăк. Самана пирĕн ума аслăран та аслă задачăсем кăларса тăратать. Çав задачăсене вăл литературăпа искусствă умне те лартать.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XXII съезчĕ пирĕн çĕршывра литературăпа искусствă «миллионшар çынсене савăнăç кÿрекен, хавхалантаракан вăй пулса тăмалла, вĕсен кăмăлне, туйăмĕсемпе шухăшĕсене палăртса тăмалла, вĕсене идейă енĕпе ÿссе пыма, нравственноç енĕпе аталанса çитĕнме пулăшмалла» тесе палăртса хăварчĕ.

Ахăртнех пирĕн партин нихăш съездĕнче те литературăпа искусствă ыйтăвĕсем пирки XXII съездри пек хĕрÿллĕ калаçу пулман пулĕ. Никита Сергеевич Хрущев тунă докладсенче те, партипе правительствă руководителĕсем тухса каланисенче те, съезд делегачĕсем пулма суйланă писательсен сăмахĕсенче те пирĕн литературăпа искусствăн малашнехи аталанăвĕпе парти тимлĕн интересленни, уншăн тăрăшни вăйлăн палăрса тăрать.

Паянхи пурнăçпа ыранхи кун-çулăмăр пирки шухăша кайнă вăхăтсенче эпир куллен-кун КПСС XXII съезчĕн материалĕсем патне пырса тухатпăр: вĕсенче совет литературипе искусствин коммунизм тунă тапхăрти задачисене çав тери туллин те тĕп-тĕрĕс çутатса панă, вĕсен аталанăвĕн тĕп çул-йĕрне яр-уççăн палăртнă вĕт-ха. Çав тĕп çул-йĕр литературăпа искусствă «халăх пурнăçĕпе çирĕп çыхăнса тăни, социализмлă пурнăçăн пуянлăхĕпе нумай тĕрлĕ енĕсене тĕрĕс, пысăк ăсталăхпа кăтартса пани, çĕннине, чăн-чăн коммунизмла пурнăçа хавхаланса, илемлĕн сăнласа пани, обществăна малалла кайма чаракан чăрмавсене пурне те питлени пулса тăрать.

Çĕнĕ, чăн-чăн коммунизмла пурнăç... Вăл кашни кун, кашни сехетрех ĕнтĕ тата пирĕн куç умĕнчех çуралса вăй илет, пирĕн героикăлла эпохăн — халăх пурнăçне революцилле улăштарса çĕнетекен эпохăн сăн-сăпатне уççăн палăртса, пурнăçа çирĕппĕн кĕрсе пырать. Шăпах ĕнтĕ пирĕн паянхи кун-çулăмăрта чи кирли, чи хакли — коммунизмла çĕнĕ пурнăç. Çавăнпа та литературăпа искусствăн задачи — обществă пурнăçĕнчи çав çитĕнÿсене тĕрĕс сăнласа кăтартасси, хальхи пурнăç картинисене унăн революцилле аталанăвĕнче тĕрĕс те туллин палăртса тăрасси пулать.

Çав аслă задачăна пурнăçлама чĕнсе каланă май, Коммунистсен партийĕ искусствă çынсене пуринчен малтан пурнăçри ырă тĕслĕхсем тăрăх воспитани пама тивĕçлине асра тытать.

Чăнах та пирĕн вăхăтри геройсен — пысăк та çутă ĕмĕтлĕ çынсен, пирĕнпе пĕр вăхăтра пурăнакан тата пĕрле ĕçлекен геройсен сăнарĕсем халăха, уйрăмах çамрăк ăрава, воспитани парас ĕçре мĕн тери пысăк вырăн йышăннине хак пама та йывăр. Шел, çав геройсем паянхи куна пирĕн литературăра хăйсен тивĕçлĕ вырăнне йышăнайман-ха.

Партин çĕнĕ Программине кĕртнĕ коммунизм тăвакан çыннăн мораль кодексĕ çĕнĕ çынна вĕрентсе ÿстерессишĕн пыракан кĕрешÿре хăватлă хĕç-пăшал пулса тăрать. Литературăпа искусствă, коммунизм тăвакан çыннăн сăнарне тăвас ĕçе активлăн хутшăнса, çак тивĕçлĕ хĕç-пăшалпа туллин усă курмалла.

Этем ырлăхĕ... Ирĕклĕх... Çыннăн пултарулăхне аталантарса чечеклентересси... Ĕлĕк тата халĕ, эпир пурăнакан вăхăтра та, мĕн чухлĕ партисем çак лозунгпа политикă арени çине тухман пулĕ! Анчах Ленин партийĕ çеç, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ кăна çак чаплă сăмахсене хăйсен чăн-чăн пĕлтерĕшне пама пултарчĕ. Коммунистсен партийĕ çеç, совет халăхне кĕрешÿпе çитĕнÿсен паттăр çулĕпе ертсе пырса, коммунизм обществи тумалли аслăран та аслă тата тĕрĕс план туса хатĕрлеме пултарчĕ. Коммунизм обществинче «Пурте этемшĕн, этем ырлăхĕшĕн» текен принцип пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕрсе çитет. Çакăнпа палăрса тăрать те пирĕн партин пĕтĕм ĕçĕн, вăл йышăннă Программăн татăклă та гуманизмлă тĕп шухăшĕ.

Çав тĕп шухăша уçса кăтартасси, коммунизм тăвакан çыннăн чаплă енĕсене витĕмлĕн те илемлĕн сăнласа парасси — пирĕн литературăпа искусствăн пархатарлă задачи. Совет литературипе искусствин гуманизмла чаплă традицийĕсем халĕ çĕнĕ тапхăрта аталанса пыма тивĕçлĕ. Çакăн пек хушать пире пурнăç!

Социализмлă реализмăн литературипе искусствинчи гуманизм — буржуаллă культурă этемĕн рольне пĕчĕклетнине, çынна пĕтерсе хума сĕкĕннине пачах хирĕçле гуманизм. Пирĕн искусствăн чи лайăх произведенийĕсенче Этемĕн мăнаçлă ячĕ татах та чаплăн ÿсет, çав Этемĕн аслăлăхĕпе илемне, унăн ăс-тăнĕпе аллисен иксĕлми вăйне çирĕп шанса тăни хăватлăн янăрать. Çавăнпа ĕнтĕ совет искусствин пĕтĕм тĕнчери авторитечĕ çав тери пысăк. Çак искусствăна çĕр çинчи миллионшар ĕç çыннисем шанчăклă та çывăх тусĕ вырăнне хисеплесе хаклассĕ.

Пирĕн тăшмансем совет литератури пирки тем тĕрлĕ элек сарма тăрăшассĕ, социализмлă реализм литературăшăн «тимĕр хĕскĕч» пулса тăрать, художникăн творчествăллă хăй евĕрлĕхне пĕтерсе пырать тесе ĕнентереме пăхассĕ. Анчах та — кăлăхах! Пирĕн литературăн чаплă атала-

нăвĕ çав ирсĕр элеке пĕтĕмпех хупласа хурать. Совет литературин хăватла вăйĕпе «вăрттанлăхĕсенчен» пĕри — вăл нумай енлĕ те пуян пулнинче, унăн хăюллă новаторлăхĕнче. Çакна валли социализмлă реализм меслечĕ литературă умне сарлака та анлă çул уçса пачĕ.

Ахальтен мар ĕнтĕ партин çĕнĕ Программинче ылтăн саспаллисемпе çапла çырса хунă: «Халăхпа партилĕх принципĕсен никĕсĕ çинче тăракан социализмлă реализм искусствинче пурнăçа илемлĕ сăнласа кăтартас ĕçри хăюллă новаторствă тĕнче культурин пур прогрессивлă традицийĕсемпе усă курнипе тата вĕсене аталантарса пынипе çыхăнса тăрать. Писательсен, художниксен, музыкантсен, театрпа кино деятелĕсен харпăр хăйĕн творчествăлла пуçарулăхне кăтартма, пысăк ăсталăхпа ĕçлеме, творчествă ĕçĕн нумай тĕрлĕ формисемпе, стилĕсемпе тата жанрĕсемпе усă курма питĕ пысăк майсем пулаççĕ», тенĕ.

Коммунистсен партийĕн çĕнĕ Программинче обществăн культурă пурнăçне хăватлăн тата нумай енлĕн аталантарса пымалли, халăха воспитани парас ĕçре литературăпа искусствăн пĕлтерĕшне татах ўстермелли çул-йĕрсене палăртса хунă. «Парти,— тенĕ çĕнĕ Программăра,— литературăна, искусствăна, культурăна аталантарма, кашни çынна харпăр хăй пултарулăхне кăтартмашкăн пур условисем те туса пама, мĕн пур ĕç çыннисене эстетикă енĕпе воспитани пама, халăхăн илемлĕх туйăмĕпе пысăк культурă хăнăхăвĕсене йĕркелесе пыма яланах тăрăшĕ. Илемлĕх ĕçлеве татах та ытларах хавхалантарĕ, пурнăçа хитрелетĕ, этеме ырă туйăмсем парĕ».

Идейăллă содержанипе художествăллă ăсталăх аталанăвĕнче совет литературипе музыки, живопиç, кинематографи, театр, мĕн пур йышши искусствăсем чаплă çитĕнўсем тăвĕç. Халăх театрĕсем, художествăллă пултарулăх, техникăлла изобретательствă тата халăх пултарулăхĕнчи ытти формăсем те вăйлăн аталанса пырĕç. Халăх пултарулăхĕн участникĕсем хушшинчен талантлă писательсем, художниксем, музыкантсемпе артистсем тухĕç.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн çĕнĕ Программинче массăллă художествăллă пултарулăхпа профессиллĕ искусствă çыхăнса тăнă никĕс çинче обществăн художествă пуянлăхĕ аталанса, ўссе пырассине палăртса хăварнă. Малтанах ку питех те чăкăлтăш та кăткăс пек туйăнать. Пĕр енчен, искусствăна аталантарма çынсене ятарласа вĕрентес пулать тата искусствă ăстисен пултарулăхне аталантарас ĕçре вĕсене профессилле воспитани пани кирлĕ. Искусствăн профессилле вучахĕсем, хăйсене евĕр маяксем тата çул кăтартса пыракан çăлтăрсем евĕр, художествăллă пултарулăхри пысăк ăсталăхăн тĕслĕхĕсем пулса тăмалла. Çавăнпа та художествăллă пултарулăха анлăн аталантарса пынипе пĕр вăхăтрах эстетикăлла ĕçе профессионализацилеме тата специализацилеме кирлине те йышанмасăр тăма çук.

Тепĕр енчен, марксизм-ленинизм классикĕсем коммунизм обществинчи ĕçĕн уйрăмлăхĕсем пирки каланине те астуса тăмалла. К. Маркспа Ф. Энгельс уйрăм çынсем кăна хăйсен талантне кăтартма пултарни, çакна халăхсен анлă массисем тума пултарайманни ĕçе пайланинчен килнине кăтартса панă. «Коммунизм обществинче,— тенĕ вĕсем,— живописецсем пулмаççĕ, хайсен нумай енлĕ пурнăçĕпе ĕçĕнче живопиç енĕпе те ĕçлекенсем кăна пулаççĕ». В. И. Ленин та коммунизм обществи çынсем хушшинче ĕçе пайлассине пĕтересси, пур енчен те аталаннă çынсем вĕрентсе хатĕрлесси тата çав çынсем пур ĕçе те тума пултарасси çинчен каланă. Çапла вара, коммунизм вахăтĕнче пур енчен те аталаннă çынсем вĕрентсе хатĕрлеççĕ, çав çынсем, пĕр йышши ĕçĕн специалисчĕсем çеç пулса тăмасăр, пĕр ĕçе тунă хыççăн тепĕр тĕрлĕ ĕç те тума пултараççĕ.

Художествăллă пултарулăх коллективĕсем профессионаллă коллективсемпе тачă çыханса ĕçлени театрсемпе филармонисен репертуарне пуянлатать, студисене çурекенсемшĕн творчествăлла практикă пулса тăрать, вĕсене искусствăн кăткас жанрĕсене алла илме, ăсталăха ўстерме тата кунпа пĕрлех художествăллă пултарулăхăн пĕлтерĕшне хăпартма пулăшать.

Çавнашкал йĕркене пирĕн творчествăлла коллективсен хальхи пурнăçĕнче те курма пулать. Сăмахран, чăвашсен музыкăпа драмă театрĕн сцени çинче лартнă виçĕ оперăра та халăх хорĕнчи ик çĕре яхăн çамрăк хăйсен пултарулăхне лайăх кăтартрĕç. Вĕсем — чăннипех те хастар çынсем: оперăпа балет искусствине чĕререн юратаççĕ, çав вăхăтрах Шупашкарти предприятисенче, стройкăсемпе государствă учрежденийĕсенче вăй хурса ĕçлеççĕ. Ку ĕнтĕ чăнах та питĕ лайăх!

* * *

Культурăн пурлăх никĕсне малалла хăватлăн аталантарас тĕлĕшпе КПСС Программи çак ĕçсене тума палăртать:

— кĕнекесем кăларас ĕçпе пичет ĕçне пур майсемпе те аталантарса пымалла, çавна май полиграфи промышленноçне, хут туса кăларассине вăйлатса пымалла;

— библиотекăсем, лекци залĕсем, вулав залĕсем, театрсем, культурă çурчĕсем, клубсем, кинотеатрсем нумай уçмалла;

— çĕршыва радиофикацилесе çитермелле, телевидени центрĕсем тумалла, промышленноспа ял хуçалăх районĕсене пурне те телевидени передачисем парса тăмалла;

— халăх университечĕсем, театр коллективĕсем тата халăх пултарулăхĕпе ĕçлекен ытти культурă учрежденийĕсем анлăн сарăлмалла;

— ĕçлес текенсемпе пултаруллă çынсем валли пурте ĕçлеме пултаракан наукăпа техника лабораторийĕсем, художествă мастерскойĕсем, киностудисем нумай пулмалла.

Ял культурине майĕпен хула культури шайне çитерес, çĕнĕ районсенче культурăна хăвăрт аталантарса пырас тесе, çĕршыв территорийĕнче культурă учрежденийĕсене пĕр пек вырнаçтарса тухассине пурнăçлаççĕ.

Юлашки çулсенче культурăпа çутĕç учрежденийĕсемпе организацийĕсен ĕçĕ хăйсен содержанийĕпе те, формипе те нумай енлĕ пулса пыма тытăнчĕ. Çавăнпа та халех ĕнтĕ çак ĕçе ытти çынсене хутшăнтармасăр, ĕç çыннисемпе пĕрле ертсе пымасăр, штатра тăракан çынсен вăйĕпе кăна ăнăçлă пурнăçласа пыма çук. Ĕç çыннисем пуçарнипе культурă университечĕсем, халăх пултарулăх театрĕсем, оркестрĕсем, ансамблĕсем, обществăллă профессисен университечĕсемпе шкулĕсем, библиотекăсем, кино ĕçне юратакансен студийĕсем тата ыттисем те ытларах ĕçлеме пуçларĕç. Çапла вара, культурă учрежденийĕсен ĕçне çынсене анлăн явăçтарса пыни вĕсене тĕрлĕ енлĕ пĕлӳсем илме, ĕç-хĕл шайне ӳстерсе пыма пулăшать.

В. И. Ленин библиотекăсем кашни кун, праçниксемпе вырсарникунсенче те, ирхине 8 сехетрен пуçласа каçхине 11 сехетчен ĕçленине курасшăн пулнă. Пирĕн çулпуçăмăрăн çак ĕмĕчĕ халĕ пурнăçланса пырать. Библиотекăсен ĕçне тума халăха хутшăнтарнипе, халĕ нумай библиотекăсем канмалли кунсемсĕр тата ытларах вăхăт ĕçлеме пуçларĕç. Çакă ĕç çыннисене хăйсемшĕн пушă вăхăтсенче кирек хăçан та кĕнеке-журналсем илсе вулама май парать.

Культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕсене халăха анлăн явăçтарнипе тата ĕç çыннисем ертсе пынипе аталантарасси КПСС Программинченех тухса тăрать. Унта, паллă ĕнтĕ, культурă учрежденийĕсене ертсе пырас ĕçе обществăлла организацисене анлăн хутшăнтарма, клубсемпе театрсене тата ытти культурăпа çутĕç учрежденийĕсене сывăх çулсенчех обществăлла организацисен аллине пама задачă лартнă.

* * *

Коммунизм тăвас ĕç анлăн сарални тата коммунизм идеологийĕ çĕнĕ çĕнтерӳсем туни ССР Союзĕнчи халăхсен содержанийĕ енчен социализмлă, форми енчен нациллĕ культурине пуянлатать. Нацисемпе халăхсен идейăллă пĕрлĕхĕ вăйланать, вĕсен культурисем ытларах çывăхланаççĕ. Социализмлă нацисен аталанăвĕн историри опычĕ çакна кăтартса парать: нациллĕ формăсем ним улшăнмасăр хытса лармаççĕ, вĕсем улшăнаççĕ тата пĕр-пĕринпе çывăхланаççĕ, кивелнинчен, çĕнĕ пурнăç условийĕсене хирĕç пыраканнинчен тасалаççĕ. Мĕн пур совет нацийĕсен пĕрлĕхлĕ культури — интернационализмлă культурă аталанать. Кашни халăх совет литературипе искусствин ылтăн фондне хăйĕн чи лайăх произведенийĕсене кĕртсе хăварать. Кашни нацин культури интернационализмлă произведенисемпе ытларах та ытларах пуянланса пырать.

Çавна май ССР Союзĕнчи халăхсен культурисен социализмлă содержанине аталантарассине тĕп вырăна хурса, парти вĕсене малалла та пĕрпĕрне пуянлатма тата пĕр-пĕринпе çывăхланма пулăшса пырĕ, вĕсен интернационализмлă никĕсне çирĕплетме, çапла майпа коммунизм обществинчи пĕтĕм этемлĕхĕн пулас вăхăтри пĕр-пĕтĕм культурине ӳссе йĕркеленме пулăшса пырĕ. Халăхсем пĕр-пĕрин культурине пуянлатса пырасси социализмлă нацисем туслăн тата тăванлăн килĕштерсе пурăннине палăртса тăракан паха енĕсенчен пĕри пулать. Çакнашкал аталану çулĕ çинче вырăс культурин — тĕнчери чи гуманизмлă та малта пыракан культурăн пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк. Вăл хăйĕн витĕмĕпе ытти халăхсен литературипе искусствине малалла чечеклентерсе пыма, идейăллă пĕрлĕхе вăйлатма пулăшса тăрать.

Февраль уйăхĕнче Чăваш республикинче вырăс искусствипе литературин каçĕсем пулса иртрĕç. Çак каçсем чăваш халăхĕшĕн чăннипех те вырăс культурин пысăк та чаплă уявĕ, туслăхпа тăванлăх уявĕ пулса тăчĕç. Чăваш республикинчи ĕç çыннисене пĕтĕм çĕршывĕпе чапа тухнă «Березка» ансамблĕн коллективĕ, совет сценин чаплă мастерĕсем — СССР халăх артистки К. Еланская, РСФСР халăх артисчĕсем В. Максимов, С. Балашов, РСФСР тава тивĕçлĕ артистки Н. Покровская, çĕршывра лайăх пĕлекен пĕр тăван Федоровăсем, Борис Брунов тата Российă Федерацийĕнчи ытти паллă артистсем, писательсем, композиторсем, художниксем хăйсен пултарулăхĕсемпе çывăх паллаштарчĕç.

ССР Союзĕнчи халăхсем пĕр-пĕринпе çавнашкал тачă та туслă çыхăнусем тытни вĕсене пĕрпĕринпе çывăхланма, пĕр-пĕрин культурине пуянлатса пыма пулăшать. Кашни халăхăн прогрессивлă традицийĕсене ырласа, мĕн пур совет çыннисене çав традицисемпе паллаштарса пырса, Коммунистсен партийĕ мĕн пур халăхсемшĕн пĕр пек, çĕнĕ традицисене — коммунизм тăвакансен революциллĕ традицийĕсене пур майсемпе те аталантарса пырĕ. Культурăллă строительствăна туллин пурнăçа кĕртсе пыни пурлăх тата ăс-тăн культуринче чăн-чăн пуянлăхсем туса хатĕрлеме, çĕнĕ, коммунизмла шухăш-кăмăллă çынсем ӳстерессине вăйлатма, ĕç çыннисен творчествăлла активлăхне нихçанхинчен те çӳлти пусăма хăпартма пулăшĕ.

Михаил СИРОТКИН

# „ĔМĔР САККИ САРЛАКА" РОМАН ПИРКИ

Халăхăн иртнĕ пурнăçне сăнласа паракан повеçсемпе романсен шучĕ сахал тесе пăшăрханма пирĕн халĕ сăлтав çук ĕнтĕ. Ĕçĕ, паллах, шутĕнче мар—пахалăхĕнче. Авалхипе ĕлĕкхине асăнса çырнисем çулсерен, кĕнеке хыççăн кĕнеке тухса пыраççĕ. Сăмах ăстисен ытамне XVI ĕмĕртен тытăнса XX ĕмĕр пуçламăшне çитиччен халăх кун-çулĕнчи пур паллă тапхăрсем те кĕнĕ темелле. Пуçĕпех хускатман е çĕнĕлле тĕсесе-сăнласа пама тытăнман вырăнсем юлман тесен те юрать.




Хальхи илемлĕ литературăри иртни çинчен çырнин вырăнĕ çинчен сăмах тапратсан, хăй халлĕнех тенĕ пек, хăш-пĕр вулакансем умне çакăн пек иккĕлентерекен ыйту тухса тăрать. Коммунизм обществине çывăхартас мăнаçлă ĕмĕте тытнă, ăна пурнăçлама пĕтĕм вăйне-халне пăхăнтарнă совет халăхĕн хĕрӳ ĕçĕ-хĕлĕпе тулнă тапхăрта пирĕн писательсем иртнĕ саманасем çинчен çав териех хавхаланса çырни кирлех-ши?

Чăваш литературишĕн вăл паян кăна хусканнă ыйту мар. Ăна, акă, вăтăрмĕш çулсен пуçламăшĕнче пит сӳтсе яватчĕç. Вулакансем те, критиксем те хĕрсе калаçатчĕç. Ун пирки С. Элкер, хăйĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэмине пуçласа уйрăм кĕнекен кăларнă май, çапла каласа çырнăччĕ: «Социализм строительстви çултан çул çĕнĕ çитĕнӳсем, пысăкран пысăк çĕнтерӳсем тăвать. Совет ĕç халăхĕ, рабочи класпа унăн партийĕ пуçарса пынипе, тĕрлĕрен йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, çĕнĕ тĕнче никĕсне çирĕплетет. Паллах, çакăн пек хĕрӳллĕ саманара поэтсемпе писательсен те куç умĕнче пулакан çитĕнӳсемпе çĕнтерӳсем çинчен çутатса пымалла. Хальхи вăхăтра ĕлĕкхи хĕн-хурлă пурнăç çинчен историлле поэмăсем çырса ларни килĕшмест те пек.— Мĕнле усă кӳме пултарĕ чăваш литературине хальхи вăхăтра ĕлĕкхи пурнăç çинчен çырса пани? Пире хальхи çинчен тата çитес çутă пурнăç çинчен çырни кирлĕ,— тейĕç хăш-пĕрисем. Ун пирки эпĕ çакна калатăп: социализмла пурнăç тунă чухнехи хĕрӳллĕ тапхăрта та ĕлĕкхи классен кĕрешĕвĕ çинчен пĕлни, пуянсем чухăнсене епле тискеррĕн пусмăрласа пурăнни çинчен пĕлсе тăни — пире пĕр усăран пуçне нимĕнле сиен те кӳрес çук. Ĕмĕрсем тăршшĕнче пурнăç мĕнле улшăннине пĕлес тесен тата вăл мĕн чухлĕ малалла кайнине курас тесен, иртнипе хальхине илсе пахаламалла...» (Элкер. «Хĕн-хур айĕнче...» Автортан. Мускав, 1931 ç.).

Халăх поэчĕн вăтăр çул ĕлĕкрех каланă сăмахĕсемпе паян кун та килĕшсе, эпир çакна каласа хăварасшăн. Пурăнан саманан тĕп ыйтăвĕсене хускатасси-тапратасси, унăн таппипе пурăнасси, унăн сăнсăпачĕн хăйне евĕрлĕхне кăтартса парасси, халăха ялан та малалла пăхса ĕçлеме-пурăнма хавхалантарса пырасси — литературăн чи çывăх тивĕçĕ, тĕллевĕ. Кирек мĕнле литературă та паянхи вăхăта çывăххипе, пурăнса ирттерен саманан паттăрĕсене туллин сăнласа панипе, халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнса тăнипе вăйлă. Çавăнта ун чăн-чăн илемĕн тупсăмĕ. Анчах хальхи вăхăт, хальхи самана тенине эпир пĕр паянхин виçипе кăна виçме пултараймастпăр. Вăл пит ансăр пулнă пулĕччĕ. Хальхи вăхăт тени, пирĕн ăнланăвра, паянхи те, ĕнерхи те, ыранхи те. Пĕри тепĕрипе тачă çыхăнса тăраççĕ. Ĕнерхине асра тытмасăр паянхин ăнаçне татса пама çук, паянхине хисепе илмесĕр ыран пулассине тавçăрса илме кансĕр.

Сăмахне эпир иртни çинчен çырни кирли е кирлĕ марри пирки тапратнăччĕ. Ун çинчен хамăртан урăх сăмах хушмăпăр. Пирĕн вăхăтри паллă вырăс поэтне Н. Асеева, В. Маяковскийĕн çывăх тусĕсенчен пĕри пулнă çынна, сăмах парăпăр. Вăл çапла калать: «Могут сказать: а какое нам дело до этих минувших дней? А такое, что если не знать о них, то не знать и о сегодняшних днях ничего, кроме общих мест» («Огонёк» журнал, 52 №, 1960 ç.) Пит вирлĕ каланă. Кирлĕ те, вырăнлă та! Çакна çеç хушса хурасшăн: иртни хальхипе пулассине хупласа ан хутăр. Иртни çинчен калакан кĕнеке пурнăç хуçисем хăйсем пулса тăнă совет вулаканĕсемшĕн чуна кăтăклантармалли, тунсăх килсен йăпанмалли кăсăк истори мар, чăннипех те тарăн шухăша яракан, чĕрене хумхантаракан, ăс паракан кĕнеке пултăр. Пире писатель иртнĕ пурнăçăн тĕшшинчен ытларах кипеккине кăтартса пама пăхать пулсан, ун пек кĕнекен пархатарĕ пысăк пулассине шансах каяс килмест. Иртни иртниех ĕнтĕ вăл. Унта темĕн те пулнă, темĕн те пулма пултарнă. Çав темĕн те пĕртен пире мĕн пĕлме кирлине, пирĕн ăс-тăнпа кăмă-

ла усăллăн витерме пултармаллине суйласа илсе пĕтĕмлетсе парасси çăмăл ĕç мар. Хĕрӳ кăмăлĕ те, пĕлĕвĕ те, ăсталăхĕ те кирлĕ. Ăсталăх тенĕрен, сăмах май, эпир çав хисепех писателĕн виçе туйăмне те кĕртсе хăварасшăн. Халăхăн чăн-чăн историйĕпе çыхăнса тăракан илемлĕ литературă произведенинче автор чăнлăх виçине çирĕп тытса пыни кĕретех кирлĕ.

Илемлĕ сăмах мелĕсемпе халăхăн иртнĕ пурнăçне витĕмлĕн сăнласа парас, çапла туса хальхи самана çыннисене çĕннишĕн тата хастарлăрах тăрăшма хавхалантарас ĕмĕте тытса ĕçлекен писательсен шутне Мранька Микихверĕ те кĕрет. Нумай пулмасть эпир ăна ытларах унăн пьесисем тăрăх пĕлеттĕмĕр. Юлашки виçĕ çул хушшинче вăл умлă-хыçлах прозăпа çырнă «Ĕмĕр сакки сарлака» романăн виçĕ кĕнекине кăларчĕ. Романăн юлашки кĕнеки «виççĕмĕш кĕнеке вĕçĕ» сăмахсемпе пĕтет. Ку ĕнтĕ çак хулăн кĕнекеллĕ романа автор малалла та çырма ĕмĕтленнине пĕлтерет темелле.

Российăн çĕршывĕнчи пĕрремĕш революципе çыхăнса тăнă событисем, халăхăн çав тапхăрти пурнăçĕпе кĕрешĕвĕ чылай писательсене туртать. Мранька та хăй романĕн (халлĕхе тухса çитнĕ кĕнекисен) никĕсне XIX ĕмĕрĕн вĕçĕпе XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи пурнăç пулăмĕсене хывнă. Чăн ĕнтĕ, асăннă тапхăр чăваш халăхĕн кун-çулĕнче те паллă тапхăр пулнă. Вăл пĕтĕм çĕршыва кисретнĕ революцилле событисемпе, халăх пурнăçĕнчи драмăлла пулăмсемпе, халăх ăс-тăнĕпе тавра курăмĕнчи пысăк улшăнусемпе пуян.

Тĕпрен илсен, çĕр ĕçĕпе пурăннă чăваш çĕршывĕнче те çак тапхăрта кивĕ, ĕлĕкрен хăнăхнă пурнăç йĕрки-йăлисем хăвăрт йăшса пыма тытăнаççĕ. Укçа-тенкĕ тĕнчи вăй илет. «Укçа чул касать, укçа пуç та касать». Халăх вăйĕ-тарĕпе кӳпĕнсе пыракан ял пуянĕ-куштанĕсем ялшăн патша тӳре-шаринчен кая мар хăрушă тăшмансем пулса тăраççĕ. Пĕр кавара кĕнĕ аçтахалла, вĕсем хура халăха икĕ енчен пăвма тытăнаççĕ. Хăврăлса, хевтесĕрленсе пыракан хуçалăх ял чухăнĕсене тăрантарайми пулать. Хырçи-марçи, парăмĕ-сарăмĕ ӳснĕçем ӳсет. Ял халăхĕ калама çук хăвăрт сийленсе пырать. Выçăпа касăлса пурăнакан, тăранмалăх ĕç тупайман хресченсем йышлансах пыраççĕ. Ял хускалать. Ĕç шыраса вăл фабрикă-заводсене, рудниксемпе шахтăсене туртăнать, вăрман касса сулăсем юхтарнă çĕре ĕçлеме кĕрĕшет, хуласемпе пристаньсенчи хура ĕçе каять, улпут-хуçасем патне тарçа кĕрет.

Урăх халăх ĕç çыннисемпе анлăн хутшăнса пĕрле ĕçлесе пурăнни, вырăс рабочийĕсен революцилле хастар кĕрешĕвĕ хавхалантарни, халăха ăнăççăр яппун вăрси асап кӳни тата ытти нумай сăлтавсем чăваш ĕç çыннисен сĕмне те уçаççĕ. Вĕсем те пусмăр йĕркипе пусмăрçăсене хирĕç кĕрешĕве çĕкленеççĕ. Çав кĕрешĕвĕн мăнаçлăхĕпе драматизмĕ çинчен каласа пани «Ĕмĕр сакки сарлака» романра тĕп вырăнта тăрать те ĕнтĕ.

Романри кĕрешӳ-тытăçу ĕлĕкхи ял-йыш пурнăçĕнче тăтăшах тĕл пулкаланă пăтăрмахран тытăнса каять. Çтаппанпа арăмĕ çимĕкрен, вилнĕ ачи-пăчисене асăнса, киле таврăнаççĕ. Ялта хавха пырать. Ял пуянĕ Янаш Миххи, ӳсĕрскер, йăйăрне утланса, урам тăрăх ĕрĕхтерсе çӳрет. Тĕл пулнă çынсене, камне-мĕнне уямасăрах, тапта-тапта каять. Урамри ачи-пăчи, çитĕннисем чăл-пар тарса пытанаççĕ. Хирĕç тăрса пăх-ха! Ял пуянĕ-çке-ха вăл!.. Пур кантур таврашĕсем, сучĕ, полици — пурте унпа туслă-юлташлă. Янтă ĕçкĕ-çикĕ, укçа чӳкĕ мĕнле тӳре-шаран кăмăлне пуян енне çавăраймĕ? Иртĕхсе кайнă Михха Çтаппан çине пырса тăрăнать. Лешĕ хăрамасть. Пăрăнмасть, тарса та пытанмасть. Тĕреклĕ те вăйлăскер, пуянăн йăйăрне вăл пуçĕнчен чышкипе çапса ӳкерет. Михха ку ĕçе шарламасăр ирттерсе ярать, çиллине пытарать. Анчах хура юнлă пуян çак кунран тытăнса Çтаппана яланлăха вĕчĕ тытма пуçлать. Унăн пуçĕнче ăна пуç çапман, унран килмен, хăйне тĕллĕнех йӳнеççе пурăнакан Çтаппана, сисмесле, ерипен-ерипен тĕп туса хурас, кĕлмĕçе кăларас шухăш çуралать. Тапранса каяççĕ вара Çтаппан инкекĕ-синкекĕсем. Сасартăк лаши çухалать. Ăна Михха хăйĕн вăрă-хурахла тарçине, Хĕлипе, вăрлаттарса яма хушнă иккен. Лашасăр тăрса юлнă Çтаппан хавшаса ӳкменнине кура, Михха çав Хĕлипех пысăк шар курнă çыннăн ĕнипе пăрушне вĕлерттерет. Инкеке лекнĕ Çтаппана хĕрхененçи пулса, Михха ăна хăйĕн «ырă кăмăлĕнчен» çĕнĕ лаша туянма укçа парать. Хăех çав лашана тепĕр хут вăрлаттарса ярать. Унтан земски начальник патне чĕнтерсе, хăйне сăтăр кӳнишĕн тесе, Çтаппанăн икĕ ят çĕрне туртса илет, хуралтисене сӳттерет. Çак хура тӳсеймесĕр Çтаппан арăмĕ Татьяна инке вăхăтсăр çĕре кĕрет. Михха Çтаппана çапса хуçрĕ. Урçана тăрса юлнă мĕскĕнĕн пĕртен-пĕр шанчăкĕ — Микула ятлă ывăлĕ тăрса юлать. Вăл Атăл тăрăх çӳрекен баржă çинче матруçра ĕçлет-мĕн.

Çтаппанпа Михха хушшинчи тытăçу-хирĕçӳ кунпа пĕтмест-ха. Вăл амалансах пырать. Пуйнăçем пуйса пыракан Михха Ĕнелпе Пиш ушкăнне кĕрекен ялсен тавлашуллă çĕрне туртса илме ĕмĕт тытать. Старăстăсене, çĕр уполномоченнăйĕсене укçа парса, пая кĕртме сăмах парса, ваккатсем тытса, суд тавраш ĕсене хăйне майлă çавăрса, çак непĕсе пĕлмен пуян икĕ ял ушкăнне хирĕçтерсе, харкаштарса ярать. Пĕр-пĕринпе Миххаран кивçен илнĕ укçапа сутлашса халăхăн тинки тухать. Çапла май пĕтĕм тавлашуллă çĕр йӳнĕ хакпах пуян аллине тара каять. Халăх хӳттине Микула тăрать. Вăл çĕр уполномоченнăйĕсен пухăвĕнче, Миххан чеелĕхне тăрă шыв çине кăларса, Ĕнелсемпе Пишсен тавлă çĕре çурмалла пайласа çураçма кирли çинчен калать. Анчах çамрăк Микулан ăслă канашне Михха майлă карма çăварсемпе куштансем хисепе хумаççĕ. Микулан тусĕ. вырăс рабочийĕ, Кузнецов калани чăн иккен. «Сирĕн утрава Михха туртса илме шут тытнă пулсан, туртса илетех. Халĕ тĕнче çавăн çинче тытăнса тăрать»,— тет вăл.

Михха çилли ĕнтĕ Микула çине куçать. Тилĕрсе кайнă пуян, хăй мунчине хăех вут тĕрттерсе. Микулана вут кăларнă тесе айăплать, ăна вутта пăрахса çунтарма халăха вăскăртать. Микулан вара хăйĕн ашшĕне, савнă арăмне, пĕчĕк ачине пăрахсах вăхăтлăха ялтан тухса кайма тивет.

Çапла Миххапа Çтаппан хушшинчи хирĕçӳ ӳссех пырать. Вăл ĕнтĕ пайăр хирĕçӳ картинчен тухса икĕ хире-хирĕç тăракан вăйсен кĕрешĕвĕпе пĕтĕçсе каять. Пĕр енче кунта Миххапа унран вакăрах пуянсем, куштансем, вăрă-хурахсем. Тĕрлĕ тӳре-шара, Бернадский йышши халăха выльăх вырăнне хуракан земски начальниксем, исправниксем; саламатпа, тĕрмепе, катăркăпа халăхăн сехрине хăпăтакан Огуречниковпа Мошков йышши стăнавайсемпе уретниксем: Платтунпа Касмухха евĕрлĕ «ятлă» сынсем; тамăкпа тата турă ылханĕпе хăратакан пуп таврашĕ; укçа енчĕкне турă вырăнне хуракан Лаврский йышши ваккатсем т. ыт. те. Тепĕр енче — пусмăр йĕркипе пусмăрçăсене хирĕç çĕкленнĕ кĕрешӳре вăй илсе, ӳснĕçем ӳссе пыракан ĕç сынниссен çарĕ: Микула, Çтаппан, Васли, Анук, Кĕтерук. Прахăр. Натюш, Уçка, Марье, вырăс тимĕрçи Саначин, тутар çынни — вăрман хуралçи Ганнният, мари çыннисемпе вырăс хресченĕсем, ялти ĕç çыннисене ăс парса,

кĕрешӳре ҫул кăтартса пыракан вырăс революционерĕ Кузнецов тата ыттисем.

Микула ялтан ҫухалнине пула Миххана пĕр авăка канăҫ вăхăт килсе тухать. Унăн хурахла ĕҫĕсене питлекен, халăх умĕнче тăрă шыв ҫине кăларакан ҫук. Хăйне парăннă огуречниковсемпе мошковсен саламачĕсемпе хурăн хуллисен хӳттинче вăл хăйĕн пуянлăхне ӳстерсех пырать: вăрман кастарать, сулă юхтарать, хресченсенчен парăмсемшĕн туртса илнĕ ана-ҫаран ҫинче, ултавпа ҫавăрса илнĕ утрав ҫинче тара тытнă ҫынсен вăйĕпе хисепсĕр тыра-пулă, утă-улăм туса илет, вĕсене сутса тупăш тăвать. Вăй илнĕ Михха, юлашкинчен, Жомини баронăн именине сутăн илме те хăват ҫитерет. Вăл ĕнтĕ, вăрман ĕҫĕпе пуйса ял кулакĕнчен пысăк хуҫана тухнăскер, баронран кая мар ҫĕр улпучĕ хăй пулса тăрать.

Ҫав темĕн Ҫтаппан йышĕн пурнăҫĕ тĕкĕнсех пырать. Ывăлĕ ҫук. Алри ачапа юлнă Анук кинĕшĕн кӳрше татăк ҫăкăршăн кивҫене кайма тивет. Аптраса ҫитнĕ Ҫтаппан ҫур аки ҫывхарнă май, вăрлăхлăх та пулин укҫа туса килес тесе, Хусана ĕҫ шырама тухса каять, грузчике кĕрет. Пытанса ҫӳрекен ывăлĕ те Хусантах-мĕн. Вăл хăйĕн вырăс тусĕ Кузнецов революционер пулăшнипе суя паспорт туянса хăма ҫуракан савăта ĕҫе вырнаҫать. Хулара пурăнакан Микула тăтăшах Кузнецов патне ҫӳрет, революци идейисемпе тĕплĕн паллашать, вулать, вĕренет, ăс пухать, халăх ирĕкĕшĕн пĕлсе кĕрешме хатĕрленет. Ҫапла ҫулталăка яхăн хулара пурăннă хыҫҫăн Микула революци ĕҫне сарма яла таврăнать. Ҫтаппаншăн та пристаньри рабочисем хушшинче ĕҫлесе пурăнни ахаль иртмест. Вăл та ĕнтĕ хăй йĕри-таврашĕнчи хура-шуррăн сăлтавĕпе тупсăмне анлăрах куракан, тĕплĕрех ăнланакан ҫын пулса тăрать. Микула яла таврăннă хыҫҫăн Михха кĕртне хирĕҫ амаланма тытăннă кĕрешӳ вăй илет, хĕрнĕҫем хĕрсе пыма тытăнать. Пысăк ĕҫсем пуҫланса каяҫҫĕ. Виҫĕ-тăватă ҫул хушшинче Микула тавра ялти революционерсен ҫирĕп чăмăрĕ йĕркеленсе ҫитет. Ҫав чăмăрти ҫынсем халăх хушшинче куллен-кун ĕҫлесе пусмăрҫăсене хирĕҫ кар тăрса кĕрешме вĕрентсе пыраҫҫĕ.

Михха халăха ҫаратмаллипех ҫаратма тытăнни, хăй патĕнче ĕҫлекен бурлаксене, рабочисене ним намăсне пĕлмесĕр куҫăнах улталани пурне те тарăхтарса ҫитерет. Михха рейдĕнче ĕҫлекен икĕ пин бурлак, Микула юлташĕ Ваҫли ертсе пынипе, бастовкă пуҫласа яраҫҫĕ. Ĕҫлеме пăрахаҫҫĕ. Хуҫа умне хăйсене тивĕҫтерекен требованисем тăратаҫҫĕ. Ултавпа тытса юлнă пиллĕк пин тенке тавăрса пама хистеҫҫĕ. Вĕсемпе пĕр шухăшлă пулса, Миххашăн ĕҫлекен хăма ҫуракан савăтри рабочисем те бастовкă тăваҫҫĕ. Унтан Михха утине ҫулакансем, тыррине выракансем ĕҫлеме пăрахаҫҫĕ. Вĕсем те хăйсене тивĕҫтерекен условисем ҫинчен ĕлĕкрех Михха патĕнче тарҫăра ĕҫленĕ, халĕ Микула ушкăнĕнчи хастар Кĕтерук урлă хăюллăнах каласа параҫҫĕ. Таврари халăхшăн хăй турă та патша пулса тăнă Михха тинех халăх тыткăнне лекнине тавҫăрса илет.

Патша тӳре-шарипе улпут-хуҫасене хирĕҫ ҫапăҫăва ҫĕкленнĕ чăваш ĕҫ ҫыннисем майлă пулса, «Шупашкарти хăма ҫуракан савăтри рабочисем те ĕҫе пăрахнă», Атăлкасси ҫывăхĕнчи салари вырăс хресченĕсем те, Атăл урлă чăвашсемпе кӳршĕлле пурăнакан мари хресченĕсем те чăвашсем мĕн ыйтнине ырлаҫҫĕ, вĕсемпе пĕр кăмăллă пулса тăраҫҫĕ, май ҫитнĕ таран вĕсене кĕрешӳре пулăшса пыраҫҫĕ.

Сехри хăпса тухнă патша йĕркин сыхлавҫисем, стражниксемпе Мошков уретникрен пуҫласа Огуречников стăнавая, исправнике, жандармери тытăмĕн полковникне, кĕпĕрнатăра ҫити, хыпăнса ӳксех, «пăлхавҫăсене» лăплантарма пикенеҫҫĕ. Революционерсен тĕввине, Энĕшкассине, тустарма малтан Огуречников стăнавай, полицейскисене ертсе, хăй пырса кĕрет, халăха хĕнеме, «пăлхавҫăсен» пурлăхне, выльăх-чĕрлĕхне туртса илме хушать. Анчах ҫийĕнчех яла чупса ҫитнĕ Ваҫлипе бурлаксем ăна хăйĕн ирсĕр ĕҫне тума памаҫҫĕ. Стăнавайпа полицейскисене хăваласа кăларса яраҫҫĕ. Стăнавая пулăшма исправник казаксене ертсе килет. Анчах казаксем те халăха пусараймаҫҫĕ. Пăлханса кайнă ҫынсем вĕсене хирĕҫ кам пăшалпа, кам ҫурла-ҫавапа, бурлакĕсем пакурпа тăраҫҫĕ.

Капла май килменнине кура, полици ҫыннисем халăха ертсе пыракансене пĕрерĕн-пĕрерĕн тытса илме ăс ҫитереҫҫĕ. Сутăнчăк упăшкине пула, Кĕтерук Мошков уретник пăшалĕнчен вилет, Микула арăмне, Анука, вăл халăха кĕрешӳре ертсе пыраканнисенчен пĕри пулнине пĕлсе ҫитсен, тытса арестлеҫҫĕ, Хусан тĕрмине ăсатаҫҫĕ. Ҫтаппан та, казаксен аллине ăнсăртран лексе, сарăмсăр вилет. Анчах пĕр хĕрсе кайнă халăха хăратма хĕн. Вăл хăйĕн куҫа-куҫăн хирĕҫ тăракан тăшманĕсене ҫеҫ мар, халăх ĕҫне сутса тӳре-шара умĕнче «ырра» тухма ĕмĕтленекен сутăнчăксене те шеллемест. Ҫапла ҫителĕклĕ пурнăҫпа пурăнма тытăннă хыҫҫăн халăх ĕҫĕнчен пăрăнса, хăйĕн ĕлĕкхи тусĕсене — Микулана, Анука, Ҫтаппана — полицие сутса хӳтĕре тăрса юлма шут тытнă Максăма тăван ывăлĕ, Ваҫли, халăхăн хĕрхенӳсĕр сучĕ умне кăларса тăратать. Арăмне эрехле те укҫалла полици аллине тыттарнă Якур йытă вилĕмĕпе вилет. Ĕмĕрне Миххана халăха ҫаратма-пусмăрлама пулăшса тăнă вăрă-хурах Хĕлип, халăх судĕнчен хăраса, хăйне хăй вĕлерет. Ҫиллине шăнăрайман халăх курайман Миххан именине вут тĕртет. Михха кил-йышĕн, исправникĕн, стăнавайăн, халăх аллинчен куҫа курăнса килекен вилĕмрен ҫăлăнас тесе, пăрахут ҫине ларса, Хусана тухса тарма тивет.

Анука тĕрмере тем тĕрлĕ асаплантарса, жандармери, полици, следовательсем Ĕнел таврашĕнчи революционерсен ушкăнĕнчи ҫынсен ячĕсене, вĕсем ăҫтине, вĕсен ĕҫĕсене йĕрлесе пĕлесшĕн. Анчах ҫирĕп чунлă революционеркă хăй ушкăнĕн вăрттăнлăхне уҫмасть. Анук асапĕсем ҫинчен пĕлнĕ хула ĕҫ ҫыннийĕсем протестлеме тытăнаҫҫĕ. Унта та, кунта та бастовкăсемпе стачкăсем ҫĕкленеҫҫĕ. Хăраса ӳкнĕ кĕпĕрнатăр Анука ӳкĕте кĕртме тĕрме больницине хăй пырать.

Ҫав самантра яла йышлăн пырса тулнă казаксем, тупăсемпе хĕҫ-пăшалланнă карательсем, ҫĕнĕрен вăй пухса, пăлханса кайнă ялсенче «йĕрке» кӳме хатĕрленеҫҫĕ. Вĕсем ирĕкшĕн тапраннă ҫапăҫура вилнĕ ҫынсене пытарма пухăннă Микулапа унăн тусĕсене, халăха хупăрласа пыраҫҫĕ. Халăха ҫăлăнма май парас тесе, Микула Саначин дружинине тата Ваҫлее карательсене тытса чарма хушать. Ваҫли ут утланса ҫар ҫыннисене хирĕҫ каять. Вăхăтлăха вĕсене чарать. Ултава сиссе, лешсем пеме тытăнаҫҫĕ. Вилесле суранланнă Ваҫлей тăшмансен ункинчен вĕҫерĕнет. Ҫакăнпа виҫҫĕмĕш кĕнеке пĕтет.

Эпир виҫĕ хулăн кĕнекен фабулине чылаях тĕплĕн каласа тухрăмăр, мĕншĕн тесен унсăрăн нумай эпизодсемпе тата персонажсемпе тулнă романăн пĕтĕмĕшле тытăмне те, автор шухăш ҫулĕ-йĕрĕн юхăмне те ăнкарса илме йывăртарах.

Ĕлĕкхи ял пурнăҫне, унăн сăн-сăпатне, тĕксĕм енĕсемпе ҫутă енĕсене, ял ҫыннисен ĕҫне-хĕлне, хуйхи-суйхине, шухăшĕ-ĕмĕчĕсене, йăли-йĕркисене, тĕрлĕ сийсем хушшинчи лару-тăрăва писатель аван пĕлет. Сăнласа пама тĕл тунă саманан хăйне евĕрлĕхĕпе тĕп паллисене те вăл ҫителĕклех уйăрса

илме пултарнă. Ĕçсемпе событисем Атăл тăрăхĕнчи ялсемпе хуласенче, пуринчен ытларах Энĕш шывĕ тăрăхĕнчи вырăнта, иртнĕ ĕмĕр вĕçĕпе çак ĕмĕр пуçламăшĕнче пулса иртнине эпир романра кăтартса панă ял-хула, хир-варман, шыв-шур ячĕсенчен те сăнласа панă, пĕтĕм çĕршыв пурнăçĕпе çыхăнса тăнă событисемпе пулăмсенчен те куратпăр: Варасăр, Вăлпуç, Минкĕш, Тĕмшер, Аманик, Пакăш, Кармăш, Шупашкар, Хусан, 1904 çулхи Российăпа Япони хушшинчи вăрçăпа çыхăннă эпизодсем, 1905 çулхи Питĕр хулинчи юнлă вырсарникун, 1905—1906 çулсенчи чăваш çĕршывĕнче пулса иртнĕ пăлханусем т. ыт. те.

Паллах, илемлĕ литературă произведенийĕнче кăтартса панă саманан хăйне евĕрлĕхне, унăн сăнсăпатне (вăл ятарласа çырнă историлле повеç е роман мар пулсан) чи малтан ятсемпе датăсенче мар, произведенире ӳкерсе панă çынсен сăнарĕсенче — вĕсен тавра курăмĕн, кăмăл туртăмĕн, шухăш-ĕмĕчĕн, йăли-сăлайĕн хăйне евĕрлĕхĕпе саманана кĕвĕллĕ типлăхĕнче — шырамалла. «Емĕр сакки сарлака»—унта чăн-чăн пурнăçра пулса иртнĕ событисене, чăннипех пулнă, пурăннă çынсен ячĕсене асăннă пулин те — историлле роман мар. Ăна çав жанр виçипе виçме те кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен историлле персонажсем роман кумминчи тĕп вырăнта тăракан çынсем мар, ытти геройсен шăпине татса парас ĕçре те вĕсем пысăк вырăн йышăнса тăмаççĕ. Тĕп вырăна кунта писатель хăй хайласа, хăех чун кĕртнĕ сăнарсем йышăнаççĕ. Çавсен урлă самана конфликчĕсене уçса панă. Вĕсен прототипĕсем чăннипех пурăннă çынсем пулса тăнитăманни пирки сăмах вакламăпăр, вăл — писателĕн ĕçĕ, вулакансем тивме юраман вăрттăнлăхĕ. Çак сăлтавсене пула, писатель романра каласа панисем историри фактсемпе пур чухне те пĕр карта тĕрĕстĕкел лармаççĕ тесе, ытлашши тиркешмех те кирлĕ мар.

«Емĕр сакки сарлака» хăйĕн тĕп жанр уйрăмлăхĕсемпе — социалла роман. Икĕ социалла вăй хирĕçĕвĕн-кĕрешĕвĕн хăвачĕ романри пĕтĕм çынсен пурнăçне, ĕçне-хĕлне витерсе тăрать, шăпине татса парать. Пĕр енче, самани улшăннă май, шăмă шăл вырăнне тимĕр шăлсем лартнă миххасем. Вĕсем ĕлĕкхи пусмăрçăсен, çĕрме пуянсен е куштансен йăхĕнченех. Турри те вĕсен пĕрех — мул, чунĕ-чĕри те çавах — е эс кăшлатăн, е сана кăшлаççĕ; хама кăшлаттариччен çынна кăшлас, хамăн хуçа пулас. Анчах кусем аслашшĕ-ашшĕсенчен çăткăнтарах, чăрсăртарах, чеерех, вăр-вартарах. Лешсем ялйышне пусмăрланипе çырлахнă пулсан, кусен танатине ялĕ-ялĕнчи мужиксем çеç мар, çулсерен пурлăх хевтине çухатсах пыракан улпучĕ-дворенĕсем те, тӳре-шарапа кантур тавраш ĕ те лекеççĕ. Тепĕр енче — кивĕ, патриархалла йăла-йĕркесен, ĕненӳсен, тĕшмĕшлĕхсен тыткăнĕнчен, хăйсен юмартлăхĕнчен, тавра курăм нишлĕхĕнчен — самани улшăннине пулах, асаплăн-хĕнлĕн пулин те,— хăпсах, хăтăлсах, тасалсах, хăват ӳстерсех пыракан вăй: çтаппансем, микуласем, ваçлейсем, кĕтеруксем.

Хресчен йывăр ĕçĕнче Çтаппанпа Татьянан ыррине те, усаллине те курма тивнĕ. Ырлăхĕнчен ытларах хурлăхĕ пулнă пулин те, пĕр хăнăхнă йĕрке улшăнма пултарассине вĕсем ăса та илмен. Анчах вăхăчĕ шунă май çав улшăнусем сисмеллех пулса иртнĕ. Çапла Энĕшкасси çур ялĕ ытла Михха парăмне кĕрсе ӳкет. Çтаппан халлĕхе хăйне хăй хуçа-ха. Малалла та çапла пуласса ĕмĕтленет. Инкеке, çак ĕмĕт часах татăлать. Халлĕхе пурнăçĕ йĕркеллех пынăн туйăнать. Уй-хирте, кил-терĕшĕнче тĕрмешсе, кунсем иртни сисĕнмест. Ял-йышĕпе пĕрле вĕсем аки-сухине тăваççĕ, утине çулаççĕ, тыррине выраççĕ. Йăли-йĕрки хушнă пек, хутран-ситрен, хурăнташ-тăванĕсемпе, кӳрши-аршисемпе пĕрле пухăнса, ĕçки-çикине ирттереççĕ. Çапла, мĕн пуррипе сапăр вĕсем.

Хресчен ĕçне мĕн ачаран хăнăхнă, юратма вĕреннĕ Çтаппаншăн çĕр çинчи ĕç нимĕнрен паха, таса ĕç. Çĕре вăл тăван амăшне хисепленĕ пек хисеплет. Унăн ырлăхĕ-пурлăхĕ Çтаппан пек ĕçченсемшĕн пĕтĕм пурнăç çăл куçĕ-çке-ха! Ак мĕншĕн вăл ăна хисеплесе тĕрлĕ ăрăмлă йăласем туса ирттерни те вырăнлă туйăнать. Çĕр ывăлĕ Çтаппан хăй çуралса ӳснĕ çĕрне-шывне, çутçанталăкне ытарайми юратать. Ăна уйĕ-хирĕ, шывĕ-шурĕ, улăхĕ-вăрманĕ—пурте çывăх та тăван. Романри çутçанталăк пулăмĕсем, çулталăк çаврăнăшĕн тĕрлĕ вăхăтри ӳкерчĕкĕсем Çтаппан шухăш-туйăмĕпе пĕр кĕвĕллĕ пулса тухаççĕ. Автор хăй те вĕсене пĕтĕм кăмăлтан савса сăнласа пани сисĕнет.

Тӳрĕ ĕçпе пурăнакан çыннăн кăмăлĕ те тӳрĕ, уçă. Кӳршĕ-аршăпа-и, ял-йышĕпе-и вăл яланах хăйне сăпайлă тытать. Ял-йышĕ те çак ĕçчен йĕркеллĕ, ăслă-тăнлă, вăйлă çынна хисеплет. Анчах арăслан пек вăйлă, хăй хăнăхнă ĕçĕнче пултаруллă çын Михха евĕрлĕ чее ултавçăсемпе тӳре-шара умĕнче халсăр. Вĕсен кукри-макрисем юмарт Çтаппана часах ураран ӳкереççĕ. Çтаппан — тӳрĕ çын, анчах унăн тӳрĕлĕхĕ хăйне хирĕçле пулса тухать. Вăл этем чысне, тивĕçне хисеплеме вĕреннĕ, анчах укçа чул касма тапратнă саманара этем чысĕпе тивĕçĕн пĕлтерĕшĕ те улшăнать иккен. Укça чыс та кӳрет, хисеп те парать, вăй та хушать, пурнăçра хуçа пулма та пулăшать. Çтаппан тем пек вăйлă, анчах укçаллă Михха унран тем чухлĕ вăйлăрах, Çтаппан ял-йыш умĕнче хисеплĕ, анчах унăн хисепĕ муллă Миххан «хисепĕ» умĕнче ниме те тăмасть, асап кăна пулса тăрать.

Тӳрех калăпăр, ĕлĕкхи хресченĕн драматизмне, мĕскĕнлĕхне, юмартлăхне Мранька Çтаппан сăнарĕпе пултаруллăн пĕтĕмлетсе панă. Çтаппан хăйĕн юмартлăхĕнчен вăраххăн та асаплăн хăтăлса пырать. Хăй пек çынсен вăйĕ уйрăм çыннăн хул-çурăм вăйĕнче маррине — пĕрлешӳллĕ, пĕр ĕмĕтлĕ кĕрешӳре пулнине вăл пит ерипен ăнланса çитет. Çапах ăнланса çитет-çитетех. Миххасем, тӳре-шарапа пĕр каварлă пулса, халăха кашкăрла пăваççĕ пулсан, вĕсене хирĕç халăхăн та, хăйĕн вăйне пухса, хирĕç тăмалла, кĕрешӳ пуçласа ямалла иккен. Анчах çав кĕрешĕве пуçараканни Çтаппан мар, унăн ывăлĕпе ывăлин юлташĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсем ытларах вĕреннĕ, тĕнчепе ытларах паллашнă, унăн хуришуррин сăлтавĕсемпе тупсăмне те Çтаппан ӳсĕмĕнчи çынсенчен лайăхрах пĕлеççĕ. Хастарлăхĕпе хăюлăхĕ те вĕсен пысăкрах. Кĕрешӳре вĕсене çул кăтартакан, ертсе пыракан, пулăшу парса тăракан вăй та пур ĕнтĕ—революцилле рабочи класпа унăн партийĕ.

Çтаппан сăнарĕн типлăхĕ пирки иккĕленсе тăмастпăр. Тăнăç пурнăçра Çтаппан хăйне хăй лăпкă, сăпайлă тытни, çилĕ-тарăху килсен кăмăлĕ вут пек хыпса илни, инкек-синкекре, асап-хурлăхра чăтăмлă пулни, пĕр панă сăмаха çирĕп тытса пыни— пурте çаксем ӳт-пӳ, ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен вăйлă та сывă çынна кĕвĕллĕ паллăсем. Пурнăçри йывăрлăхсенчен, тăшмансенчен унăн хăрасси-тăвасси çук. Çавна писатель асăрхаттарать çеç мар, роман тăршшĕнче çине-çинех сăнлăхлăн кăтартса парать.

Кивĕ йĕркепе ӳснĕ çыннăн кăмăлĕнче ыррипе усалли те пĕр çĕрлĕ. Лаша çухалсан, аптранипе, Татьяна Ваççуха юмăç патне каять — Çтаппан хирĕç мар. Пулăшĕ-и, пулăшмĕ-и, — вăл ун пирки иккĕленерех парать пулин те, ан тив, кайтăр. Йăли

çапла. Пакăш вăрманĕнче вĕсем Макçăм кумăшĕпе вăрă-хураха тытса «тирпейлеççĕ». Çтаппан уншăн пĕртте ÿкĕнмест. Йăли çавнашкал — вăрă-хураха халăх шеллеме хушман. Михха ăна чăтайми хур кăтартнă. Мĕн тумалла? Виçесĕр тарăхнă Çтаппан, пĕр шухăшласа тăмасăр, кайнă та Миххан хапхипе чÿречисене аркатнă. Хур кăтартнă тăшмана урăхла май тавăрма пурри-çуккине пĕлмест вăл. Ĕлĕк те çапла тунă. Йăлана кĕнĕ вăл.

Çтаппан кăмăлĕнче халăх тĕшмĕшĕсемпе йăла тÿнтерлĕшĕсен хуйăрĕ хулăн пулин те, унăн ырă енĕсене, çынлăхне вĕсем хупласа хураймаççĕ. Пирĕн кăмăл çав-çавах Çтаппан енчех. Пĕри кăна пире шухăша ярать. Çтаппан юмарт çын, анчах вăл пĕртте айван мар. Мĕншĕн-ха роман авторĕ ăна иккĕмĕш кĕнекере айванла, унăн кăмăлĕн уйрăмлăхĕсене хирĕçле ĕçсем тутарать? Ялтан Хусана тухса кайнă-кайманах, Çтаппан, пĕр талăк хушшинче тенĕ пек, хăйĕн сăпайлăхĕпе йĕркелĕхне ансатах çухатать, çăмăлттая тухса каять: вăл циркри паттăрпа та, ним именсе-тытăнса тăмасăрах, кĕрешме хăюлăх çитерет, намăс çуртне лексе çылăха кĕрет, хула урамĕсем тăрăх яш ачалла чупса çÿрет, унччен нихăçан ун йăлинче пулманнине кура мар, эрехе шыв пек ĕçет. Çтаппан кăмăлĕ çав териех сасартăк улшăнасса никам та кĕтмен. Хула пурнăçĕ, сăмах та çук, ун кăмăлне улăштарнă, анчах пырса кĕнĕ кунах мар пулĕ? Çак эпизода писатель кăсăкшăн кăна кĕртсе лартни уççăнах курăнать, Çтаппан сăнарне вăл йÿнетсе, шĕветсе çеç ярать. Ун пек «йÿнĕ» вырăнсем романра (уйрăмах виççĕмĕш кĕнекере) тăтăшах тĕл пулаççĕ. Вĕсем сăнарсемпе событисен аталанăвĕн логикине те, реализмла роман жанрне те пăсаççĕ.

Жанр тенин хăйĕн çирĕп йĕркисем пур. Мранька романĕнче вара куç кĕретех социалла романпа приключенилле романăн жанрĕсем хутăшса, арпашăнса кайнă. Романа пĕтĕмĕшле эпир реализмла роман вырăнне хакласа йышăнатпăр пулсан, унти событисем те, персонажсем те реализмла пулма кирлĕн туйăнать пире. Çав май, пурте пĕлеççĕ пулин те, Ф. Энгельс реализм çинчен мĕн каланине тепĕр хут аса илтерес килет: «На мой взгляд,—тенĕ вăл М. Гаркнес патне янă çырура,—реализм подразумевает, кроме правдивости деталей, верность передачи типичных характеров в типичных обстоятельствах».

Çтаппан ĕç халăхĕн ирĕке тухассишĕн тапраннă кĕрешÿ сĕмне кĕнĕ çеç пулсан, вăл çав кĕрешÿре ыттисене май килнĕ таран пулăшса кăна пырать пулсан, унăн ывăлĕ Микула вара кĕрешĕве ертсе пыракан çын пулмалла.

Микулай хăй яшлăхĕнче ялти ытти çамрăксенчен нимĕнпех те уйрăлса тăмасть-ха. Хăйĕн тантăшĕсем пекех, вĕсемпе пĕрлех, пушă вăхăтра улахсене çÿрет, ташлать, юрлать, савăнать. Алхасасси-куласси те, çамрăксен ăрăмлă йăлисене туса иртересси те ăна ют мар. Çапах та ыттисенчен вăл хут пĕлнипе, хăйĕн тавра курăмĕпе, пултарулăхĕпе яш чухнех палăрса тăрать. Хут пĕлекен Микулана ял-йышĕ ултавçă, куштан та чее Платтун вырăнне çĕр уполномоченнăйне суйлать, тавлашуллă çĕр пирки хăйне хÿтĕлеме Хусана суда шанса ярать. Кунтах Микула вырăс рабочипе — Кузнецов революционерпа — ăнсăртран паллашать, каярах туслă та пулса каять.

Кузнецовпа тĕл пулни Микулан ăсне-тăнне уçăлтарса ярать. Ку таранччен вăл, ашшĕ пекех, пуян Миххана ытларах хăйсен кил-йышне сăтăр тунăшăн, хур кÿнĕшĕн тарăхнă, курайман пулсан, халĕ ĕнтĕ, ултавпа пусмăр тĕнчин тупсăмĕпе сăлтавĕсем çинчен Кузнецов тĕплĕн ăнлантарса панă хыççăн, вăл Михха пĕччен маррине аванах ăнланса илет.

Пĕр Миххана çеç мар, пур ытти миххасене амаланма-аталанма май паракан пĕтĕм пусмăр йĕркине хирĕç тăма, ăна тĕп тума кирлĕ иккен. Кĕрешÿре çиеле тухас, çĕнтерес тесен, меслечĕсемпе ăслайсене пĕлмелле. Çав меслетсемпе ăслайсене революци кĕнекисенче, Маркспа Энгельс, Ленин вĕрентнинче шырамалла, революцилле рабочисен партинчен вĕренсе пымалла. Çапла Микула революционер-профессионал пулса тăрать.

1900 çул. Кĕркунне. Хусанта чылай хушă пытанса, вăрттăн ĕçлесе, вĕренсе пурăннă хыççăн Микула тăван яла, Энĕшкассине, таврăнать. Кузнецов ăна çак сăмахсемпе ăсатса ярать:

— Ну, Николай Степанович, пире уйрăлма вăхăт. Парти сана чи пархатарлă ĕçе, хăвăн тăван халăх хушшинче ĕçлеме ярать. Парти шанăçне тÿрре кăларма тăрăш!

— Ан пăшăрхан, Леонид Сергеевич. Парти хушнине пурнăçлассишĕн вăй-халăма, кирлĕ пулсан, пурнăçăма та шеллемĕп,—тет Микула (II кĕн., 289 стр.).

Романăн пĕрремĕшпе иккĕмĕш кĕнекисенче сăнласа панă Микулан кăмăлĕ, шухăш-туйăмĕ, ĕçĕхĕлĕ, тыткаларăшĕ çинчен нимĕн хурласа каламалли те çук. Вĕсем реализмла повествовани виçинчен тухмаççĕ. Микула пек революци ĕçне чун-чĕререн парăнса ĕçленĕ çынсем пулнине вулакансем ĕненеççĕ. Вĕсем чăн пурнăçра та пулнă. Ун çинчен истори кĕнекисем те, ватă çынсен аса илĕвĕсем те калаççĕ. Ан тив, хăшĕ-пĕри Микулапа Лукарье хушшинче пулса иртнĕ савăш мыскари пирки тиркешсе те илĕç. Пĕтĕмĕшпе илсен, çав натуралистла эпизод Микула сăнарĕн реализмне пăсаймасть-ха. Виççĕмĕш кĕнекере вара ăнланма йывăр ĕçсем пулса иртме тытăнаççĕ.

Микула, хăй революци ĕçĕн вăрттăнлăхне вăхăтсăр уçас мар тата ĕç ăнăçлăхĕшĕн тесе, сутăçă пулса тăрать. Хăйĕн ама çурийĕнчен, Матренă Игнатьевнăран, кивçен илнĕ 10 пин тенкĕ укçапа вăл ялĕ-ялĕнче лапкасем уçать. Унăн Атăлкассинчи «тимĕр-тăмăр, пир-авăр, галантерейă тата бакалейă таварĕсемпе суту-илÿ тăвакан пысăк магазин» пур. «Микула курттăм та суту-илÿ тăвать. Вăл таврари вак-тĕвек сутăçсем валли фабрик-заводсем туса кăларакан тавар тата тăварланă пулă кÿре-кÿре килнĕ. Вĕсем валлиех йÿнĕ йышши хăпарту, шушкă, клентĕр пĕçерттернĕ. Кашни тунтикунах вĕсене вуншар сутăç лавпах тиесе чăвашсен хушшинчи пасарсене çеç мар, марисен еннелле те салатнă» (III кĕн. 194 стр.). Микула сутти Кармăшра та, Симелте те пур. Çак ĕçсене туса тăма хăй те, учитель пулма вĕреннĕ Муравьев аслă приказчик те, вакăраххисем те пур. Çĕнĕ хуçан тавар çаврăнăшĕ пĕчĕк маррине çак диалогран та курма пулать:

— Суту-илÿ тăвас енĕпе ĕнер фабрикран — счет, управляющинчен çыру килчĕ,— Муравьев сĕтел сунтăхĕнчен икĕ хут кăларса пачĕ.

— Çирĕм пин тенкĕ-и? — ыйтрĕ Анук, пĕрне пăхса тухсан.

— Çирĕм пин, Анна Александровна.

— Мĕнех вара, куçарса парăр!—хушрĕ те Анук çырăвне вулама тытăнчĕ...» (III кĕн., 195 стр.).

Ама çуринчен кивçен илнĕ укçашăн «Микула тахçанах вунă пин çумне пиллĕк пин хушса таварса панă» (III кĕн., 214 стр.). Çапла «Микула, суту-улÿ тума пуçăнса, пиллĕк çул хушшинчех ялти пуянсенчен иртсе кайрĕ» (III кĕн., 90 стр.). Революци ĕçĕн вăрттăнлăхĕшĕнех вăл «хăйне хăй яланах турăпа патшана пăхăннăн тыткалать. Патшапа чиркÿ ыйтсан, пуринчен малтан вăл пулăшма тăрăшать.

тавар та кĕтмелле паркалать те, кунта мĕн ĕç унăн? Тата вăл, эрнипех пасарсене суту-илÿ тума тухаканскер, паян мĕн шыраса çÿрет? Полицейскисемпе кавар туса тыттарма мар-и?» (III кĕн., 230 стр.).

Халăхран çулĕ-çулĕпе татăлса пурăннă, хăй усламçине кура, ытларах тÿре-шарасемпе те мул хуçисемпе хутшăнса пурăнма тивнĕ çынна урăхла мĕнле кĕтсе илĕн тата? Вулакансем иккĕмĕш кĕнекере Микулара калчаланa пуçланă кĕрешÿçĕ-этемĕн сăнарне кура хавасланса кайнăччĕ. Акă эпир малалла унăн ĕçĕ ешерсе пынине, кĕрешÿре Микула хăй ÿссе кайнине курăпăр тесе ĕмĕтленнĕччĕ. Ĕмĕтленни харамa кайнăн туйăнать. Шавĕ нумай, ÿсĕмĕ çук...

Микулана ятарласах пуян усламçă туса хуни, автор шухăшĕпе, сюжет аталанăвĕшĕн, тен, юрăхлă пулнă пулĕ те, пурнăç чăнлăхĕпе пĕр ларман япала-çке-ха вăл. Истори те чăваш çĕршывĕнче унашкал метаморфозăсем пулни çинчен асăнсах каймасть. Ĕçливанпа Ехрем хуçа ывăлĕсем либерал вăййине выляман мар, анчах вĕсенчен нихăшех те революционер пулса тăман. Пĕр Микула еверлĕ çын пуçарнипех пĕтĕм кĕпĕрне хусканса кайнине те историре пулнă тесе çирĕплетсе калама пултараймастпăр.

Михха тата ун «тус-йышĕн» сăнарĕсенче пĕтĕм пусмăр тĕнчин ирсĕрлĕхĕпе тискерлĕхĕ пĕтĕçсе тăраççĕ. Михха ÿсĕмĕн çулĕ—халăх юнĕпе те тарĕпе пĕвеннĕ çул. Ним намăс-симĕсне пĕлмесĕр улталани, вăрттăн та, кĕретлетсе те çынсене çаратни, хурах пусни, вĕлерни, алхасса-иртĕхсе пурăнни Миххана чăннипех те пĕтĕм ял-йыш, пĕтĕм ĕç халăхĕ чун-чĕререн курайман тăшман туса хурать. Энĕшкасси пуянĕнчен пуçласа Атăл тăрăхĕнчи чаплă хуçана çитиччен Михха темĕн тĕрлĕ, çĕр чăтайми ирсĕрлĕхпе тискерлĕх те тума ĕлкĕрет. Çтаппанăнне икĕ хутчен лашине вăрлаттарать, ĕнесĕр, хуралтăсăр, çĕрсĕр тăратса хăварать, ывăлне ялтан тухса кайма ирĕксĕрлет, кинне пусмăрлама, халăх умĕнче намăс кăтартма хура шухăш тытать. Ял-йышĕн çĕрĕсене парăм-сарăмшăн тытса илет, çĕрсĕр тăрса юлнă çынсене хăйĕн тарçисем туса хурать, ялпа яла хирĕçтерсе халăх çĕрне çавăрса илет, бурлаксене кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлеттерсе кÿпĕнсе пырать, улпута вĕлерсе унăн имениййĕн хуçиййĕ пулса тăрать. Сĕмсĕр сыснанa тухнă пуяншăн çын чысĕ, хисепĕ, сăпайлăхĕ ниме те тăмасть. Вăл пурне те укçапа виçет.

Ял пуçĕсенчен, старăстăсемпе старшинасенчен, стражниксемпе уретниксенчен пуçласа, стăнавая, земски начальнике, исправнике çитиччен — пурте Михха тарçисем пулса тăраççĕ. Кĕпĕрнатăрĕ те пулин унпа туслă. Кĕскен каласан, пурте унăн тавра кускаласа çÿреççĕ, ăна юрасшăн тăрăшаççĕ, унăн ÿпкевĕнчен хăрасa тăраççĕ. Вăрă-хурахсем уншăн ĕçлеççĕ, Лаврский йышши ваккатсем унăн пуянлăхне ÿстерме тăрăшаççĕ, полиципе казаксем унăн ĕçне ĕçлеме халăхa хĕçпе те пăшалпа юнаса, ирĕксĕрлесе хăвалаççĕ. Михха тавра пĕтĕм тĕнче çавăрăнса тăрать. Вăл патшапа турă хăраххиех пулса тухать.

Миххана çапла сăнласа панин реализмла тĕшши пур ĕнтĕ. Анчах кунтa та авторăн виçе туйăмĕ çитсех каймасть. Михха ирĕкне стăнавайĕпе исправникĕ Марлин, кĕпĕрнатăрĕ те пăхăнса тăни — кама ĕнентерме пултарĕ?

«Пĕтĕм инкек Михха пирки иккен. Пĕтĕм Раççейшĕн хăрушă самантра пĕр хуçана хÿтĕлесе çакнашкал пăлхав кăларма кирлĕччĕ-и? Çук. Куншăн аслă патша каçармĕ. Йăнăша юсама васкамалла»...— тет, айванла, кĕпĕрнатăр (III кĕн., 564 стр).

Михха евĕр хуçасен-капиталистсен вăйне темĕн тĕрлĕ пысăклатса кăтартсан та, çакна манма юрамасть: патша Российĕнче мĕн Февральти революциччenex çĕршыв тытăмĕ буржуази аллинче мар, дворян-çĕр улпучĕсен класĕн, вĕсен хушшинчен тухнă çар чинĕсемпе бюрократи аллинче пулнă. Миххана патша сучĕ те, саккунĕ те, çав судпа саккунăн хуçисем те пăхăнса тăнăн сăнласа пани, паллах, чăнлăх картне каллех ларасшăн мар.

Михха арăмĕн Лукарьен, пупăн, пуп арăмĕн сăнарĕсенче писатель ытларах харам пырсен тĕнчин йăла тÿнтерлĕшĕсене, выльăхла пурнăçне кăтартса панă. Тутă пурнăç вĕсене иртĕхме хистет. Лукарье çамрăк Микулана сăхланса арлă арăмăн чысĕпе намăсне çухатать. Йытă кĕртĕнчи пек пурăнаççĕ: пуп Лукарьепе, Михха пуп арăмĕпе савăшаççĕ. Çав эпизодсене писатель натуралистла сăнласа пама пикеннине те пирĕн прозăн çитĕнĕвĕ вырăнне хума çук. Унашкал кăтăклă картинăсене ÿкерсе пама манман пулсан, темĕнле вара çакнашкал детальсем манăçа тухнă.

«Икĕ çул каярах Лукарье ывăл ача çуратса парсан та Михха кăмăлĕ улшăнмарĕ. Ывăлĕн пит-куçĕ чипер марри ăна килĕшмерĕ. Такамран пулнă пек шутласа, арăмне кĕвĕçме те хăтланчĕ. Никам çумне хушма çуккипе кăна çиллине ăша ярса пурăнать». (III кĕн., 199 стр.).

Çав ывăл пурăнни-пурăнманни мĕн кĕнеке вĕçне çитиччен те паллă мар.

Миххапа Лукарье хăйсен хĕрне Клавьене юратаççĕ, саваççĕ. Хусана тухса тарнă чухне Клавьене ăçта çухални каллех паллă мар. Ылтăнĕсене-мĕнсене чăматана чикме манман, хĕрĕ çинчен маннă. Çав сехрене хăпатакан самантра Лукарье тăван хĕрĕ çинчен мар, Микула çинчен шухăшласа пырать.

Михха шанчăклă тарçиййĕ Хĕлип пусмăрçăсен тĕнчин тепĕр енне—кашкăрлăхне кăтартакан сăнар пулса тăрать. Хуçи хушнипе вăл Жомини барона çаратать, унтан вĕлерет, хуçа арăмĕ хушнипе Мавранa пăвса пăрахса шыва путарать. Çынна вĕлересси уншăн эрех ĕçесси пекех ансат. Çак тискер кайăк хăйĕн çынлăхне пуçпех çухатни кĕретех курăнать. Вăл Миххан хăрушă мĕлкиййĕ пулса тăрать. Укçа çак вăраха туртмасть иккен. Мĕнле вăй вара ăнa Миххапа çыхăнтарса тăнин усăмĕ çук.

Çавнашкал, каласшине каласа çитереймен, шухăш тĕлĕшĕнчен тĕвĕленсе çитмен вырăнсем, роман аталанăвĕн калăпне шăнăçтарса çитереймен сăнарсем, пулăмсем, чăнлăхa хирĕçле пыракан ситуацисем чылай тĕлте тĕл пулаççĕ. Пĕр тĕслĕхне çеç илĕпĕр. Тĕрмери Анук алă шăнăрне çыртса татать. Ăна пусмăрлама ятарласа пынă Хĕлип еверлĕ пуç касакансем-уголовниксем Анук сирпĕтекен юнран хăраса тухса тараççĕ.

Чăнлăх çинчен татах каласан, çакна та, сăмах май, каласа хăварма юрать. Произведенири персонажсен ĕçне-хĕлне писатель чăн-чăн пурнăçра пулнă событисемпе, çынсен сăнарĕсемпе çыхăнтарать пулсассăн, çав событисемпе сăнарсен чăнлăхне куç кĕретех аркатма кирлĕ мар пулĕ. Романра Жомини баронăн çĕрĕпе именине Михха сутăн илни, унăн хуçиййĕ пулсa тăни çинчен сăмах пырать. Аплах тăвас тенĕ пулсан, писателĕн урăх хушаматпа та пулин усă курмалла пулнă. Ватă вулакансен асăмĕнче ку хушамат романри ĕçсем пулса иртнĕ вăхăтра Куславккара Жомини баронессă чип-чиперех пурăннипе те, вăлах имени хуçи те пулса тăчипе çыхăнса тăрать. 1906 çулхи январĕн 12-мĕшĕнче кĕпĕрне пуçлăхĕ Шупашкар исправникĕ патне янă

телеграммӑра ҫапла калани пур: «Баронесса Жомини телеграммой заявляет о расхищении крестьянами леса, сена в ее имении Козловке. Предлагаю немедленно прекратить самоуправство крестьян...»

Эпир «Ӗмӗр сакки сарлака» романӑн хӑш-пӗр, унӑн тӗп геройӗсемпе ҫыхӑнса тӑракан енӗсем ҫинчен ҫеҫ каларӑмӑр. Роман чӗлхипе стилӗ ҫинчен калаҫасси вӑл хӑйне уйрӑм пысӑк ыйту. Пӗтӗмӗшпе ҫапла калама пулать: романӑн пӗрремӗшпе иккӗмӗш кӗнекисене Н. Мранька васкамасӑр, шухӑшласа ҫырнӑ пулсан, виҫҫӗмӗш кӗнекен тирпейӗ ҫук. Ӑна писатель ӑсталӑхӗн ӳсӗмӗнчи ҫӗнӗ ҫитӗнӳ тесе хаклама та ҫук.

---

Василий **ДОЛГОВ**

# Дмитрий Исаев ҫырӑвӗсене вуласан...

«Ялав» журналӑн 1961 ҫулхи 12-мӗш номерӗнче чӑвашсен вӑхӑтсӑрах ҫӗре кӗнӗ паллӑ писателӗн, критикӗн, редакторӗн, комсомол работникӗн ултӑ ҫырӑвне пичетлесе кӑларнӑ. Вӗсене пичете валли филологи наукисен кандидачӗ Н. Иванов хатӗрленӗ. Ҫырусене Д. Исаев ҫырӑвӗнчен илнӗ сӑмахсемпе ҫакӑн пек ят панӑ: «Искусствӑ пирӗн вӑхӑтра пӗтӗм халӑхшӑн пулмалла».

Критик ҫырӑвӗсем умне Н. Иванов пӗчӗкҫӗ статья ҫырса пичетленӗ. Д. В. Исаев чӑваш литературинчи ют шухӑшсене хирӗҫ 20-мӗш ҫулсенче мӗн тери хастар кӗрешнине палӑртса, умсӑмах авторӗ Исаев-критик ӗҫне ҫапла хаклать: «Вӑл литературӑри тасалӑхшӑн, партилле идейӑлӑхшӑн кӗрешнӗ, тӑван литературӑна тӗрӗс ҫулпа ярасшӑн вӑй-хала шеллемесӗр ӗҫленӗ. Ҫакна унӑн Хумма Ҫеменӗ патне янӑ ҫырӑвӗсенче те аван куратпӑр. Исаев Мӗтри искусствӑ халӑхшӑн пулмаллине, чӑн-чӑн ӑсталӑхпа ҫырнӑ произведенисем кӑна ӗҫ ҫыннисен кӑмӑлне тивӗҫтерме пултарнине кӑтартса парать».

Умсӑмах авторӗпе килӗшсе, эпир те ҫавӑн пекех калӑпӑр, Исаев ҫырӑвӗсем вулакансене, тӑван литературӑна тӗпчекенсене пысӑк усӑ пама пултарассӗ, тейӗпӗр.

Исаев Мӗтри хӑйӗн «Рабфак хӗрӗ» ятлӑ калавне «Сунтал» редакцине ярсан (1927), Хумма Ҫеменӗ патне ҫыру ҫырать, писательрен ҫав калав пирки хӑйӗн шухӑшне каласа пама, йӑнӑшсемпе ҫитменлӗхсене кӑтартса пама ыйтать. Ҫапла вара, икӗ писатель хӑйсен пӗр-пӗрин патне ярса тӑнӑ ҫырӑвӗсенче, «Рабфак хӗрӗ» калавран пуҫласа, литературӑпа искусствӑн теориллӗ ыйтӑвӗсене хускатассӗ, тӗрлӗ ыйтусене пӗр-пӗрне ӑнлантарса парассӗ (ку вӑл Исаев ҫырӑвӗсенче те аван курӑнать, Хумма Ҫеменӗн ҫырӑвӗсене халлӗхе тупман-ха).

Хумма Ҫеменӗ ҫыру ҫырсан, «Рабфак хӗрӗн» авторӗ савӑнмаллипех савӑнать. Хумма Ҫеменӗ калаври ҫитменлӗхсене кӑтартса панӑ пулмалла. Ҫакна май ун патне Исаев тепӗр ҫыру янӑ. Унта вӑл литературӑн обществӑри рольне хӑй мӗнле ӑнланни тата мӗнле ӑнланмаллине каласа парать. «Эсӗ тата,— тет вӑл,— пӗр енчен (чӗлхе илемлӗхӗ енчен) ҫеҫ пӑхнӑ, ман шутпа, пирӗн тепӗр енчен — социологи, обществӑна усӑлли енчен те пырса пӑхмалла. Тем пек илемлӗ ҫырнӑ япалан та, вӑл ӗҫлекенсен класӗн, пӗтӗм ӗҫ халӑхӗн ӗҫне малалла яма пулӑшмасть пулсан, пӗр катӑк ҫур пуслӑх усси те ҫук».

Ыйтӑва кун пек лартни, калас пулать, хальхи вӑхӑтшӑн та тӗрӗс: пире халӑха коммунизм тума пулӑшакан произведенисем кирлӗ. Илемлӗ произведени, унӑн кашни сыпӑкӗ, кашни пуплевӗпе сӑмахӗ халӑха, партие усӑ патӑр, ӑна ӗҫ ҫыннисем савӑнса вулаччӑр, вуланӑ хыҫҫӑн вӗсен хавасլӑхӗ ҫӗклентӗр, пурӑнас, ӗҫлес килнипе вӗсем малалла туртӑнччӑр, савӑнса юрлаччӑр. Урӑхла пулсан, Исаев калашле, писатель ҫырнӑ произведени темле паха пулсан та, «катӑк ҫур пус» тӗшне те тӑмасть. Хӑшпӗр литераторсем, пер-пӗр произведение илеҫҫӗ те чӗлхи паха, илемлӗ, тесе каҫсах каяҫҫӗ, ӑна ӑш-чикки ҫӗрӗк пулин те, пӗлӗте ҫити ҫӗклесе мухтаҫҫӗ. Мӗншӗн содержанийӗ пирки пӗр сӑмах та шарламастӑр тесен, авкаланса, хуҫкаланса: «содержанине тӗпчесси Исаевсем пек, Кузнецовсем пек... критиксен ӗҫӗ», тесе, пӑрӑнса каяҫҫӗ. Эпир тӳрех калатпӑр: ҫӗрӗк ӑш-чиклӗ произведени хӑйӗн ҫӗрӗк шухӑшӗсемпе сиенлӗ, анчах вӑл тулашӗ илемлӗ пулнӑ пирки пушшех те сиенлӗ! Ҫавнашкал произведени орхидейӑ ятлӑ чечек пек: илемӗ ҫынна илӗртет, анчах шӑрши чыхӑнтарса ярать. «Ӑш-чикки» тенӗрен, чӑваш ҫамрӑкӗсен революцичченхи пӗр юрри аса килчӗ:

> Ҫакӑ ялӑн хӗрӗсем
> Ҫырла пек,
> Ӑшӗ-чикки
> Хура юн...

Икӗ писатель, Хумма Ҫеменӗпе Исаев Мӗтри, пӗр-пӗрин патне ҫӳретнӗ ҫырӑвӗсенче хӑйсен шухӑшӗсене пытарман, уҫҫӑн каласа панӑ (чӑн-чӑн писательсем ӗнтӗ ҫавӑн пек пулмалла та!). Вӗсем литературӑ произведенийӗн содержанийӗпе форми пирки интереслӗ калаҫу пуҫарса янӑ. Хумма Ҫеменӗ «Рабфак хӗрӗ» калава чӗлхе енчен, «формӑ» енчен ытларах тишкӗрнӗ пулас, ҫавӑнпа та формӑна шута илменшӗн Исаева «вӑрҫса» та пӑхнӑ.

Ҫавӑн пирки ӗнтӗ Исаев ку ҫырура содержанипе формӑна мӗнле ӑнланмалли ҫинчен ҫырать. «Эпӗ,— тет критик,— формӑна кирлӗ мар, формӑшӑн кӗрешмелле мар тесе нихҫан та каламан та, калас та ҫук... Формӑ та кирлӗ, чӗлхе илемлӗхӗ те кирлӗ. Формӑна ҫӗнетессишӗн те, «искусствӑ хӑвачӗшӗн» те пирӗн кӗрешмелле. Анчах произведенире «искусствӑ хӑвачӗшӗн» ҫеҫ мар, ӑш-чик хӑвачӗшӗн те кӗрешес пулать».

Малалла вӑл ку ыйтӑва ҫапла ӑнлантарать: «Эпир япалана формӑшӑн анчах тумастпӑр. Ҫавӑнпа литературӑра вӑтам ҫулпа пырас пулать: формӑшӑн анчах тӑни те, ӑш-чикӗшӗн анчах тӑни те тӗрӗс мар. Кунта акӑ мӗнле пример илсе танлаштарма пулать: чӗресе темӗскер пек илемлетсен те, ун ӑшӗнче чӗрене кантаракан сӑри пулмасан, вӑл пирӗн кӑмӑла тултараяс ҫук. Ҫавӑнпа эпир: савӑчӗ те лайӑх, илемлӗ, тӗплӗ тунӑ япала пултӑр, ун ӑшӗнче ӗҫме-ҫиме те чуна кантармалла, чӗре ҫумне ҫыпӑҫмалла, усӑллӑ япала пултӑр тетпӗр».

Исаев танлаштарӑвӗ илемлӗ, оригиналлӑ. Анчах литературӑ произведенийӗн содержанийӗпе форми пирки сӑмах хускатрӑмӑр пулсан, кунта ҫакна асӑрхаттарас пулать: ку ыйту — вӑл литературӑ тӗпчевӗнче (литературоведенире) пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан философилле ыйтусенчен пӗри. Литературӑ произведенийӗн содержанине е формине тӗпчесе пӗлес тесен, вӗсен (содержанипе формӑн) пӗрлӗхне тӗпчес пулать, урӑхла каласан, вӗсене пӗр-пӗринчен уйӑрмасӑр тӗпчесен ҫеҫ кирлӗ пек ӑнланса илме, ӑнлантарса пама пулать.

Литературӑ произведенийӗн содержанийӗ вӑл — пурнӑҫ, анчах хӑйне халлӗн илнӗ пурнӑҫ мар; литературӑ произведенийӗн содержанийӗ вӑл — писатель ӑнланнӑ (ӑнлантарнӑ), искусствӑ майӗсемпе сӑнласа кӑтартнӑ (кӑтартса панӑ) пурнӑҫ. Кашни писателӗн хӑйӗн шухӑшӗ, ӑнланӑвӗ, ӗмӗчӗ, идеалӗ пур, вӑл хӑйӗн произведенийӗнче ҫав шухӑша каласа пама тӑрӑшать, пурнӑҫа хӑй мӗнле ӑнланать, ҫавӑн пек ӑнлантарса парать. Класлӑ обществӑра писателӗн шухӑшӗ, ӑнланӑвӗ, ӗмӗчӗ, идеалӗ пӗр-пӗр клас шухӑшӗ, ӑнланӑвӗ, ӗмӗчӗ, идеалӗ пулса тӑрать. Пирӗн вӑхӑтра, совет обществинче пачах урӑхла: писатель ӑнлансах халӑх шухӑш-кӑмӑлне палӑртать, халӑх идеалӗшӗн ӗҫлет, ӑна пурнӑҫа кӗртес тесе кӗрешет. Ҫапла ӗнтӗ, литературӑ произведенин содержанине писатель кӑтартса паракан ӗҫсене, пулӑмсене (явленисене) хӑй мӗнле ӑнланнипе тата мӗнле ӑнлантарнипе пӗрлех унӑн шухӑш-туртӑмӗсемпе ӗмӗчӗсем те кӗреҫҫӗ.

Литературӑ произведенийӗн форми — произведение ҫырнӑ чӗлхе ҫеҫ мар, унти сӑнлӑхсем ҫеҫ те мар, литературӑ произведенийӗн формине унта кӑтартса панӑ сӑнарсем те кӗреҫҫӗ.

Формӑ ҫинчен каланӑ чухне чӗлхе, сӑмах пирки калаҫу хускатаҫҫӗ. Тӗрӗс! Литературӑра чӗлхесӗр формӑ тума ҫук. Чӗлхе, сӑмах — формӑ тумалли хатӗр. Сӑмах — сӑнлӑхсем тумалли элемент. Произведенин композицийӗ те, жанр тӗлӗшӗнчи структури (йӗрки) те, ритм та тата ыттисем те формӑ пайӗ, элеменчӗ пулса тӑраҫҫӗ. Формӑ содержанин тӗрлӗ элеменчӗсене ҫыхӑнтарса пӗр-пӗтӗм япала, пӗрлӗх туса хурать. Произведенири персонажсене вырнаҫтарса тухни, вӗсем пӗр-пӗринпе ҫыхӑнса тӑни, произведенири, персонажсен чӗлхинчи детальсем, композици мелечӗсем автора кирлӗ шухӑшсене калама пулӑшаҫҫӗ.

Литературӑ вӗренмелли учебниксенче содержанипе формӑ ыйтӑвне ӑнлантарса панӑ чухне тӗслӗх вырӑнне Л. Толстойӑн «Война и мир» романне илеҫҫӗ. Вара ҫапла калаҫҫӗ: «Вӑрҫӑ тата мир» романӑн содержанийӗ — вырӑс обществин 1812 ҫулхи вӑрҫӑ тапхӑрӗнчи тата декабристсен малтанхи вӑрттӑн союзӗсем пуҫланнӑ ҫулсенчи пурнӑҫне, вырӑс ҫыннисен ӗҫне-хӗлне, паттӑрлӑхне, ҫемье ыйтуне, уйрӑм ҫыннӑн историри рольне, обществӑ умӗнчи тивӗҫне «халӑх шухӑшӗн» ҫутипе, Толстойӑн истори, философи, нравственноҫ тӗлӗшӗнчи шухӑшӗсен, ӑнланӑвӗн, вӗрентӗвӗн ҫутипе кӑтартса пани, ӑнлантарни, теҫҫӗ. Ҫак содержанине кӑтартса памалли формӑ — произведени валли илнӗ Ростовсен, Болконскисен, Безуховӑн, Трубецкисен, Курагинсен, Наполеон, Кутузов пурнӑҫӗ, салтаксен, хресченсен, ҫарӑн, обществӑри ҫӳлти сийсен пурнӑҫӗ, ун чухне пулса иртнӗ событисем, лару-тӑрусем тата ыттисем теҫҫӗ. Пӗр сӑмахпа каласан, «Вӑрҫӑ тата мир» романӑн содержанийӗ унти сӑнарсем урлӑ пулса тӑнӑ, ҫав сӑнарсем кунта роман содержанине усраҫҫӗ, формӑ пайӗ пулса тӑраҫҫӗ.

Чӑваш литературин классикла произведенине — вилӗмсӗр «Нарспи» поэмӑна илсе пӑхсан та эпир содержанипе формӑ, ӑш-чикӗпе тумӗ мӗн тери тачӑ ҫыхӑнса тӑнине куратпӑр. «Нарспи» поэмӑра пирӗн ума чӑваш халӑхӗн иртнӗ ӗмӗрти пурнӑҫӗ тухса тӑрать. Иванов ҫав пурнӑҫа илнӗ те хӑй мӗнле ӑнланнӑ пек кӑтартса панӑ. Ӑна вӑл халӑхӑн малта пыракан шухӑш-кӑмӑлӗ енчен пӑхса, вырӑс литературинчи прогрессивлӑ ҫыннисен шухӑшӗсене ӑса хывса ҫутатса ҫырнӑ. Ку ҫеҫ те мар-ха, вӑл хӑйӗн ӗҫӗнче таҫтан-муртан килнӗ шухӑшсен витӗмӗпе мар, 1905—1907 ҫулсенчи пӗрремӗш революци витӗмӗпе хавасланса ӗҫленӗ. Ҫапла вара, «Нарспи» поэмӑн содержанийӗ — вӑл чӑваш халӑхӗн, ытти халӑхсен шухӑшӗсемпе килӗшсе тӑракан ӗмӗт-шухӑшсем, халӑхӑн сывӑ ӑс-пуҫлӑ ҫыннисем ҫав вӑхӑтри пурнӑҫа, ӗҫпе кӗрешӗве, телей, юрату ыйтӑвӗсене мӗнле ӑнланнине, поэт хӑй ҫав ыйтусене мӗнле ӑнланнине сӑнлӑхсемпе кӑтартса пани пулса тӑрать. Хӑш-пӗр реакцилле писательсем, этемӗн пурнӑҫри, обществӑри ролӗ пирки киревсӗр шухӑш сарса, пурнӑҫшӑн этем — лӑкӑр-лакӑр ҫеҫ, вӑл ним те тума пултарайман чӗрчун, тесе сӳпӗлтетнӗ пулсан, Иванов, материалистла философин хӑш-пӗр идейисене ӑнланса илнӗскер, урӑхла шухӑшланӑ: эпир пурӑнакан тӗнчере чи вӑйли этем, тенӗ. Ҫак прогрессивлӑ шухӑш, ун чухнехи гуманизмӑн тӗп шухӑшӗ, Иванов пултарулӑхне витӗр витнӗ. Анчах «Нарспи» авторӗн ҫак шухӑшне палӑртнӑ чухне эпир унӑн шухӑш-кӑмӑлӗ пур чухне те тап-таса ылтӑн пек пулнӑ тесе калама пултараймастпӑр: Иванов пурӑннӑ саманара халӑх ӑс-тӑнӗнче тӗксӗм шухӑшсем те нумай пулнӑ, халӑх турра та, усала та ӗненнӗ; пӗрисем киреметсене, теприсем турӑшсене пуҫ ҫапнӑ, виҫҫӗмӗшсем турӑшсене хӑйма сӗрсе, кил хушшине ҫӗтӗк ҫӑпата ҫине кӑларса лартнӑ; пӗрисем революцие мухтакан кӗнекесем тупса вуланӑ, патша йӗркине хирӗҫ пыракан кӗрешӗве хутшӑннӑ, теприсем революци паттӑрӗсене тытса жандармсен аллине панӑ... Иванов чӑваш пурнӑҫне халӑх шухӑшӗн ҫутипе ҫутатса панӑ чухне «Нарспи» поэмӑра «турӑ ҫырни» мӗне пӗлтернӗ пирки шухӑшласа пӑхман, ҫав шухӑша тиркесе тӑман. Ҫапла вара, чаплӑ поэмӑн содержанине этем вӑй-халне мухтакан хӑватлӑ шухӑшсемпе пӗрле этем ӑстӑнне ҫӳпӗлекен шухӑшсем те кӗрсе кайнӑ. Паллах, вӗсем «Нарспире» тӗп вырӑнта тӑмаҫҫӗ. «Нарспи» — прогрессивлӑ шухӑшсемпе тулнӑ произведени, унӑн прогрессивлӑ содержанийӗ юрӑхсӑр шухӑшсене хӑйӗн вӑйӗпе путарса тӑрать.

Содержанипе формӑ ыйтӑвне Хусанкайӑн «Аптраман тавраш» поэмине, Ухсайӑн «Кӗлпук мучи», «Ҫул» поэмисене тата ыт. произведенисене тӗпчесе кирлӗ пек ҫутатса пама пулать.

Произведенири сӑнарсемпе сӑнлӑхсен пуянлӑхӗ, унӑн форми пулса, произведенин содержанийӗпе ним уйрӑлми ҫыхӑнса тӑрать. Содержанипе формӑ пӗр-пӗринпе тачӑран та тачӑ ҫыхӑнса, пӗрлешсе, витӗр витсе тӑнине асра тытса, вырӑссен аслӑ критикӗ В. Г. Белинский ҫакӑн пек каланӑ: «Формӑ содержанине палӑртаканни пулсан, вӑл содержанипе ҫав тери тачӑ ҫыхӑнса тӑрать, содержанине формӑран уйӑрас тени содержанине пӗтернине пӗлтерет; тата ҫапла та: формӑна содержанирен уйӑрас тени формӑна пӗтернине пӗлтерет» (В. Г. Белинский. Собр соч. в трех томах, т. 3, стр. 138).

Л. Н. Толстой тата «Что такое искусство» ятлӑ произведенийӗнче ҫапла палӑртнӑ: «... чӑн-чӑн илемлӗ произведенире — сӑвӑра, драмӑра, картинӑра, юрӑра, симфонире — пӗр стиха та, пӗр сценӑна та, пӗр фигурӑна та, пӗр такта та харпӑр хӑй вырӑнӗнчен кӑларса урӑх вырӑна куҫарса лартма ҫук, мӗншӗн тесен пӗтӗм произведени пӑсӑлса кайма пултарать...» (Л. Н. Толстой. Соч., т. 30, стр. 13).

Л. Н. Толстой малалла произведение чӗрчун организмӗпе танлаштарать. Чӑнах та, ҫыннӑн ури вырӑнне алӑ, куҫӗ вырӑнне хӑлха, хӑлхи вырӑнне сӑмса лартсан, этемӗн кӗлетки пӑсӑлса каять; ун пек ҫынна урама кӑларса ярсан, ӑна курма ҫӗршер кара сӑвар пухӑннӑ пулӗччӗ...

Илемлӗ произведенин (содержанийӗнче те, форминче те) хӑйне кирлӗ логикӑ пур. Ҫавӑн пек логикӑсӑр произведение ҫырма та, унӑн уйрӑм сӑнарӗсене кӑтартма та ҫук. Илемлӗ произведенири логикӑ, содержанипе формӑна ним уйрӑлми ҫыхӑнтарса, содержанипе формӑ пӗрлӗхне туса хурать.

Д. Исаев хӑйӗн «Марксизм-ленинизмпа литературӑ» ятлӑ статйинче, М. Федоров критикӑн шухӑшӗсене тиркесе, содержанипе формӑ пирки хӑй вӑхӑтӗнче ҫакӑн пек ҫырнӑ:

«Федоров илемлӗ произведени содержанине ҫапла определени парать, ҫапла ӑнлантарать: «Объектӑлатнӑ пурнӑҫри фактсен системи, ӑшри (!) пӗррелӗх саккунлӑхне пӑхӑнса тӑракан образсен системи — илемлӗ произведенин содержанийӗ» (Скобкӑра калар: «Ай-уй,— тесе тӗксе илет Исаев,— чӗлхи мӗнле, чӗлхи! тейӗҫ вулакансем. Чӑнах та, кунашкал ка-

# ЛЕНĂ ШЫВĔ ÇИНЧИ РАБОЧИСЕН ПĂЛХАВĔНЧЕ ПУЛНĂ ПИРĔН ЯНТАШСЕМ

(1912—1962)

50 çул каялла Ленă шывĕ çинче ылтăн кăларакан рабочисене персе вĕлерни пĕтĕм Российăри рабочисене тарăхтарса, хумхантарса янă, кĕрешĕве çĕклентернĕ. Çапла вара, Российăра революциллĕ кĕрешӳ çĕнĕрен, никам чарайми тапранса сарăлма пуçланă.

Ылтăн кăлармалли вырăнсенче чăваш çĕршывĕнчен кайнă рабочисем чылай пулнă. Чăваш хресченĕсем унта ĕçе кайма çĕр çул каяллах тытăннă. 1911 çулхи цифрăсем тăрăх, çавăн пек вырăнсене кайса ĕçлекен çынсем акă мĕн чухлĕ пулнă: Шăнкăртам вулăсĕнчен — 297 çын, Кувакино вулăсĕнчен — 159 çын, Улатăр вулăсĕнчен — 63, Турхан вулăсĕнчен — 7, Мăрат вулăсĕнчен — 2, Кладбище вулăсĕнчен — 39, Мишуково, Пăрачкав, Семеново, Сиява тата Пăрăнтăк вулăсĕсенчен — пĕрер, пурĕ — 572 çын. Вĕсемсĕр пуçне çемйипех куçса кайнисем те чылай пулнă. Пĕтĕм чăваш çĕршывĕнчен çав ылтăн кăларакан вырăнсенче пин çынна яхăн ĕçлесе пурăннă.

Приисксем пуринчен ытла Англи мул хуçийĕсен аллинче тата патша йăхĕ таврашсен аллинче пулнă. Вĕсем рабочисене калама çук хытă пусмăрланă. Пĕр юптармасăрах калама пулать: ылтăна вĕсем рабочисен юнĕпе тарĕнчен шăратса тунă. Рабочисен хваттерĕсем япăх, апат-çимĕç хĕсĕк, ĕç укçисем çителĕксĕр пулнă. Рабочисене йывăр ĕçре ĕшентернĕ, куллен-кун кӳрентернĕ. Пурăна киле вара вĕсем, чăтайми пулса, кĕрешме пуçланă.

1912 çулхи апрелĕн 29-мĕшĕнче Андреевскри приискри рабочисем большевиксем ăс панă тăрăх забастовкă тапратса янă. Сăлтавĕ — ĕç çыннисене çиме юрăхсăр лаша какайĕ пани пулнă. Часах забастовкăна ытти приисксенчи рабочисем хутшăннă. Забастовкă тăвакансем комитет суйласа хунă, ăна П. Н. Баташев большевик ертсе пынă.

Забастовкă комитечĕ вара ылтăн кăлармалли вырăнсен хуçисем умĕнче акă мĕн ыйтса хистенĕ: рабочисен кунне 8 сехетрен ытла ĕçлемелле мар пултăр, ĕç укçи вĕсене 10—30 процент ӳстерсе тӳлемелле пултăр, штрафсем хурса ĕç укçине чакарасси тек ан пултăр, сывă мар рабочисене медицинă пулăшăвĕ памалла, хваттерсене тата апат-çимĕçе лайăхлатмалла, администрацин рабочисемпе çын йĕркеллĕ калаçмалла, вĕсен депутачĕсене тĕкĕнмелле мар, депутатсене илтелемелле.

Анчах прииск пуçлăхĕсем рабочисем ыйтнине яхăнне те яман; рабочисене апат-çимĕç пама чармалла тата казармăсенчен кăларса ямалла тунă. Эппин, ылтăн хуçисем рабочисене выçлăхпа тата шăнтса вĕлерме шут тытнă. Казармăсенчен рабочисене кăларса пăрахмалли йĕркесене рабочисем хирĕç тăма йышăннă. Çавăн çинчен хыпар илсенех, патша влаçĕ рабочисене хĕç-пăшалпа пусарса хума приискa пĕр ротă салтаксем ярать. Унтан жандарм ротмистрĕ Трещенков, 1905 çулта Сормовăри рабочисен пăлхавне пусарнăскер, приискри рабочисене хĕсме пикенет. Анчах рабочисем хăйсене лăпкă тыткаланă; пĕр-пĕрне пулăшакан кассăсем тунă, эрех таврашне ĕçме чарса хунă, полицие хăйсем çине тапăнма нимле сăлтав та парасшăн пулман.

Мартăн 30-мĕшĕнче полици департаменчĕ Трещенкова забастовкă комитетне пĕтерсе хума хушнă. Апрелĕн 4-мĕшĕнче вара жандарм ротмистрĕ рабочисен тĕп комитетне арестлесе хупса лартать. Чи хастар большевиксене рабочисенчен уйăрать. Çавна кура эсерсем рабочисене прокурорпа Трещенков патне пĕтĕм халăхпа кайса калаçма сĕнеççĕ. Аптранă енне, рабочисем çав сĕнӳпе килĕшеççĕ те чăн та йышлăн пухăнса Надеждинский приискри халăх çурчĕ патне каяççĕ. Халăх 3—4 çухрăм хушши тăсăлса карталанса пынă. Анчах халăх çурчĕ патне çитнĕ тĕле Трещенков салтаксене рабочисене хирĕç пĕр харăссăн пеме хушать. Пăшалсем кĕрĕслетме тытăннă май рабочисем ниçта кайса кĕреймен. Пĕр самантра тенĕ пек 270 рабочие вĕлерсе пăрахнă, 250 çынна амантнă. Çавнашкал меслетпе вĕсем рабочисене пăхăнтарса, унчченхи пекех пусмăрта тытса усрама шутланă. Анчах рабочисем парăнман. Тискер кун хыççăн та вĕсем ĕçе тытăнман, ĕçе пăрахса, хăйсен ялĕсене тухса кайнă.

Приисксенчи событисем çинчен хыпар часах пĕтĕм Российă тăрăх сарăлнă. Нумай çĕрте рабочисем патша влаçĕн ирсĕрлĕхĕсене хирĕçлесе демонстрацисем, забастовкăсем, митингсем туса ирттернĕ, пуçне хывнă рабочисен çемйисем валли пулăшу пуçтарнă. Çав пăлхава вара 300 пине яхăн рабочисем хутшăннă пулнă.

Патша министрĕ Макаров: «Çапла пулнă, çапла пулĕ те», тесе сĕмсĕррĕн каланă пулсан, рабочисем: «Çук, тек апла пулмĕ, сирĕн шалçăр часах тулĕ», тесе çирĕппĕн ответленĕ. Ленă шывĕ çинче рабочисене персе пăрахнине хирĕç пуçланнă стачкăсем тата çав çулхи маевкăсем вăйлăн иртнĕ. Большевиксем рабочисене: патша влаçне сирпĕтмесĕр ĕç çыннисене ирĕк пулас çук, патша влаçне хирĕç пĕр парăнми кĕрешмелле, тесе вĕрентнĕ, çĕнĕ революци хатĕрленĕ.

Ленă шывĕ çинче çав забастовкăра пуçне хывнă е аманнă рабочисем хушшинче пирĕн янташсем те пулнă. Нумай пулмасть Ульяновскри архивра эпир çавăн çинчен калакан документсем тупрăмăр. Вĕсем акă мĕн пĕлтереççĕ.

1914 çулти февралĕн 28-мĕшĕнче полици департаменчĕ Чĕмпĕр губернаторĕ патне вăрттăн хут çырса ярать.

Унта акă мĕн каланă:

«1912 çулхи апрелĕн 4-мĕшĕнче Ленă шывĕ çинче персе пăрахнă

рабочисем хушшинче Чĕмпĕр кĕпĕрни çыннисем те пулнă. Вĕсенчен пĕри Пăва уездĕнчи Шăнкăртам ялĕ çынни Измаил Солдатов, тепри Улатăр çынни Алексей Димитриевич Герасимов. Вăрттăн кăна тĕпчесе пĕлĕр-ха: вĕсен çемйинче кам та пулин пур-и, вĕсем рабочисенчен укçа илсе тăнă-и, хăйсем мĕнле пурăнаççĕ?»

Ку хута хирĕç губернатор Улатăрта Герасимов тăванĕсене тупайманни çинчен пĕлтернĕ. Шăнкăртамри Солдатовсем пирки çапла çырнă: «Измаилăн амăшĕ Фатьма 75 çулта, вăл хăйĕн ывăлĕ Незаметдин патĕнче пурăнать. Измаил авланман пулнă. Ялта унăн тăванĕсем тата пур: Хуснетдинпа Шарафетдин, вĕсем пурте чухăн хресченсем. Измаил хăйĕн амăшне кашни 2—3 уйăхра 3—5 тенкĕ ярса тăнă».

Мартăн 28-мĕшĕнче çав департаментах аманнă рабочисем çинчен те çавнашкал ыйтса çырать. Аманнисем хушшинче акă камсем пулнă иккен: Кладбищирен Семен Петрович Бородулин, Шăнкăртамран Кара-Батретдин Бахировпа Залялетдин Саляхетдинов-Дзералетдинов, Улатăр хулинчен—Петр Васильевич Червяков.

Губернатор çырнинчен акă мĕн курăнать:

**Семен Петрович Бородулин** 26 çулта пулнă, вăл Ичиксы ялĕнчен, аманнă хыççăн ашшĕ-амăшĕ патĕнче пурăнать. Халĕ вăл вăрман каснă çĕрте ĕçлет, кунне 1—2 тенка ӳкерет. Ашшĕ-амăшĕсĕр пуçне унăн икĕ йăмăкĕ пур.

**Кара-Батретдин Бахиров** 40 çулта, Шăнкăртан ялĕнче пурăнать. Вăл йывăр суранланнă, кăкăрпа аптрать, халĕ ĕçлеймест, питĕ чухăн пурăнать. Унăн арăмĕ пур, 4 пĕчĕк ача. 80 çула çитнĕ амăшĕ урăх ывăлĕсем патĕнче пурăнать, вĕсем те питĕ чухăн çынсем.

**Залялетдин Саляхетдинов-Дзералетдинов** 23 çулта. Приискран таврăннă хыççăнах ашшĕ патĕнче пурăннă, унтан каллех таçта ĕçлеме тухса кайнă, ашшĕне укçа та яркалать, анчах вĕсем унăн адресне пĕлмеççĕ. Ашшĕнчен пуçне унăн амăшĕ, арăмĕ, виçĕ шăллĕ тата виçĕ йăмăкĕ пур (вĕсем 2-рен пуçласа 19 çула çитнĕ çынсем). Пурлăх енчен çемье чухăн пурăнать.

**Петр Сергеевич Червяков** халĕ Улатăрта мар, хурăнташĕсем каланă тăрăх, Самар хулинче пурăнать, çавăнпа та ун çинчен нимех те пĕлтерместпĕр».

Юлашкинчен, октябрĕн 3-мĕшĕнче губернатор А. Д. Герасимов çинчен тепĕр хыпар пĕлтерет: «Приискра вĕлернĕ Герасимов хыççăн акă камсем юлнă: ашшĕ 63 çулта, Ащеринă ялĕнче пурăнать, амăшĕ — Екатерина Васильевна Герасимова 59 çулта, йăмăкĕ — Мария 18 çулта, иккĕшĕ те Улатăр хулинче пурăнаççĕ. Ашшĕ ватăлса çитнĕ пирки ĕçлеймест, халăх пулăшнипе кăна пурăнать. Амăшĕн Улатăрта пĕчĕк кăна пӳрчĕ пур, урăх нимĕн те çук. Хĕрĕ савăт-сапа тасаткаласа уйăхне 5—6 тенкĕ ĕçлесе илет те, çавăнпа пурăнкалаççĕ. Ывăлĕ амăшне çулталăкне 100 тенкĕ ярса тăрать, тет». (УАИ, ф. 76, д. 1387, лл. 1, 4, 8, 9, 31—33, 36).

В. Н. Любимов историк пĕлтернĕ тăрăх («Советская Чувашия», 1953 ç., 87 №), Ленă шывĕ çинче персе пăрахнă рабочисем хушшинче, кунта асăннă çынсемсĕр пуçне, Улатăрпа Кувакино таврашĕнчен кайнă рабочисем те пулнă. В. Н. Любимов çак ятсене кăтартнă: Казаков С. Н., Сисилинсем А. В. тата М. А. (ашшĕпе ывăлĕ), Климин С. С., Бормоткин Я. С., Земсков А. А. Ленăри забастовкăна пусарнă хыççăн ĕçе пăрахса яла таврăннă Улатăр енчи рабочисем çинчен ун чухне большевиксен нумай пулмасть тухма пуçланă «Правда» хаçачĕ 1912 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче (100 №) çапла пĕлтернĕ:

«**Улатăр. Ленăри рабочисем таврăнни.** Ку тăруçăн Улатăр хулине çав уездран ĕçлеме кайнă хресченсем—Ленă шывĕ çинчи рабочисем ушкăн-ушкăн таврăна пуçларĕç. Вĕсем сăмах майĕн хăйсене Ленăри приисксен хуçисем епле ултални çинчен каласа пачĕç... Рабочисене ĕçлесе тупнă кашни тенкĕ çурă выранне 70 пус кăна тӳленĕ. Ялан пекех памалли укçашăн лавккаран тавар, пуринчен ытла эрех, илтерсе тăнă. Нихçан ĕçмен рабочисене те эрех ирĕксĕр илтернĕ».

Рабочисем мĕншĕн забастовкă пуçлани çакăнтан та ĕнтĕ уççăн курăнать.

Вĕлернĕ-амантнă çынсем пирки полици пуçлăхĕсем мĕншĕн çавнашкал тĕпчесе айкашнă пулатьха? Акă мĕншĕн: вĕсем çав çемьесен хурлăхĕпе тертне кура ялти хресченсем ан хумханччăр тесе шикленнĕ. Паллах, кунашкал пĕлтерӳсене пуçтарса яни вĕлернĕ е аманнă рабочисен çемйисене пĕр пуслăх пулăшу та паман.

Эппин, Ленă шывĕ çинче ылтăн кăларакан рабочисен 1912 çулхи забастовкинче пирĕн янташсем те хастаррисем хушшинче пулнă курăнать. Вĕсене эпир халĕ ятпа асра тытма пултаратпăр. Вĕсем çавна тивĕç çынсем. Вăл паттăрсем пĕтĕм Российăри рабочи класĕн хаяр кĕрешĕвĕн историне кĕрсе юлнă çынсем. Шкулсенче çамрăксене историе вĕрентнĕ чухне те çав паттăрсен ятне хисеплĕн асăнмалла.

**И. КУЗНЕЦОВ,**
истори наукисен кандидачĕ.

---


**Альманахăн 3-мĕш кĕнекинче**
**КУÇМА ТУРХАНĂН „ÇĔР СУРАНĔ“**
**ятлă çĕнĕ романĕ пичетленме пуçлать**

Хакĕ 30 пус.